К 8-(Чув) 83.37
Д 26
19324.чув

НИКОЛАЙ
ДЕДУШКИН

# КУНҪУЛ УТТИПЕ

КОНТРОЛЬНЫЙ ЛИСТОК
СРОКОВ ВОЗВРАТА

КНИГА ДОЛЖНА БЫТЬ
ВОЗВРАЩЕНА НЕ ПОЗЖЕ
УКАЗАННОГО ЗДЕСЬ СРОКА

Колич. пред. выдач ______

19324 инв.

КПК. Зак. 2935. Тир. 80 млн,

Национальная библиотека ЧР
4-019324

ЧАВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ. ШУПАШКАР—1975



Николай ДЕДУШКИН

К 88.27
Д 26

# КУНҪУЛ УТТИПЕ

*Тӑван литература ҫул-йӗрне тӗпченӗ май*

Чӑваш кӗнеке издательстви
Шупашкар — 1975

С (ЧУВ) 2
Д 26

**Дедушкин Н. С.**

Легенда и жизнь. Чувашское книжное издательство, 1975
С256

В своих литературно-критических статьях автор рассматривает отдельные периоды развития чувашской советской литературы, также анализирует творчество некоторых чувашских писателей.
Сборник рассчитан на массового читателя.

ПР…
20 21 МАР 2017

19324-чув

Чувашская респуб…ская
библиотека
им М. Горького

Д $\frac{0722-0162}{М\ 136(03)-75}$ 69—75

© Чувашское книжное издательство, 1975 г.

# ТӐРӖ САМАХ

Хӗвелпе çуталакан чӑнкӑ ту çине улӑхнӑ пек, эпир коммунизм çулӗпе çӳлтен-çӳлелле улӑхатпӑр, тӑван парти лартнӑ аслӑ тӗллеве хӑвӑртрах çитме ӗмӗтленетпӗр. Чӑнкӑ ту çӳллӗшӗнчен пӑхсан, пирӗн паттӑр кӗрешӳре иртнӗ ӗнерхи кунçул та, ыранхи тата илемлӗрех малашлӑх та яр-уççӑн курӑнать.

Паянхи тавралӑх тата! Вӗçӗ-хӗррисӗр аслӑ çӗршывӑн мӗнпур кӗтесӗсенче пултаруллӑ та хӗрӳ ӗç вӗресе тӑрать. Пур çӗрте те стройка, улшӑну, çӗнӗлӗх. Паттӑр совет халӑхӗ наукӑпа техникӑра чӑн-чӑн революци тӑвать, çӗр айӗнчи ӗмӗр хускалмасӑр выртнӑ иксӗлми ырлӑх-пурлӑха хускатса кӑларать, çӑлтӑрсем патне космос карапӗсем вӗçтерет, ялхуçалӑхне малалла хӑват парса ӳстерет.

Коммунизм тӑвас ӗçри пысӑк çитӗнӳсем обществӑри хутшӑнусене те, совет çыннисен ӑстӑнне те сисӗнмеллех урӑхлатса çӗнетеççӗ. Пирӗн куç умӗнче коммунизм саманине тивӗçлӗ çӗнӗ çын ӳссе çитӗнет.

Çак улшӑнусемпе çӗнӗлӗхсене эпир, тӑванла ытти республикӑсенчи пекех, хамӑрӑн Чӑваш çӗршывӗнче те питӗ аван куратпӑр. Пурнӑç ӳсет, малтан-малалла каять. Пурнӑçпа пӗрле тӑван литература та пултарулӑх çулӗпе çӗнӗ утӑмсем тӑвать. Кунта пӗр тачӑ çыхӑну, пӗр «кӑвапа» — «пурнӑç кӑвапи».

Тӑван литература аталаннӑ май, пирӗн критика та вӑй илсе çитӗнчӗ. Вӗсене иккӗшне каллех пӗр «пурнӑç кӑвапи» çыхӑнтарса тӑрать. Аслӑ В. Г. Белинский тахçанах каланӑ: литературӑсӑр — критика çук, критикӑсӑр литература пулма пултараймасть, тенӗ.

Хальхи вӑхӑтра чӑвашсен литература критики пуррипе çукки çинчен калаçни пачах та вырӑнсӑр. Критика пур! Ӑна паян никам та куçне хупса курмасӑр тӑраймӗ.

Совет саманинче чӑвашсен литература критики Çеçпӗл Мишши пултарулӑхӗпе пӗрлех пуçланса кайнӑ. Çеçпӗл вӑл поэт кӑна мар, ӑслӑ критик та пулнӑ. Чӑн та, вӑл хулӑн монографисем çырса ӗлкӗреймен, анчах унӑн

«Ĕавă çырассипе ударени правилисем», «Чăваш сăмахĕ» ятлă статйисем ку чухнехи чăваш поэзине аталантарма питĕ тĕрĕс майсем кăтартса панă.

Пирĕн литература критики малтанхи утăмран пуçласах партилĕх ялавне çӳле çĕкленĕ. Халĕ те çаплах çӳлте тытса пырать çав аслă ялава.

Литературăпа критика... Писательпе критик... Çак икĕ сăмаха, икĕ ăнланăва пĕр-пĕринчен ниепле те уйăрма çук. Эпир пурте — писательсем те, критиксем те — пĕр ĕç тăватпăр. Ку пархатарлă ĕç вăл — литература, чăваш халăхĕн пысăк литератури. Пирĕн халĕ нумай томлă роман-эпопейăсем, сăвăлла романсем, пысăк калăплă поэмăсем, драмăсемпе трагедисем, комедисем пур. Критик валли — тĕлĕнмелле анлă уй-хир. Сăна, тĕпче, тишкер!

1972 çул пуçламăшĕнче партин Центральнăй Комитечĕ «Литературăпа художество критики çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çав историллĕ постановлени хыççăн эпир хамăр литература критикинчи ĕçсене тĕплĕн пăхса тухрăмăр, малашнехи задачăсене палăртрăмăр. Ӳсĕм-çитĕнӳ сахал мар. Критика ыйтăвĕсемпе пирĕн самаях ăнăçлă тĕпчевсем, пысăк монографисем тухрĕç. Вĕсем пирки ĕнтĕ чылай калаçнă, çырнă. Çавăнпа та эпĕ кунта критиксен хальчченхи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен уйрăммăн сăмах вакласа тăмăп. Пирĕн халĕ К. Иванов, Çеçпĕл Мишши, С. Элкер, П. Хусанкай, Я. Ухсай, А. Алга, Л. Агаков пурнăçĕпе пултарулăхне çутатса паракан кĕнекесем пур. Сăмах май çакă пире чунтанах савăнтарни çинчен çеç каласа хăварăп.

Тăван литературăн сарлака уй-хирĕнче, ытти писательсемпе, критиксемпе юнашар, пирĕн паллă критик-литературовед Николай Степанович Дедушкин ĕçлет. Çанна тавăрса, ывăнма пĕлмесĕр.

Унăн хĕрĕх çул хушшинчи ĕçне пĕтĕçтерсен, акă мĕн палăртмалла: критик-коммунист хăй калас сăмаха тӳррĕн калама юратать. Тӳрĕ сăмах — çакна вăл хăйĕн пурнăçри тивĕçĕ тесе шутлать. Пĕр-пĕр юлташăн çитменлĕх пулсан, кăлтăк-сăлтăк тупăнсан, çакăн çинчен критик юлташа тӳрех куçран, унталла-кунталла пăркаланмасăр, пат татса калать.

Çук, ку темĕнле абстракциллĕ тӳрĕлĕх мар, коммунистла тӳрĕлĕх, партилле тӳрĕлĕх. Хăйĕн литературăпа критика ĕçĕнче Н. С. Дедушкин социализмла реализм меслечĕн тĕп принципĕсене — партилĕхпе халăхлăх принципĕсене яланах çӳлте, яланах çирĕп тытса пырать. Литература произведенийĕсене тишкернĕ чухне вăл идейă-

лăхпа ăсталăх епле çыхăнса пынине уйрăмах тимлĕ сăнаса тĕпчет. Паллă-çке-ха, писателĕн ăсталăх çитеймесен, чи лайăх идейăна та пăсса пăрахма пулать.

Çапла, Н. Дедушкин — çирĕп принциплă критик. Ăçтан килет-ха çав çирĕплĕх, чăн-чăн партилле принциплăх? Кунта кĕскен те пулин критик-коммунистăн пурнăç çулне, ĕçне-хĕлне сăнаса пăхăпăр. Шухăша пĕтĕçтерсе каласан, унăн кунçулĕ мĕн çамрăкранах халăх кунçулĕпе тачă çыхăннă, вăл самана сывлăшĕпе сывлать, пурăнать.

Николай Степанович Дедушкин 1915 çулхи мартăн 28-мĕшĕнче Тутар республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Элшел ялĕнче, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Мĕн пĕчĕкрен килти ĕçе, уй-хир ĕçне хăнăхнă: сӳре сӳреленĕ, çурлапа тырă вырнă, тăпачăпа авăн çапнă. Килте-çуртра ашшĕ-амăшне пулăшнă. «Çăкăр пиçет кăмакара, ача ӳсет акара», тенĕ ваттисем. Ахаль каламан çав ку сămaxa. Ачалла вăраннă ĕçченлĕх сынна ĕмĕр тăршшĕпех кирлĕ. Николай Степановичăн утмăл çул тăршшĕнчи пурнăçĕнче те эпир çавнах куратпăр. Вăл ялан ĕçчен, яланах васкаварлă.

Ача чухнехи çулсем... Ялти пуçламăш шкул. Унтан Теччĕ хулинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул. Хусанти Чăваш педагогика техникумĕ. 1930-мĕш çулсем — тăваллă тапхăр. Ялта колхозсем чăмăртанаççĕ, кулаксене хирĕç хаяр кĕрешӳ пырать. Вунултă çулхи Микулай шăпах çав тăваллă вăхăтра комсомола кĕрет. Хусанти техникумран вĕренсе тухнă хыççăн вăл 1933—1936 çулсенче Кăнна Кушкинчи колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче учительре ĕçлет, ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Колхозри комсомол организацине ертсе пырать.

Кăнна Кушки!.. Пĕтĕм чăваш халăхĕшĕн ĕмĕр-ĕмĕр асран кайми ял. Кунта пирĕн халăха çутта кăларассишĕн ырми-канми тăрăшнă аслă И. Я. Яковлев çуралнă. Çакă хăех ĕнтĕ çамрăк учителе Николай Степанович Дедушкина чунтан хавхалантарнă. «Эпĕ те ачасене вĕрентетĕп-çке! — шухăшланă вăл хăй ăссĕн.— Педагог ятне çӳлте тытмалла, Иван Яковлевич чысне ӳкермелле мар».

Кунсăр пуçне, Кăнна Кушки — тепĕр виçĕ писателĕн И. С. Максимов-Кошкинскин, Тихăн Петĕрккин, Александр Алган тăван ялĕ. Николай Дедушкин вĕсене виçĕшне те лайăх пĕлнĕ. Хăй те писатель перине алла тытма ĕмĕтленнĕ, анчах ку ĕçе пултарасса шансах çитереймен, тĕрĕсрех каласан, именсе тăнă. Шăпах çав вăхăтра ялта хĕрсе пынă класс кĕрешĕвĕ çинчен, коммунистсем

колхоз йӗркине ҫирӗплетессишӗн мӗнпур вӑя хурса тӑрӑшни ҫинчен ҫамрӑк учитель районти хаҫата хыпар-хӑнар ҫырса тӑмасӑр тӳсеймен. Хӑшпӗр очеркӗсемпе калавӗсене вӑл Шупашкарти «Ҫамрӑк колхозник», «Пионер сасси» хаҫатсене те ҫитернӗ.

Ҫав ҫулсенче Шупашкар — тӑван литературӑпа искусство, тӑван культура вучахӗ — Николай Дедушкина илӗртмеллипех илӗртнӗ.

1936 ҫулта вӑл Шупашкара килет те Чӑвашсен халӗ И. Я. Яковлев ячӗпе хисепленекен патшалӑх педагогика институтне — чӗлхепе литература факультетне вӗренме кӗрет. Ҫавӑн чухне тӳр килчӗ те мана Николай Дедушкинпа паллашма.

... Пиҫсе ҫитнӗ тулӑ хӑмӑлӗн тӗсне асилтерекен сапсарӑ ҫӳҫлӗ йӗкӗт. Пӗвӗ-сийӗ ҫӳллех мар та, патвар. Куҫӗ-пуҫӗ таса. Ҫынна тӳрех куҫран тӗллесе пӑхать. Тытасса хӑйне сӑпай тытать, ҫапах та хӑюсӑр ҫын теме ҫукӑна. Пӗр сӑмахпа, хӑй тивӗҫне пӗлекен комсомолец.

Хальхи пекех, ун чухне хулари клубсенче час-часах литература каҫӗсем пулатчӗҫ. Чӑн та, ун чухнехи Шупашкар хальхи пек пысӑк марччӗ-ха. Пӗр вӗҫӗнчен пӑхсан, тепӗр вӗҫӗ янкӑрах курӑнатчӗ. Хула йышӗ те вӑтӑр пинтен кӑшт ҫеҫ иртетчӗ. Ҫук, ку пире пӑшӑрхантармастчӗ. Эпир, ҫамрӑк поэтсем, хулари рабочисемпе, студентсемпе тӗл пулаттӑмӑр, вӗсене хамӑр сӑвӑсене вуласа параттӑмӑр.

Литература каҫӗсенче пирӗнпе пӗрле ялан тенӗ пекех Николай Дедушкин пулатчӗ. Вӑл Пушкин, Лермонтов, Джамбул, К. Иванов, Ҫеҫпӗл Мишши сӑввисене калатчӗ. Хут ҫине пӑхмасӑр, пӗр такӑнмасӑр. Сасси уҫӑ, янравлӑ. Залри ҫынсем Джамбулӑн «В горах Алатау» сӑввине уйрӑмах кӑмӑлласа итлетчӗҫ. Тӑваллӑн алӑ ҫупса, ҫамрӑк декламатора икшер хут та сцена ҫине чӗнсе калаттчӗҫ.

Сӑвӑсене Н. Дедушкин чӑвашла та, вырӑсла та питӗ таса калатчӗ. Ку ӗнтӗ хамӑрӑн икӗ тӑван чӗлхене те (чӑвашпа вырӑссенне те) ҫамрӑк студент чӑннипех юратса вӗреннине пӗлтернӗ.

Пӗррехинче, литература каҫӗ хыҫҫӑн, эпир Николай Дедушкинран ҫапла ыйтрӑмӑр:

— Эсӗ хӑв ҫырмастӑн-и сӑвӑ? Ытти поэтсен сӑввисене ытла хитре, чӑн-чӑн артистла вулатӑн,— терӗмӗр.

— Начар сӑвӑ ҫырас килмест, лайӑххи тухаймасть,— кулкаласа хуравларӗ вӑл, вара ҫавӑнтах пире тӗртсе

йлме те ёлкӗрчӗ.— Сăвва вуламаççӗ, калаççӗ,— терӗ.— Эсир акă хăвăр çырнă сăввăрсене те хут тăрăх пăхса вулатăр. Сăвă калать, тет чăваш, сăвă вулать, темест. Вăт çапла, тусăмсем.

Тӳрӗ сăмах, тӗрӗс сăмах пулчӗ ку. Эпир куншăн Микулай тусăмăра пӗртте кӳренмерӗмӗр. Эпӗ вара шухăша кайрăм: «Ку студент ыттисем çырнине хисеплет, юратать иккен.— Вырăс поэчӗсен, тăванла ытти халăх поэчӗсен сăввисемпе вулакансене ыррăн паллаштарма тăрăшать. Чăн-чăн пропагандист! Тен, çакăнта унăн çутçанталăк пехилленӗ таланчӗ».

Кӗçех «Сунтал» журналăн 1936 çулхи 11-мӗш номерӗнче Николай Дедушкинăн критикăлла статйи пичетленсе тухрӗ. Пӗрремӗш статья. Ăна вăл А. Кăлканăн «Анисса» драми пирки çырнă. Статйи пысăках та мар, рецензи евӗрлӗрех. Çапах та критик перине тин çеç тытнă студент, çулӗпе хăйӗнчен кăшт аслăрах драматургăн пьесине (пӗрремӗш пьесине!) тӗплӗн пăхса тухса, тӗрӗс хак парать.

Çакăнтан тымарланса хунавланма тытăнать те ӗнтӗ Николай Дедушкинăн литература критикинчи пултарулăхӗ. Вӗренме те, çырма та ӗлкӗрсе пырать ӗçчен студент. Ун чухнехи «Сунтал» журналпа «Илемлӗ литература» альманахра, «Канаш», «Çамрăк большевик», «Пионер сасси» хаçатсенче вăл статья хыççăн статья пичетлесе кăларать. Вӗсенче çамрăк критик вулакансене К. Иванов, Тайăр Тимкки, Н. Шелепи, С. Элкер, Ф. Павлов, Я. Ухсай, А. Алга, Н. Янгас, И. Тукташ, Уйăп Мишши пултарулăхӗпе паллаштарать.

1940 çулта Н. С. Дедушкин педагогика институтӗнчен вӗренсе тухать. Аслăлăхпа тӗпчев ӗçне чунтан парăннине кура, ăна çав институтрах тăван литературăна вӗрентме хăвараççӗ. Кунсăр пуçне вăл Учительсен пӗлӗвне ӳстермелли институтра чăваш литератури вӗрентет, вăтам шкулсем валли хатӗрлекен чăваш чӗлхипе литература учебникӗсене редакцилет.

Астăватăп: тăван республика 20 çул тултарнине кӗтсе илмелли хӗрӳллӗ кунсем. Юбилейччен «20 лет Чувашской АССР» ятлă вырăсла кӗнеке кăлармалла. Тăван республика çирӗм çул хушшинче промышленноçпа ялхуçалăхӗнче, культурăпа искусствăра тунă çитӗнӳсем çинчен çырнă статьясем пур-ха ӗнтӗ, литература çинчен пӗр сăмах та çук. Ун чухнехи «паллă ученăйсем» ку тӗлӗшпе хăйсен сăмахне тытаймарӗç — тăван литература çинчен

вăхăтра статья çырса параймарĕç. Редакци комиссийĕнче ĕçлекенсем кунта пединститутри çамрăк преподаватель Николай Дедушкин ятне аса илеççĕ.

Питĕ тĕрĕс пулчĕ ку: Н. С. Дедушкин редакци комиссийĕ ыйтнине чăннипех комсомолла хастаррăн пурнăçа кĕртрĕ, чун пек кĕтнĕ статьяна эрне хушшинче çырса пачĕ. Çук, тепле васкасан та, ку ответлă ĕçе вăл çиелтен шăйăрттарса тумарĕ, тăван литературăн 20 çул хушшинчи ӳсĕмне сарлакан тĕпчесе тухрĕ, литература аталанăвĕ халăх кунçулĕпе тачă çыхăнса тăнине тĕрĕс палăртрĕ.

Хăшĕ-пĕри, ĕненмесĕр, тен, ыйтма пултарĕ: епле-ха çамрăк тĕпчевçĕ çав пысăк ĕçе питĕ кĕске вăхăтра туса ĕлкĕрнĕ?—тейĕ. Кунта ĕненмелле марри, тĕлĕнмелли нимĕн те çук. Çамрăк тĕпчевçĕ хăйĕн статйи валли малтанах пуян материал пухса хатĕрленĕ. Революциччен Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тухнă «Сказки и предания чуваш» кĕнекене те, Хусанта кĕске вăхăт хушши тухса тăнă «Хыпар» хаçата та, К. Иванов, Тайăр Тимкки, Н. Шелепи сăввисене те, Октябрьти революци хыççăн тухма тытăннă «Канаш» хаçата та, граждан вăрçи вăхăтĕнче чăваш салтакĕсем валли çар чаçĕсенче пичетленнĕ «Чухăнсен сасси», «Хĕрлĕ салтак», «Хĕрлĕ Урал», «Хĕрлĕ ялав», «Çĕнĕ пурнăç» тата ытти хаçатсене те тепĕр хут уçа-уçа пăхнă, унта пирĕн çамрăк литература епле калчаланса ӳснине сăнанă, тĕпченĕ, çĕнĕрен-çĕнĕ тĕслĕхсем шыранă.

«20 лет Чувашской АССР» ятлă кĕнекере тăван литература çинчен çырнă статьяна вуланă хыççăн эпир куртăмăр: пирĕн илемлĕ сăмах лаççинче чăн-чăн ĕçчен «тимĕрçĕ» — çĕнĕ, пултаруллă критик ăнăçлă ĕçлеме тытăнчĕ иккен. Пирĕн шухăш йăнăш пулмарĕ, эпир шанни тивĕçлипех тӳрре тухрĕ.

1940 çулхи кĕркунне Н. С. Дедушкина Хĕрлĕ Çар ретне илеççĕ. Тепĕр çулхине, вăрçă пуçлансан, вăл Коммунистсен партийĕн ретне кĕрет. Çар службинче вăл çирĕм çул хушши тăрать, ахаль салтакран полковника çити ӳсет. Политработник пулнă май, салтаксене Тăван çĕршывăмăра пĕтĕм чун-чĕререн юратма, чăн-чăн совет патриочĕсем пулма вĕрентет.

Пурте пĕлеççĕ: çар службин валли вăй та, вăхăт та нумай кирлĕ. Апла пулин те, Н. Дедушкин литература ĕçне самантлăха та пăрахмасть. Фашистла нимĕç захватчикĕсемпе Япони империалисчĕсене хирĕç пынă çапăçусенче паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнă воинсем çинчен

вăл фронтри хаçатсене статьясемпе очерксем çырать. Ку çеç те мар, К. Симонов, О. Гончар, В. Овечкин, С. Бабаевский, Н. Вирта çырнă кĕнекесене тĕпчесе тухса, сулмаклă та витĕмлĕ статьясем пичетлесе кăларать.

«Дальний Восток» журналăн 1949 çулхи 5-мĕш номерĕнче «Совет офицерĕн илемлĕ литературăри сăнарĕ» ятлă пысăк статья çапăнса тухать. Шухăш тарăнлăхĕпе ку вăл статья кăна мар, наукăллă тĕпчев. Унăн авторĕ— Совет çарĕн офицерĕ Николай Дедушкин.

Хăй çуралса ӳснĕ кĕтес тепле инçетре пулсан та, критик-литературовед тăван чăваш литературине самантлăха та манмасть. 1950 çулта Н. С. Дедушкина Инçет Хĕвелтухăçĕнчен Ленинград çар округне куçараççĕ. Кунта вăл «Звезда» журналра, «На страже Родины» ятлă çар хаçатĕнче чăваш писателĕсен пултарулăхĕ çинчен чылай статья пичетлесе кăларать. Округри воинсене П. Хузангай, Я. Ухсай тата ытти писательсен кĕнекисемпе паллаштарать.

Политработник-пропагандист—çапла ăнланать хăйĕн тивĕçне Н. Дедушкин критик.

Партипе правительство унăн çарти ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннăшăн, Совет Çарĕнчи службăна пĕр кăлтăксăр тытса пынăшăн Николай Степанович Дедушкин икĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата çичĕ медаль илет. Кăçал, вăл 60 çул тултарнă май, ăна «Хисеп палли» орден пачĕç.

Çартан таврăнсан, вăл пĕр кун та ĕçсĕр алла усса лармасть. 1960 çултан пуçласа 1967 çула çитиччен Николай Степанович — Ленинградра вăтам шкул директорĕ.

1967 çултанпа Н. С. Дедушкин — Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ. Сăмах ăстисен организацине ертсе пырас ĕçре те вăл партилĕх принципне тытать. 1970 çулхи март уйăхĕнче, РСФСР писателĕсен виççĕмĕш съездĕнче, Н. С. Дедушкина Российăри писательсен Союзĕн правлени членне тата правлени секретарьне суйлаççĕ. 1968 çултанпа вăл — КПСС Чăваш обкомĕн членĕ, 1971 çултанпа — Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Халăх хушшинчи ĕç, общество ĕçĕ унăн пултарулăхне ӳсме чăрмантармасть, ăна çĕнĕрен-çĕнĕ вăй-хал парса çунатлантарать.

Н. С. Дедушкинăн тепĕр питĕ паха енĕ пур: вăл литературăри критикăпа организациллĕ ĕçе ăслăлăх ĕçĕпе

тачă çыхăнтарса пыма пĕлет. 1964 çулта Николай Степанович Дедушкин Ленинград университетĕнче «Чувашская литература периода Великой Отечественной войны» темăпа диссертаци хӳтĕлет, филологи наукисен кандидачĕ ятне илет. Халĕ вăл — И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечĕн доценчĕ. Унта Николай Степанович çамрăк ăрăва чăваш фольклорĕпе литературин историне вĕрентет, çавăн пекех тăванла ытти халăхсен литературипе паллаштарать.

Тăван сăмахлăх хирĕнче хĕрĕх çул ĕçлесе, Н. С. Дедушкин критикăпа литературоведени тата наукăпа тĕпчев ĕçĕсем пурĕ 100 ытла халăх умне кăларнă. Вĕсене пĕр статьяра пăхса тухма эпĕ вăй-хал та çитерейĕмĕттĕм. Акă ман умра «Кунçул уттипе» кĕнекен алçырăвĕ выртать, унта хăйĕнче кăна 37 статья.

Критик-литературоведăн нумай-нумай ĕçĕсенчен чи малтан «Чувашская литература в период Великой Отечественной войны» (вырăсла, 1962), «Пăшалпа та, перопа та» (1970), «Халăх поэчĕ Александр Алга» (1973), «Писатель-салтак» (1974) кĕнекисене палăртмалла.

Малтанхи икĕ кĕнеки пирĕн тăван литература иртнĕ вăрçă кунĕсенче тата вăрçă хыççăнхи çулсенче мĕнле утăмсем тунине çутатса парать. Икĕ кĕнекин те пĕр тема — совет халăхĕн вăрçăри паттăрлăхĕпе пирĕн литература. Анчах та çав икĕ кĕнеке хушшинче пысăк уйрăмлăх пур. «Пăшалпа та, перопа та» кĕнекине автор урăхлатнă, малтанхи хăшпĕр тĕрĕсех мар фактсене тӳрлетнĕ, çĕнĕ материалпа пуянлатнă (çырусем, дневниксем, сăнӳкерчĕксем т. ыт. те). Чи пахи вара — кĕнекен шухăшне анлăлатнă, тарăнлатнă.

Критик кунта пĕр-пĕр произведенин содержанине каласа кăтартнипех çырлахмасть, вăл кашни япалара чи малтан шухăш тĕшшине шырать, философилле пĕтĕçтерӳсем тума тăрăшать. Аслăлăх анализĕ — акă мĕнле ĕмĕтпе ĕçлет критик.

«Пăшалпа та, перопа та» кĕнекене вуласа тухсан, çакăн пек шухăш пуçа кĕрсе юлать. Вăрçăра усал тăшмана — фашизма çĕнтерни вăл — совет хĕçпăшалĕн çĕнтерĕвĕ кăна мар, вăл — партипе халăх пĕрлĕхĕн, çĕршыври халăхсен туслăхĕпе тăванлăхĕн, фронтпа тыл пĕрлĕхĕн çĕнтерĕвĕ, совет патриотизмĕн çĕнтерĕвĕ. Пĕр сăмахпа, совет халăхĕн хăватлă чун хавалĕ тунă çĕнтерӳ. Çак шухăша критик писательсен произведенийĕсенчен нумай тĕслĕх илсе çирĕплетет.

Критик хăйĕн çак кĕнекинче çеç мар, ытти статйисенче те («Вутра шăраннă кăмăл», «Вăрçă паттăрĕсем», «Писатель-салтак малалла утать», «Вут-çулăм витĕр» тата ыттисенче те) писательсене çарпа патриотизм тематикине малашне тата ытларах анлăлатса, тарăнлатса пыма чĕнет.

«Кунçул уттипе» кĕнекене кĕртнĕ малтанхи статйисенче тăван литература мĕнле аталанса пынине автор пĕтĕмĕшлĕн пăхса тухать («Литературăри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн», «Идейăлăхпа ăсталăх», «Аслă çулпа», «Юмахпа пурнăç»). Кун пеккине вырăсла — литературное обозрение е обзорная статья, теççĕ-ха. Хăшĕ-пĕри унашкал ĕçе тиркеме те пăхать. Анчах эпĕ кун пирки урăхларах шухăшлатăп. Литература ӳсĕмне тапхăрăн-тапхăрăн пĕтĕмлетсе пăхса тухни пире питех те кирлĕ. Çакăн пек пăхса тухнă чухне эпир литература мĕнле çулпа аталаннине, унта мĕнле тенденцисем палăрнине асăрхаса илетпĕр. Çĕнĕ, ырă тенденци палăрсан, ăна хăвăртрах пулăшма тăрăшатпăр, ырă маррине сирсе яма, йăнăшшине вăхăтра тӳрлетме вăй хуратпăр.

Паллах, пирĕн критиксем хушшинче Белинскисем çук-ха. Анчах вырăссен аслă критикĕн кĕнекисене уçа-уçа пăхатпăр та куратпăр: вăл «обозрени», «обзорлă статья» çырассине тиркесе тăман, кашни çулхи литературăна пăхса тухнă, çав çулта пичетленнĕ кашни кĕнеке ятне асăннă. Акă унăн çулленхи статйисен ячĕсем: «Взгляд на русскую литературу 1846 года», «Взгляд на русскую литературу 1847 года»...

Н. Дедушкин хăйĕн пĕрремĕш статйинче, тĕслĕхрен, ССР Союзĕнчи писательсен виççĕмĕшпе тăваттăмĕш съезчĕсем хушшинчи ĕçсене пăхса тухать, Аслă Октябрь 50 çул тултарас куна пирĕн тăван литература мĕнле çитĕнӳсемпе кĕтсе илнине кăтартса парать, пирĕн çыравçăсем совет çыннисен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕпе çеç мар, вĕсен чунĕпе те ытларах интересленме тытăннине палăртать, çавăнтах пултарулăх ĕçĕнчи хăшпĕр кăлтăк-сăлтăк пирки асăрхаттарать.

Унашкал кăлтăксем тупăнкалаççĕ-ха пирĕн. Нумаях та пулмасть хăшпĕр писатель: «кашни халăх тĕнче çине хăй куçĕпе пăхать, пурнăçа хăйне майлă ăнланать»,—тесе суйланма тытăннăччĕ. Вĕсен шучĕпе литературăн идейăлăхне те «наци виçипе» виçмелле имĕш.

Ку тĕрĕс мар шухăша Н. Дедушкин критик çӳлерех асăннă статйинче хытă питлет: «Каламасăрах паллă,—

тет вăл,— илемлĕ литературăн идейăллă шайне хаклама кашни халăхăн уйрăм виçе пулас пулсан, ку пирĕн литературан идейăлăхĕпе илемлĕхне ÿстерме нимĕн чухлĕ те пулăшаяс çук. Пирĕн çĕршыври пур халăхсен литератури те мĕнпур тытăмĕпе интернационаллă, ăна хакламалли пĕртен-пĕр тĕрĕс виçе вăл — литературăпа искусствăри социализмлă реализм меслечĕ».

«Идейăлăхпа ăсталăх» статйинче вара критик çапла хушса хурать: «Халăх традицийĕ çинчен калană чухне халь социализмăн хăйĕн традицийĕсем, хăйĕн обществăллă çĕнĕ строй условийĕсенче тунă пысăк культурăпа пурлăх пуянлăхĕсем пуррине те манма юрамасть»,— тет.

Çак шухăша ытларах çирĕплетес тесе, Л. И. Брежнев партин XXIV съездĕнче калана сăмаха аса илтермелле. «Пирĕн çĕршывра социализм тунă тапхăрта **çынсен историлле çĕнĕ пĕрлĕхĕ — совет халăхĕ пулса тăчĕ».**

Пите тĕрĕс, пирĕн çынсене марксизм-ленинизм идеологийĕн пĕрлĕхĕ, коммунизмла общество тăвас пысăк тĕллев пĕтĕçтерсе тăрать.

Наци ыйтăвĕсене апла та капла пăтраштарас мар тесен, наци политики çинчен аслă Ленин вĕрентнине лайăх пĕлмелле.

В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май, пирĕн чăваш писателĕсен черетсĕр IX съезчĕ пулса иртрĕ. Унччен кăшт маларах Шупашкарта çамрăк çыравçăсен канашлу-семинарĕ пухăннăччĕ. Çав икĕ пысăк пухура эпир аслă Ильич çинчен çырнă произведенисене пăхса тухрăмăр.

Пирĕн халь ĕнтĕ хамăрăн Лениниана пур. Николай Дедушкин «Идейăлăхпа ăсталăх» статйинче аслă çулпуçăмăр çинчен çырнă сăвăсемпе поэмăсене, калавсемпе пьесăсене питĕ тĕплĕн тишкĕрет, уйрăмах вăл Н. Шелепин «Ленин», С. Элкерĕн «Хурçă карап» сăввисене, П. Хусанкайăн «Горкăри çурт», «Аслă чĕре» поэмисене, Н. Терентьевăн «Хумсем çырана çапаççĕ» драмине пысăка хурса хаклать.

Партин Центральнăй Комитечĕ «Литературăпа художество критики çинчен» йышăннă постановленире çапла асăрхаттарнăччĕ: литературăра сăнласа кăтартнă ĕçсене пурнăçри ĕçсемпе танлаштарса пăхмалла, терĕ.

Н. Дедушкин критик хăй ĕçĕнче çак кăтартăва çирĕп тытса пырать. Пĕр-пĕр произведение пăхса тухнă чухне вăл чи малтан чăн пурнăçри лару-тăрăва тĕпчет, çав произведени мĕнле вăхăтра «çуралнине» аса илет. Çĕр-

шыв пурнăçĕ, халăх пурнăçĕ — критикшăн фон кăна мар, вăл кашни произведение пурнăç çӳллĕшĕнчен парти кусĕпе пăхса хаклать.

«Тӳрĕ калакан тăванне юрайман», теççĕ ваттисем. Тепĕр чух тӳрĕ сăмахшăн кӳренекенсем те пур. Çапах та критик-коммунист тӳрĕ сăмаха шăл хушшинче тытса усрама пултараймасть.

Çак кĕнекери «Йăнăш мĕнрен килнĕ?» статьяна Н. Дедушкин В. Долговпа пĕрле çырнă. Икĕ критик Уяр писателе «Аçта эс, тинĕс?» калавĕ пирки питĕ тӳрĕ, питĕ тĕрĕс сăмах каланă. Каллех кунта ваттисем калани аса килет: «Ура такăнсан — чĕркуççи ыратать, чĕлхе йăнăшсан — пуçа лекет». Хв. Уярăн та ĕçĕ-пуçĕ çавнашкалрах килсе тухрĕ.

Литература критики пирки парти йышăннă постановленире каланăччĕ: çыракансенчен çирĕп ыйтмалла, çав вăхăтрах талантсене упрама пĕлмелле, тенĕччĕ. Н. Дедушкин хăйĕн критика ĕçĕнче çакна яланах асра тытать. Писательсен пултарулăх портречĕсене питĕ тимлесе, чăн-чăн талантсене хисеплесе сăнлать. Пĕчĕкçĕ кăна статьясем, çапах та вĕсенче кашни писателĕн сăнĕ хăйне евĕр тухса тăрать. Çеçпĕл Мишши, С. Элкер, И. Максимов-Кошкинский, Н. Айзман, Л. Агаков, А. Алга, С. Шавли, А. Кăлкан, М. Кипек, В. Бараев, Ф. Çитта, В. Урдаш, В. Давыдов-Анатри, П. Чичканов... Литература портречĕсен хăйне евĕр галерейи.

Акă пирĕн хисеплĕ критик, литературовед, ученăй Николай Степанович Дедушкин 60 çулта. Мĕн калаççĕ-ха кун пек чух ваттисем? Утмăл тултартăн пулсан, малаллах уттар, теççĕ. Çирĕп сывлăхлă та хавас кăмăллă пул, критик юлташ! Çынсене, хальччен пекех, малашне те ялан тӳрĕ сăмах кала! Тӳрĕ те ырă сăмах. Ыр сăмах вăл ылтăнпа пĕрех.

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

*1975*

Совет халăхĕ Октябрьти социализмла Аслă революци 50 çул тултарнине чаплăн уявлама хатĕрленнĕ тапхăрта, 1967 çулхи майăн 22—27-мĕшĕсенче, Мускаврa СССР писателĕсен IV съезчĕ пулса иртрĕ.

Съездра тĕп калаçу пирĕн çĕршывăмăрти нумай нациллĕ совет литератури коммунизм тăвассишĕн мĕнле вăй хуни çинчен пычĕ.

Ку съезд совет литератури çур ĕмĕр хушшинче мĕнмĕн туни пирки, этемлĕхĕн художествăллă аталанăвĕнче çĕнĕ сăмах пулса тăракан идейăпа эстетика тĕлĕшĕнчен тунă çĕнтерӳсем пирки писательсем халăх умĕнче сăмах тытни пулчĕ. Съезд социализмла реализм меслечĕпе аталанса пыракан литературăн малашнехи çулне-йĕрне палăртрĕ.

Съезд СССР писателĕсен Союзĕн 6600 членĕ ячĕпе КПСС Тĕп Комитетне янă çырура çапла каларĕ: «Совет писателĕсем хамăрăн литературăна парти ĕçĕн, коммунизм ĕçĕн пĕр пайĕ тесе шутлаççĕ. Эпир хамăрăн литературăна парти литератури тесе уççăн та мăнаçлăн калатпăр ,мĕншĕн тесен унăн, пирĕн парти кăтартса паракан халăх интересĕсемсĕр пуçне, урăх интерессем çук, пулма та пултараймаççĕ. Эпир хамăрăн литературăна парти литератури тесе калатпăр, мĕншĕн тесен парти политики малта пыракан этемлĕхĕн ĕмĕрхи таса ĕмĕчĕсене туллин пурнăçа кĕртсе пынине куратпăр. Паян эпир нумай нациллĕ пĕтĕм литература ячĕпе çапла калатпăр: «Пирĕн ĕмĕт — коммунизм, уншăн эпир ялан çирĕп тăрăпăр!»

Пĕтĕм Союзри писательсен III съезчĕ хыççăнхи çулсенче пирĕн писательсем талантлă произведенисем сахал мар çырчĕç. Çав произведенисем хамăр çĕршывра та, урăх çĕршывсенче те анлă сарăлчĕç. Искусствăра социализмла реализм традицийĕсене малалла аталантарса, пирĕн писательсем совет çăнлăхĕн пуянлăхне сăнласа кăтартма, коммунизм обществи тăвакансен ĕçĕсемпе шу-

хăш-ĕмĕчĕсене тĕрĕс те яр-уççăн çырса ӳкерчĕклеме тăрăшаççĕ.

Пирĕн совет литератури, пирĕн совет писателĕсем Тăван çĕршывшăн, халăхшăн пархатарлă ĕçсем тунине палăртса, СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ СССР писателĕсен организацине Ленин орденĕ пама йышăнчĕ.

СССР писателĕсен IV съезчĕ прозăпа поэзи, драматурги, критикăпа литературоведени, ача-пăчапа çамрăксен литературин ыйтăвĕсене пăхса тухрĕ.

Илемлĕ сăмах ăстисене хальхи саманан тĕп ыйтăвĕсем — çĕнĕ общество çыннине вĕрентсе çитĕнтересси, коммунизмла ĕçпе пурнăç йăлисене çирĕплетесси, совет патриотизмĕпе пролетариллĕ интернационализм шухăшкăмăлне вăйлатасси, Тăван çĕршывăн оборона вăй-хăватне куллен-кун тĕреклетесси шухăшлаттарать. Халлĕхе пирĕн татса паман ыйтусем пайтах-ха, çитменлĕхсем те çук мар. «Пирĕн халь идейăпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен пулса çитмен, хамăр историе, хальхи пурнăçа çиелтен, пĕр енчен кăна сăнласа кăтартакан произведенисем те тухкалаççĕ»,— тенĕ КПСС Тĕп Комитечĕ съезда янă саламлă çырура.

Съезд совет писателĕсем хăйсен пултарулăх ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерме, Ленин партийĕ лартнă задачăсене вĕсем тĕрĕс те ăнăçлă татса пама тăрăшнине кăтартрĕ.

Делегатсем съездра хускатнă ыйтусене мĕнпурне асăнса тухма та хĕн. Кунта совет литературин нацилле хăйевĕрлĕхĕ çинчен, литература пуянлăхне тĕпчесе вĕренесси, çамрăк литераторсене вĕрентсе çитĕнтересси, илемлĕ литература произведенийĕсене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарас ĕçе лайăхлатасси, писательсен ăсталăхне ӳстересси, кĕнекене вулакан патне çитермелли çулйĕрсене такăрлатасси тата ытти пирки те туха-туха каларĕç.

Ораторсем хăйсен сăмахĕнче хальхи вăхăтри чи çивĕч, тавлашуллă ыйтусене хускатнине хаçатсем те палăртрĕç. А. М. Горький пĕрремĕш съездра çапла каланăччĕ: «Сире эпĕ, юлташсем, вĕренме чĕнетĕп, шухăшлама, ĕçлеме вĕренме, çапăçу хирĕнчи боецсем пек, пĕр-пĕрне сума суса хисеплеме чĕнсе калатăп. Истори пире кивĕ тĕнчепе кĕрешме чĕннĕ вăхăтра кирлĕ-кирлĕ маршăн пĕрпĕринпе хирĕçсе вăйăра усăсăр ан пĕтерĕр». Хальхи съездра çак сăмахсем пурнăçа кĕрсе пыни уççăнах курăнчĕ. 1932 4 — 443

Çӳлерех асăннă ыйтусем чăваш писателĕсен органи-


Чувашская республиканская
библиотека
им. М. Горького

зацине те тӳрремӗн пырса тивеççӗ. Пирӗн те татса парайман ыйтусем пайтах-ха. Çавӑнпа IV съезд материалӗсене тӗпчесе вӗреннӗ хушӑра чӑваш писателӗсен çав ыйтусене мӗнле татса памаллине, çитес çывӑх вӑхӑтра мӗн-мӗн тумаллине палӑртас килет.

Урӑх çӗршывсенчен килнӗ хӑнасем съездра совет литературин интернационалла сӑн-сӑпатне, унӑн чӑн-чӑн гуманизмне, вӑл малта пыракан этемлӗх тӗнчине юратса сума сунине палӑртрӗç.

Съезд делегачӗсенчен нумайӑшӗ хӑйсен сӑмахӗсенче тӗнчери культура деятелӗсен пӗрлӗхне çирӗплетме кирлине асӑнчӗç.

Тӗнчери лару-тӑру лӑпкӑ мар. Çавӑнпа эпир вӑрçӑ хӑрушлӑхӗ çинчен самантлӑха та манма пултараймастпӑр. Çӗр çинче унта та кунта вӑрçӑ вучахӗсем чӗрӗлсе пынӑ чухне Совет Çарӗнчи çынсен паттӑрлӑхӗпе хӑюлӑхне сӑнласа кӑтартасси пирӗн литераторсемшӗн чи пархатарлӑ темӑсенчен пӗри пулса тӑмалла.

Съездра тухса қаланисенчен нумайӑшӗ литераторсен халь ытлашши лӑпкӑ пурӑнма юраманнине асӑрхаттарчӗç. Н. Грибачев, сӑмахран, питӗ хӗрӳллӗн калаçрӗ. Юлашки вӑхӑтра, терӗ вӑл, сывлӑм ӳкнӗ варманта канса киленме чӗнекен чӗлхе вӗççӗн çӳрекен сӑвӑсем пӗрин хыççӑн тепри пичетленеççӗ. Чӑваш поэчӗсем те çавнашкал çӑмӑлттайла сӑвӑсем çыркалаççӗ-ха. Пирӗн халӑхӑн ӗçпе çапӑçури революцилле традицийӗсем çинчен мухтав юрри юрлакан, çӗнӗ тӗнче вӑрçи чӗртме ӗмӗтленекенсене питлекен сӑвӑсем, калавсемпе очерксем хаçат-журналсенче сайра хутра кӑна тухкалани шӑпах пирӗн хӑшпӗр литераторсем лӑпкӑ пурӑнма юратнинчен килет пулас. Халлӗхе пирӗн политика ыйтӑвӗсемпе çырнӑ чӗрӗ сатира çук тени те ытлашши мар.

Чӑваш писателӗсен йышӗнче Тӑван çӗршывӑмӑра çапӑçу хирӗсенче алла хӗçпӑшал тытса хӳтӗленисем тем чухлех. Вулакансем вӗсенчен çарпа патриотизм темипе çырнӑ çӗнӗ произведенисем кӗтеççӗ. Халлӗхе ку темӑпа Л. Агаков, А. Алга, М. Қибек, Н. Ильбек, В. Долгов, А. Артемьев, В. Садай, В. Бурнаевский, П. Трофимов тата хӑшӗ-пӗри çырнӑ произведенисене кӑна асӑнма пултаратпӑр.

Чӑваш писателӗсен VIII съездӗнче çарпа патриотизм темипе çыракансен секцине тӑвасси пирки сӑмах хускатнӑччӗ. Халӗ çав секци ӗçе тытӑнчӗ. Ӑна Леонид Агаков ертсе пырать. Секци çарпа патриотизм темипе çырнӑ чи

лайăх произведенисен пуххине тата «Чăваш писателĕсем Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче» ятлă кĕнеке кăларма палăртрĕ.

Совет çĕршывĕнчи пурнăç хăвăртлăхĕ, Тăван çĕршывăмăрпа хамăр республикăри кулленхи паха событисем пире илемлĕ очерк жанрне çине тăрса аталантарма хистеççĕ. Писательсенчен Л. Агаков, А. Эсхель, С. Аслан, В. Алендей, Хв. Уяр тата темиçен кăна очерксем çыраççĕха. Писательсен событисене хăйсен куçĕпе курма, хăйсем сăнлакан геройсен пурнăçĕпе ĕçне хутшăнма тăрăшас пулать. Ун чухне тин пирĕн лайăх очерксем пулма пултараççĕ.

Иртнĕ çулсенче К. Турхан, Хв. Уяр, Уйăп Мишши очерк кĕнекисем кăларчĕç, çĕршывăмăр тăрăх çӳренĕ май мĕн-мĕн курни-илтни çинчен вулакансен кăмăлне хускатмалла çырса кăтартрĕç. Чăваш çĕршывĕ çинчен çавăн пек лайăх та илемлĕ очерксем çырсан — мĕн тери аван пулмалла!

Совет влаçĕ 50 çул тултарнине уявлама хатĕрленнĕ май, «Коммунизм ялавĕ» хаçат, очерксен конкурсне ирттерме йышăнса, пархатарлă ĕç пуçарчĕ. Нумаях пулмасть «Ялав» журнал редакцийĕ те калавсен конкурсне ирттересси çинчен пĕлтерчĕ. Писательсемпе журналистсем, çав конкурссене хутшăнса, лайăх очерксемпе калавсем çырасса шанас килет.

Юлашки пилĕк-ултă çул хушшинче чăваш литературинче сатирăпа юмор жанрĕ ăнăçлă аталанса пырать. Ку тĕлĕшпе «Капкăн» журнал уйрăмах пысăк та пархатарлă ĕç тунине палăртмалла. «Капкăн» чăваш писателĕсем çырнă калавсемпе фельетонсене, юптарăвĕсемпе сăввисене час-час пичетлет. Çавăнпа пĕрлех вăл çулсерен сатирăпа юмор произведенийĕсен пуххисене кăларать. Акă, кăçал та «Витĕр куçпа» ятлă сборник тухрĕ. Унта кĕртнĕ произведенисен авторĕсем вăтăртан ытла. Кулăш кушелĕнче эрехпе иртĕхекен ӳрĕк-сӳрĕке, бюрократизм пĕркенчĕкĕ айĕнчи чиновниксене, спекулянтсемпе сăвăс пек харам пырсене тата тĕрлĕ йышши йăх-яха питлекен произведенисем кăна мар, коммунизм тăвакан таса чунлă ĕçчене ырăпа сăнарлакан калавсемпе сăвăсем те пурри чăннипех савăнтарать.

Çапах та сатирăра халь писательсем пуринчен ытла йăла ыйтăвĕсене çĕклеме тăрăшни курăнать. Вĕсем тĕнчери политика ыйтăвĕсене хускатни сисĕнсех каймасть, реакци вăйĕсен тискерлĕхне, капитализм тĕнчинчи ирсĕр

йӑласене питлесе тӑрӑ шыв ҫине кӑларакан произведенисем питӗ сахал ҫыраҫҫӗ. Пирӗн политикӑлла памфлетсем, чӗрӗ те ҫивӗч фельетонсем, юптарусемпе эпиграммӑсем ҫукпа пӗрех.

Съездра совет драматургине аталантарас ыйтупа нумай калаҫрӗҫ. Ку ыйтупа доклад тӑвакан А. Салынский драматург нумай нациллӗ совет драматургийӗ хӑйӗн малтанхи утӑмӗсенчех новаторла драматурги пулнине кӑтартрӗ. Совет театрӗ, совет драматургийӗ, пирӗн пӗтӗм литературӑпа искусство пекех, аслӑ Ленин искусствӑна халӑх патне, халӑха искусство патне ҫывхартма кирли ҫинчен кӑтартса панине тӗпе хурса аталанать.

Пирӗн театрпа драматургире ырӑ традицисем сахал мар. Анчах традицисем вӗсем хӑйсене малалла тӗрӗс те ӑнӑҫлӑ аталантарса пырсан кӑна усӑллӑ. Традицисене мӗнле меслетпе аталантарса пымаллине пире пурнӑҫ хӑй кӑтартса парать.

Иртнӗ ҫулсенче совет писателӗсем, вӑл шутрах чӑваш драматургӗсем те, сахал мар пьесӑсем ҫырчӗҫ. Ҫав пьесӑсенчи тӗп герой нумай чухне хресчен, колхозник. Анчах хӑшпӗр пьесӑсенче ял пурнӑҫне ҫиелтен шӑйӑрттарса сӑнлани сисӗнет, теприсенче вара, ӑнсӑртран тупӑннӑ факт тӑрӑх пурнӑҫ чӑнлӑхне сӑнарлатпӑр тесе, общество аталанӑвӗн уйрӑм тапхӑрӗсенчи ҫитменлӗхсене пысӑклатса кӑтартма хӑтланнисем те пулкаларӗҫ.

Пирӗн обществӑпа экономика ыйтӑвӗсене лайӑх пӗлмелле, хресченӗн кӑткӑс пурнӑҫӗпе ӗҫне-хӗлне туллин сӑнласа кӑтартмалла. Экономикӑри пысӑк улшӑнусене пула ҫынсен психологийӗ ҫӗнелни, хулапа ял хушшинче ҫӗнӗ йышши ҫыхӑнусем йӗркеленни, ҫӗр ӗҫченӗн ӑнланулӑхӗпе тавракурӑмӗ сарӑлса аслӑланни драматургсен творчествине те ытларах кӗрсе пытӑрччӗ.

СССР писателӗсен IV съездӗнче тунӑ докладра та, тухса калакансен сӑмахӗсенче те историпе революци темипе пьесӑсем ҫырма кирли палӑрчӗ. Кӗҫех Совет влаҫӗ 50 ҫул тултарать, унтан В. И. Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине паллӑ тӑвӑпӑр. Ҫак пысӑк событисем пирӗн драматургсене Аслӑ Октябрь геройӗсем ҫинчен, чӑвашра Совет влаҫӗ туса ҫирӗплетни ҫинчен, Атӑл улӑпне — В. И. Ленин ҫулпуҫӑмӑра сӑнарласа кӑтартакан пьесӑсем ҫырма кирлине асӑрхаттараҫҫӗ. Вырӑс драматургӗсен ку темӑпа ҫырнӑ пьесӑсем сахал мар; анчах пирӗн вара историпе революци темине драматургире анлӑн хускатни сисӗнсех каймасть.

Съездра комедисем ытларах кирли ҫинчен хытă каларĕҫ. Чăвашсен те комедисем ҫук мар, пур. Анчах нумайлăха юлакан комедисем ҫителĕклĕ-ши?

Драматургири ҫитменлĕхсемшĕн театр критики те чылай айăплă. Пирĕн вара театр критики питĕ шăлсăр-ха. Калас пулать, литературоведсем юлашки вăхăтра кăна драматургие тишкерме тытăнчĕҫ. Ку тĕлĕшпе эпир Н. Павлов ҫырнă «Проблемы конфликта в чувашской драматургии» кĕнекене ҫеҫ асăнма пултаратпăр. Тишкĕрӳҫĕсен чăваш театрĕпе драматурги историне те (кĕҫех театр 50 ҫул тултарать) ҫырма васкас пулать.

Пирĕн совет литературинче ача-пăча кĕнекисем хăйне уйрăм пысăк вырăн йышăнаҫҫĕ. СССР писателĕсен IV съездĕнче ку ыйтупа паллă совет писателĕ С. Михалков доклад турĕ. «Пирĕн совет ҫĕршывĕнчи ача-пăча литературинче,— терĕ вăл,— вăйлă произведенисем те, илемлĕх тĕлĕшĕнчен вăтаммисем те пур. Ҫитĕнекен ăрăва вулама ҫырнисем хушшинче этем урăх наципе урăх раса ҫыннисене курайми пулма вĕрентекен пĕр кĕнеке те ҫукки вара пирĕншĕн, писательсемшĕн, чыс та мухтав».

Ачасем валли ҫыракан писательсем умĕнче тăракан тĕп задача халь — ҫамрăк вулакансене таса чунлă чăн-чăн гражданин пулма вĕрентекен произведенисем ҫырасси. Пирĕн произведенисене вулакан хăйĕн ҫамрăк чун туйăмĕпе ăнлантăр. Хальхи саманара, коммунизм обществи тунă чухне, ҫапăҫу хирĕнче е ҫутҫанталăкăн инкек-синкек кӳрекен вăйсемпе кĕрешнĕ ҫĕрте паттăр пулма хатĕрри хăй кăна ҫителĕксĕр-ха. Унăн ăс-хакăл кĕрешĕвĕнче те, тĕрĕслĕхшĕн, ҫынсен телейĕшĕн ҫапăҫнă ҫĕрте те малти ретре пымалла. Ҫапла пулма ăна чăнлăх ҫинчен ăста ҫырнă кĕнекесем вĕрентеҫҫĕ.

Эпир пĕлетпĕр: ачасем валли ҫырнă кĕнеке интереслĕ, уҫăмлă пулмалла. Ҫĕнĕ, коммунизм шухăшлă кĕнеке хаваслă та хавхалантараканскер пулмаллла, ачасемпе «вĕрентсе кăна пуклак чĕлхепе каласни» — вĕсене тунсăхлаттарса, ҫывратса ярать, темăран хăйĕнчен те пистерет, тенĕ Максим Горький. Ачасем валли ҫыракансен ҫакна яланах асра тытас пулать.

Паллах, ҫын шухăш-кăмăлне улăштарма та, пурăнакиле ҫынна тепĕр майлă, ҫĕнĕлле вĕрентме те пулать. Анчах ăна кайран тӳрлетсе мар, ачаран тĕрĕс, йĕркеллĕ ҫитĕнтерсен, мĕн тери ырă пулмалла,— терĕ съездра С. Михалков.— Кашни ачана тӳрĕ кăмăллă, ĕҫчен, хăюллă та паттăр туса ҫитĕнтерме пулать. Чи пахи кунта —

пурне те вăхăтра туса пыни!.. Унтан тата — çитĕнекен çамрăк ăслă, лайăх кĕнеке тĕлне пултăрччĕ — вара питĕ лайăх пулĕ!»

СССР писателĕсен IV съезчĕ хыççăн чăваш писателĕсем хăйсен вулаканĕсемпе чылай тĕл пулса калаçрĕç. Ачасем валли кĕнекесем мĕншĕн сахал тухаççĕ? Тăван çĕршыв вăрçин геройĕсем, ĕçри, наукăпа техникăри мухтавлă çынсем çинчен мĕншĕн сахал çыраççĕ? Мĕншĕн лайăх пьесăсемпе юрăсем çук? Çапла ыйтаççĕ вулакансем писательсенчен.

Ыйтусем пурте тĕрĕс, пурте вырăнлă. Ачасем валли сахал çыратпăр. Нумайăш астăвать, иртнĕ вăрçă хыççăнах «Шкул библиотеки», «Кĕнеке хыççăн кĕнеке» серипе чылай кĕнекесем кăларнăччĕ. Халь вара çав пархатарлă пуçару темшĕн сӳнсе ларчĕ.

Çамрăксем юмахсемпе халапсем, приключенисемпе фантастикăлла произведенисем юратса вулаççĕ. Ачасемпе çамрăксене моральпе политикăна вĕрентекен ĕçе хăнăхма пулăшакан кĕнекесене лайăх хитрелетсе малашне паха хут çине пичетлесе кăларма тытăнасчĕ.

СССР писателĕсен IV съездĕнче Л. Новиченко литература критики çинчен доклад туса пачĕ. Вăл писательсен III съезчĕ хыççăн иртнĕ сакăр çул хушшинче критикăпа литература тĕпчевĕ шучĕпе те, пахалăх енĕпе те чылай ӳссе вăй илнине палăртрĕ. Анчах критика литература процесне пĕрешкере тилхепипе тытса пытăр тата унăн обществăллă воспитани пĕлтерĕшĕ ӳстĕр тесен, татах нумай ĕçлемелле-ха. Пире литература пурнăçпа мĕнле çыхăннине тĕрĕслекен, опыта наука вĕрентнĕ пек тишкерекен, пĕтĕçтерекен, аталану çул-йĕрне кăтартса пыракан критика кирлĕ.

Критикăпа литературоведенин тĕп задачисенчен пĕри вăл — пирĕн литература Совет саманинче пухнă опыта теплĕн пăхса тухасси, çĕнĕ произведенисене вăхăтра тишкересси, литература критикин çамрăк кадрĕсене йĕркеллĕ çитĕнме пулăшасси пулать. Çавăнпа пĕрлех паллă писательсен творчествине тĕпчесе вĕренессине те манса хăвармалла мар. Теори енĕпе те пирĕн татса паман ыйту чылай-ха.

Чăваш писателĕсен Союзĕ çумĕнче халĕ литература критикин секцийĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Çакăнпа пĕрлех критиксемпе тĕпчевçĕсене пирĕн ытти творчество секцийĕсен ĕçне те активлăрах хутшăнтарас килет.

Юлашки вăхăтра писательсем хăйсем те критика

статйисем çырса тăни — чăннипех те ырă ĕç. Анчах хăш-пĕр статьясенче социализмла реализмран пăрăннă шухăшсем пуррине те асăрхамасăр хăварма çук. Акă, В. Садайăн «Колхозлă ял — чăваш писателĕсен юлашки çулсенче тухнă прозăлла произведенисенче» статйинех илер-ха. («Тăван Атăл», 4 №, 1966 ç.)

Унта автор чăваш писателĕсем çырнă произведенисен идейăпа илемлĕх шайне марксизм-ленинизм эстетикин виçипе мар, хăйне уйрăм чăваш аршăнĕпе виçсе хаклама хăтланать: час-часах вăл «хамăра кура», «хамăр виçепе шутласан», тесе çырать. Каламасăрах паллă, илемлĕ литературăн идейăллă шайне хаклама кашни халăхăн уйрăм виçе пулас пулсан, ку пирĕн литературăн идейăлăхĕпе илемлĕхне ӳстерме ним чухлĕ те пулăшман пулĕччĕ. Малтанах каларăмăр ĕнтĕ, пирĕн çĕршыври пур халăхсен литератури те пĕтĕм тытăмĕпе интернациллĕ, ăна хакламалли пĕртен-пĕр тĕрĕс виçе вăл — литературăпа искусствăри социализмла реализм меслечĕ.

Çавăнпа пирĕн хамăрăн идейăпа теори пĕлĕвĕсене ӳстерме, марксизм-ленинизм искусство çинчен вĕрентнине тĕпчесе вĕренме тăрăшас пулать.

СССР писателĕсен III съезчĕпе IV съезчĕ хушшинче пирĕн çĕршывра та, тĕнчере те пысăк улшăнусем пулчĕç. Совет халăхĕ коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем турĕ.

Çакна май СССР Писателĕсен союзĕн уставне те улăштарса çĕнетме тиврĕ. Устав çинчен съездра П. Бровка доклад турĕ.

Темиçе çул ĕнтĕ чăваш писателĕсем промышленноçри ĕçченсем, наукăпа техникăри открытисем çинчен сахал çыраççĕ тесе сăмах ваклатпăр. Ку темăпа А. Талвир темиçе çул ĕнтĕ ăнăçлă ĕçленине, Н. Терентьев «Хĕвел тухнă чух» пьеса, Г. Ефремов «Тимĕр тыткăнран» ятлă наукăллă-фантастикăлла повесть çырнине ырăпа асăнма пултаратпăр.

Пирĕн писательсем, уйрăмах прозаиксем, хăйсен произведенийĕсенче хальхи саманари рабочие, ученăя, хуçалăх руководительне, партипе совет работникне анлăн сăнласа кăтартасса шанас килет.

«Совет çĕршывĕн литераторĕ пуласси вăл — вăхăт таппине витĕр туйса пынине, çапăçура та, стройкăра та халăхпа пĕр ретре пынине, халăх ĕçĕ-хĕлĕпе, ун шухăшĕмĕчĕпе пурăннине, хăйĕн мĕнпур таланчĕпе ăсталăхне, чун-чĕре хĕлхемне халăха парса тăрăшнине пĕлтерет.

Совет çĕршывĕн литераторĕ пуласси вăл — хăйĕн сăмахĕпе çынна çунат хушассине, унра аслă шухăш-ĕмĕтпе туйăм-сисĕм çуратассине, ăна хаваслăхпа эстетика реххечĕ парассине пĕлтерет»,— тенĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ СССР писателĕсен IV съездне саламласа.

Чăваш писателĕсен VIII съездĕнче тухса калакансем А. Эсхель, А. Алендей, С. Аслан, Н. Терентьев, С. Шавли, А. Алга, Г. Ефимов, А. Емельянов тата ыттисем хальхи пурнăçа хăюллăн сăнарлама пикенни çинчен пĕлтерчĕç. Халлĕхе эпир халăх ĕлĕк-авал мĕнле пурăнни çинчен ытларах та лайăхрах çыратпăр. Пирĕн иртнĕ саманари чăваш хресченĕн пурнăçĕ çинчен çырнă лайăх романсемпе повеçсем, поэмăсем пур. Анчах вĕсенчен чылайăшне пĕр калăппа çырнăн туйăнать.

Пирĕн паянхи задача — ĕç тухăçлăх ӳсĕмĕнчи çĕнĕ процессене, авалхипе хальхи кĕрешнĕ хушăра çĕнĕ характерсемпе конфликтсем çуралнине, коммунизм тăвассишĕн кĕрешнĕ тапхăрта çынсем хушшинче çĕнĕлле çыхăнусем çуралнине сăнласа кăтартасси пулать.

Чăваш писателĕсен VIII съезчĕпе СССР писателĕсен IV съездĕнче поэзи çинчен ăшă сăмахсем нумай каларĕç: Аслă Октябрь çĕнтерĕвĕсене çирĕплетсе кĕрешӳре вăл халĕ те, яланхи пекех, малти ретре пырать, терĕç. Совет поэзийĕ çинчен тунă докладра М. Дудин пирĕн чăваш халăх поэчĕсене П. Хусанкайпа Я. Ухсая ырăпа асăнчĕ, жанрпа тематика тĕлĕшĕнчен вĕсен хăйсен нумай енлĕ пултарулăхне çĕнĕлле уçса кăтартнине палăртрĕ.

Поэзире пирĕн çитĕнӳсем уççăнах курăнаççĕ. Халь эпир поэт-коммунист Çеçпĕл Мишши ĕмĕтленнĕ ырă вăхăт çитрĕ теме те пултаратпăр. Вăхăтпа хăйсем çинчен, Аслă Октябрь тивлечĕпе тăван Чăваш çĕршывĕ чечекленни çинчен А. Алгапа Г. Ефимов, Г. Орловпа В. Давыдов-Анатри, Н. Евстафьевпа А. Воробьев, С. Шавлипе А. Галкин тата ыттисем те лайăх сăвăсемпе поэмăсем çыраççĕ.

Чăваш писателĕсен VIII съездĕнче пирĕн поэзири пысăк çитменлĕхсем, татса парайман ыйтусем пуррине палăртнăччĕ. Анчах халь кунта пирĕн поэзи тематика, географи тĕлĕшĕнчен питĕ сапаланчăккине, кĕскен каласан, ытама кĕрейменнине ыталаса илме хăтланнине палăртас килет. Чăн ĕнтĕ, хăшĕ-пĕрисем хăйсем курни тăрăх мар, вуласа пĕлни тăрăх çеç Куба е Конго, Çĕпĕр е Сахалин çинчен çыраççĕ. Хăйсен сăввисенче вĕсем хăшпĕр фактсемпе событисене, ятсене хисеплесе кăна туха-

ççĕ. Сăвăсенчен нумайăшĕнче хальхи самана пирки поэтсем пысăк шухăш хускатни сисĕнмест, вĕсем совет ĕçченĕсен чун илемне курман пекех туйăнать.

Съездра çамрăк писательсемпе ĕçлесси пирки пысăк калаçу пулчĕ. Литературăн пур жанрĕсене те талантлă çамрăксем хутшăнаççĕ, литературăна вĕсем хăйсен ку чухнехи çамрăксене хавхалантаракан та пăшăрхантаракан çĕнĕ шухăшĕсене илсе кĕртеççĕ. Пирĕн çамрăксенчен В. Игнатьев, Юхма Мишши, Ю. Петров, Г. Терентьев тата ыттисем те ăнăçлă çитĕнсе пынине палăртмалла. Хăшĕ-пĕрисем вĕсенчен нумаях пулмасть Атăл тăрăхĕнчи облаççемпе республикăсенчи çамрăк писательсен семинарĕнче пулчĕç, унта вĕсен ĕçне-хĕлне ырăпа асăнчĕç.

Литературăна çамрăксем хутшăнни пирĕн ума çамрăксен ăсталăхне ӳстерес тĕлĕшпе хăйне уйрăм пысăк задачăсем кăларса тăратать. Çак ĕçе пуринчен малтан аслă çулхи писательсен тимлĕ хутшăнмалла: çамрăк писательсемпе час-час тĕл пулса калаçмалла, вĕсен произведенийĕсене пăхса тухмалла, хаçат-журналсенче пичетлесе, семинарсенче консультаци памалла.

Аслă Октябрь уявĕ çывхарса килет. Çав историлле пысăк событи çывхарса килнине эпир хамăр çĕршывăн хĕрӳ пурнăçĕнчен, хамăр республикăри ĕççыннисен ĕçри тата политикăлла активлăхĕ ӳссе пынинчен сисетпĕр. Уяв умĕн пирĕн писательсен организацийĕнче те ĕçри тимлĕх вăйланса пырать.

Пирĕн поэтсемпе прозаиксем, драматургсем, критиксем çĕнĕрен-çĕнĕ произведенисем çыраççĕ. П. Хусанкай граждан вăрçи çулĕсенче Крыма штурмлама Сиваш урлă каçнă чухне пуçне хунă Прохор Иванов чăваш çинчен «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэма çырса пĕтерчĕ. Я. Ухсай И. Я. Яковлевпа И. Н. Ульянов туслăхĕ çинчен «Чĕмпĕр» поэма çырать, А. Алга Тăван çĕршыв вăрçи çинчен «Хĕçпе çурла» ятлă роман, Л. Агаков — «Вăрçă кĕрленĕ чух» кĕнеке, В. Алендей — «Курăксене тайса çил вĕрет» роман çырса пĕтереççĕ. Кĕçех М. Кибекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ», В. Давыдов-Анатрин «Тантăшсем», Г. Ефимовăн «Пирĕн çăлтăр тӳпере», А. Лукинăн «Эпир вĕçме çуралнă» сăвă кĕнекисем тухмалла. Кĕнеке издательстви К. Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романăн иккĕмĕш кĕнекине, П. Осиповăн чăваш наци театрĕ çурални çинчен çырнă «Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт» пьесине кăлармa хатĕрленет. Республикăри рабочи класс çинчен А. Талвир пысăк произведени çырать, С. Аслан ял ĕçченĕсем çинчен

повесть, Н. Терентьев «Кайри мала, хуркайăксем» пьеса çырса пĕтерчĕç.

Юбилей çулталăкĕнче театрсем мĕн-мĕн кăтартма хатĕрленеççĕ-ши тата? Юбилей репертуарĕнче, яланхи спектакльсемсĕр пуçне, «Нарспи» оперăпа «Сарпике» балет, В. Романован «Мичман Павлов», Л. Агаковпа В. Яковлевăн «Пĕрре, çуркунне», Н. Терентьевăн «Кайри мала, хуркайăксем», В. Ржановăн «Тĕнче çаврăнать», А. Кăлканăн «Октябрь хумĕ», М. Ухсайăн «Тĕлĕнтермĕш тĕрĕçĕ» пьесисем пулмалла.

Пирĕн съезд йышăннă решенире, çавăн пекех делегатсем те хăйсен сăмахĕсенче творчество секцийĕсен ĕçне лайăхлатма кирлине палăртрĕç. Писательсен Союзĕн правленийĕ халĕ ку тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕ.

СССР писателĕсен съезчĕпе Чăваш писателĕсен съездĕнче çыравçăсемпе вулакансем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме, илемлĕ литература произведенийĕсене пропагандăлама кирлине кăтартнăччĕ. Çак сĕнĕве пурнăçлас тĕллевпе писательсен Союзĕн правленийĕ Совет влаçĕ 50 çул тултарнă ятпа Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенче литература эрни ирттерчĕ. Çавнашкал литература эрни сентябрь уйăхĕнче Канаш районĕнче те пулать.

Манăн çакна аса илтерес килет: пирĕн республикăри ĕçченсем, Аслă Октябрь 50 çул тултарнине тивĕçлĕн кĕтсе илессишĕн социализмла ăмăртăва хутшăнса, Мускавпа Ленинградри ĕççыннисем «Юбилей çулĕнче ударлă ĕçлер!», «Юнашарта юлса пыракан ан пултăр!» тесе чĕнсе каланине хапăл туса ырларĕç. Çак пархатарлă ĕçре чăваш писателĕсем те малти ретре пырасса çирĕп шанас килет.

*1967.*

## ИДЕЙĂЛĂХПА ĂСТАЛĂХ

1969 çулхи июнĕн 5—17-мĕшĕсенче Мускавра коммунистсемпе рабочисен 75 партийĕн тĕнчери Канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу «Ку чухнехи тапхăрта империализма хирĕç кĕрешес задачăсем тата коммунистсен партийĕсемпе рабочисен партийĕсен империализма хирĕç тăракан мĕнпур вăйсен кĕрешӳри пĕрлĕхĕ» ятлă тĕп

документ йышӑнчӗ. Ку вӑл — пӗтӗм тӗнчери коммунистсен, ӗҫҫыннисен, мӗнпур прогрессивлӑ вӑйсен кӗрешӳпе ӗҫ программи.

Канашлу тӗнчери халӑхсене чӗнсе ҫапла каларӗ: «Вьетнама — никама пӑхӑнмалӑх, ирӗклӗх тата мир!» Ҫак чӗнӳ Канашлӑва хутшӑннӑ коммунистсемпе рабочисен партийӗсем Вьетнам халӑхӗпе пӗр шухӑшлӑ пулнине, ӑна пулӑшнине кӑтартса парать. Канашлу тата «Мире хӳтӗлеме чӗнсе каланине» йышӑнчӗ, «Владимир Ильич Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитни ҫинчен» чӗнсе каланине хӗрӳллӗн хавхаланса ырларӗ.

«Канашлу йышӑннӑ документсем,— терӗ тӗнчери Канашлӑва хутшӑннӑ юлташӗсене сума суса ирттернӗ йышӑнура КПСС Центральнӑй Комитечӗн Генеральнӑй секретарӗ Л. И. Брежнев юлташ,— хамӑрӑн пӗрлехи кӗрешӳре пире пурсӑмӑра та ҫӗнӗ хӗҫпӑшал параҫҫӗ. Вӗсем мӗнпур ҫӗршывсенчи коммунистсемпе ӗҫҫыннисене империализмла агрессипе пусмӑра хирӗҫ пыракан малашнехи кӗрешӗвӗн ҫул-йӗрӗсене татах та уҫҫӑнрах курса тӑма пулӑшӗҫ. Пӗтӗм тӗнче ҫийӗн вӗсем эпир ҫӗр ҫинчи тӳрӗ кӑмӑллӑ, прогрессивлӑ мӗнпур вӑйсене — ирӗклӗхшӗн, миршӗн тата халӑхсен телейӗшӗн кӗрешекен вӑйсене пӗрле, тӑванла чӗнсе калани пек янраса кайӗҫ».

Ҫывхарса килекен Ленин юбилейӗ — пӗтӗм тӗнче историйӗшӗн чи пысӑк пӗлтерӗшлӗ кун. Коммунистсемпе рабочисен партийӗсем ҫав куна хӑйсен революцилле ӗҫне вӑйлатнипе кӗтсе илеҫҫӗ, халӑх хушшинчи политикӑлла ӗҫпе идеологи ӗҫне вӑйлатнипе, хӑйсен речӗсене тӑтӑшах ӳстернипе тата ҫирӗплетнипе паларӑтаҫҫӗ.

Ленин ячӗ — кашни совет ҫыннишӗн, халӑхсене ирӗке кӑларассишӗн, вӗсен телейӗшӗн кӗрешекенсемшӗн калама ҫук хаклӑ ят. Пирӗн ӗмӗрти чи паллӑ революцилле улшӑнусемпе событисем—пӗтӗм этемлӗх пурнӑҫӗнче ҫӗнӗ тапхӑр уҫса панӑ Октябрьти революци ҫӗнтерни, тӗнчери социализмла система пулса тӑни, нацисен ирӗклӗхӗшӗн пыракан юхӑм ҫӗнӗ вӑйпа аталанни, рабочи класӑн мӗнпур ҫӗнтерӳллӗ кӗрешӗвӗ, тӗнчери ӗҫҫыннисем империализма хирӗҫ, миршӗн, демократишӗн, социализмшӑн кӗрешес ӗҫ вӑйлансах пыни — йӑлтах вӗсем аслӑ Ленин ячӗпе, ленинизмпа тачӑ ҫыхӑннӑ.

Пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисен ҫулпуҫӗ В. И. Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем Чӑваш АССРӗ 50 ҫул тултарас умӗн уявласа ирттерме хатӗрленеҫҫӗ. Ҫавна май кӑҫал апрелӗн 3—

4-мӗшӗсенче ВЛКСМ Чӑваш обкомӗпе Чӑваш писателӗсен Союзӗн правленийӗ ҫамрӑк писательсен канашлу-семинарне ирттерчӗҫ. Унта ҫамрӑк литераторсен пултарулӑхне тата В. И. Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине кӗтсе илсе уявлама хатӗрленнӗ вӑхӑтра вӗсен умӗнче тӑракан задачӑсене пӑхса тухрӑмӑр. Майӑн 28-мӗшӗнче Чӑваш АССР писателӗсен IX черетсӗр съезчӗ пулса иртрӗ. Съездра КПСС Центральнӑй Комитечӗ «В. И. Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнине кӗтсе илме хатӗрленесси ҫинчен» йышӑннӑ постановление пурнӑҫлас тӗлӗшпе чӑваш писателӗсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен тата вӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен пысӑк калаҫу пулчӗ.

Пирӗн республика ҫурални аслӑ Ленин ячӗпе ҫыхӑннӑ. Унтанпа 50 ҫул ҫитет ӗнтӗ. Аллӑ ҫул этемлӗх историйӗнче ытла пысӑк вӑхӑтах мар. Анчах ҫав аллӑ ҫул пирӗн республикӑна пӗтӗмпех урӑхлатса ҫӗнетрӗ. Чӑваш халӑхӗ, ытти тӑванла халӑхсем пекех, ҫак вӑхӑт хушшинче калама ҫук пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ.

Ленинизм ҫӗнтерӗвӗсем илемлӗ литературӑпа искусствӑра та, халӑх сӑмахлӑхӗнче те анлӑн, витӗмлӗн палӑраҫҫӗ. Чӑваш писателӗсем те Ленин ҫинчен, унӑн вилӗмсӗр ӗҫӗсемпе идейисем ҫинчен сахал мар ҫырнӑ, халӗ те ҫыраҫҫӗ. Ҫав произведенисене пӑхса тухсан, вӗсем пирӗн Тӑван ҫӗршыв, парти историйӗпе тачӑ ҫыхӑннине, ӗҫҫыннисене ӗмӗр-ӗмӗрех Аслӑ ҫулпуҫ вӗрентнӗ пек ӗҫлеме, унӑн халалӗсене пурнӑҫлама, ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарнине лайӑх куратпӑр. Пирӗн ӗнтӗ хамӑрӑн чӑваш лениниани пур. Вӑл социализмла революци малтанхи ҫулӗсенчех пӗрремӗш утӑмсем тунӑ.

Ленин пурӑннӑ чухнех халӑх ун ҫинчен юрӑсемпе юмахсем, легендӑсем хывнӑ. Чӑваш халӑхӗн такмакӗсемпе юмахӗсенче, пирӗн писательсен произведенийӗсенче Ленина тӗлӗнмелле Улӑп пек сӑнласа панӑ. Халӑх сӑмахлӑхӗн нумай произведенийӗсем ӗҫхалӑхӗ Ленина хисепленине лайӑх кӑтартса параҫҫӗ. Ленин теми — ҫав тери пуян та анлӑ, ответлӑ та пархатарлӑ тема. Вӑл кашни писателе хумхантарать, ҫӗнӗ вӑй-хӑват хушать. Паллах, ку темӑпа ҫырасси ҫӑмӑл ӗҫ мар. Анчах вӑл йывӑр пулсан та, унран пархатарлӑрах ӗҫ ҫук та темелле. Пирӗн поэтсем аслӑ ҫулпуҫӑмӑр ҫинчен сахал мар сӑвӑсемпе поэмӑсем ҫырчӗҫ. Н. Шелепин «Ленин», С. Элкерӗн «Хурҫӑ карап», П. Хусанкайӑн «Ленин», «Ҫӗнӗ ҫул — ҫӗнӗ юрӑ», Я. Ухсайӑн «Телей юмахӗ», С. Шавлин «Аслӑ урам», «Ульяновск», Уйӑп Мишшин «Ленин мавзолейӗнче»,

А. Алган «Владимир Ильич Ленин», В. Давыдов-Анатрин «Ленин ялавӗ», А. Воробьевӑн «Ленин медалӗ», Г. Ефимовӑн «Шӑрттан», «Ленин сунарта», А. Галкинӑн «Апрель хӗвелӗ» тата ытти поэтсен те Ленин ҫинчен ҫырнӑ сӑввисем вулакансен юратнӑ произведенийӗсем пулса тӑчӗҫ.

Ҫулпуҫ сӑнарӗ П. Хусанкай поэмисемпе сӑввисенче уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнать. Чӑваш халӑхӗ Ленина юратнине, вӑл никӗсленӗ Коммунистсен партийӗ тавра тачӑ пӗтӗҫнине П. Хусанкайӑн «Горкӑри ҫурт», «Аслӑ чӗре» поэмисенче лайӑх курма пулать. Вӗсен тӗп шӑнӑрӗ — аслӑ Ленина, Коммунистсен партине юратни. Вӗсенче Ленин ҫынсемпе тӗл пулнӑ чух ҫав тери тимлӗ пулнине, вӑл тӑванла халӑхсен культурине ҫӗклессишӗн ырми-канми ӗҫленине, ҫакӑн пек ҫӗкленӳ Октябрьти революци хыҫҫӑн кӑна пулма пултарнине кӑтартса панӑ.

«Горкӑри ҫурт» поэмӑра Ленин пурӑннӑ ҫурта поэт хӑй пырса курни ҫинчен ҫырнӑ. Кил-ҫуртри япаласене, таврари ҫутҫанталӑка сӑнланӑ, историлле-биографилле фактсем ҫинчен каланӑ май поэт Ленин сӑн-сӑпачӗн уйрӑм енӗсене кӑтартса панӑ: вӑл ӗҫхалӑхӗн интересӗсене чун-чӗререн парӑнса, ӗҫҫыннисен революцилле вӑй-хӑватне ӗненсе ӗҫлет. Ленин — аслӑ гуманист тата интернационалист.

«Аслӑ чӗре» поэмӑра П. Хусанкай Ленин 1918 ҫулта Чӗмпӗр Совдепне чӑвашсене ҫутта кӑларас тӗлӗшпе питӗ паллӑ ӗҫсем тунӑ И. Я. Яковлев ӗҫне-хӗлне тӗрӗс хаклама май паракан телеграмма яни ҫинчен ҫырать. Поэмӑра Яковлева унӑн пурнӑҫӗнче чи юратнӑ ӗҫӗнчен уйӑрма кирлӗ марри ҫинчен телеграмма ҫыракан В. И. Ленин сӑнарӗ тухса тӑрать. Чӑнах та ӗнтӗ, халӑха ҫутта кӑларасшӑн тӑрӑшнӑ ҫын кунтан ӑшӑрах та хаклӑрах сӑмах урӑх илтмен.

Пӗлтӗр «Ялав» журналта П. Хусанкай «Ҫӗрте те ҫӗрместпӗр» поэма пичетлесе кӑларчӗ. Ку произведение Врангеле хирӗҫ пынӑ ҫапӑҫусенче паттӑрла ҫапӑҫса пуҫне хунӑ чӑваш халӑхӗн ывӑлне Прохор Иванова асӑнса ҫырнӑ. Хӗрлӗ Ҫарта тӑванла халӑхсен ывӑлӗсем — вырӑс ачи Владимир Юрин, тутар Ахмет, мари йӗкӗчӗ Миклай тата ыттисем те юнашар тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ, вӗсене кӗрешӳре аслӑ Ленин социализмла ҫӗршывӑмӑрӑн тӑшманӗсене аркатса тӑкма чӗнни хавхалантарать, вӗсем пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса Чӑваш автономине туса хурасси ҫинчен кӑларнӑ Ленин алӑ пуснӑ декрета ырласа йышӑнаҫҫӗ.

Ленин биографийӗ вӑл — пирӗн халӑх, пирӗн парти патша саманипе капитализм пусмӑрӗнчен хӑтӑлассишӗн, тӗнчере пӗрремӗш совет государстви тӑвассишӗн кӗрешнӗ ҫул-йӗрӗн паллисем. Ҫак кӗрешӳ пӗтӗм тӗнчери ӗҫхалахӗн революцилле юхӑмне пуҫласа панӑ. Ҫакӑ Семен Элкерӗн «Вутпа тӑвӑл витӗр» роман-хроникинче (1949) те лайӑх курӑнать. Кунта вулакан умне умлӑн-хыҫлӑн перемӗш тӗнче вӑрҫи, монархи йӗркине аркатни, февральти буржуаллӑ-демократилле революци, Ленин Питӗре килни тата Совет влаҫӗшӗн пынӑ кӗрешӳ, пролетариат диктатурине туса хуни, Российӑра граждан вӑрҫи пуҫланса кайни уҫҫӑн тухса тӑраҫҫӗ. Романа хӑйне евӗрлӗ хроника пек ҫырнӑ, унта ҫирӗп йӗркелесе тунӑ сюжет ҫук. Ленин ӗҫне-хӗлне кӑтартса паракан эпизодсемпе сценӑсем сахал, апла пулин те рабочисемпе хресченсен ҫӗнтерӗвне, вӗсем ҫамрӑк Совет республикине ҫирӗплетессишӗн кӗрешнине Ленин ертсе пыни лайӑх сисӗнсе тӑрать.

Ӗҫҫыннисен революцилле кӗрешӗвӗнче Коммунистсен партийӗ ертсе пыракан вӑй пулнине В. И. Краснов-Асли «Вутра» романра лайӑх кӑтартса панӑ. Автор хӑй Октябрь революцине, Чӑваш ҫӗршывӗнче Совет влаҫӗ туса хурас ӗҫе активлӑ хутшӑннӑ. Унӑн геройӗсем революци тӑшманӗсене хирӗҫ харсӑррӑн та паттӑррӑн, ленинизма чун-чӗререн парӑнса кӗрешеҫҫӗ.

Ҫулпуҫӑмӑр сӑнарӗн уйрӑм енӗсене прозӑра, публицистикӑра тата аса илсе ҫырнӑ ытти произведенисенче те кӑтартса панӑ.

Ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗпе шӑпине татса парас ӗҫре Ленин ҫав тери ӑслӑ та таса кӑмӑллӑ пулнине Илпек Микулайӗ «Телей шыраса» калавра лайӑх сӑнланӑ. Унта пурнӑҫра чӑн пулнӑ ӗҫ ҫинчен ӗнентерӳллӗ ҫырса кӑтартнӑ.

Ленин ҫинчен ҫырнӑ лайӑх произведенисен шутне Хветӗр Уярӑн «Шушӑра, Саян тӑвӗсем патӗнче» очеркне кӗртмелле. Автор ӑна хӑй Шушенски ялне кайса килнӗ хыҫҫӑн ҫырчӗ, очерк чӑвашла та, вырӑсла та пичетленсе тухрӗ, вулакансем ӑна ырласа йышӑнчӗҫ.

Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ-хӗрӗсем хӑйсем Ленина курни ҫинчен аса илсе ҫырнисем те интереслӗ. Эпӗ кунта М. Булочниковӑн «Асран кайми тӗлпулусем», Е. Орловӑн «Ленинпа тӗл пулни», И. Илларионовӑн «Совет влаҫӗшӗн кӗрешнӗ чух», Т. Кривовӑн, В. И. Краснов-Аслин, А. Ургалкинӑн тата ыттисен асаилӗвӗсене асӑнса хӑварасшӑн.

Драмӑлла произведенисенчен уйрӑмах Александр

Кӑлканӑн Шупашкар хулипе Шупашкар уесӗнче Совет влаҫӗ туса хурассишӗн тата ӑна ҫирӗплетессишӗн пынӑ кӗрешӳ ҫинчен калакан «Октябрь хумӗ» пьесине палӑртас килет. Драмӑн тӗп геройӗ Иван Кадыков коммунистсен партин Центральнӑй Комитечӗпе Ленин кӑтартӑвӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн паттӑррӑн кӗрешет. Вилмеллех аманнӑ пулин те, вӑл халӑха буржуази тӗп пуласси ҫинчен калать, рабочисемпе хресченсене Ленинпа пӗрле, Коммунистсен партийӗпе пӗрле пыма чӗнет. Драма хурлӑхлӑ вӗҫленет, анчах унӑн шухӑшӗ оптимизмла, вӑл Совет влаҫӗ ҫӗнтерес шанчӑка ҫирӗплетсе парать.

Пирӗн драматургсене Ульяновсен килйышӗпе Яковлев килйышӗ хушшинчи туслӑх, И. Н. Ульянов чӑвашсем хушшинче культурӑна сарас, вӗсене ҫутта кӑларас ӗҫре мӗнле вырӑн йышӑнни уйрӑмах интереслентерет. Эпир Владимир Ульянов гимназист чӑваш учительне Никифор Охотникова университета кӗме хатӗрленме пулӑшнине лайӑх пӗлетпӗр. Ленин мӗн ачаранпах И. Я. Яковлев патне пырса ҫӳренӗ, унӑн вӗренекенӗсене палланӑ, ҫавӑн пекех Чӗмпӗрти учительсем хатӗрлекен чӑваш шкулӗнчи ӗҫ-пуҫа пӗлсе тӑнӑ. И. Я. Яковлев чӑвашсене ҫутта кӑларасшӑн тӑрӑшнине Ленин пысӑка хурса хакланӑ. Ҫакна пирӗн халӑх пархатарлӑн асӑнать.

Нумаях пулмасть Николай Терентьев «Хумсем ҫырана ҫапаҫҫӗ» ятлӑ пьеса ҫырса пӗтерчӗ. Унта И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев пурнӑҫне, вӗсем чӑваш нацине ҫӗклес, чӑвашсене ҫутта кӑларас тӗлӗшпе епле ӗҫленине, Владимир Ульяновӑн обществӑлла-политикӑлла тавракурӑмӗ мӗнле ӳссе аталаннине, вӑл Охотникова мӗнле вӗрентнине ҫырса кӑтартнӑ. Ку пьесӑна писательсен Союзӗ те, К. Иванов ячӗпе хисепленекен драма театре те пысӑка хурса хакларӗҫ.

Эпир ҫавӑн пекех Мария Ухсайӑн «Чӗмпӗр чанӗсем» пьесипе те паллашрӑмӑр. Кунта 1886—1887 ҫулсенче Чӗмпӗрте тата Ульяновсен ҫемйинче пулса иртнӗ ӗҫсене кӑтартса панӑ. Ку пьесӑра эпир Н. Терентьев пьесинче кӑтартнӑ хӑшпӗр фактсене, событисене куратпӑр, анчах драматург Ленина Совет влаҫӗн пӗрремӗш ҫулӗсенче те кӑтартса пама тӑрӑшнӑ.

В. И. Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитес кун ҫывхарса килнӗ май, ҫулпуҫ ҫинчен ҫырнӑ произведенисем нумайлансах пыраҫҫӗ, вӗсене ҫыракан авторсен йышӗ те ӳснӗҫемӗн ӳсет. Пирӗн журналсемпе хаҫатсенче Ленин ҫинчен, уйрӑмах унӑн Чӗмпӗрти пурнӑҫӗ ҫинчен ҫырнӑ

ҫӗнӗ произведенисем пичетленсе тухрӗҫ. Анчах пурте вӗсем кирлӗ пек ҫӳллӗ, ленинианӑна тивӗҫлӗ илемлӗх шайӗнче тӑраҫҫӗ теме ҫук-ха. Пирӗн литературӑра Ленин темине ҫутатса парас ӗҫре татса паман ыйтусем те сахал мар. Ку енӗпе ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсем те пулкаларӗҫ. Съездра тухса калакансем Ленин тематикипе ӗҫлекен писателӗн уйрӑмах пысӑк ответлӑха туйма кирлине асӑрхаттарчӗҫ. Кун пирки СССР писателӗсен IV съездӗнче те питӗ витӗмлӗ каласа хӑварнӑччӗ: «Кирек хӑҫан та, кирек ӑҫта та, эпир Ленинпа революци темине пырса тӗкӗнетпӗр пулсан, пирӗн тарӑн содержанишӗн, партилле ҫирӗп тӗллевшӗн, художествӑлла лайӑх ӑсталӑхшӑн ответлӑха туйса ӗҫлемелле».

Писатель Ленин темипе ӗҫленӗ чухне ҫулпуҫ сӑнарӗ историллӗ фактсемпе, документсемпе килӗшсе тӑни тӗп вырӑнта пулмалла. Историлле событисен пӗлтерӗшӗпе тӗллевӗнчен кӑшт кӑна пӑрӑнса кайни те Ленин сӑнарне — хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫӗпе ӗҫне историпе ҫыхӑнтарнӑ ҫулпуҫӗн сӑнарне — пӑсса хума пултарать.

«Ленин сӑнарне ӳкерсе парас тесессӗн, писателе таса чун, уҫӑ чӗре кирлӗ,— тесе ҫырнӑччӗ нумаях пулмасть «Правда» хаҫат.— Ҫавӑн пек кашни ӗҫех вӑл — чун-чӗрене ҫӗнетекен процесс, таса чӗреллӗ пулма тунӑ тупа. Ку шӑпах ӗнтӗ Маяковский асран каймив сӑмахсемпе каласа хӑварни пулать: «Революцие малалла ишсе кӗрес тесе, эпӗ хама Ленинпа тасататӑп».

В. Долгов Г. Ефимовӑн «Амӑшӗпе ывӑлӗ» поэми пирки «Ялав» журналта (1969 ҫ., 2-мӗш №) пысӑк статья ҫырса кӑларчӗ. Унта вӑл поэмӑн идейӑпа илемлӗх шайӗ ҫителӗксӗррине палӑртрӗ. Калас пулать: Г. Ефимов Ленин темине ҫутатса парас енӗпе нумай, ҫине тӑрса ӗҫлет. Аслӑ ҫулпуҫӑмӑр ҫинчен вӑл сӑвӑсем те, калавсем те ҫырать. Анчах ҫав произведенисенчен хӑшпӗрисем илемлӗх енчен, шухӑш-туйӑм енчен кӑйттӑрах, вӗсенче Ленин пурнӑҫӗнчен илнӗ уйрӑм фактсемпе эпизодсене рифмӑласа ҫеҫ кайнисем те тӗл пулаҫҫӗ. Халӗ поэт, критикӑна шута илсе, «Амӑшӗпе ывӑлӗ» поэмӑна хушса, ҫӗнетсе ҫырчӗ, ҫавӑнпа та вӑл идейӑпа илемлӗх тӗлӗшӗнчен вӑйлӑрах пулса тухасса шанас килет.

Темиҫе ҫул маларах Ю. Петровӑн «Ленинпа ача» ятлӑ поэми тухнӑччӗ, анчах вӑл та хӑйӗн содержанийӗпе, илемлӗх шайӗпе имшеркке, вӑйсӑр произведени пулнине пирӗн критиксем те, вулакансем те тӗрӗс кӑтартнӑччӗ.

Чӑваш халӑх поэчӗ Я. Ухсай халӗ «Чӗмпӗр» ятлӑ пы-

сăк поэма çырать, унăн малтанхи тăватă пайĕ «Тăван Атăл» журналта пичетленсе тухрĕ. Поэт каланă тăрăх, ку вăл В. И. Ленинăн çамрăк чухнехи пурнăçĕ, паллă педагог-просветительсем И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев хушшинчи туслăх çинчен çырнă произведени пулать. Пичетленсе тухнă сыпăксенче чăннипех те интереслĕ, поэзи тĕлĕшĕнчен витĕмлĕ вырăнсем пур. Çапах та авторăн поэмăна лайăхлатас енĕпе татах ĕçлес пулать-ха. Пичетленнĕ сыпăксенче вулакан тахçанах пĕлекен фактсене асăнса, иллюстрацилесе çеç иртсе кайнă тĕлсем пур. И. Я. Яковлева та поэт витĕмлех сăнласа парайман. Ятлă поэтран вулакан идея енчен пуян та илемлĕ чĕлхепе çырнă произведени кĕтет. Эпир Я. Ухсай хăйĕн çак ĕçне ăнăçлă вĕçлессе шанатпăр, чăваш ленинианинче вăл тивĕçлĕ вырăн йышăнтăрччĕ.

Аслă çулпуçáмăр çинчен çырнă хăшпĕр произведенисенчи çитменлĕхсем вĕсем пурте пирĕн парти историне, аслă Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсене, унăн вĕрентĕвне тарăн тишкĕрсе тĕпчеменнинчен килеççĕ. Çавăн пекех тата пулса çитмен произведенисене пичетлеме васкани пăлăрать.

Ленин çинчен юлашки çулсенче çырнă произведенисене, паллах, пурне те асăнса хăварма май çук ĕнтĕ. Сăмах кунта аслă çулпуçăмăр сăнарне çутатса парас ыйту пирки пырать, мĕншĕн тесен халĕ пирĕнте истори туйăмĕ çав тери çивĕчленсе çитрĕ, эпир пурăнса ирттернĕ аллă çулхи пурнăç опычĕ пире революци историне, чи аслă та чаплă çыннăмăрăн — Владимир Ильич Ленинăн сăнарне тарăнрах тĕпчесе пĕлме май парать, писательсем умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратать. Кун пирки КПСС Центральнăй Комитечĕ «Владимир Ильич Ленин çуралнăранпа 100 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленесси çинчен» йышăннă постановленире питĕ тĕплĕ каланă.

Пирĕн литераторсем иртнĕ вăхăт çинчен тата малалла талпăнса пыракан пысăк тапхăр çинчен ытларах та ытларах шухăшлаççĕ, вĕсем историре, совет тапхăрĕнче пулса иртнĕ ĕçсемпе улшăнусене тарăнрах тĕпчесе сăнласа пама тăрăшаççĕ. Совет халăхĕ коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешнине кăтартакан лайăх произведенисенчи герой шухăш-туйăмĕсенче, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕнче яланах Ленин пурăнать.

Совет Союзĕнче социализм çĕнтерни, коммунизм строительствинчи çитĕнýсем пурте Ленин идейисемпе планĕсéм пурнăçа кĕрсе пынине лайăх кăтартса параççĕ. Ĕлĕкхи Российăн аграрлă районĕсенче çĕнĕ рабочи класс

çуралса вăй илни, хресчен ăстăнĕнче вак хуçа психологийĕ тĕп пулни, рабочи класпа колхозлă хресченсем хушшинче тăванла çыхăну çирĕпленсе çитни пĕтĕм совет обществин моральпе политика пĕрлĕхĕ аталанса пынине палăртса тăраççĕ те ĕнтĕ. Анлă та хĕрӳ пурнăçпа пурăнать халь пирĕн республика. Пĕтĕм Тăван çĕршывăмăр пекех, вăл ударлă стройка площадки пулса тăчĕ.

В. И. Ленин литераторсене пурнăçа, унăн аталанăвĕн законĕсене тарăннăн тĕпчесе вĕренме чĕннĕ. Пуринчен малтан вăл искусствăра общество пурнăçне, уйрăм çын пурнăçне уçса панине, çынсен психологине, вĕсен чунчĕрипе кăмăлне тĕрĕс кăтартса панине хакланă. Малта пыракан писатель куллен пулса иртекен ĕçсене кăтартса панипех çырлахмасть, вăл пурнăç аталанăвĕн тĕп шăнăрне, унăн малалла туртакан вăйне сăнаса, тĕпчесе пырать, çынсен ăстăнне çĕнĕ самана çыннисен сăнарĕпе, вĕсен ĕмĕчĕсен хăвачĕпе пуянлатать.

Пурнăçра, унăн аталанăвĕнче яланах хирĕçлĕхсем пур. Творчествăлла ĕçлени, çĕнĕ пурнăç тума хавхаланса тăрăшни пулать те ĕнтĕ çав пурнăçа малалла аталантарса пыракан вăй-хăватсенчен пĕри. Çакна литературăра тĕрлĕ майпа сăнласа пама пулать. Çав майсем чăннипе пурнăçпа килĕшсе тăмалла, унăн тĕрлĕ енĕсене тивĕçлĕ пек паха сăрăсемпе илемлетсе кăтартса памалла.

В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул, Чăваш автономине туса хунăранпа 50 çул çитнине кĕтсе илме хатĕрленесси Россия Федерацийĕнчи писательсен III съездне иртterме хатĕрленнипе пĕр вăхăтра пулса иртет. Икĕ съезд хушшинче (1965—1969 çулсем) чăваш писателĕсен творчествăлла ĕçĕ чылай аталанса, ӳссе пычĕ. Прозăра та, поэзире те, драматургире те Чăваш çĕршывĕнче Совет влаçĕ туса хунăранпа пулса иртнĕ социаллă улшăнусене кăтартса паракан пысăк произведенисем пур. Çак икĕ съезд хушшинче кăна пирĕн 16 роман, 38 повесть, 14 поэма, 21 калав кĕнеки, 40 сăвă кĕнеки, 30 пьеса пичетленсе тухрĕç. Ача-пăча литератури енĕпе вара çав вăхăтра 3 поэма, пĕр повесть, калав кĕнекисем—17, сăвă пуххисем — 12 тухнă. Чăваш республикинче пурăнакан вырăс писателĕсем хăйсен вулаканĕсем патне 3 повесть, калав кĕнекисем 5, сăвă кĕнекисем те çавăн чухлех çитерчĕç.

Пирĕн литературăна тишкерсе тухни çакна кăтартса парать: унта историпе революци, Совет влаçне туса хуни тата ăна çирĕплетни çинчен çырнă произведенисем чылай

вырăн йышăнаççĕ. Колхоз ĕçĕнче палăрнă çынсем, Тăван çĕршывăн вăрçинче тĕлĕнмелле харсăр пулнă паттăрсем çинчен чăваш писателĕсем сахал мар кĕнеке çырса кăларчĕç.

Влас Иванов-Пайменăн «Кĕпер» ятлă романĕ — Октябрьти социализмла революци чăваш халăх пурнăçне çĕнетсе улăштарнине кăтартса паракан пысăк произведени. Революциччен тĕттĕм те чухăн пурăннă чăваш халăхĕ, хăйĕн аслă тăванĕ — вырăс халăхĕ пулăшнипе, ĕлĕкхи хĕн-хурлă пурнăçран çутă пуласлăха кĕпер хывать,— çакăн пек ĕнтĕ романăн тĕп шухăшĕ. Романăн геройĕсем революципе пĕрле ӳссе çитĕнсе пыраççĕ, граждан вăрçин вут-хĕмĕнче хĕрсе çирĕпленеççĕ. Коммунист-ленинçăсен, революцилле массăсене ертсе пыракан геройсен сăнарĕсем асра чĕррĕн юлаççĕ, вĕсене кура романăн çамрăк геройĕсем те тĕрĕс воспитани илсе çирĕпленеççĕ, ӳсеççĕ.

Пирĕн шухăшпа, хальхи çамрăксемшĕн Пайменăн «Аттесен палăкĕ» ятлă калавсемпе асаилӳсен кĕнеки, С. Шавлин «Кĕсле тытрăм аллăма» кĕнекинчи очерксем, А. Лазаревăн «Хула хĕрĕ» повеçĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ, пурнăçа пĕлме пулăшакан паха произведенисем.

1968—1969 çулсенче «Ялав» журналта Леонид Агаковăн «Вырăс каччи» ятлă повеçĕн пĕрремĕш пайĕ пичетленсе тухрĕ. Унта революци пуçламăшĕнчех вырăнти Советсене — ĕçхалăхĕн влаçне çирĕплетме пулăшма Чăваш çĕршывне килнĕ çамрăк вырăс рабочийĕ çинчен çырса кăтартнă.

Василий Ржановăн çĕнĕрен редакцилесе кăларнă «Тĕнче çаврăнать» («Энтип») драмине те ырă кăмăлпа асăнас килет. Унта Энтип хресченĕн пурнăç шăпи урлă автор чăваш ялĕнче Совет влаçĕ туса хунине, чăваш хресченĕсем уйрăм хуçалăхран кусса, Ленин идейисем пулăшнипе, коллективлă хуçалăхпа пурăнма пуçланине автор тĕрĕс те ĕненмелле кăтартса пана. Пьесăра путиловец-коммунист Смолин сăнарне лайăх ӳкернĕ, тĕп геройăн Энтипăн шухăш-кăмăлне, вăл Ленин çинчен мĕн шухăшланине уççăн кăтартнă. Пьесăн сюжечĕ революци тăшманĕсемпе Совет влаçĕн тăшманĕсене хирĕç пыракан хаяр кĕрешӳ вутĕнче çуралса тухакан çивĕч хирĕçӳ çинче никĕсленсе тăрать.

Петр Осипов «Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт» пьесине революци вут-çулăмĕнче çуралнă чăваш театрне халалласа çырнă. Совет влаçне туса хунипе пĕрле театрăн çамрăк коллек-

тивӗ ӳссех, вӑй илсех пынине куратпӑр эпир. Чӑвашсен куҫса ҫӳрекен театрӗн артисчӗсем граждан вӑрҫине активлӑн хутшӑнса кӗрешеҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах вӗсем чӑвашсен тин ҫеҫ ҫуралса ҫирӗпленекен искусствипе ҫирӗп ҫыхӑну тытаҫҫӗ, ӑна аталанма пулӑшаҫҫӗ. Пьесӑна историре чӑн пулнӑ тӗслӗхсемпе усӑ курса ҫырнӑ.

Кунта ҫакна та каласа хӑварас килет: пирӗн литературӑпа искусствӑри И. С. Максимов-Кошкинский, П. Н. Осипов, О. И. Ырзем, Б. А. Алексеев пек ҫынсем— чӑваш наци культурин паллӑ деятелӗсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсен сӑнарӗсене илемлӗ литературӑра анлӑн та сумлӑн кӑтартса пама вӑхӑт ӗнтӗ. Ҫакӑ та вӑл Ленин социализм саманинче наци культури вӑйлӑн аталанасси ҫинчен калана шухӑш ҫӗнтерӳллӗн пурнӑҫа кӗрсе пынине тепӗр хут ҫирӗплетсе панӑ пулӗччӗ.

Иртнӗ ҫул эпир театрта Леонид Родионовӑн «Вӗҫленеймен юрӑ» пьесипе паллашрӑмӑр, куракансем ҫав спектакле кӑмӑллӑн йышӑнчӗҫ. Ку вӑл коллективизаци пынӑ ҫулсенчи хӗрӳллӗ класс кӗрешӗвӗ, революци традицийӗсем ӑруран ӑрӑва куҫса пыни ҫинчен калакан произведени.

Чӑваш халӑх историйӗнчи питӗ паллӑ та пысӑк пӗлтерӗшлӗ тапхӑра — чӑваш ҫӗршывӗ вырӑс государствипе пӗрлешнӗ тапхӑра—ҫырса кӑтартнӑ Кузьма Турхан хӑйӗн «Сӗве Атӑла юхса кӗрет» романӗнче. Вулакансем ку романӑн икӗ кӗнекипе паллашрӗҫ, виҫҫӗмӗш кӗнекине автор ҫитес ҫулсенче ҫырса пӗтересшӗн.

Нумай ҫул хушши ӗнтӗ эпир пирӗн писательсем рабочи класс ҫинчен сахал ҫыраҫҫӗ тесе калаҫатпӑр. Ҫак темӑпа юлашки 2—3 ҫул хушшинче А. Талвирӑн «Вутлан зажигает огни» романӗ тата унӑн очеркӗсемпе калавӗсем, З. Нестеровӑн «Ылтӑн пӗрчисем» повеҫӗ, И. Григорьевпа Л. Степановӑн калавӗсемпе повеҫӗсем ҫеҫ пичетленсе тухрӗҫ. Нумаях пулмасть тата ҫамрӑк ҫыравҫӑ Н. Петровская издательствӑна ҫамрӑк рабочисем ҫинчен ҫырнӑ повесть тӑратрӗ. В. Ухли пир-авӑр ӑстисем ҫинчен роман ҫырса пӗтерет. Анчах ку, паллах, ҫителӗксӗр-ха.

Литературӑра рабочи класс пурнӑҫне кӑтартса парассине пысӑка хурса, ВЦСПС президиумӗпе СССР писателӗсен Союзӗн правленийӗн секретариачӗ 1968 ҫулхи апрелӗн 26-мӗшӗнче ятарласа постановлени йышӑнчӗҫ, Владимир Ильич Ленин ҫуралнӑранпа 100 ҫул тултарнине хисеплесе, рабочи класс ҫинчен ҫырнӑ илемлӗ прозӑн

Пĕтĕм Союзри ӳçă конкурсне нрттерессн çинчен пелтерчĕç. Çав постановленире: «Конкурсăн тĕп тĕллевĕ — çĕршыври писательсене героикăлла рабочи класс çинчен романсем, повеçсем, калавсем çырас ĕçе явăçтарасси»,— тенĕ. Коммунизм обществи тăвассишĕн пыракан кĕрешӳре рабочи класс чи хастарлă, чи малти, ертсе пыракан вăй-хăват пулнине кăтартса памалла. Çав произведенисем рабочи класăн паянхи ăрăвĕ, КПСС ертсе пынипе, хăйĕн ашшĕсемпе аслă тăванĕсен — Октябрьти социализмла революци участникĕсен ĕçпе кĕрешӳ традицийĕсене малалла аталантарса пынине анлăн çутатса памалла. Хальхи совет ĕçченĕсен нумай енлĕ пуян шухăш-кăмăлне, вĕсен анлă техникăлла пĕлĕвне, пысăк культурине, государство ĕçне весем чăн-чăн хуçа пек туса пынине, миршĕн, ирĕклĕхшĕн тата пĕтĕм этемлĕх телейĕшĕн çине тăрса кĕрешнине кăтартса памалла.

Чăваш писателĕсен те çак конкурса активлăн хутшăнас пулать.

Съездра тухса калаçнă юлташсем (А. Галкин, А. Талвир) промышленность предприятийĕсенче, строительство организацийĕсенче ĕçлекен çамрăк авторсене çырма пулăшасси пирки сĕнӳсем пачĕç. Писательсен Союзĕн правленийĕ çывăх вăхăтра рабочи класс темипе çыракан писательсен канашлăвне ирттерме хатĕрленет. Паллах, çак канашлăва ирттерни çамрăк авторсемшĕн те усăллă пулĕ.

Ĕçри коллективпа тачă çыхăну тытмасан, рабочи класс çинчен лайăх кĕнеке çырма май çук. Рабочисен коллективĕнче çеç çынсен психологине, вĕсен творчествăлла ĕçĕн уйрăмлăхĕсене туйса илме, ĕççыннин кăмăлтуйăмне, унăн сăнарне асăрхаса ăнланма пулать. Анчах, шел пулин те, халлĕхе республикăри заводсене, Шупашкар ГЭСне тунă çĕре е ытти пысăк промышленность объекчĕсене тухса çӳрекен писательсем пирĕн сахал-ха.

Халĕ пирĕн ялхуçалăх производствинче те, колхозниксен пурнăçĕнче те çав тери пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Ял пурнăçĕ пĕр вырăнта тăмасть, вăл улшăнсах пырать, унти çынсем те ӳсеççĕ.

— Пирĕн колхозниксем чăваш писателĕсен кĕнекисене юратса вулаççĕ. Эпир писательсенчен чăваш ялĕн хальхи пурнăçне тĕрĕс кăтартакан, халăх кăмăлне каякан, вулакана хумхантаракан, шухăшлаттаракан кĕнекесем кĕтетпĕр,— терĕ съездра ялхуçалăх производствин талантлă организаторĕ, Муркаш районĕнчи «Знамя тру-

да» колхоз председателе, Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев.

Ял çыннин пурнăçне, ĕçне-хĕлне, шухăш-кăмăлне кăтартакан произведенисенчен А. Емельяновăн «Çавал сарăлсан», А. Эсхелĕн «Хĕвеллĕ çумăр» повеçĕсене, В. Ухлин «Шуркелсем» романне палăртса хăвармалла.

А. Емельянов ялти пурнăçа лайăх пĕлет. Çакă ĕнтĕ ăна идейăпа ăсталăх енчен паха произведени çырма май панă.

А. Эсхель те ялти пурнăçа, лару-тăрăва, унта пулса иртекен улшăнусене куллен тĕпчесе пырать. «Хĕвеллĕ çумăр» повеçре вăл çамрăк агроном Николай Шангин институтран вĕренсе тухнă хыççăн колхозра мĕнле ĕçленине кăтартать. Ял ĕçченĕсене артель хуçалăхне çĕклес тĕлĕшпе пур майпа та пулăшма хатĕр вăл, пулăшать те. Ана çĕр çеç мар, çав çĕр çинче пурăнакан çынсен шăпи те интереслентерет. Пурнăçра повесть геройĕ пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулать, анчах вĕсене пурне те çĕнтерсе пырать. Повеçре мораль енĕпе чылай çивĕч ыйтусем лартнă, автор пирĕн вăхăтри çынсен шухăш-кăмăлне уçса парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлени курăнать.

Хальхи вăхăтра ялти экономикăра, çынсен ăстăнĕпе кăмăл-туйăмĕнче пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ, терĕмĕр. Вĕсене пĕлни, тĕпчени кирлĕ. Çак темăпа çырнă та хăйĕн «Çăлтăрсем Тапăра анаççĕ» романне Владимир Садай. Автор çак произведенире паянхи ял, унти çынсен психологийĕ мĕнле улшăнса пынине кăтартса парасшăн пулнă. Романри нумай сăнарсем, уйрăмах ĕçчен чăваш хĕрарăмĕсен сăнарĕсем асра юлаççĕ.

Пирĕн парти совет çыннисене аслă ăрусен революцири традицийĕсем майлă воспитани парас ĕçре литературăпа искусство питĕ пысăк вырăн йышăннине, ку енĕпе вăрçăпа патриотизм темипе çырнă произведенисем ытларах кирлине уйрăмах палăртать.

Вăрçă çинчен лайăх кĕнекесем чылай тухрĕç, вĕсене вулакансем ырласа йышăнчĕç, критика та тивĕçлипе хакларĕ. Совет халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра кăтартнă паттăрлăх çинчен калакан кĕнекесем вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă хыççăн та пичетленсех тăчĕç. «Вăрçăра» ятлă антологипе «Наши земляки — Герои Советского Союза» кĕнекене пысăк ĕç тесе шутлатпăр.

Халĕ кăна А. Алган «Хĕçпе çурла» романĕн пĕрремĕш кĕнеки, Мĕтри Кибекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» ятлă пысăк романĕ пичетленсе тухрĕç. Л. Агаков

«Салтак ачисем», «Кăсăя» повеçсем пичетлесе кăларчĕ. Вăрçă теми В. Алендей, Н. Илпек, Г. Орлов, А. Яндаш, А. Воробьев творчествинче те пысăк вырăн йышăнать.

1970 çулта совет халăхĕпе пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх совет çарĕсем фашистла Германие çĕнтернĕренпе 25 çул тултарнине паллă турĕç. Çав хаяр та хăрушă вăхăт çинчен, совет воинĕсен фронтри хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ, рабочисемпе колхозниксен тылри хастарлăхĕ çинчен чылай çырнă пулин те, вăрçă темине манăçа хăварма юрамасть.

Ку темăпа çырнă кĕнекесем мĕн тери кирлине çакăнтан та курма пулать. Нумай пулмасть республикăри библиотекăсенче ĕçлекенсен канашлăвĕ пулса иртрĕ, унта вĕсем тӳрех çапла каларĕç: «Писатель юлташсем, фашизма хирĕç пынă вăрçăра тăван халăхăмăр тунă паттăрла ĕçсем çинчен нумайрах çырасчĕ», терĕç. Пĕр çар чаçĕнчи командирсемпе политработниксем ыйтнипе эпир вĕсене «Вăрçăра» кĕнекене, Кибекĕн «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» романне, Л. Агаковăн «Салтак ачисем» тата «Кăсăя» повеçĕсене ярса патăмăр. Хамăр республикăри çар комиссариачĕсенче ĕçлекенсем каласа панă тăрăх, пирĕн çамрăксем призыв пункчĕсене çак авторсен кĕнекисемпе пыраççĕ. Ку пире савăнтарать.

Капитализм тĕнчине, унти халăх пурнăçне тишкерсе çырнă, çав çĕршывсенчи ĕççыннисен кĕрешĕвне кăтартса паракан произведенисем те çамрăксене патриотизмла воспитани парас ĕçпе тачă çыхăннă. Ку темăпа эпир питĕ сахал çыратпăр-ха. Кунта Уйăп Мишшин «Кай енче» ятлă очерксен кĕнеки çеç вулакансемшĕн паха парне пулчĕ. Нумай пулмасть ак «Тăван Атăлта» (1969 ç., 3-мĕш №) В. Никитинăн «Англире — икĕ эрне» очеркĕ пичетленчĕ.

Активлă ĕçлеççĕ пирĕн поэтсем, нумай çыраççĕ, анчах çырнинчен литературăра ытла нумаях юлмасть пуль çав. П. Хусанкайăн юлашки вăхăтра çырнă «Салтак сăмахĕ», «Çăлтăрлă çулпа», С. Шавлин «Матрос ташши», «Урук инке кин кĕртет», В. Давыдов-Анатрин, А. Кăлканăн, А. Воробьевăн, В. Урдашăн тата ыттисен чылай лирикăллă сăввисем савăнтараççĕ. Пире В. Урдашăн «Аппа патне», М. Захаровăн «Ылхан, пин хут ылхан» сăввисем пек произведенисем кирлĕ, вĕсенче шухăш тасалăхĕ, кăткăс мар илемлĕ форма, пирĕн пурнăçăн таппи, чăп-чăн гражданлăх сисĕнсе тăрать.

Поэзире пуртс йĕркеллĕ пулса пырать теме çук-ха.

Нумаях пулмасть çамрăк писательсен канашлăвěнче çакна палăртса хăварнăччě: юлашки вăхăтра ытла та çăмăлкка, ачаш-селěп, ăнланмалла мар сăвăсем чылай пичетленсе тухкаларěç. Хаçатсемпе журналсенче совет халăхěн революцири, ěçри традицийěсене мухтакан сăвă-юрă сахал пичетленет, политикăлла сатира вара çукпа пěрех.

Чăваш писателěсем КПСС Центральнай Комитечěпе СССР Министрсен Совечě «Совет ача-пăча литературине малалла аталантарасси синчен» йышăннă постановление пысăк хаваслăхпа йышăнчěç. Çакă вăл пирěн партипе правительство çамрăк ăрăва тěрěс воспитани парса ÿстерессишěн тимлěн тăрăшнине тепěр хут ěнепмелле кăтартса парать.

Ачасемпе çамрăксем валли çырасси — пархатарлă та ответлă ěç, мěншěн тесен çамрăк ăрăвăн шухăш-кăмăл тасалăхě, идейăлла çирěплěхě пирěн ачасем пěрремěш хут уçакан кěнекесенчен килет. Пире пур жанрпа та Тăван çěршыва, Ленин партине юратма, ленинла пурăнма тата ěçлеме вěрентекен, гражданла таса туйăм çуратакан произведенисем нумайрах кирлě.

Ачасемпе çамрăксем валли çěнě произведенисем çырас тěлěшпе писательсене хавхалантарас тесе, республикăри писательсен Союзěпе ВЛКСМ Чăваш обкомě 1966—67 çулсенче ятарласа конкурс ирттерчěç. Çав конкурса 35 произведени ытла тăратнăччě. Анчах конкурса хутшăннисем хушшинче паллă писательсем питě сахал пулчěç. Пěрремěш, иккěмěш, виççěмěш премисем илме тивěçлě произведенисем те пулмарěç. Икě автора çеç — В. Алендее «Лаох» повеçшěн тата И. Петровăна «Татюк» повеçшěн хавхалантармалли преми панăччě. Çапла вара вăл конкурса ăнăçлă иртнě теме çук.

«Совет ача-пăча литературине малалла аталантармалли мерăсем çинче» йышăннă постановлени писательсем умне çеç мар, çавăн пекех издательсем, художниксем, библиотекăсенче ěçлекенсем тата кěнеке сутакансем умне те пысăк задачăсем лартать. Парти унта писательсене çеç мар, вěсене хăйсен çамрăк вулакапěсемпе çыхăну тытма пулăшакансене те чěнсе каланă.

Чăваш литературинче сатирăпа юмор жанрě пысăк вырăн йышăнать. Апа аталантарас енěпе сатира журналě «Капкăн» пысăк ěç тăвать. Вулакансем Л. Агаковăн, А. Эсхелěн, С. Шавлин, Хв. Уярăн, Л. Кăлканăн, Н. Черепановăн, В. Давыдов-Анатрин, Л. Галкинăн, Т. Иванов-

Ҫаҫукăн, Н. Волковăн тата ыттисен йĕплĕ калавĕсемпĕ фельетонĕсене, юптарăвĕсене, шӳчĕсене питĕ лайăх пĕлеççĕ.

Пĕр актлă сатирăллă пьесăсем те тухсах тăраççĕ. Анчах та вĕсенче хăшне-пĕрне, сăмахран, Архип Александровăн «Якатрĕç», П. Торонейăн «Мулкач Иванĕ», П. Ялгирăн «Ҫам чее» пьесисем пеккисене ăнăçлă произведенисем теме çук. Вĕсем ытла та шупка, вăйсăр.

Пирĕн драматургире пуринчен ытларах чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçне, Совет влаçĕн малтанхи çулĕсене, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтне сăнласа панă. Ку, паллах, кирлĕ, усăллă, анчах рабочи класс, стройкăсемпе заводсенче ĕçлекен çамрăксем çинчен пирĕн пĕр пьеса та çук-ха.

Литература критикĕсемпе тĕпчевçисен ĕçĕ те пăртак çĕнĕ вăй илчĕ. Ку енĕпе таранрах та тĕплĕрех ĕçсенчен çаксене палăртмалла: М. Сироткинăн «М. Горький тата чăваш литератури», «И. Я. Яковлев тата чăваш литератури», «Ленин çинчен хывнă юрăсемпе юмахсем», В. Долговăн «М. Горький тата чăваш халăхĕ», чăваш литературинчи Ленин сăнарĕ çинчен çырнă статьясем, В. Канюковăн «Ир такăнсан», Ипп. Ивановăн «Халăх чунĕ», Н. Павловăн «1967 çулхи драматурги», Н. Леонтьевăн «Хальхи драматургин идейисемпе сăнарĕсем». Г. Хлебниковăн «Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе творчестви», Уйрăм произведенисемпе литературăри ыйтусем пирки Л. Агаков, А. Алга, В. Алендей, Н. Иванов, И. Кузнецов, А. Эсхель, М. Юрьев тата ыттисем те интереслĕ статьясем çырса кăларчĕç.

«Литературăна малалла аталантарас, унăн идейăлăхне çирĕплетес, художествăллă ăсталăхне ӳстерес ĕçре критикăпа литературоведени пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Кучухнехи литература ӳсĕмне критика, ленинла партилĕх виçипе виçсе, тĕплĕн те тĕрĕс анализ туса пымалла, социализмла реализм принципĕсене çирĕплетме писательсене пур енчен те пулăшмалла, буржуалла идеологие хирĕç, мĕнле те пулин пăсăк шухăш палăрнине хирĕç, формалистла кукăр-макăрсене хирĕç çирĕп кĕрешмелле»,—тенĕ чăваш писателĕсен черетсĕр IX съезчĕ йышăннă резолюцире.

Кунта Юхма Мишшин «Дружба народов» журналта (1968 ç., 10-мĕш №) пичетленнĕ «Золотое руно традиций» ятлă статйине асăнса хăвармалла. Вăл статьян çитменлĕхĕсене И. Кузнецов профессорпа И. Кузьмичев журна-

лист çырнă «В плену теоретической сумятицы» статьяра тĕрĕс кăтартса панăччĕ.

Юхма Мишшин статйинче сăмах наци традицийĕсен ыйтăвĕ çинчен пырать. Ку — питĕ кирлĕ те вăхăтлă ыйту. Анчах ун пирки «манăн ял» виçипе çеç мар,— анлăн та тарăннăн, марксистла-ленинла позицирен пăхса çырмалла. Юхма Мишшин статйинче пирĕн культурăн, литературăн тата пурнăçпа йăлан хальхи шайĕ çине шанчăксăр пăхни, ĕлĕкхине ытлашши мухтама, идеализацилеме хăтланни палăрать.

Çавăнпа та халăх традицийĕ çинчен каланă чухне халь социализмăн хăйĕн традицийĕсем, хăйĕн обществăлла çĕнĕ строй условийĕсенче тунă пысăк культурипе пурлăх пуянлăхĕсем пуррине те манма юрамасть. Халĕ малалла куçса пырасси, коммунизм культурине тăвасси пуринчен малтан совет халăхĕ коммунизмшăн кĕрешнĕ вăхăтра никĕсленсе калăпланнă культурăна аталантарассине пĕлтерет.

Совет писателĕн сăмахĕ литература произведенийĕн йĕркисене çеç кĕрсе юлмалла мар, вăл — писатель-гражданинăн çулăмлă сăмахĕ — анлă обществăлла трибуна çинчен янраса тăмалла. Ку уйрăмах халĕ, пирĕн литература чăннипех те халăх ĕçĕ, парти ĕçĕ, хальхи вăхăтри идеологилле ĕçĕн питĕ пысăк пайĕ пулса тăнă тапхăрта, кирлĕ.

В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул, Чăваш республикине туса хунăранпа 50 çул тултарнине чыслăн кĕтсе илме пĕтĕм халăх хатĕрленни литературăпа искусство çыннисене те творчествăлла çĕнĕ вăй парса хавхалантарчĕ. Вĕсен творчествăлла планĕсенче—этемлĕхĕн аслă генийĕ, Ленинăн вилĕмсĕр идейисем пурнăçа кĕрсе пыни çинчен çырма палăртса хунă çĕнĕ ĕçсем.

«Ленинизм ĕçре» темăна—пирĕн литературăпа искусствăн темине татса пама совет саманинчи пурнăç чикĕсĕр анлă майсем туса парать. Вулакансем, куракансем, итлекенсем пиртен ленинла парти çинчен, рабочи класс, ялти ĕçченсем, совет интеллигенцийĕ çинчен, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн пĕтĕм халăх кĕрешни çинчен паха произведенисем кĕтеççĕ.

«Совет çĕршывĕн литераторĕ пулни вăл — вăхăт таппине витĕр туйса тăнине, çапăçура та, стройкăра та халăхпа пĕр ретре пынине, халăх ĕçĕ-хĕлĕпе, ун шухăшĕмĕчĕпе пурăннине, хăйĕн мĕнпур таланчĕпе ăсталăхне, чун-чĕре хĕлхемне халăха парса тăрăшнине пĕлтерет»,—

терĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ СССР писателĕсен съездне янă саламлă çырура. Çакна пурсăмăрăн та яланах асра тытас пулать, ун çинчен самантлăха та манма юрамасть.

Пирĕн ĕç — пархатарлă. Яланах партипе пĕрле, яланах халăхпа пĕрле пулар, коммунизм тăвакан паттăр халăх валли лайăх произведенисем çырар!

*1969.*

## АСЛĂ ÇУЛПА

Патша Российи халăхсен тĕрми пулнă, вак халăхсем темиçе ĕмĕр хушши нимле правасăр, пусмăрпа мăшкăл тӳссе пурăннă. Патша влаçĕ нацисен культурине пур майпа та пусарса тăнă, тĕттĕмлĕхпе тĕшмĕшре тытнă. Çакна чăвашсен революцичченхи литература историйĕ те лайăх кăтартса парать.

Октябрьти революциччен чăвашсен журнал та, театр та, издательство та пулман. 1905—1907 çулсенчи халăх революцийĕ хумĕсем вăхăтĕнче тухма пуçланă «Хыпар» хаçат та çулталăк çурă çеç тытăнса тăнă.

Çапах та, йывăр пусмăра пăхмасăр, И. Я. Яковлев каларăшле, чăваш халăхĕ хăйĕн виçĕ пуянлăхне — çĕр пин сăмахне, çĕр пин юррине тата çĕр пин тĕррине упраса хăварнă.

Чăваш литератури Октябрьти революци çĕнтернĕ хыççăн тин чăннипе чечекленме пуçлать. Чăваш автономийĕ туса хуни вара пирĕн халăх историйĕнче чи пысăк событи. 1920 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăвашсен автономиллĕ облаçĕ çурални çинчен декрет тухать. Ăна В. И. Ленинпа М. И. Калинин алă пусса çирĕплетеççĕ. 1925 çулта облаçрен Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики пулса тăрать.

Çур ĕмĕр каярах чăваш совет поэзии малтанхи çулăмлă поэт-коммунисчĕ Çеçпĕл Мишши хăйĕн «Чăваш чĕлхи» сăввинче мăнаçлăн çапла çырнă:

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ,—
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи.

Поэт ĕмĕтленнĕ вăхăт çитрĕ. Октябрь хĕвелĕпе чăваш

чĕлхи чăннипех ирĕке тухрĕ. Совет влаçĕ çулĕсенче чăваш çĕршывĕ ешерсе чечекленчĕ. Вăл шултра промышленноçлă, механизациленĕ ялхуçалăхлĕ, пурте хут пĕлекен республика пулса тăчĕ. Пирĕн халь паллă ученăйсем, талантлă писательсемпе композиторсем, художниксемпе артистсем ӳссе çитĕнчĕç. Çаксем пурте Ленинла наци политики çĕнтернине пĕлтереççĕ.

Чăваш совет литератури социализм строительствин пур тапхăрĕсенче те çĕнĕ общество тăвассишĕн пыракан кĕрешĕве яланах активлă хутшăнать, тăван халăхпа Коммунистсен партийĕн ĕçне чĕререн парăнса ĕçлесе пырать.

Ĕнтĕ Чăваш республики 50 çул тултарчĕ. Çак хушăра пирĕн литература Çеçпĕл Мишшин лирикăллă-патриотла сăввисенчен пуçласа кучухнехи пысăк романсем таран вăрăм çул утса тухрĕ.

Контрреволюципе интервенцие хирĕç кĕрешес, çамрăк совет республикине хӳтĕлес тата ăна çирĕплетес шухăш уйрăмах Тал-Мăрсапа Çеçпĕл Мишши сăввисемпе юррисенче, Ахах сăввисемпе новеллисенче, Тăхтин «Колчак» ятлă сатирăллă поэминче уççăн палăрать.

«Колчак» поэмăна Хĕрлĕ Çар тăшмансемпе хаяр çапăçнă вăхăтра, 1919 çулта, çырнă. Поэма фронт хаçатĕнче массăллă тиражпа çапăнса тухнă, часах вăл Хĕрлĕ Çарти чăваш салтакĕсемпе халăх хушшинче анлăн сарăлнă. Поэмăра сăвăç шурă гвардеецсемпе империализмлă çăткăнсен каварлă шухăшĕсене кăтартса панă, Хĕрлĕ Çар çĕнтерессе çирĕп шанса каланă.

Çеçпĕл Мишши 23 çула яхăн çеç пурăннă пулин те литературăра нихăçан манăçми чаплă сăвăсем çырса хăварнă. Унăн поэзийĕнче Аслă Октябрь революци çĕнтерĕвĕ, тăван халăх ирĕклĕх илни тĕп вырăн йышăнса тăрать. Вăл, чăваш халăхне чĕререн шанса, унăн пуласлăхĕшĕн савăннă.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех чăваш драматургийĕ те аталанма пуçлать. Ăна 1918 çулта чăвашсен пĕрремĕш куçса çӳрекен театрне туса хуни пысăк пулăшу панă. Унăн сцени çинче вырăссен тата урăх çĕршывсенчи драматургсен, çавăн пекех чăваш драматургĕсен пьесисене кăтартнă. (Ф. Павловăн «Ялта», «Сутра», М. Акимовăн «Вăхăтсăр вилĕм» тата ытти те).

Литературăра çамрăк вăйсем ӳссе пыни тата литература умне çĕнĕ задачăсем тухса тăни çыракансене пĕрлештерес ыйтăва татса пама пулăшнă. 1923 çулта «Ка-

наш» хаҫат ҫумӗнче писательсемпе журналистсен Союзӗ ӗҫлеме пуҫланӑ, 1927 ҫулта ӑна Чӑваш пролетари писателӗсен ассоциацийӗ туса хунӑ.

Ҫамрӑк чӑваш совет литературине малалла аталантарас ӗҫре 1924 ҫулта партин XIII съезчӗ йышӑннӑ решенисем тата партин Центральнӑй Комитечӗ 1925 ҫулта «Партин илемлӗ литература ӗҫӗнчи политики» ҫинчен йышӑннӑ резолюци уйрӑмах пысӑк пулӑшу панӑ. Партин ҫак документчӗсенче писательсен организацийӗсене ҫирӗплетме, ҫыракансене коммунизмла воспитани пама, литературӑра тӑшманла шухӑшсемпе туртӑмсене хирӗҫ ҫивӗччӗн кӗрешсе пыма кирлине кӑтартнӑ. Ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртме «Сунтал» журналпа (1924) «Капкӑн» журнал (1925) тухса тӑни нумай пулӑшнӑ.

Граждан вӑрҫипе выҫлӑх ҫулсем хыҫҫӑн тата малтанхи пилӗкҫуллӑхсенче чӑваш литературинче халӑх хуҫалӑхӗпе культурине ура ҫине тӑратас, вӗсене социализмла ҫӗнетсе аталантарас тема тӗп вырӑн йышӑнать. Уйрӑмах ҫакӑ Н. Шелепи, С. Элкер, Н. Шупуҫҫынни, Н. Ваҫанкка, П. Хусанкай, И. Тукташ, Уйӑп Мишши сӑввисемпе юррисенче уҫӑмлӑн палӑрать.

Н. Шелепипе С. Элкер произведенийӗсенчи тӗп геройсем — хӑйсем ҫӗршывра чӑн-чӑн хуҫа пулса тӑнине ӑнланса илнӗ рабочисемпе хресченсем, халӑхпа Совет влаҫӗ умӗнче хӑйсен гражданла тивӗҫне пӗлекен ӗҫҫыннисем. Сӑмахран, С. Элкер, «Паян» ятлӑ сӑввинче (1924 ҫул) ҫӗнӗ ҫын ҫитӗнни ҫинчен ҫапла ҫырса кӑтартнӑ:

> Паян эс истори мӑн ҫулӗ ҫинче
> Умна та, хыҫна та пӑхса тӗлӗнен,
> Тӑван ялусем, хулусем хушшинче
> Хӑвах чӑн хуҫа пулнипе хӗпӗртен.

Н. Шелепипе С. Элкер сӑввисем ӗҫҫыннисене обществӑпа политикӑллӑ лару-тӑрӑва тӗрӗс ӑнланса илме пулӑшнӑ, вӗсене тимлӗ пулма вӗрентнӗ, хулара та, ялта та капитализмла элементсене хирӗҫ пӗтӗҫсе кӗрешме хавхалантарнӑ.

Ҫирӗммӗш ҫулсенче чӑваш прози аталанма пуҫлать. Унӑн тӗп темисенчен пӗри — граждан вӑрҫи, чӑваш халӑхӗ ҫак вӑрҫа активлӑ хутшӑнни. Ун чухнехи калавсемпе повеҫсенче чӑваш ӗҫченӗсен паттӑрлӑхне, Коммунистсен партийӗ вӗсене мӗнле ертсе пынине кӑтартса панӑ. Тӗслӗхрен, Исаев Мӗтрин «Лисук чӑптаҫӑ», «Отряд», Хумма Ҫеменӗн «Штрум», В. Краснов-Аслин «Шурри-

семпе çапăçни», М. Данилов-Чалдунăн «Левентей масарě», «Икě вăй», Трубина Марфин «Хěрлě галстук», «Марине» произведенийěсенче çакă лайăх палăрать.

Çав çулсенчех И. Максимов-Кошкинский, П. Осипов, Ф. Павлов драматургсем те ăнăçлă ěçлеççě.

Писательсем организаципе идея тěлěшěнчен тачă пěтěçни чăваш совет литературине малалла аталанма вăй парать. 1932 çулта КПСС Центральнăй Комитечě «Литературăпа художество организацийěсене çěнěлле йěркелесси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх чăваш литература организацийěн ěçě те çěнěлле йěркеленет. 1934 çулта чăваш писателěсен пěрремěш съезчě пулса иртет, унта чăваш совет писателěсен Союзне туса хураççě.

Вăтăрмěш çулсенче чăваш литератури Л. Агаковăн, Н. Патманăн, Хумма Çеменěн, Иван Мучин, Трубина Мархвин, И. Тукташăн, К. Пайрашăн, А. Талвирăн, Митта Ваçлейěн, А. Кăлканăн, Уйăп Мишшин, Я. Ухсайăн, А. Эсхелěн, А. Петтокин, И. Ивникěн тата ытти писательсен çěнě произведенийěсемпе пуянланать.

Çак тапхăртах литературăра маларах ěçлеме тытăннă писательсен пултарулăхě те çӳле çěкленет. С. Элкер «Хěн-хур айěнче» историллě поэмине çырса пěтерет, малтанхи чăваш-рабочисем çинчен «Унтри» повесть, патша çарěнчи ахаль салтакран пуçласа ăнланакан революци салтакě пулса тăнă чăваш çамрăкěн пурнăç çулě çинчен «Вутпа тăвăл витěр» роман-хроника, чăваш ěççыннисем пěрремěш вырăс революци çулěсенче кěрешни çинчен «Шурăмпуç килсен» роман çырать.

Ку вăхăтрах талантлă поэтăн П. Хусанкайăн ячě чапа тухать. Унăн лирикăлла сăввисене, «Çирěм улттă», «Магнитту», «Çěрйěркелӳ» тата ытти поэмисене халăх юратса вулать.

Уйăп Мишши «Автозавод» тата «Машинăсем кěрленě çěрте» очерксем пичетлет. Вěсенче вăл Горькири автомобиль заводне туни çинчен, инçетри рабочи центрěсен — Сормовăпа Канавина пурнăçне сăнласа кăтартать. Чăваш çěршывěнче индустри аталаннипе чăваш халăхěн рабочи класě ӳсни çинчен А. Талвирăн очеркěсем, Н. Айзманăн «Шав», Л. Агаковăн «Хăват» пьесисем уççăн каласа параççě.

Коллективизаци çинчен чи малтан И. Тукташ 1931 çулта «Вăкăр çырми» ятлă повесть çырса кăларчě, унтан, 1933 çулта, Трубина Мархвин «Мучар» повеçě,

В. И. Краснов-Аслин «Тăвалла» романе, П. Осиповăн «Çĕнĕ хум» пьеси, А. Эсхелĕн калавĕсем тата ытти писательсен произведенийĕсем те тухрĕç.

1939 çулта Л. Агаковăн «Пĕрре, çуркунне...» повеçĕ кун курчĕ. Унта вăл чăваш çĕршывĕнче халăх хуçалăхне ура çине тăратнă тапхăра, вăл вăхăтри чăваш ялĕнчи класс кĕрешĕвне сăнласа кăтартать.

30-мĕш çулсенче Яков Ухсай тăван тавралăх çинчен йышлă сăвăсем çырать. Вăл çырнă «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Туй» поэмăсемпе «Тутимĕр» трагеди чăваш литературине пултаруллă та ăста поэт килни çинчен пĕлтерчĕç.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле чăваш писателĕсем те Тăван çĕршыва хастаррăн хӳтĕлерĕç. Вăл çулсенче Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн кĕрешесси мĕнпур писательсен творчествинче тĕп тема пулса тăчĕ. Лирикăлла сăвă-юрăсем, калав-очерксем тата вăрçă çинчен пысăк произведенисем те тухрĕç. Ку произведенисем пирки эпир маларах калаăччĕ.

Вăрçă хыççăнхи литературăра совет халăхĕн кулленхи паттăр ĕçĕсене тĕрĕс сăнласа кăтартакан пысăк произведенисем палăрчĕç. Вăрçă йывăрлăхĕсене тӳссе ирттернĕ, кĕрешӳпе ĕçре çирĕпленнĕ, хамăр халăха, коммунистсен партине чĕререн парăннă совет çынни — çакă ĕнтĕ вăл пирĕн вăрçă хыççăнхи литературăн тĕп геройĕ. Вĕсем чăваш писателĕсен художествăллă пултарулăхĕ чылай ӳснине кăтартаççĕ. Вăл шутра — П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕ, Яков Ухсайăн «Çул» сăвăлла романĕпе «Кĕлпук мучи» поэми, К. Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет», Н. Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака», Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр», С. Асланăн «Ахрат», М. Ухсайăн «Кăра çилсем», В. Краснов-Аслин «Вутра», А. Талвирĕн «Пăва çулĕ çинче» романĕсем. Çав çулсенчех И. Максимов-Кошкинский, П. Осипов, Н. Айзман, А. Кăлкан, В. Ржанов, Н. Терентьев, Л. Родионов, Г. Харлампьев драматургсем çĕнĕ пьесăсем çырса кăларчĕç.

Литературăна талантлă писательсен çĕнĕ ушкăнĕ хушăнчĕ. Вĕсен йышĕнче — А. Воробьев, В. Садай, А. Артемьев, В. Давыдов-Анатри, Г. Ефимов, Н. Евстафьев, А. Лукин, А. Галкин, Г. Орлов, Ю. Скворцов. В. Бурнаевский, И. Григорьев, В. Урдаш, В. Игнатьев, Н. Сандров, Юхма Мишши тата ыттисем те.

1966 çулта литературăпа искусствăн лайăх произведенийĕсене тăтăшах пахалама Константин Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине тата Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине туса хуни пирĕн литература пурнăçĕнче пысăк событи пулса тăчĕ.

1970 çул — Ленин юбилейĕн çулĕ. Çав çулах пирĕн тăван республика çур ĕмĕр тултарчĕ. Ку пирĕншĕн икĕ хут ытларах савăнăçлă та хаваслă çул пулчĕ. Чăваш писателĕсен Союзĕн пĕтĕм ĕçĕсем çак чаплă уявсене тивĕçлĕн кĕтсе илес тĕллевпе пулса пычĕç. Пирĕн поэтсемпе прозаиксем, драматургсемпе критиксем, литература тĕпчевçисем ленинизм идейисене халăх хушшине ытларах сарас, хăйсен произведенийĕсенче хамăр пурăнакан вăхăтăн чапне сăнласа кăтартас тĕлĕшпе нумай ĕç турĕç.

Ленин теми литературăра вĕçĕмсĕр пысăк, ответлă та хисеплĕ тема. Вăл совет халăх пурнăçĕн пур енне те çавăрса илет. Ленинăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă малтанхи произведенисем пирĕн литературăра çулпуçăмăр пурăннă чухнех тухнă. Чăваш республикине туса хунăранпа иртнĕ 50 çул хушшинче чăваш писателĕсем Ленинăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕпе ĕçĕсем çинчен нумай сăвă-юрă, калавсемпе очерксем çырнă. Маларах каларăмăр ĕнтĕ: вĕсенчен чи лайăххисен шутне Н. Шелепин «Ленин», С. Элкерĕн «Хурçă карап» сăввисем, П. Хусанкайăн «Горкăри çурт», «Аслă чĕре», Яков Ухсайăн «Ĕмĕт» тата «Телей çулĕ», А. Алган «Владимир Ильич Ленин» поэмисем, Стихван Шавлин «Аслă урам», «Ешĕл палăк» сăввисем, Уйăп Мишшин «Ленин мавзолейĕнче» сăвви, В. Давыдов-Анатрипе В. Урдашăн сăвви-юррисем, Илпек Микулайĕн «Телей шыраса», И. Кузнецовăн «Атăл паттăрĕ» калавĕсем, А. Кăлканăн «Октябрь хумĕ», В. Ржановăн «Энтип» пьесисем кĕреççĕ.

Н. Терентьев драматург «Хумсем çырана çапаççĕ» пьесăра чăваш драматурги историйĕнче малтанхи хут çамрăк Володя Ульянов сăнарне пысăк ăсталăхпа кăтартса пачĕ. Çак пьесăна Россия Федерацийĕнчи писательсен III съездĕнче те лайăх хак пачĕç. Паллах ĕнтĕ, ку пире питех те савăнтарать.

Çулпуç юбилейне хатĕрленнĕ кунсенче чăваш писателĕсен произведенийĕсене пухса, «Ленин пирĕнпе», халах пултарулăх произведенийĕсенчен — «Ленин — халăх чĕ-

ринче» сборниксем тата, ватă коммунистсен асанлĕвĕсене пухса, «Эпир Ленина курнă» кĕнекесем кăлартăмăр.

Иртнĕ пилĕк çул хушшинче пирĕн республикăна Украина, Белорусси, Молдави, Горький, Воронеж, Болгари, Венгри республикисен литературăпа искусство деятелĕсем килсе курчĕç. Чăваш литературипе искусствин эрнисене В. И. Ленин çуралнă хулара — Ульяновскра, унтан Воронежра, Горькире, Тутар, Мари республикисен районĕсенче ирттертĕмĕр. Çав эрнесем тăванла культурăсен чăн-чăн чаплă уявĕсем пулса тăчĕç.

Чăваш писателĕсем çырнă лайăх произведенисем нумай. Вĕсене хамăр республикăра кăна мар, ытти республикăсенче те, урăх çĕршывсенче те юратса кĕтсе илчĕç. Паянхи кун Çеçпĕл Мишши сăввисене тĕнчери 53 чĕлхепе вулаççĕ, П. Хусанкайăн произведенийĕсене 48 чĕлхене, А. Талвирĕн «Пăва çулĕ çинче» повеçне 18 чĕлхене куçарнă, Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романне вырăсла, белорусла, эстонла, пăлхарла пичетлесе кăларнă. Чăваш наци культури епле чечекленни çинчен, тăван чĕлхе пуянлăхĕ çинчен паян кун эпир чăннипех те савăнса калаçма пултаратпăр.

Вăрçăпа патриотизм темипе çырнă произведенисен «Вăрçăра» ятлă антологие тата «Пирĕн янташсем — Совет Союзĕн геройĕсем» ятлă документлă очерксен сборникне кăларни те чăваш литературишĕн паллă çитĕнӳ пулчĕ. Гитлерла Германие аркатас ĕçре Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕпе тăванлăхĕ аслă вăй пулса тăчĕ. Ана эпир А. Алган «Хĕçпе çурла» романĕнче, Л. Агаковăн «Салтак ачисем», «Кăсăя» В. Алендейĕн «Лаох» повеçĕсенче, Г. Орловăн «Совет салтакĕ», «Экзамен» поэмисенче лайăх куратпăр.

Юлашки çулсенче çамрăк писательсем питĕ тăрăшса ĕçлерĕç. Георгий Красновăн «Асамлă çăлкуç», «Инçетри сасăсем», Л. Степановăн «Ăçта эс, Сильва?», Г. Лучăн «Эпир те салтаксем», В. Захаровăн «Этем чĕри» тата ытти кĕнекесене те вулакансем хапăл туса йышăнчĕç.

Эпир кунта чăваш писателĕсем çырнă произведенисен пĕр пайне çеç асăнтăмăр. Анчах вĕсем те чăваш халăхĕ тăванла ытти халăхсемпе пĕрле Ленин партийĕ ертсе пынипе этемлĕхĕн çутă пуласлăхне — коммунизма çул хывни çинчен уççăн каласа параççĕ.

Пирĕн çĕршывра Ленинла наци политики çĕнтернипе пула чăваш литератури, Совет Союзĕнчи тăванла ытти мĕнпур халăхсен литературисем пекех, малалла шанчăк-

лăн аталанса пырать. Унăн ĕççыннисене идейăпа воспитани парас витĕмлĕхĕ чылай ӳсрĕ. Литература халăха коммунизмла воспитани памалли хăватлă вăй пулса тăчĕ.

В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнине тата Чăваш республики 50 çул тултарнине уявлани литературăпа искусство çыннисене çĕнĕ хăват кӳчĕ. Вĕсен малашнехи планĕсенче—çĕнĕ ĕçсем, Ленинăн вилĕмсĕр идейисене пурнăçламалли çĕнĕ произведенисем.

*1970.*

## ЮМАХПА ПУРНĂÇ

Чăвашра авалтанах юрă çинчен юмах çӳрет. Пусмăр айĕнчи тĕттĕм чăваш сĕм-сĕм вăрманта, вăтă юман хăвăлĕнче хăйĕн шăхличне епле пытарса усрани çинчен калана çав юмахра. Шăхличне чăваш юман хăвăлĕнчен уявсем вăхăтĕнче çеç кăларнă иккен. Вара сĕм вăрмансемпе тарăн варсенче ирĕклĕхпе телейлĕ пурнăç пирки тунсăхлакан, асап çинчен калакан хурлăхлă юрăсем янăранă.

Тепĕр юмахне пирĕн халăх Улăп-паттăр çинчен хывнă. Вăхăт çитĕ, тенĕ унта, чăваш çĕрне Улăп-паттăр килĕ, вăл вара, çухалнă «ылтăн кĕнекене» шыраса тупса, ăна çынсене каялла тавăрса парĕ...

Нумай-нумай ĕмĕр кĕтнĕ чăвашсем хăйсен тăван чĕлхипе çырнă кĕнекине, анчах ăна, чăваш халăхне çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев çырнăскере, çĕр çул каялла çеç пĕрремĕш хут алла тытса пăхма пултарайнă. Кĕнеки «Букварь» пулнă. Букварьпе пĕрле илемлĕ литературăн пĕрремĕш хунавĕсем — пĕчĕкçĕ юрă-сăвă, калавсем — çуралса тухнă. Çапах та революцичченхи чăваш литератури патша тытăмĕ питĕ хаяррăн хĕсĕрленĕ çулсенче аталаннă, чăвашла хаçат-журнал та, культурăпа искусство учрежденийĕсем те пачах пулман-ха ун чухне. Социализмлă строй çеç мĕнпур вак халăх ĕççыннийĕсене хăйсен вăй-халне кăтартма, хăйсен пултарулăхне, талантне аталантарма майсем туса панă, тенĕ В. И. Ленин. Пултарулăхĕ-таланчĕ халăхра вара, каллех Ленин сăмахĕсемпе калас пулсан, «иксĕлми çăлкуç пек тапса тăнă, капитализм вĕсене пинĕ-пинĕпе, мĕльюн-мĕльюнĕпе лапчăтса, пусса, пăвса пуръннă».*

* В. И. Ленин. Çырнисен тулли пуххи, 26 т., 195 стр.

Октябрьти социализмлă Аслă революци хыççăн чăваш халăхĕ, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсем пекех, хăйĕн государственноçне туса хучĕ, экономикăна, культурăна, литературăпа искусствăна аталантарма пур майсем те илчĕ. Çур ĕмĕр каялла чăваш совет поэзине пуçарса яракан кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши поэта Ленинла наци политики çĕнтерессине ĕненни-шанни акă епле мал ĕмĕтлĕ йĕркесем шăратса кăларма хавхалантарнă:

Вăхăт çитĕ — Чăваш çĕрĕн
Кăмăллă чĕлхи
Чаплă пулĕ,— вăлах пулĕ
Çамрăк чун пахи.

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем,
Пулĕç аслă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.

Савнă çĕршывăмăн пулĕç
Чаплă сăвăçсем,
Чаплă та илемлĕ çырĕç
Ун чухне вĕсем.

Поэт-коммунист ун чухнех тăван Чăваш çĕрĕ çийĕн шăхлич юррипе пĕрле урăх юрăсем — телей çинчен, ирĕклĕ çĕн пурнăç çинчен калакан юрăсем çĕкленÿллĕ янăрассине илтнĕ. Ĕçчен халăх тĕнче умне хăйĕн тĕлĕнмелле пултаруллă поэчĕсене кăларассине, халăхсен тăванла çемйинче нациллĕ чăваш литератури те калама çук вăйлă чечекленессине пĕр иккĕленмесĕр ĕненнĕ. «... Çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе, Интернационал кĕперĕ анĕ»,— тесе тĕнчене пĕлтернĕ вара çавна май чăн-чăн коммунист шанăçĕпе.

Çавăн пек вăхăт пирĕншĕн тахçанах çитрĕ ĕнтĕ. Совет влаçĕ çулĕсенче Чăваш çĕрĕ пысăк промышленноçпа механизациленĕ ялхуçалăх республики, хутпĕлменлĕхе талккăшĕпех пĕтернĕ республика пулса тăчĕ. Литературăпа искусство хăватлăн аталанчĕç. Чăваш халăхĕн паян кун талантлă писательсен, композиторсен, художниксен, артистсен пысăк отрячĕ пур...

Иртнĕ пилĕкçуллăхра кăна пирĕн республика пурнăçĕнче калама çук паллă ĕçсем пулса иртрĕç: Чăвашсен И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен патшалăх университечĕ уçăлчĕ, наци балечĕ çуралчĕ, анлă Атăл çинче Шупаш-

кар ГЭСне тăва пуçларĕç, çĕнĕ хула ӳссе ларчĕ, хăватлă тракторсен заводне ударлă çеклеме тытăнчĕç. Çав стройкăсенче СССРти 38 халăх çынни ĕçлет. Советлă Социализмлă Республикăсен юбилейне вĕсем пирĕн çĕршыври нацисемпе халăхсен чăн-чăн туслăхĕпе тăванлăхĕн уявĕ вырăнне хурса кĕтсе илчĕç.

50 çул! Историшĕн ку нумай вăхăтах та мар. Анчах çак тапхăрта чăваш литератури Çеçпĕл Мишшин лирикăллă-патриотизмлă сăввисенчен пуçласа паянхи романа çити аталанса çĕкленчĕ те нумай нациллĕ совет литературинче хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнчĕ. Вăл социализм строительствин пур тапхăрĕнче те пирĕн тăван Коммунистсен партине çĕнĕ общество тăвас ĕçре пулăшса пычĕ, пулăшса пырать те.

КПСС Центральнăй Комитечĕн «СССР туса хунăранпа 50 çул çитнине палăртма хатĕрленесси çинчен» йышăннă постановление чăваш писателĕсем пĕтĕм халăхпа пĕрле пысăк савăнăçпа кĕтсе илчĕç. Çак уява хатĕрленнĕ май, эпир хамăрăн иртнĕ çул-йĕре чăннипех те пĕр ӳпкелешмесĕр çаврăнса пăхма пултаратпăр. Ку вăл литературăпа халăх хушшинчи çыхăнăва тата та ытларах çирĕплетнĕ тапхăр, социализмлă реализм меслетне, литературăри партилĕхпе халăхлăх принципне çирĕплетнĕ тапхăр пулса тăрать.

Пĕчĕк статьяра, паллах ĕнтĕ, чăваш совет литературин пĕтĕм çул-йĕрне пăхса тухаймăн. Хальхи вăхăтри литературăн тĕп ыйтăвĕсем пирки тата СССР юбилейне кĕтсе илнĕ май чăваш писателĕсен Союзĕ мĕнле ĕçсем туни пирки çеç кĕскен чарăнса тăрăпăр.

Л. И. Брежнев КПСС XXIV съездĕнче тунă отчетлă докладра илемлĕ литературăра çак çулсенче Ленин теми уйрăмах пысăк вырăн йышăнни çинчен каланăччĕ. Чăваш литературинче те художествăллă ленинианăна писательсем пысăк вырăна хучĕç. Ку ыйтăва чăваш писателĕсен черетсĕр IX съезчĕ ятарласа пăхса тухнă хыççăн (1969 ç.) Чăваш АССР писателĕсен Союзĕн правленин ларăвĕсенче, парти пухăвĕсенче, творчествăллă секцисенче пĕрре мар сӳтсе явнă. Идейăллă-организациллĕ ĕçре писательсен Союзĕн правленийĕ писательсене Ленин темине малалла та вăйлă çĕклеме сахал мар пулăшу панă. Сăмахран, çыравçăсене В. И. Ленин пурăннă-ĕçленĕ вырăнсене кайса курма янă. Писательсем Ильич çĕршывне — Ульяновск хулине, Куйбышева, Хусана, Ленинграда, Мускава, Шушăна, Польшăна кая-кая килчĕç. Ульяновск

хулипе Ульяновск облаçĕнчи районсенче пртгернĕ чăваш литературипе искусствин Кунĕсем пирĕншĕн те, унти халăхшăн та чăн-чăн творчествăллă уяв пулчĕç.

Ленинианăна кĕрекен чи лайăх произведенисене эпир ĕнтĕ палăртнăччĕ.

Халăхра уйрăмах Н. Терентьевăн «Хумсем çырана çапаççĕ» пьеси ырă ят илчĕ. Чăваш драматургийĕнче пĕрремĕш хут кунта Володя Ульянов сăнарне, XIX ĕмĕрте халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçленĕ икĕ паплă çын туслăхне — И. Н. Ульяновпа И. Я. Яковлев туслăхне—тĕрĕс çуратса панă. К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăвашсен государство драма театрĕн сцени çинче çак пьеса тăрăх лартнă спектакле 1971 çулта К. С. Станиславский ячĕпе хисепленекен РСФСР Государство премине парса чысларĕç.

Ленин теми чăваш писателĕсене яланах хумхантарнă, хумхантарать те. Вĕсен произведенийĕсенчи Ленин — аслă революционер, ăсларан та ăслă государство деятелĕ, ĕçхалăхне тăванран та çывăх çын, мĕнпур пусмăрти халăха телейлĕ те ирĕклĕ пурнăç тумалли çул кăтартакан паттăр.

Чăваш писателĕсенчен чылайăшĕ хамăр халăхпа республика тĕслĕхĕсем урлă халăхсен туслăхĕпе интернационаллă пĕрлĕхĕн темине, ленинла наци политики пурнăçа епле кĕрсе пынине илемлĕ литературăра сăнарлăн кăтартса парас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлерĕç. Тĕслĕхрен, чăваш литературинче 20-мĕш çулсенчех ĕçлеме пуçланă В. Иванов-Паймен икĕ пайлă «Кĕпер» роман пичетлерĕ, 1972 çулта романăн иккĕмĕш кăларăмĕ тухрĕ. Аслă Октябрь вырăс халăхĕпе чăваш халăхĕ хушшинчи туслăхăн символикăллă кĕперне хывни çинчен ĕненмелле те анлă кăтартса панă ку романра. Роман геройĕсем революцие пĕрле ӳсеççĕ, граждан вăрçи вутĕнче тупташаççĕ. Чăваш çĕрĕнчи революциллĕ массăсене ертсе пыракансен, коммунистсен сăнарĕсем В. Паймен романне вулакан хыççăн асра чĕрĕ çынсем пекех нумайлăха юлаççĕ.

Çак романшăн В. Паймен Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Паллах, ку пирĕн 1972 çулхи литературăшăн — пысăк уяв.

Юлашки çулсенче çарпа патриотизм темипе çырнă кĕнекесем — фашизма хирĕç пынă Аслă вăрçăра нумай миллионлă совет халăхĕ мĕн тери историллĕ пысăк паттăрлăх кăтартнипе вулакансене тĕплĕн те сăнарлăн

каласа паракан романсемпе повеçсем, калавсемпе сăвă-поэмăсем сахал мар тухрĕç. Халăхра вĕсене ĕнтĕ лайăх пĕлеççĕ.

Чăваш литературинче героикăпа патриотизм теми тахçантанпах малти вырăнта тăнă, паян кун та эпир ун пирки çавнах калама пултаратпăр. Пирĕн писательсенчен чылайăшĕ хăйсем те иртнĕ вăрçăра нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçрĕç. Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен çырса, паян кун та вĕсем чăн-чăн халăх ĕçне тăваççĕ. Фашизма хирĕç çапăçнă чух халăх массисен патриотизме, совет çыннин пуян чун-чĕри, паттăрлăхĕ-хастарлăхĕ нихçанхинчен вăйлăрах, уçăмлăрах палăрчĕç. Иртнĕ вăрçăн йывăр, вут-çулăмлă кунĕсем çинчен кĕнекесем çырса, пирĕн писательсем çамрăксене Тăван çĕршыва юратма, кирлĕ пулсан, уншăн пурнăçа памашкăн хатĕр пулма вĕрентеççĕ.

Çарпа патриотизм темипе юлашки вăхăтра çырнă кĕнекесем хушшинче, ман шутпа, чи малтан Л. Агаковăн «Шанчăк» романĕпе «Бруствер çинчи чечексем» кĕнекине палăртмалла. Вĕсенче тĕрлĕ халăх ывăлĕ-хĕрĕсен, тĕрлĕ професси çыннисен паттăр ĕçĕсене кăтартса панă. Геройсене пурне те пĕр туйăм — Тăван çĕршыва вĕççĕрхĕрсĕр юратни, тăшмана чун-чĕререн курайманни пĕрлештерсе тăрать. Романри çынсен фронтрипе тылри патриотизмлă паттăрлăхне, вĕсен шанăçне-ĕненĕвне писатель художествăллă меслетсемпе чăннипех те ĕненмелле çырса кăтартнă.

Темиçе çул каялла эпир хамăр литературăра мемуарлă жанрпа çырнă произведенисем тĕл пулаймастăмăрччĕ пулсан, халь вара ку тĕлĕшпе ĕçсем кăшт улшăнчĕç. Нумаях та пулмасть-ха В. Ржановăн фронтри дневникĕсемпе усă курса вырăсла çырнă «Своими глазами» документлă повеçĕпе А. Тарасовăн «Этого забыть нельзя» асаилӳ кĕнеки пичетленсе тухрĕç.

Рабочи класс темине те манса хăвармаççĕ чăваш писателĕсем, паянхи ĕççынни чун-чĕрине тарăнрах та тарăнрах тĕпчеме тăрăшаççĕ вĕсем. А. Талвирăн «Никĕс» романĕпе В. Ухлин «Хĕрсем пурçăн тĕртеççĕ» романĕ чăвашла кăна мар, Мускавра вырăсла та пичетленсе тухрĕç. «Тăван Атăл» журналта çамрăк рабочисем çинчен Г. Краснов «Çамрăклăх ĕмĕрте пĕрре» романăн пĕр пайне пичетлерĕ. И. Григорьев та рабочи класăн куллен-хи пурнăçне кăтартакан темиçе повеçпе калав çырчĕ.

Чăваш ялĕнче хальхи вăхăтра пысăк улшăнусем пул-

са иртеççĕ. Колхозниксен ĕçĕ халь ĕнтĕ тӳрременех машинăпа та тĕрлĕ механизмсемпе çыхăннă, колхозри хресченĕн пĕлĕвĕсем те ĕнерхи мар — ĕнерхинчен вĕсем чылай çӳлĕрех шая çĕкленнĕ. Рабочи класпа хресчен, интеллигенци пĕр-пĕринпе çывăхланнăçем çывăхланса пыраççĕ. Çак процессене пирĕн писательсем вăй çитнĕ таран хăйсен творчествинче кăтартма тăрăшаççĕ. Вулакансем уйрăмах А. Емельяновăн «Çавал сарăлсан», «Чапшăн пурăнмастпăр» повеçĕсене, А. Медведевăн «Урапа та пĕр йĕрпе чупмасть» повеçне, В. Садайăн «Çăлтăрсем Тапăра анаççĕ» романне, В. Алендейĕн «Пилеш пăхма хитре те...» повеçне, А. Артемьевăн «Улма йывăç авăнать» повеçне, А. Эсхелĕн «Çĕрлехи тăвăл» кĕнекине юратса йышăнчĕç. Вĕсенче пуринче те паянхи хресчен чун-чĕрин пуянлăхне, илемне кăтартса пană.

Очерк жанрĕ чăваш литературинче юлса пыни çинчен сахал мар каласрăмăр ĕнтĕ эпир. Юлашки çулсенче çак çивĕч жанр та пирĕн литературăра хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнса пырать. Очерк пурнăçăн конкретлă материалĕ çинче никĕсленнине пурте пĕлетпĕр. Çак жанрпа çырса, писатель событисемпе фактсене хак парать, çынсен чăн-чăн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне çăнарлă кăтартать.

Юлашки пилĕк çул хушшинче пирĕн журналсенче сахал мар художествăллă тата документлă очерк пичетленчĕ. Вĕсенче писательсем промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, наукăпа искусствăра ĕçлекенсем çинчен ĕненмелле каласа пачĕç.

Литература аталанăвĕнчи çитĕнӳсене кăтартнă май, çитменлĕхсем пирки те каласа хăвармалла. Хулапа ялти ĕççыннисен пурнăçĕ çинчен çырнă чух эпир час-часах производствăра пултаруллă ертсе пыракансене, коммунист-руководительсене тивĕçлĕ таран сăнласа кăтартма ăсталăх çитерейместпĕр-ха. Чылай произведенири персонажсем хушшинче парти райкомĕн секретарьне те, парторга та куратпăр, анчах вĕсем массăсен чăн-чăн çулъертӳçисем иккенне тĕплĕн сăнарланине кураймастпăр.

Паянхи пурнăçа кăтартнă майăнах чăваш литератури хăй халăхĕн иртнĕ кунçулне те — историне — манса хăвармасть. Писательсене — çапла пулмалла та ĕнтĕ вăл — халăхăн иртнĕ пурнăçĕнчи вут-çулăмлă тапхăрсем, унăн революциллĕ ативлă вăйне палăртма май панă вăхăтсем интереслентереççĕ. Çавна май пирĕн литературăна уйрăмах К. Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет», Н. Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака», Юхма Мишшин «Мускав çулĕ»,

В. Краснов-Аслин «Вутра», И. Салампекĕн «Пĕрремĕш юрату» романĕсем, Тихăн Петĕрккин «Кушкă ачи», А. Артемьевăн «Хунавлах хăрнисем», Г. Харламньевăн «Илемлĕ ир» повеçĕсем, А. Калканăн «Октябрь хумĕ», П. Осиповăн «Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт», В. Ржановăн «Тĕнче çаврăнать» пьесисем, В. Пайменăн «Аттесен палăкĕ» кĕнекинчи калавсемпе очерксем пуянлатрĕç.

Çапах та, сăмах май пулин те, çакна асăрхаттармалла: истори темипе çырнă хăшпĕр произведенисенче иртнĕ пурнăçа тĕрĕсех çутатса паман. Историллĕ чăнлăха çителĕклĕ ăнланмасăр е пăсса çырнисем те пур-ха. Çав йăнăшсене Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Аслăлăхпа тĕпчев институчĕ ятарласа ирттернĕ наука сессийĕнче пирĕн историксем тĕрĕс асăрхаттарчĕç.

Çак çулсенче пирĕн литературăра сатирăпа юмор жанрĕ пысăк вырăн йышăнчĕ. Ана аталантарма халăхра тахçанах ырă ят илтнĕ сатира журналĕ «Капкăн» пысăк ĕç тăвать. «Капкăн» журнал страницисенче вулакансем тăтăшах Л. Агаковăн, А. Эсхелĕн, С. Шавлин, А. Кăлканăн, А. Галкинăн, Т. Иванов-Таçукăн, П. Ялкирăн тата ыттисен çивĕч калавĕсемпе фельетонĕсене, сăввисемпе юптарăвĕсене вулаççĕ. Халăх «Капкăн» журналпа Чăваш АССР кĕнеке издательстви кăларса тăракан сатирăпа юмор кĕнекисене питĕ хапăлласа йышăнать.

Аталанакан чăваш литературинчи тĕрлĕ пулăмсене тĕпчесе, литература критикĕсемпе литературоведсем ăнăçлă ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ «Ялавпа» «Тăван Атăл» журналсен пĕр номерĕ те литературăлла-критикăллă статьясăр тухмасть. Уйрăмах эпĕ В. Алендейĕн 1972 çулта пичетленнĕ «Ял ĕçченĕсен сăнарĕ — чăваш литературинче», А. Артемьевăн «Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ», С. Горскийĕн «Яков Ухсай чĕлхипе стилĕн хăшпĕр уйрăмлăхĕсем», В. Долговăн «Хумсем çырана çапаççĕ» драмăрн истори тĕрĕслĕхĕ çинчен» ятлă статйисене палăртса хăварасшăн. Критикăпа литературоведени вăй илме пуçланине уйрăм кĕнекесенчен курма пулать. Акă, вырăсла — Е. Владимиров «Межнациональные связи чувашской литературы», В. Канюков «От фольклора к письменности», Г. Хлебников «Современная чувашская литература» ятлă кĕнекесем, чăвашла — В. Долгов «Ленин сăнарĕ — халăх чĕринче», Ипп. Иванов «Халăх чунĕ» ятлă статьясен пуххисене пичетлесе кăларчĕç. Чăваш литературовечĕсем çырнă «Чăваш совет литературин историйĕ» кĕнеке те вулакансем патне çитрĕ. Çывăх

вăхăтра А. Алга, Л. Агаков, Я. Ухсай, С. Элкер çинчен çырнă литературăллă портретсем вулакансем патне çитмелле. Çапах та халлĕхе пирĕн критика парти кăтартнă шая хăпарса çитрĕ тесе калама пултараймастпăр эпир. КПСС Центральнăй Комитечĕ «Илемлĕ литература критики çинчен» кăларнă Постановление пурнăçа кĕртсе пымашкăн писательсен Союзĕн правленийĕпе критика Совечĕ ятарласах организациллĕ-творчествăллă ĕçсем ирттерме темиçе çуллăх пысăк план туса хатĕрлерĕç.

Творчествăллă секцисен ĕçĕ нумай лайăхланчĕ. Вĕсен ларăвĕсенче писательсем пирĕн литература аталанăвĕнчи проблемăллă ыйтусене сӳтсе яваççĕ. Уйрăмах «Чăваш поэчĕсен творчествинчи гражданлăх», «Историллĕ тата художествăллă тĕрĕслĕх», «Чăваш прозин чĕлхипе стилĕ», «Çамрăксем валли ытларах лайăх кĕнеке çырассишĕн» темăсемпе тунă докладсене сӳтсе явнă çĕре секци членĕсем активлă хутшăнчĕç. Писатель-коммунистсем хăйсен пухăвĕнче «Критика мĕнле шайра тăни тата ăна чăвашсен литература журналĕсенче вăйлатасси çинчен» лартнă ыйтăва тĕплĕн пăхса тухрĕç. Парти пухăвĕсенче писательсен творчествăллă отчечĕсене итлесси йăлана кĕчĕ.

Г. Я. Хлебниковăн малта асăннă «Современная чувашская литература» кĕнеке пирки пирĕн хаçат-журналсенче тĕрлĕ шухăшсем пулчĕç. Пĕрисем ăна ырларĕç, теприсем, автор ырă ĕмĕтпе çырнине палăртнă вăхăтрах, унăн çитменлĕхĕсене те кăтартса пачĕç. Пирĕн шутпа, унта чăнах та çитменлĕхсем пур пулин те, вăл пĕтĕмĕшпе хурламалли кĕнеке мар.

Чăваш литераторĕсен йышне çуллен-çулах çамрăк авторсем хутшăнаççĕ. Пултаруллă çĕнĕ вăйсем ӳсни çыравçăсен ватă ăрăвне, писательсен Союзне яланах савăнтарнă, савăнтарать те. Çавăнпа та çамрăк литераторсемпе ĕçлесси — Союз правленийĕпе унăн пичет органĕсем шĕн чи пысăк ĕçсенчен пĕри.

Литературăри çĕнĕ ăрăва ӳстерессин политикăлла пысăк пĕлтерĕшне шута илсе, писательсен Союзĕн правленийĕпе ВЛКСМ Чăваш обкомĕ çамрăк литераторсемпе ĕçлекен Совет туса хучĕç. Совет составне республикăри парти, комсомол, профсоюз организацийĕсен представителĕсене, паллă чăваш писателĕсене, хăшпĕр литература пĕрлешĕвĕсене ертсе пыракансене кĕртнĕ.

Халĕ пирĕн республикăра активлă ĕçлекен çамрăк авторсен шучĕ 200 ытла, вĕсем — район хаçачĕсемпе вĕ-

ренӳ заведенийĕсенчи, тĕрлĕ предприятири литература пĕрлешĕвĕсен членĕсем. Виç-тăватă çул каялла çеç çамрăк çыравçă шутланнисенчен хăшĕ-пĕрисем ĕнтĕ (Г. Краснов, Г. Луч, В. Погильдяков, В. Захаров, Ю. Айдаш, М. Сениэль, Ю. Семенов, Н. Петровская, Л. Степанов-Маяксем т. ыт. те) вулакансемшĕн паллă писательсемех пулса тăчĕç. Вĕсем ĕнтĕ икшер-виçшер кĕнеке те кăларчĕç.

Уйрăмах эпир чăваш писателĕсен кĕнекисем СССРти ытти халăхсемпе социализмлă çĕршывсенчи халăхсене вулама юрăхлă пулнишĕн хытă хĕпĕртетпĕр. Кун пирки «Аслă çулпа» статьяра çырнине тепĕр хут асăрхаттарас килет. Çеçпĕл Мишши сăввисене халь тĕнчери 53 халăх хăй чĕлхипе вулать, П. Хусанкай сăвви-юррине 48 чĕлхене. Я. Ухсай сăввисемпе поэмисене 28 чĕлхене, Л. Талвирăн «Пăва çулĕ çинче» повеçне 18 чĕлхене, Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романне вырăсла, белорусла, эстонла, пăлхарла куçарнă. Çавăн пекех С. Шавлин, А. Воробьевăн, В. Давыдов-Анатрин, Г. Ефимовăн тата ыттисен нумай сăвви-юрри украинла, белорусла, эстонла, аварла, лезгинла, лакла, пушкăртла, тутарла, мăкшăлла, ирçелле, марилле пичетленсе тухнă.

Совет çĕршывĕнчи литературăсен туслă çемйинче чăваш литературине чечекленме уйрăмах вырăс чĕлхи — нацисене пĕрлештерсе туслаштаракан аслă вырăс чĕлхи нумай пулăшать. Шăпах ĕнтĕ вырăс чĕлхине пула чăваш писателĕсен кĕнекисем пĕтĕм Союзĕпе те тĕнчипе сарăлчĕç. Юлашки виç-тăватă çул хушшинче кăна Мускавра П. Хусанкайăн «Дальний полет» кĕнеки, Я. Ухсайăн «Звезда моего детства», «Сильбийский родник» поэмисем, Л. Агаковăн «Солдатские дети», В. Садайăн «Повесть о крылатых друзьях», «Запах тумана» повеçĕсем, М. Юхман «Цветы Эльби» кĕнеки, А. Воробьевăн «Красные колосья», Г. Ефимовăн «Девичья роща» сăвă кĕнекисем, М. Кипекĕн «Герои без вести не пропадают», А. Талвирĕн «Вутлан зажигает огни», В. Ухлин «Ткут девушки шелка», Л. Емельяновăн «Разлив Цивиля» романĕсем, «Чувашские сказки» юмах кĕнеки тата «Земля Улыпа» калавсен пуххи пичетленсе тухрĕç. Çак çулсенчех тата магазинсенчи кĕнеке çӳлĕкĕсем çинче нумай нациллĕ совет поэзийĕн антологийĕ, «Песня, ставшая книгой» ятлăскер, курăнса кайрĕ. Илемлĕ, витĕмлĕ янăраççĕ унта 15 чăваш поэчĕн сăввисем.

Хамăр та эпир вырăс писателĕсен, Атăл тăрăхĕнчи

халăхсен çыравçисен, Дагестан, Украина, Белорусси, Эстони тата ытти республикăсенчи чĕлхе ăстисен сахал мар произведенине чăвашла куçартăмăр. Сăмахран, журналсемпе хаçатсенче вырăс авторĕсемсĕр пуçне, украинецсен, латышсен, эстонсен, аварсен, лаксен, пушкăртсен, тутарсен, марисен, тувинсен т. ыт. халăхсен прозаикĕсемпе поэчĕсем чăваш вулаканĕпе чăвашла калаçса курчĕç.

Республикăн культура пурнăçĕнчи пысăк событи вăл 1970 çулхи ноябрь уйăхĕнче Мускавра чăваш литературипе искусствин Кунĕсене ирттерни пулчĕ. Библиотекăсенче, заводсенчи клубсенче, Мускавпа Мускав облаçĕнчи культура çурчĕсенче, МХАТ филиалĕн залĕнче пирĕн поэтсем, прозаиксем, драматургсем вулакансем умĕнче туха-туха калаçрĕç, хăйсен произведенийĕсене вуларĕç, чăваш çĕрĕпе унти маттур та ĕçчен çынсем çинчен каласа кăтартса тĕлĕнтерчĕç. Писательсемпе пĕрлех Мускав халăхне чăваш искусствин маçтăрĕсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

Чăваш çыравçисем çавăн чухне тата РСФСР писателĕсен Союзĕн Правлени секретариатĕнче Мускаври паллă писательсемпе, критиксемпе, литературоведсемпе пĕрле хамăрăн чăваш романне тишкĕрсе сӳтсе яврĕç. Унта нумай ăшă сăмах, çавăнпа пĕрлех асăрхаттарусемпе канашсем пулчĕç. Н. Илпекĕн «Хура çăкăр», А. Талвирĕн «Никĕс» («Вутлан зажигает огни»), Хв. Уярăн «Таната», В. Ухлин «Шуркелсем», Юхма Мишшин «Мускав çулĕ» романĕсене тишкĕрнĕ чух вырăс критикĕсем пурте чăваш романĕ нумай нациллĕ совет литературинче тивĕçлĕ вырăн йышăнни çинчен каларĕç.

Халĕ ĕнтĕ чăваш писателĕсем тăван халăх вулаканĕсемпе, çавăн пекех ытти республикăсенчи, облаçсенчи вулакансемпе творчествăлла тĕлпулусем тăтăшах ирттересси — йăлана кĕчĕ. Ку вăл литература çитĕнĕвĕсене пропагандăлама, СССРти халăхсен туслă çемйинчи пиншер вулаканпа, вĕсен çыравçисемпе тачă çыхăну тытма питĕ лайăх пулăшать.

Туслăхпа тăванлăх уявĕ терĕмĕр эпир Ульяновскпа Воронеж облаçĕсенче, Пушкăртра, Тутарта , Мари АССРĕнче ирттернĕ Чăваш литературипе искусствин Кунĕсене. Вĕсене ватă писательсем те, çамрăккисем те йышлăн хутшăнчĕç. Хăйсен черечĕпе, çав республикăсемпе облаçсенчи литературăпа искусство çыннисем те пирĕн пата килсе курчĕç. Никам аркатайми туслăха кăтартакан кунсем пулчĕç вĕсем! Хăйсен илемĕпе халăха савăнтарчĕç.

Юлашки вăхатра уйрăмах Дагестанпа Чăваш ĕççыннисем хушшинчи ырă çыхăнусем çирĕпленчĕç. Ун çинчен пирĕн халăхра та, Дагестанра та А. Воробьев сăвви тăрăх çырнă юрă сарăлнă ĕнтĕ. Акă епле каланă «Салам, Дагестан» ятлă çав юрăра поэт:

Чăвашсем кунта пурнаççĕ,
Килнĕ аслă нимене.
Хĕрĕсем савса тухаççĕ
Дагестан каччисене.
Дагестан, Дагестан,
Эсĕ пĕлĕш, эс тăван!..

1970 çулта Дагестанри нумай районсем çĕр чĕтреннипе хĕн курчĕç. Сăрт-ту çĕршывĕнчи халăхсене пулăшма Тăван Çĕршывăн нумай-нумай кĕтесĕнчен çынсем кайрĕç. Дагестан халăхĕсене пулăшас ĕçре чăваш строителĕсем те тăванла алă пачĕç.

Кăçалхи март уйăхĕнче Чăвашра Дагестанăн культура Кунĕсем иртрĕç, май уйăхĕнче — Дагестанра эпир кайрăмăр. Пирĕн республика ĕççыннисем дагестан литературипе искусствин деятелĕсене калама çук ăшшăн кĕтсе илчĕç, чăвашсене те Дагестанра сăрт-ту çыннисен тараватлăхĕпе йышăнчĕç. Çав уяв кунĕсенче эпир пĕр-пĕринпе тата çывăхрах паллашрăмăр, пĕр-пĕрин творчествине тĕпчерĕмĕр, хаçатсемпе журналсенче пĕр-пĕрин сăввиюррине, калавĕсемпе очеркĕсене куçарса пичетлерĕмĕр.

Литературăпа искусствăн çавнашкал Кунĕсем малалла та час-часах пулса пырĕç. Вĕсем пĕр-пĕрин нациллĕ культурисене пуянлатма, творчествăра хавхалану ўстерме пулăшаççĕ.

Писательсен Союзĕн правленийĕпе унăн пропаганда бюровĕ республикăри предприятисемпе вĕренӳ заведенийĕсенче, колхозсемпе совхозсенче литературăпа музыка каçĕсем йышлă ирттереççĕ. Çав тематикăллă пултарулăх каçĕсене Л. Агаков, Н. Илпек, А. Кăлкан, А. Воробьев, В. Давыдов-Анатри, Г. Краснов, А. Галкин, Ю. Петров, В. Краснов-Асли, А. Эсхель, С. Шавли, В. Ухли, Н. Евстафьев тата ытти писательсем хĕрӳллĕ хутшăнаççĕ.

Ялти культурăллă-шефлă ĕçсемшĕн писательсене наградăсем пачĕç. Ку ĕç — питех те кирлĕ, пархатарлă ĕç. Ялти культурăллă-шефлă ĕçе активлă хутшăннăшăн чăваш писателĕсен Союзне СССР культура министерствипе

ялхуçалăх работникĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕн Дипломне пачĕç, уйрăм писательсем—А. Алендей, А. Кăлкан, Н. Илпек, В. Ухли, В. Урдаш, П. Ялкир «Отличник шефской работы над селом» значок илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Статья пуçламăшĕнче эпир халăх юмахĕсемпе хамăрăн юратнă поэтăмăра Çеçпĕл Мишшине ахальтен мар аса илтĕмĕр. Чăваш юрри-сăвви «Шупашкартан Кавал таран» кайĕ тесе ĕмĕтленнĕ Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче Çеçпĕл. Анчах вăл ун чухне чăваш сăвви-юрри асăннă хулапа ял таран çеç мар, пĕтĕм тĕнчипе каясси çинчен калама пултарайман. Халь чăваш культури улăпла утăмсем турĕ: Балтикăран пуçласа Цейлон таран, Венгрирен, Болгарирен, Румынирен пуçласа Вьетнам, Австрали таран илтĕнет паян чăваш совет литературипе музыкин сасси! Чăвашăн çĕнĕ çырулăхне пуçарса яракан, пĕрремĕш «Букваре» кăларакан И. Я. Яковлев, «чăвашсен нациллĕ ӳсĕмĕшĕн 50 çул хушши ĕçленĕ тата патша йĕрки хĕсĕрленине чылай тӳссе курнă çын» (В. И. Ленин) паян кун пирĕн хушăра пулас пулсан, мĕн каланă пулĕччĕ-ши хăй хыççăнхи çĕнĕ ăрусене? Тăван халăхăн çитĕнĕвĕсене хăй куçĕпе курса, хăй хыççăнхи çĕнĕ ăрусене вăл малалла та малаллах утма, коммунизм çĕнтерĕвĕ патне Ленин кăтартнă çулпа пыма каланă пулĕччĕ. Вилес умĕн хăйĕн «Халалĕнче» çырса хăварнă сăмахĕсене тепĕр хут аса илтернĕ пулĕччĕ: «Аслă та ырă чунлă аслă вырăс халăхне юратăр. Çак халăх сире хăйĕн çемйине тăван шутне хурса йышăнчĕ... Раççее ĕненĕр, сирĕншĕн вăл аннĕр вырăнĕнче пулĕ».

Ленинла наци политикине пула чăваш литератури, Совет Союзĕнчи ытти тăванла литературăсем пекех, çĕкленӳ çулĕпе çирĕппĕн утать. Унăн идейăллă хăвачĕ, çынсен чун-чĕрине хускатакан художествăллă-эмоциллĕ вăйĕ ӳснĕçем ӳсет.

Виçĕ орденлă тăван республика ĕççыннийĕсем вĕресе тăракан ĕç пурнăçĕпе пурăнаççĕ халь. Писательсем хăйсен тĕп тĕллевĕ тесе, рабочи класăн нумай енлĕ пурнăçне, çĕнĕ ял çыннисемпе халăх интеллигенцийĕн паттăр ĕçне-хĕлне тĕрĕс кăтартса парассине шутлаççĕ.

Халăхшăн тăрăшасси, коммунизм керменне хăпартакан халăхшăн ĕçлесси — творчествăллă интеллигенцин пĕрремĕш тивĕçĕ.

*1972.*

# «ЯЛАВ» ЖУРНАЛĂН ÇУР ĔМĔРХИ ĔÇĔ-ХĔЛĔ

Чăваш писателĕсен Союзĕн илемлĕ литература тата обществăпа политика журналĕ «Ялав» тухма тытăннăранпа 50 çул çитрĕ.

«Ялав» журналăн историне чăваш совет литературин чĕрĕ летопиçĕ теме пулать. Çур ĕмĕр ĕнтĕ вăл хăйĕн страницинче хамăр литературăн гражданлăхĕпе ăсталăхĕшĕн, çĕршывра коммунизмла общество тăвассишĕн ырми-канми кĕрешет.

Пурте лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ, Октябрьти Социализмла Аслă революциччен чăвашсен пĕр культурăпа искусство учрежденийĕ те, пĕр хаçатпа журнал та пулман. 1905—1907 çулсенчи халăх революцине пула, чăнах та, «Хыпар» хаçат тухма тытăннă, анчах унăн ĕмĕрĕ çулталăк çурăран та иртеймен.

Чăваш литератури, Совет Союзĕнчи ытти вак халăхсен литературисем пекех, Аслă Октябрь хыççăн çеç хăватлăн чечекленме май тупнă. Чăваш халăх пурнăçĕнчи паллăран та паллă событи вăл — 1920 çулта пирĕн халăха автономи туса пани пулнă. Халăх хуçалăхне ура çине тăратса аталантарнипе пĕрлех çав çулсенче издательство ĕçĕ те хĕрӳллĕн тапранса кайнă. Чăваш совет поэзийĕн никĕсне хывнă кăвар чĕреллĕ поэт-коммунист Çеçпĕл Мишши, Мускавран тин çеç аслă Ленин тухса каласнине итлесе таврăннăскер, тăван халăха акă мĕнле сăмахсемпе хавхалантарнă:

Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçа, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху.

Е тата:

Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ
Сăвă-юрăсем,
Пулĕç аслă, çивĕч ăслă
Кĕнекеçĕсем.

Автономин малтанхи çулĕсенче Чăвашри литература вăйĕсем ытларах культурăпа çутĕç учрежденийĕсем тавра, çавăн пекех облаçри «Канаш» хаçат тавра пĕтĕçсе

чăмăртаннă. 1923 çул варринче «Канаш» хаçат çумĕнче «Чăваш писателĕсемпе журналисчĕсен «Канаш» Союзне йĕркелеççĕ. Çак Союз ватă çыравçăсемпе çамрăк çыравçăсен пултарулăхне организацилле тата творчествăлла пĕтĕçтерес тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă. Тепĕр çулталăкранах вăл, 1924 çулхи июль уйăхĕнче, хăйĕн «Сунтал» ятлă журналĕн пĕрремĕш номерне пичетлесе кăларать. 50 çул хушшинче ку журнал (1946 çултанпа «Ялав» ятпа тухать) Совет Союзĕнчи пысăк журналсен ретне тăчĕ, унăн тиражĕ 3 пин экземплялртан 60 пине çити ӳсрĕ, халь ĕнтĕ вăл пĕтĕм çĕршывĕпех саланать.

Журналăн пĕрремĕш номерне мĕнлерех хуплашкапа кăларнине астутарса хăварас килет. Хуплашка варринче — пысăк сунтал, ун айĕнче — хĕрлĕ çăлтăр, çурлапа мăлатук; вĕсен хыçĕнчен вара мăнаçлă та хаваслă рабочипе хресчен тата чăваш ĕçхĕрарăмĕ, рабочи класпа хресченĕн арканми союзне символлă палăртса, инçетелле тинкереççĕ. Журналăн идейăпа художествăлла туртăмĕ мĕнлерех иккенне çак хуплашка хăех лайăх кăтартса панă ĕнтĕ.

Хăйĕн задачисем çинчен журнал умстатьяра акă епле сăмахсемпе каласа парать: «Вулакана çак журнал чăваш ĕççынни пурнăçĕпе, унăн ăсхакăлĕпе паллаштарĕ... Чăваш çыннине вăл çĕнĕ йăласемпе пурăнма чĕнĕ... Хуйхăллă кĕвĕсем хыççăн савăнăç çулне тупмалли йĕркесене кăтартĕ. Çамрăксене ăслă, йĕркеллĕ, çивĕч, хастар, маттур пулма чĕнĕ... Журналти вут-хĕмлĕ чăваш чĕлхи çыруçăсене çыхса тăрĕ, вĕсен çарне нумайлатма пулăшĕ... Пурнăç никĕсĕсене çирĕплетекен тĕкĕ çак журналта çирĕп вырăн йышăнса тăрĕ. Киввине ишекен, çĕннине тăвакан «Сунталăн» ĕмĕрне вăрăмлатма пулăшар».

Тăван халăх пурнăçне, унăн социализмла общество тăвас ĕçри хавхаланулла кĕрешĕвне пултарулла кăтартса парасси, мире, прогреса хӳтĕлесси, совет патриотизмĕпе социализмла интернационализм идейисене çӳле çĕклесси—акă мĕнле ĕмĕтпе ĕçленĕ «Сунтал» журнала пуçласа кăларакансем.

Малтанхи утăмсенчен пуçласах журнал хăй тавра çамрăк чăваш совет литературин пултарулла вăйĕсене явăçтарать. Пĕрремĕш номерсенчех кунта Николай Шелеш, Семен Элкер, Петĕр Хусанкай, И. Максимов-Кошкинский, Петр Осипов, Хумма Çеменĕ, Никифор Васанкка, Трубина Марфи, Николай Шупуççынни çырнă чи лайăх произведенисем пичетленсе тухаççĕ.

Чăваш литературинчи Лениниана та «Сунталăн» пĕрремĕш номерĕнчен пуçланса кайнă. 1924 çулхи январĕн 21-мĕшĕнче тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕн Владимир Ильич Ленинăн чĕри тапма чарăнать. Журналта çак ятпа пичетленнĕ чăваш поэчĕсен сăввисенче мĕнпур халăхăн пысăкран та пысăк хурлăхĕ, çав вăхăтрах ленинизма халăх мĕн тери шанни-ĕненни уççăн курăнать. Вĕсен хушшинче уйрăмах Н. Шелепин паян кун та шкул хрестоматийĕсене кĕрекен халăх поэзийĕн меслечĕсемпе ăста усă курса çырнă «Ленин» сăввине палăртмалла. С. Элкерĕн «Хурçă карап» сăвви те (1925) пуçласа «Сунтал» журналта пичетленнĕ. Поэт кунта Ленина ирĕклĕхĕн чăн-чăн кĕрешӳçи, патша хĕссе пураннă халăхсене телей паракан çын туса кăтартса парать. Малаллахи çулсенче журнал страницисенче П. Хусанкайăн, Я. Ухсайăн, И. Ивникĕн, А. Алган, С. Шавлин, Г. Ефимовăн Ленин çинчен çырнă сăвви-поэмисем, Н. Илпекĕн, В. Долговăн, В. Садайăн тата ытти писательсен калавĕсем, чăвашпа ытти халăхсен сăмах вĕççĕн çӳрекен произведенийĕсем тăтăш пичетленсе пыраççĕ.

Çамрăк чăваш совет литературине çирĕп çул çине тăма тата журналăн идейăпа художество шайне çĕклеме партин XIII съезчĕ пичетпе литература ыйтăвĕсем пирки йышăннă решенисем (1924), çавăн пекех партин Центральнăй Комитечĕ «Партин илемлĕ литературăри политики çинчен» йышăннă постановленийĕ (1925) калама çук пулăшнă. Парти хăйĕн çак докуменчĕсенче литературăпа халăх пурнăçĕ хушшинчи çыхăнусене çирĕплетес программăна уççăн кăтартса панă, писательсене коммунизмла воспитани парасси çинчен, илемлĕ литературăра тĕл пулакан сиенлĕ шухăшсене хирĕç активлă кĕрещесси çинчен питех те уçăмлăн каланă.

20-мĕш çулсен вĕçĕнче «Сунтал» журнал халăх хуçалăхĕпе культурăна социализмла аталантарас темăна хăйĕн тĕп теми вырăнне хурса ĕçленĕ. Çĕнĕ пурнăç паллисем çав çулсенче уйрăмах Н. Шелепи, С. Элкер, Н. Ваçанкка сăввисенче, Д. Исаев, Хумма Çеменĕ, В. Краснов-Асли, С. Лашман, М. Данилов-Чалтун, Иван Мучи калавĕсемпе повеçĕсенче, П. Осипов, Н. Максимов-Кошкинский тата ыттисен пьесисенче лайăх палăрнă.

Вăтăрмĕш çулсем—социализмла çĕнтерӳсен чаплă та хĕрӳллĕ çулĕсем пулчĕç. Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрлех Советлă Чăваш республикинчи ĕççыннисем те хуçалăхра, культура хирĕнче пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Чăваш çыравçисем вара идейăпа организацилĕх тĕлĕшпе пĕрлĕхлĕ пулса тăчĕç. Партин Центральнăй Комитечĕ «Литературăпа художество организацийĕсене урăхлатса çĕнетесси» çинчен йышăннă постановлени (1932) тата РАППа пĕтернĕ хыççăн чăвашсен литература организацийĕпе унăн пичет органĕн ĕçĕсем те чылай улшăнаççĕ. Совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри съезчĕ умĕн 1934 çулта чăваш писателĕсен 1-мĕш съезчĕ пулса иртет. Çакăн чухне ĕнтĕ Чăваш АССР писателĕсен Союзне туса хураççĕ, Пĕтĕм Союзри писательсен 1-мĕш съездне делегаци суйлаççĕ.

30-мĕш çулсенче чăваш литературипе вырăс литератури хушшинче, çавăн пекех СССРти тăванла ытти литературăсем хушшинче те творчествăлла çыхăнусем нихçанхинчен анлă сарăлса каяççĕ. Çак пархатарлă ĕçре «Сунтал» журнал калама çук пысăк вăй хурать. Чăваш литературинче социализмла реализм меслетне çирĕплетессине, пурнăçа историлле тĕрĕс кăтартса парассине журнал ку тапхăрта хăйĕн чи пысăк тĕллевĕсенчен пĕри тесе шутлать. «Ялав» журналăн 50 çулне уявланă май, эпир халĕ СССР писателĕсен пĕрремĕш съезчĕпе чăваш писателĕсен малтанхи съезчĕ 40 çул тултарнине паллă тăватпăр. Пирĕн Союзăн мĕнпур организациллĕ-творчествăллă ĕçĕ паянхи кунсенче çак чаплă датăсене тивĕçлĕ кĕтсе илессишĕн пулса пырать.

30-çулсенче пирĕн çыравçăсене чăваш халăх пурнăçĕнчи çĕнĕ пулăмсем — çĕршыва индустриализацилессипе ялхуçалăхне колхозлă çул çине тăратасси пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хистенĕ. Çакна эпир Шăпчăк, Талвир, Уйăп, Агаков, Еллиев, Тукташ, Эсхель, Митта калавĕсемпе очеркĕсенчен, Хусанкай, Ухсай, Янкас, Бараев, Шавли, Алга сăвви-юррисенчен, Осипов, Айзман, Трубина Марфи пьесисенчен питех те лайăх куратпăр.

Ун чухнехи чăваш прозинче Л. Агакован «Пĕрре, çуркунне...» повеçĕ паллă вырăн йышăнать. 1939 çулта «Сунтал» журналта пичетленнĕ çак повеçре писатель Чăваш çĕрĕнче халăх хуçалăхне епле майсемпе ура çине тăратни çинчен художествăлла меслетсемпе ăста çырса кăтартать. Ялти коммунистсемпе комсомолецсем юхăннă хуçалăха ура çине тăратас ĕçре партипе совет правительствин чăн-чăн тĕрекĕ пулнă, чăваш ялĕн экономикипе культурине çĕклессишĕн вĕсем, вăй-халне шеллемесĕр, çанă тавăрса ĕçленĕ, вырăнти Советсене çирĕплетнĕ, кулаксемпе юнлă тытăçăва тухнă.

Çав çулсенчех литература киртики те ăнăçлă аталаннă. Чăваш литературин çулĕ-йĕрĕ çинчен А. Золотов, И. Кузнецов, В, Долгов парти позицийĕнчен тĕрĕс пăхса ăста статьясем çыраççĕ.

Вăрçă умĕнхи çулсенче чăваш литературинче çарпа патриотизм теми гражданла пысăк пафоспа янрама тытăнать. Вулакансем уйрăмах М. Данилов-Чалтунăн «Тайгара», «Çăлтăрлă çĕлĕк», «Икĕ вăй» калавĕсене, Леонид Агаков, Федот Çитта калавĕсемпе очеркĕсене, Уйăп Мишши, Александр Алга сăввисене хапăл туса йышăнаççĕ. Çак произведенисенчи геройсем Тăван çĕршыв чиккисене тĕплĕ сыхлаççĕ, чикке пăсакансемпе кĕрешнĕ чухне чăн-чăн паттăрлăх тĕслĕхĕсем кăтартаççĕ.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче фашистла Германи пире хирĕç вăрçă пуçарса ярсан вара журнал авторĕсенчен нумайăшĕ хăйсен ирĕкĕпех фронта туха-туха каяççĕ. Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн ку çулсенче «Сунталăн» нумай авторĕ — П. Хусанкай, Я. Ухсай, А. Алга, Н. Илпек, В. Долгов, Л. Агаков, М. Сироткин, Л. Талвир, В. Алакĕр, М. Кипек, Уйăп Мишши, К. Пайраш хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр вăрçăра паттăррăн çапăçнă. М. Данилов-Чалтун, Андрей Петтоки, Владимир Бараев, Илья Думилин, Максим Ястран, Кĕçтук Кольцов, Арсен Орлов, Федот Çитта, Василий Васькин, Иван Викторов тата ыттисем те ĕмĕрлĕхех вăрçă хирĕнче выртса юлнă. Тăван халăх нихăçан та асран ямĕ вĕсене, фашизма çĕнтерессишĕн вăрçăра пуç хунă хăйĕн çыравçисене.

1946 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа чăваш писателĕсен Союзĕн журналĕ «Ялав» ятпа пичетлеме тытăнать, терĕмĕр. Хăйĕн тĕллевĕ вырăнне вăл «Сунтал» журналăн традицийĕсене малалла аталантарасси вырăнне хурать. «Литературăра ĕçсем нумай, ĕмĕтсем пысăк. Пĕтĕмĕшпе илсе каласан, акă çаксене... асра тытса тăма кирлĕ: вăл марксизм-ленинизм наукине вĕренсе пырса, идеологи ĕçне вăйлатасси... пурнăçа тарăннăн вĕренесси, произведенисенче пуринчен ытла паянхи пултаруллă ĕçсыннисене сăнласа кăтартасси»,— акă епле çырать «Ялав» хăйĕн вăрçă хыççăн тухнă малтанхи номерĕсенчен пĕринче.

Вăрçă хыççăхи çулсенче пирĕн писательсем ытларах çарпа патриотизм темипе, мир темипе çырчĕç. Çавăн пекех вăрçă юхăнтарнă хуçалăха ура çине тăратас тема та вĕсен творчествинче тĕп вырăн йышăнчĕ. Александр Алган «Хĕçпе çурла», Мĕтри Кипекĕн «Пагтăрсем хы-

парсăр çухалмаççĕ» романĕсенче, Леонид Агаковăн «Салтак ачисем», «Ылтăн вăчăра», Владимир Садайăн «Летчиксем» повеçĕсенче фашизма хирĕç пынă вилĕмле çапăçура совет халăхĕ мĕн тери паттăрлăх кăтартнине ăста çырса панă. Халăхсене ирĕке кăларакан паттăр салтак сăнарĕсем, мирлĕ пурнăç тăвакан ĕçчен çын сăнарĕсем çавăн пекех Илпек Микулайĕн, Куçма Турханăн, Аркадий Эсхелĕн, Александра Лазаревăн, Валентина Элпин, Владимир Ухлин, Григорий Лучăн тата ыттисен калавĕсемпе очеркĕсенче, Петĕр Хусанкай, Ухсай Яккăвĕ, Александр Алга, Стихван Шавли, Алексей Воробьев, Георгий Орлов, Георгий Ефимов, Александр Кăлкан, Александр Галкин, Валентин Урдаш сăввисемпе поэмисенче, Николай Терентьев, Герасим Харлампьев, Мария Ухсай, Леонид Родионов, Александр Кăлкан тата ыттисен пьесисенче чĕррĕн тухса тăраççĕ. Малтанласа хăйсен произведенийĕсене пурте тенĕ пекех вĕсем «Ялав» журналта пичетлерĕç, вĕсенче эпир кулленхи пурнăçăн героикине, советла Чăвашьенчи рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин харсăр ĕçне-хĕлне куратпăр.

Парти халăх хуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе туса ирттернĕ мерăсене пула вăрçă хыççăнхи çулсенче пирĕн республика экономики те вăйлă çирĕпленчĕ. Çĕнĕ заводсем, фабрикăсем çĕкленсе ларчĕç, тырă тухăçлăхĕ, аш-какай туса илесси ӳсрĕ. Паллах, «Ялав» та çак кирлĕ ĕçсенчен айккинче тăма пултараймарĕ, пултараймасть те. Унăн страницисенче номертен номере промышленность предприятийĕсенчи, стройкăсенчи, колхозсемпе совхозсенчи ĕç паттăрĕсем çинчен калавсемпе очерксем, тĕрленчĕксемпе репортажсем пичетленсе пычĕç. Малта пыракан опыта анлăн сарма, ырă пуçарусене çунат пама юратнă журналăмăрта пичетленнĕ çавăн пек произведенисем чылай пулăшрĕç, пулăшаççĕ. Вĕсенче эпир республикăра пулса иртекен паллă процессен социаллă тымарне, коммунизм тăвакан совет çынни епле куллен-кун ӳссе пынине куратпăр.

Редакци Чăваш АССРĕнчи чи пысăк стройкăсенче писательсен посчĕсем уçрĕ. Çакна пула вăл республикăра пулса иртекен чи паллă ĕçсене тĕплĕн сăнаса тăрать. Вăхăт туйăмĕ уйрăмах Василий Алендей, Аркадий Эсхель, Алексей Талвир, Владимир Ухли, Анатолий Емельянов, Алексей Медведев. Владимир Садай, Георгий Краснов, Иван Григорьев, Степан Аслан, Иван Лисаев, Юхма Мишши, Юрий Семенов тата ыттисен произведенийĕсенче

сисĕнет. Вĕсенче асăннă юлташсем хулапа ялти чи лайăх çынсем çинчен, республикăри ĕçченсем умне куллен тухса тăракан проблемăсем çинчен тĕрĕс каласа параççĕ. Юлашки вăхăтра журналăн кашни номерĕнче тенĕ пекех Шупашкарти тракторостройпа ГЭСстрой пурнăçне кăтартакан очерксемпе репортажсем тухса пыраççĕ.

«Ялав» хăйĕн страницисенче ĕлĕк те, халь те историллĕ темăпа çырнă произведенисем нумай пичетленĕ, пичетлет. Аса илер-ха С. Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэмине, П. Хусанкайăн «Çирĕм ултă», «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэмисене, Я. Ухсайăн «Чапаевпа тĕл пулни» поэмине, Н. Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака», В. Пайменăн «Кĕпер», Г. Харлампьевăн «Илемлĕ ир» романĕсене. Паян кун та халăх вĕсене юратса вулать.

Чăваш вулаканĕсене тăванла республикăсенчи, социализмла республикăсенчи çыравçăсен тата пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă писательсен произведенийĕсемпе анлăн паллаштарас тĕллевпе «Ялав» хăйĕн страницисенче вĕсен произведенийĕсене пичетлет. Çак ыра йăла журналăн малтанхи номерĕсенчех çирĕп тытăнса пырать. 1924 çулта «Сунталта» Н. А. Некрасовăн «Манăçнă ял» сăввине, Александр Блокăн «Вуниккĕ» поэмине, А. П. Чеховăн калавĕсенче пичетленĕ пулнă. Ун хыççăн пирĕн вулакансем А. Пушкинăн, М. Лермонтовăн, Л. Толстойăн, Н. Гогольăн, И. Тургеневăн, Н. Чернышевскин, Ш. Руставелин Т. Шевченкон, И. Франкон, М. Горькин, В. Маяковскин, М. Шолоховăн, Н. Островскин, Б. Горбатовăн, М. Шагинянăн, Н. Погодинăн, А. Сурковăн, Н. Тихоновăн, Г. Тукайăн, Ч. Айтматовăн, Р. Гамзатовăн, С. Михалковăн, М. Каримăн, К. Кулиевăн, П. Тычинăн, М. Рыльскин, О. Гончарăн, Ю. Збанацкин, М. Танкăн, М. Казаковăн тата ытти нумай писательсен произведенийĕсемпе паллашрĕç. Урăх çĕршывсенчи малта пыракан писательсем те — Ю. Фучик, А. Тодоров, П. Неруда, Н. Хикмет Ш. Петефи т. ыт. те, т. ыт. те — «Ялав» страницисенче хăйсем валли вырăн тупсах пычĕç.

Союзлă тата автономиллĕ республикăсенчи, облаçсенчи çыравçăсемпе чăваш писателĕсем хушшинчи çыхăну питех те çирĕп. Эпир тăтăшах пĕр-пĕрин патĕнче литература кунĕсем, эрнисем ирттеретпĕр, пĕр-пĕрин произведенийĕсене куçара-куçара пичетлетпĕр, кĕнекесем кăларатпăр. Çак туслăха «Ялав» журнал уйрăмах вăйлă пропагандăлать. Паян эпир, тăванла литература представителĕсем кунта хăнана килнипе усă курса, Украина писате-

лĕсене «Украина» журналан главнăй художникĕ Чичканов урлă, тутарсен литераторĕсене — «Казан утлары» журнал сотрудникĕ Нуруллин урлă, Пушкăртри туссене — «Агидель» журналăн главнăй редакторĕ Низамов урлă, мари çыравçисене «Онычко» журналăн ответлă секретарĕ Галкин урлă, Ярославльти тăвансене Ярославльти писательсен организацийĕн ответлă секретарĕ Смирнов урлă хĕрӳллĕн саламлатпăр. Килĕрсене таврăнсан, туссене пĕлтерĕр: вĕсен произведенийĕсене чăваш вулаканĕсем юратса, пысăк хак парса йышăнаççĕ. Çакнашкал туслă çыхăнусем пирĕн тăванла культурăсене малашне те пуянлатассине, арканми туслăха татах çирĕплетессине эпир çирĕп шанса пурăнатпăр.

Чăваш писателĕсен Союзĕн правленине, çавăн пекех журналсен редакцийĕсене мĕнпур организациллĕ-творчествăллă ыйтупа КПСС обкомĕ, Верховнăй Совет Президиумĕ тата ЧАССР Министрсен Совечĕ куллен пулăшса пыраççĕ, пирĕн ĕçе вĕсем яланах тивĕçлипе хаклаççĕ. Çакна писательсемпе культура работникĕсем валли К. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премийĕ, комсомолăн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕ, Элкер ячĕпе хисепленекен преми туса пани те, халăх поэчĕпе халăх писателĕн ячĕсене çирĕплетни те лайăх кăтартаççĕ.

Нумаях пулмасть КПСС Чăваш обкомĕн бюровĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «Илемлĕ литература критики çинчен» йышăннă постановление эпир мĕнле пурнăçласа пынине сӳтсе яврĕ. Бюро юлашки вăхăтра критикăпа литературоведени статйисен шайĕ идейăпа теори енчен ӳснине, алçырăвĕсене рецензилес, редакцилес ĕç лайăхланнине, авторсен активĕ çирĕпленнине палăртрĕ. Çав вăхăтрах бюро ку ĕçре çитменлĕхсем пуррине те, вĕсене мĕнле çул-йĕрпе пĕтермеллине кăтартса пачĕ. Çакна май, «Ялав» журнал чăваш литературинчи пулăмсене анализлакан статьясем чылай хатĕрлерĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановление епле пурнăçласси пирки конкретлă мероприятисем палăртрĕ.

«Ялавăн» тĕп ĕçĕсенчен пĕри вăл — çамрăк çыравçăсемпе ĕçлесси, литературăра çĕнĕ ăру хатĕрлесси. М. Горькинченех пуçланнă çак йăла журналăн пĕтĕм биографийĕпе çыхăннă. Пултаруллă çĕнĕ авторсем, пурте тенĕ пекех, хăйсен произведенийĕсене пуçласа «Ялавра» пичетлеççĕ. Вĕсем халь сахаллăн мар: Юрий Петров, Юрий Семенов, Юрий Айдаш, Федор Агивер, Порфирий

Афанасьев, Леонид Маяксем, Мария Волкова, Владимир Харитонов, Раиса Яковлева, Анатолий Ерусланов ячĕсене вулакансем лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ.

Ӳсет те çирĕпленет пирĕн литература, ӳсет те çирĕпленет «Ялав» та. Кашни чăваш писателĕн пултарулăхне ырă вĕрентекен пулса кĕрсе пычĕ вăл. Калама çук пысăк савăнăçпа кĕтсе илтĕмĕр эпир СССР Верховнăй Совет Президиумĕ «Ялав» журнала «Хисеп Палли» орденпа наградăласси çинчен» 1974 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнче кăларнă Указа.

Çавăн пекех ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ тата КПСС Чăваш обкомĕпе Министрсен Совечĕ журналăн активлă авторĕсене Хисеп Грамотисемпе наградăлани те пире чунтан-чĕререн савăнтарчĕ.

Унсăр пуçне ,авторсен пысăк ушкăнне, редакци сотрудникĕсене, полиграфистсене Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕ грамотăсем пачĕ.

Паян, чаплă юбилей кунĕнче, эпир уйрăмах «Ялав» журнал сăпки умĕнче тăнă çынсене — журналăн малтанхи редакторĕсемпе сотрудникĕсене ырăпа аса илсе тав тăватпăр. Вĕсем — Николай Яковлевич Золотов, Данил Семенович Эльмень, Аркадий Иванович Золотов, Григорий Тимофеевич Алендей, Андрей Трофимович Петтоки, Николай Васильевич Шупуççынни, Николай Федорович Данилов, Хумма Çеменĕ, Михаил Данилович Шумилов-Уйп, Семен Васильевич Элкер... Çак çынсем ĕнтĕ чăваш совет литературине аталантарас, республикăри писательсен вăйне пĕрлештерес, тăван литературăра ленинла партилĕх, халăхлăх принципĕсене çирĕплетес ĕçре хăйсен мĕнпур вăйне, пултарулăхне панă. Çавăнпа пĕрлех эпир журналта каярахпа ĕçленĕ е редакцире паян кун вăй хуракан çынсене тав тума та манмастпăр.

Илемлĕ литература тата обществăпа политика журналĕ пурнăçпа тан утма, пурнăç таппине пĕр самантлăха манмасăр туйса пыма тивĕç. Халĕ ак пилĕкçуллăхăн тăваттăмĕш çулĕнче ĕçлетпĕр ĕнтĕ. Çавна май журнал халăхăн ĕçри паттăрлăхне ахаллĕн фотографилесе кăтартнипе çеç ниепле те çырлахма пултараймасть. Унăн тĕп тĕллевĕ — çĕршыв ĕçне-хĕлне художествăлла пĕтĕмлетсе кăтартасси, совет обществинчи проблемăсене конкретлă палăртса вĕсене конкретлă татса парасси пулса тăрать. Писательсен, хаçат-журналсен çавăн пек сăмахĕ çеç партипе халăха кирлĕ пулăшу пама пултарать.

Хамăр вăхăтра пурăнакан çынна, унăн ĕçне-хĕлне, ун

ĕмĕчĕсен мăнаçлăхне тĕрĕс те тарăн кăтартса парасси, паянхи çынра малашлăх çыннин сăнарне курасси, кулленхи пурнăçа коммунизм идеалĕн çутипе çутатса пырасси — акă мĕнле тĕллевсем тăраççĕ пирĕн паянхи литература умĕнче.

Çак задачăсем вĕсем пысăк та кăткăс. Вĕсем пирки КПСС XXIV съезчĕн тата парти Центральнăй Комитечĕн Пленумĕсен решенийĕсенче уçăмлă каласа хăварнă.

Чăваш писателĕсен Союзĕн ячĕпе, хамăр авторсен коллективĕн ячĕпе эпир паян «Хисеп Палли» орденлĕ «Ялав» журнал парти шанăçне малашне те тӳрре кăларса пырасси пирки КПСС Центральнăй Комитетне пĕр иккĕленмесĕр çирĕппĕн шантарма пултаратпăр. Журнал малашне те хăйĕн ĕçĕнче илемлĕ пултарулăхри ленинла партилĕх тата халăхлăх принципĕсене çирĕп тытса пырĕ, вулакансене идея тĕлĕшĕнчен çирĕп те художество тĕлĕшĕнчен ăста произведенисем çеç парĕ.

Хамăрăн сăмаха Чăваш писателĕсен Союзĕ «Ялав» журнала уяв ячĕпе саламласа халалланă сăвăпа вĕçлес килет:

Паян эс аллăра,
Хăмач сăну сан шупкалман.
Эс çирĕп, шанчăклă алра,
Сана ӳкермĕпĕр нихçан!

Литература лаççинче
Асталăх хĕмĕпе, хастаррăн
Малтанласа «Сунтал» çинче
Тăван сăмахлăха туптарăн.

Ялан малти ретре пыран.
Шăпу пулмарĕ çăмăл санăн.
Эс пăрăнмарăн тĕп çулран,
Эс парти çулĕпе утатăн.

Мĕн сывлăшпа сывлать тĕнче —
Курса тăран,— эс витĕр куçлă.
Тăванлăх кăслă килĕнче
Пур халăхпа та эсĕ туслă.

Пайтах ĕç турăн çĕр çинче,
Мухтавĕ пур эс утнă çулăн.
Кашни писатель чĕринче
Çунса тăрать эс чĕртнĕ çулăм.

Ялан тăр вĕлкĕшсе, «Ялав»!
Ан сӳнтĕр пултару кăварĕ.
Салам сана, хисеп те тав,
Тăван культура юбилярĕ!

*1974.*

## БУКВАРЬТЕН — ПЫСĂК ЛИТЕРАТУРАНА ÇИТИ

Ку вăл XIX ĕмĕрти 60-мĕш çулсен пуçламăшĕнче пулнă. Çамрăк чăваш ачи, вунçиччĕ те тултарайманскер, шухăша каять: мĕншĕн чăвашла çырнă кĕнекесем çук? Ку чĕлхепе çĕршер пин çын калаçать-çке? Сăлтавне тупма йывăр килнĕ ăна. Чĕри вара хăйĕннех каланă: чăвашла кĕнекесем пулмаллах!

Чăнах та ĕнтĕ, чăвашсен ĕлĕк-авал çырулăхĕ пулнă, анчах таçта темле майпа çĕтсе çухалнă вăл. «Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ» текен сăмахах çирĕплетмест-и-ха çакна? Пирĕн халăхăн авалхи пĕр легендинче тата чăваш çĕрĕ çине Улăп-паттăр килсе тăван халăхăн ылтăн кĕнекине шыраса тупасси çинчен, ăна вăл çынсене каялла тавăрса парасси çинчен калани те пур...

Çав хăюллă чăваш — Иван Яковлев хушаматлă çамрăк çын пулнă. Асаплă пурнăçра туптанса çирĕпленнĕ унăн чун-хавалĕ. Йывăр ĕçе пуçăнасси — вĕренесси, кайран тăван халăха çутта кăларасси çинчен ĕмĕтленме тытăнать вăл. Анчах та Иван Яковлева калама çук пысăк чăрмавсем кансĕрлесе тăраççĕ; çулталăк ытла вăл çĕрвиçекен ĕçĕнчен хăтăлаймасăр пурăнать, аслă пĕлӳ илмешкĕн укçа-тенкĕ тупаймасăр хăшкăлать. Çапах та çамрăк çынна нимĕн те чарса тăраймасть, хăй умне лартнă тĕллеве пурнăçласси çинчен ĕмĕтленме вăл тем тусан та пăрахаймасть.

Вунтăххăрта Иван Яковлев гимназие вĕренме кĕрет, гимназие ылтăн медальпе вĕренсе пĕтерсен, Хусан университетне каять. Кунта ĕнтĕ вăл хăйĕн халăхне çутта кăларас ĕмĕтпе пушшех те хавхаланса çунма тытăнать. Пĕр япалана лайăх ăнланать вăл: хамăрăн кĕнеке çук пулсан, халăха çутта кăларасси çинчен ан та ĕмĕтлен. Çав кĕнекене тума тытăнать те вара Иван Яковлев. Пуç ватса, канма пĕлмесĕр ĕçлет, 1871 çулта — çĕр çул ĕлĕкрех — ăна çырса пĕтерет.

Калас пулать, малта пыракан вырăс ученăйĕсем

XVIII ĕмĕртен пуçласах чăвашсем валли çырулăх тумашкăн пĕрре мар тытăнса пăхнă. Сăмахран, 1769 çулта чăваш чĕлхин малтанхи грамматикине — «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятлăскерне, пичетлесе кăларнă, 1785 çулта 11 пин сăмахлă чăваш чĕлхин словарĕ тухнă, 1836 çулта миссионерла тĕллевпе «Начертания правил чувашского языка» вĕренӳ пособийĕ пичетленĕ. Анчах вĕсене пурне те вырăс графикипе çырнă, чăваш сăмахĕсене унта ăнланса илмелле мар хытă пăснă. Чăваш грамматикине, куçару меслечĕсене вырăссен ученăйĕ-филологĕ Н. И. Золотницкий нумай лайăхлатнă. Çĕнетнĕ алфавит никĕсĕ çинче вăл «Чуваш кнеге» ятлă чăваш букварьне (1867), ««Корневой чувашско-русский словарь» (1875), чăвашла çырнă пĕрремĕш календаре («Сьолдалык кнеге», 1867, 1874 çç.) пичетлесе кăларать. Анчах çак ĕçсенче чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсене тĕплĕн шута илмен. Мĕнпур чăваш халăхне ăнланмалла çырулăх кирлĕ пулнă. Çакна И. Я. Яковлев лайăх туйса тăнă. Халăха тăван чĕлхесĕр çутта кăларасси çинчен шухăшламалли те çук, тенĕ вăл. Тăван чĕлхе, ун шучĕпе, вулама-çырма вĕренмелли хатĕр çеç мар, тăван чĕлхе — пĕтĕм халăх хушшинче культура сармалли, наци литературине аталантармалли лайăх хатĕр те пулса тăма тивĕç.

Хусан университетĕнче вĕреннĕ чухнех И. Я. Яковлев вырăс студенчĕ Б. А. Белилин тата ытти юлташĕсем пулăшнипе чăваш алфавичĕн çирĕп йĕркеленĕ системине туса хатĕрлет. Тăван чĕлхе уйрăмлăхĕсене тарăннăн тĕпчесе, ытти халăхсен алфавичĕсемпе тĕплĕн паллашса, Яковлев чăваш алфавитĕнче 25 саспалли хăварать. Вĕсенчен 17-шĕ вырăс чĕлхипе чăваш чĕлхинчи пĕр пек сасăсене палăртнă, 8 саспаллийĕ вара — чăваш чĕлхинчи спецификăллă сасăсене кăтартнă.

1871 çулхи ноябрь уйăхĕнче И. Я. Яковлев ĕмĕчĕ тинех пурнăçа кĕрет: вăл хăйĕн букварьне, чăваш чĕлхи фонетикин, морфологийĕн, синтаксисĕн мĕнпур уйрăмлăхĕсене шута хурса çырнăскерне, пичетлесе кăларма ирĕк илет, унăн пĕрремĕш экземплярне 1872 çулхи январь уйăхĕнче алла тытса курать. Ку вăл чăвашсен пĕрремĕш нацилле кĕнеки пулнă. Çак кĕнекенех çамрăк чăваш литературин пĕрремĕш анатологийĕ теме те май пур: вĕренмелли материалсăр пуçне, Иван Яковлевич унта 23 пĕчĕк калав, 45 тупмалли юмах, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене 400-е яхăн кĕртнĕ. Яковлев «Букварĕ» пурĕ 20 хут

ытла пичетленсе тухна, XIX ĕмĕрти 70—90-меш çулсенче вăл чăваш литературин тĕп кĕнеки шутланнă.

Хăй пуçарса янă чаплă ĕçе малалла аталантармашкăн И. Я. Яковлева малта пыракан вырăс деятелĕсем нумай пулăшса хавхалантарнă. Типографирен «Букварь» экземплярне алла илнĕ-илменех Яковлев ăна Чĕмпĕре И. Н. Ульянов патне ăсатать. Çамрăк тусĕн паттăр ĕçĕшĕн Илья Николаевич чун-чĕререн хĕпĕртет, ăна çапла çырса ярать: «Ĕнер эпĕ Сирĕн кĕнекĕрĕн экземплярне те илтĕм. Питĕ савăнатăп Сирĕншĕн, кĕнекĕре пичетленĕшĕн. Ăна чăваш шкулĕсене салатмашкăн май килнĕ таран пулăшăп».

Яковлев алфавичĕ чăваш çырулăхĕнче ĕмĕрлĕхех çирĕпленсе юлнă ĕнтĕ, паян кун унта хăшпĕр улшăнусемпе хушса кĕртнисем çеç пур.

И. Н. Ульянов пулăшнипе И. Я. Яковлев уçнă Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ Октябрьти революциччен чăвашсем валли наукăпа вĕренӳ литературн, илемлĕ литературăпа куçару литератури кăларса тăракан центр шутланнă. Кунтах малтанхи чăваш писателĕсем ӳссе çитĕннĕ. Вĕсен шутĕнче — вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ К. Иванов, поэт-революционер Тайăр Тимкки, поэт, куçаруçă, фольклорист Н. Шупуççынни, М. Акимов журналист, И. Максимов-Кошкинский драматург т. ыт. те пур. Чăвашсен пĕрремĕш хаçатне «Хыпара» (1906—1907 çç.) кăларса тăракансем те И. Я. Яковлев вĕренекенĕсемех пулнă. Ку хаçатра вĕсем публицистикăллă çивĕч статьясем, очерксем, патша йĕркине хирĕç кĕрешме чĕнекен калавсемпе сăвăсем пичетленĕ.

В. И. Ленин, И. Я. Яковлева ачаранах çывăх пĕлнĕскер, унăн обществăлла-педагогикăлла ĕçĕсене пысăк хак панă. 1918 çулхи апрелĕн 20-мĕшĕнче вăл Чĕмпĕр Совечĕн адресĕпе ятарласа телеграмма янă: «Мана Иван Яковлевич Яковлев шăпи интереслентерет. 50 çул чăваш халăхне çĕклессишĕн ĕçленĕ вăл, патша тытăмĕ хĕсĕрленине сахал мар тӳснĕ. Яковлева ун пурнăçĕн ĕçĕнчен уйăрмалла мар пуль, тетĕп».

Çĕр çул... Çак тапхăр хушшинче, уйрăмах Аслă Октябрь хыççăн, чăваш халăхĕ социаллă-политикăллă тата культурăллă пурнăçра калама çук пысăк çул утса тухрĕ. Паянхи Чăваш çĕрĕнче хутла пĕлмен çынна тупаймăн ĕнтĕ. Шупашкарта халь И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен университет, И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен пе-

дагогика институчĕ, ялхуçалăх институчĕ, темиçе наукăпа тĕпчев институчĕ пур.

Çĕр çул каялла И. Я. Яковлев пуçарса янă çĕнĕ çырулăх чăваш халăхĕн культурине, литературине аталантарас ĕçре калама çук пысăк усă кӳчĕ. Халĕ ЧАССР кĕнеке издательстви çулсеренех 200 ытла ятпа кĕнеке кăларать, вăл шутра — Марксăн, Энгельсăн, Ленинăн вилĕмсĕр ĕçĕсем, чăвашла хаçат-журналсем, вырăс литературипе ытти литературăсенчен куçарнă кĕнекесем пысăк тиражпа пичетленеççĕ.

Чăвашсен çĕнĕ çырулăхĕн çĕр çулне паллă тунă май, пирĕн ĕççыннисем чăваш алфавичĕпе çырулăхне пуçарса янă И. Я. Яковлева чун-чĕререн хисеплесе, пархатарлă сăмах каласа чысласçĕ.

*1971.*

## ПИРĔН ТУСЛĂХ — ĔМĔРЕ

«... Этемлĕхĕн мĕнпур хуçалăхĕ, политикăллă тата культурăллă пурнăçĕ капитализм тапхăрĕнчех интернационализациленсе пырать. Социализм вара ăна пĕтĕмпех интернационализацилет»,— тенĕ В. И. Ленин, обществăлла пурнăç мĕнле аталанса пынине тĕпчесе. (Çырнисен тулли пуххи, 23 т., 23 стр.) Октябрьти социализмлă Аслă революци çĕнтерсен, этемлĕх историйĕнче çĕнĕ ĕмĕр — социализм ĕмĕрĕ — пуçланчĕ. Революци патша империйĕн çĕрĕ çинче халăхсем хушшинчи танмарлăха, социаллă тата нациллĕ пусмăра тĕппипе пĕтерчĕ, халăхсене тăванла çемьене пĕрлештерчĕ.

Халăхсен туслăхĕн хăйĕн историллĕ тарăн тымарĕсем пур. Çав туслăх социаллă-политикăллă ирĕклĕхшĕн пыракан пĕрлешӳллĕ кĕрешӳре çуралса çирĕпленнĕ. Чăваш халăх интернационализмĕн идейисем иртнĕ ĕмĕрте халăха çутта кăларассишĕн çав тери пысăк вăй хунă С. М. Михайлов, И. Я. Яковлев, К. В. Иванов, Тайăр Тимкки тата ыттисен ĕçĕсенче уйрăмах уççăн палăрнă.

Халăхсем хушшинчи туслăхшăн чунне парса тăрăшакансенчен пĕри, И. Я. Яковлев, «... 50 çул хушши чăваш халăхне çĕклессишĕн ĕçленĕ, патша тытăмĕ хĕсĕрленине сахал мар тӳснĕ» (В. И. Ленин) çын пулнă. Вăл хăйĕн халăхне чунтан юратнă, анчах ăна вырăссенчен, Раççейри ытти халăхсенчен уйăрман, нацисем хушшинче пĕртан-

лăх, тăванла туслăх ĕмĕрлĕхе çирĕпленессине чĕререн шаннă. Çĕр çинчи мĕнпур халăхсем пĕр тан пулмалла тесе вĕрентнĕ вăл ĕмĕрĕ тăршшĕпех. Ахальтен мар ĕнтĕ «Пулă сĕрни» ятлă шӳтлĕ калавне те Яковлев: «Вырăс, тутар, чăваш — пурте çын»,— тесе вĕçленĕ.

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Тайăр Тимкки поэт-революционер 1905—1907 çулсенчи Раççейри революци тапхăрĕнче «Интернационалпа» «Марсельезăна», ытти революциллĕ сăвă-юрăсене чăвашла куçарнă, хăйĕн сăввисенче ĕç хресченĕсене рабочи класс ертсе пынипе пĕрлĕхлĕ, пĕр шухăшлă пулма чĕннĕ.

Чăваш литературине пуçарса янă К. В. Иванов аслă вырăс халăх поэчĕсен М. Ю. Лермонтовăн, Н. А. Некрасовăн, А. В. Кольцовăн тата ыттисен произведенийĕсене юратса куçарнă. «Хальхи самана» сăввинче вăл чăваш халăх пурнăçĕн шăпинче вырăс халăхĕ епле прогрессивлă вырăн йышăнса тăни çинчен каланă.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче çулăм чĕреллĕ поэт-коммунист Çеçпĕл Мишши «революци пурнăçа пур енчен те çĕнĕ сывлăш, чĕрĕ сывлăш кĕртрĕ. Пур ĕçре те Чĕрĕлĕх» тесе хавхаланнă: Чăваш халăхĕнчен тĕлĕнмелле пултаруллă çыравçăсем тухассине, халăхсен туслă çемйинче чăвашсен нациллĕ литератури калама çук вăйлă аталанса каяссине вăл чунтан ĕненсе тăнă. «... Çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе, Интернационал кĕперĕ анĕ»,— акă епле хăватлă сăмахсемпе вĕçлет поэт хăйĕн «Çĕн Кун аки» сăввине. Çав вăхăт çитрĕ. Çеçпĕл Мишши поэзийĕ пирĕн литературăна хамăр тата урăх çĕршывсенчи нумай-нумай халăхсен литературисемпе çывăхлатса туслаштарчĕ. Унăн сăввисене аллă виçĕ халăх халь хăй чĕлхипе вулать. Атăл тăрăх «Михаил Сеспел» ятлă пăрахут çӳрет, Украинăра Ю. Збанацкин «Çеçпĕл» романĕ пичетленсе тухрĕ. Украинăрах Çеçпĕл çинчен халĕ пĕтĕм çĕршывĕпе кăтартакан илемлĕ фильм кăларчĕç.

КПСС Центральнăй Комитечĕ партин XXIV съездĕнче тунă отчетлă докладра пирĕн парти ленинла наци политикине — халăхсен пĕртанлăхĕпе туслăхĕ политикине пурнăçа кĕртнине ятарласа палăртнă, ку вăл социализмăн пысăк çĕнтерĕвĕсенчен пĕри пулнине пĕлтерет. Çĕршыври мĕнпур обществăлла-политикăллă пурнăçри пекех, социализмла интернационализм идейисем илемлĕ литературăна та çирĕп кĕрсе вырнаçрĕç, çавна май СССР халăхĕсен туслăхĕпе тăванлăхне кăтартса пама калама çук анлă çулсем уçăлчĕç.

Калас пулать, чăваш совет литератури пуçланса кайнă тапхăрта хăшпĕр произведенисенче ун чухнехи пурнăçа буржуалла-националистла пăсса кăтартнă тĕслĕхсем те пулкаланă. Сăмахран, Д. Юман хăйĕн историпе экономика ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçĕсенче çеç мар, литература произведенийĕсенче те чăваш аваллăхĕн «ылтăн ĕмĕрне» мухтанă. Юман çырнисене вуласан, вăл кӳршĕ халăхсене, уйрăмах вырăссене юратманни, чăваш халăх аталанăвĕн çулĕ пĕтĕм çĕршыв çулĕнчен уйрăм пулмалла тени курăнать.

Çĕнĕ пурнăçа буржуалла-националистла пăсса кăтартакансене хирĕç пынă кĕрешӳре пирĕн литературăн çамрăк кадрĕсем идея енчен пиçĕхсе çирĕпленнĕ. Çакăнта чăваш писателĕсене партин облаçри комитечĕ нумай пулăшнă. Çĕршывра наци политики çирĕппĕн пурнăçланса пынине тĕрĕс сăнлакан паха произведенисем пичетре йышлă курăнма тытăннă. Хăйсен чи лайăх произведенийĕсенче чăваш çыравçисем марксизм-ленинизм идейисемпе, Коммунистсен партийĕн программипе туптанса пĕрлешнĕ тĕрлĕ наци çыннисен туслă пурнăçне, вĕсем коммунизм обществине тăвас ĕçре тимлĕн кĕрешнине кăтартса пама тăрăшнă. Çĕршыври историллĕ ĕçсене айккинчен курса тăрса çеç мар, çав ĕçсене хăйсем те хĕрӳллĕ хутшăнса, поэтсем, прозаиксем, драматургсем Тăван çĕршыв темине, халăхсен туслăхĕн темине вăйлă аталантараççĕ. Вĕсен произведенийĕсенчи геройсем хăйсене пĕтĕм совет халăхĕн уйрăлми пайĕ пек туяççĕ, çĕнĕ пурнăçшăн çанă таврăнса кĕрешеççĕ.

Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенчен пуçласах халăх хушшинчи обществăллă тата культурăллă пурнăçа чăвашсен ватă поэчĕ Н. Шелепи хастар хутшăнать. Хăйĕн сăввисемпе сăмахĕсенче вăл халăха Октябрьти революцин аслă пĕлтерĕшне ывăна пĕлми ăнлантарать.

М. Я. Сироткин профессор «Очерки истории чувашской советской литературы» кĕнекинче Шелепи пултарулăхне тĕплĕн тĕпчет. Тăван халăх пурнăçĕнчи историллĕ тапхăрсем поэт творчествинче пĕри те манăçа юлман. Чăваш автономиллĕ облаçĕнчен автономиллĕ республика туса хураççĕ-и, чăвашра пĕрремĕш заводсемпе фабрикăсем ӳсçе лараççĕ-и, ялсене коллективизацилеме тытăнаççĕ-и, хутпĕлменлĕхе пĕтереççĕ-и — пурне те поэт хăйĕн произведенийĕсенче илемлĕ меслетсемпе сăнлать, вĕсем çинчен халăха çийĕнчех каласа пама тăрăшать. Вăл, тет М. Я. Сироткин, чăваш çĕршывĕн экономикипе культури-

не аталантарас тӗлӗшпе буржуалла националистсем «уйрӑм ҫулсем-йӗрсем» шыранине, вӗсемех чӑваш халӑхне ытти тӑванла халӑхсемпе вырӑссенчен пистерме тӑрӑшнине тӑрӑ шыв ҫине кӑларать.

Халӑхсен туслӑхӗн темине Н. Шелепин хӑйӗн творчествинче пӗрре мар хускатнӑ. Вӑл вырӑссен аслӑ писателӗ Максим Горький ҫинчен, украинсен поэт-революционерӗ Тарас Шевченко ҫинчен манӑҫа тухми сӑвӑсем ҫырса хӑварнӑ. Ҫавӑн пекех «Савӑн, савнӑ Джамбул» сӑввине те поэт халӑхсен никам аркатайми ҫирӗп туслӑхӗн идейипе никӗсленӗ.

Халӑхсен туслӑхӗн аслӑ вӑйӗ ҫинчен Чӑваш халӑх поэчӗ С. Элкер сахал мар кӗвӗленӗ. Чӑваш литературинче чи малтан аслӑ В. И. Ленин сӑнарне кӑтартакансенчен пӗри те вӑлах пулнӑ («Хурҫӑ карап»). Писатель тӗрлӗ халӑх ҫыннисен ҫирӗп туслӑхне, вӗсем ҫӗнӗ пурнӑҫшӑн пӗр кӑмӑллӑн кӗрешнине «Шурӑмпуҫ килсен» романӗнче тарӑннӑн кӑтартса парать. Ку романра вырӑссен пӗрремӗш революцийӗ вӑхӑтӗнче чӑваш ӗҫҫыннисен ирӗклӗхшӗн пынӑ кӗрешӗвне чӑннипех те ӑста сӑнланӑ. Кӗрешӳре пӗрлешме чӑваш ӗҫҫыннисене Сормовӑри вырӑс рабочийӗ Григорий Бурцев большевик нумай пулӑшать.

«Вӑрҫӑ кунӗсем» роман-хроникӑра вара вулакан умӗнче пӗрремӗш тӗнче вӑрҫин, февральти революцин, граждан вӑрҫин картинисем чӗррӗн сӑнланаҫҫӗ. Романӑн тӗп геройӗ Семен Васильев, вырӑс рабочийӗсем — Февралев, Щербаков, Новиков коммунистсем пулӑшнипе, вӑрҫӑн йывӑр лару-тӑрӑвӗнче, тыткӑнра, класлӑ тытӑҫусенче туптанса, Совет влаҫӗшӗн хастар кӗрешекен ҫын пулса тӑрать.

Сормово заводӗнчи рабочисен коллективӗнче виҫӗ йӗкӗт — Ванька вырӑс, Ваҫка чӑваш тата Ахмет тутар епле пӗр шухӑшлӑ пулса туслашнине И. Тӑхти хӑйӗн «Ваҫка, Ванька, Ахмет» очеркӗнче ӗненмелле кӑтартса панӑ. Вӗсен тӑванла шухӑш-туйӑмӗпе ӗмӗт-тӗллевӗ ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ май, писатель пӗр пӗтӗмлетӳ патне ҫитсе тухать: пур ҫӗрте те, пӗтӗм Совет Союзӗпех, пирӗн халӑхсем пӗртӑван пек туслӑ та тату пурӑнаҫҫӗ.

Социализм строительствипе халӑхсен туслӑхӗн темине П. Хусанкай чи малтан «Автономи маршӗ» сӑвӑра хускатать:

Мӗнпурӗ пӗр ҫӑлтӑр айне!
Чӑваш-и, вырӑс-и, тутар-и,

Пĕтĕм Союзăмăр — ударник,
Утать социализм патне! —

хавхаланса çырать поэт çав сăвăра.

П. Хусанкайăн «Паянхи поэми»—Чăваш АССРĕ 10 çул тултарнă ятпа çырнă произведени. Кунта автор тăван республика çитĕнĕвĕсене, унăн чаплă çыннисене кăтартса парать. Поэмăра эпир автонимие пула, халăхсем пĕр-пĕрипе социализм тăвассишĕн килĕштерсе ĕçленине пула чăваш халăхĕ мĕн тери ирĕклĕн аталана пуçланине лайăх куратпăр. Вăл ĕнтĕ хăйĕн государственноçне туса хунă, кунта ачасене тăван чĕлхепе вĕрентеççĕ, литературăпа искусство хăватлăн аталанса чечекленет.

30-мĕш çулсенчи чăваш поэзийĕнче П. Хусанкайăн «Магнитту» поэми (1933) паллă вырăн йышăнать. Поэмăра поэт строительсен нумай пинлĕ çарĕ социализмла индустрин пĕрремĕш «ачине» — Магнитогорск гигантне епле çĕкленине кăтартса панă. Стройка ĕçне хăй те тӳрремĕнех хутшăннă май, поэт çак произведенире героикалла вăхăт сывлăшне, хĕрӳллĕ ĕç пафосне уйрăмах ĕненмелле сăнарланă. Тĕрлĕ халăх çыннисем тăрăшсавăй хураççĕ индустри гигантне тунă çĕрте. Кашнин хăйĕн чĕлхи, хăйĕн йăли-йĕрки, хăйĕн лайăх енĕ, çитменлĕхĕ. Çапах та творчествăллă хавхалануллă ĕçре стройкăри çынсен кăмăл-туйăмĕ, мораллĕ сăн-сăпачĕ куç умĕнчех улшăнса çĕнелет. Поэмăра автор социализм строительствине пĕтĕм халăх хутшăннине, чăваш ĕççыннисем те çĕршыв ĕçĕнчен айккине тăрса юлманнине витĕмлĕ сăнласа парать.

Пĕр çемье туйăмĕ, нимрен те хаклă социализмла çĕршывшăн, тăван халăхшăн чун-чĕререн савăнни нумай прозаиксемпе сăвăçсен произведенийĕсенче сисĕнеççĕ. Кунта уйрăмах Уйăп Мишшин «Тăван çĕршыв» кĕнекинчи «Çурçĕр сăввисем» ярăмне палăртса хăвармалла. Çав сăвăсенче поэт совет патриотизмне уйрăм тĕслĕхсемпе питех те ăста сăнласа кăтартнă. Совет салтакне халăх мирлĕ ĕçе хӳтĕлеме хĕçпăшал шанса панă. Салтак сăнарĕнче эпир совет çынни шухăш-кăмăлĕн чи лайăх енĕсене куратпăр. Çĕршыв ырлăхĕшĕн вăл хăйĕн пурнăçне пама хатĕр: унишăн пулсан, çĕршыври кашни халăх — тăванла çывăх халăх, унишăн пулсан, çĕршывăн кашни кĕтесĕ — çывăх-и вăл, инçе-и — унăн тăван кĕтесĕ.

Чăваш халăхĕн ĕлĕкхи хĕн-хурлă кунçулĕпе хальхи çутă та телейлĕ пурнăçне Я. Ухсай хăйĕн «Халăхăн ыл-

тăн кĕнеки» поэминче тарăннăн кăтартнă. Ахальтен мар ĕнтĕ çав поэма чăваш литературин ылтăн фондне тивĕçлĕн кĕрсе юлчĕ. Ана поэт СССР Конституцин проектне пĕтĕм халăх пăхса тухнă май çырнă. Вăл кунта чăваш халăхĕ хăйĕн ĕмĕрхи ĕмĕчĕсене вырăс халăхĕ пулăшнипе туни çинчен, вырăс халăхĕ ирĕклĕхшĕн, патша пусмăрне сирпĕтессишĕн пыракан кĕрешӳре ĕмĕртенпех пирĕн çывăх тус пулни çинчен калать.

Саккун тивлечĕпе пирте
Асаплăх пĕтрĕ, иртрĕ сивĕ.
Тавралăхăм, чăваш çĕршывĕ,
Кăвак та симĕс пĕлĕте
Çĕкленнĕ пек куллен ӳссе
Чакми вăй илчĕ, çунатланчĕ,—

шăрантарать сăвăç.

Совет Союзĕнчи халăхсен нихçан арканми çирĕп туслăхĕ совет халăхне социализм тума çеç мар, Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăра нимĕç фашисчĕсене çĕмĕрсе тăкма та питĕ нумай пулăшрĕ. Совет çĕршывĕшĕн калама çук йывăр килнĕ çав çулсенче чăваш литератури Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçларĕ. Литературăн тĕп геройĕ — мирпе мĕнпур халăхсен ирĕклĕхне хӳтĕлекен, этемлĕхе ирсĕр фашизм пусмăрĕнчен хăтаракан социализмла общество салтакĕ пулса тăчĕ.

Çĕршыври ытти халăхсен литературисем пекех, чăваш литератури те иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче интернационализм туйăмне, халăхсен фронтпа тылри туслăхне витĕмлĕ кăтартса пачĕ.

Халăх поэчĕ Н. Шелепи вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Совет Союзĕнчи ĕçхалăхне Тăван çĕршыва хӳтĕлемешкĕн пĕр пĕтĕмлĕ фронтпа тухма чĕнчĕ. Хăйĕн «Чĕнетĕп» сăввинче вăл, сăмахран, çапла çырнăччĕ:

Мухтавлă республик
Ĕç паттăрĕсем —
Октябрь çулăмпе
Çĕнтерекенсем.
Украинец, белорусс,
Кабардинец-балкар,
Çĕнтерӳ ялавне
Çӳлерех йăтар.
Тăванла халăхсем —

Литовец, латыш,
Сирĕн ĕçхалăхне
Пусмăрлать фашист.
Айтăр-ха, юлташсем,
Харăс çĕкленер,
Фашизм никĕсне
Çапса çĕмĕрер!

Вăрçă вăхăтĕнче фронтра çапăçнă хушăрах П. Хусанкай, Я. Ухсай, А. Алга, Л. Агаков, В. Долгов, Д. Кипек, Н. Илпек, Уйăп Мишши тата ытти писательсем те нумай паха произведенисем çырма пултарчĕç. Вĕсем Мускавпа Сталинград патĕнче, Брянск вăрманĕсемпе Смоленск çĕрĕсенче, тăшман тытса илнĕ Польша, Румыни, Болгари, Венгри çĕрĕсенче паттăррăн çапăçакан салтаксене хăйсен калавĕсемпе очеркĕсенче, поэмисемпе сăввисенче ăста кăтартса пачĕç.

Вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕнчи пур халăх салтакĕсем те тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартрĕç. Алла-аллăн тытăнса çапăçрĕç вĕсем ирсĕр тăшманпа. Ахальтен мар ĕнтĕ хăйĕн пĕр сăввинче П. Хусанкай вырăс йĕкĕчĕ Пушкин хыр тăррине пытанса ларнă фашист «куккукне» епле чеен персе антарни çинчен, пушкăрт халăх ывăлĕ Рашид Радельшин траншейăна барс пек вирхĕнсе кĕни çинчен çырать.

Совет Союзĕнчи халăхсен вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп туслăхне П. Хусанкай «Аслă туслăх» сăвăра питĕ аван кăтартнă:

Аманнă снайпер Георгадзе —
Хăюллă, витĕмлĕ грузин.
Ăна йăтса тухать ал вĕççĕн
Калуга вырăсĕ Ильин.

Суранлă лейтенант Сурбанов —
Чăваш ачи — аптранă-мĕн.
Ăна карел хĕрĕ юн пană,
Çăлса хăварнă вилĕмрен.

Хастар казах-пилот тăшманăн
Умнех самолетпа анса,
Хăпарнă çĕклесе аманнă
Артиллерист-белоруса...

«Çапăçу умĕнхи каç» сăвăра (1942) поэт-салтак каллех çартн туслăх вăйне, пĕр шухăш-кăмăллă совет салтакĕсен тăванлăхне кăтартать. Çапăçу умĕн Қаримов тутар, Сабир Баязин казах, Хамид узбек, Искендеров чăваш рядовойĕсем, отделени командирĕ Квитко украинец пĕр-пĕрне мирлĕ калаçура хăйсен вăрçă умĕнхи телейлĕ пурнăçĕ çинчен, тăван енĕн пуянлăхĕ çинчен каласа параççĕ. Пурте вĕсем çав пуянлăха хӳтĕлессишĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр.

Йывăр вăрçă çулĕсенче пирĕн республика эвакуацине килнĕ нумай-нумай ачана, хĕрарăма, старике тăванла йышăнчĕ. Çакна Л. Агаков «Салтак ачисем» повеçĕнче, С. Шавли «Матур Якур» поэминче ененмелле кăтартрĕç. Ку произведенисенчи геройсем хăйсен патриотизмла тивĕçне ялан туйса тăраççĕ, эсĕ урăх халăх çынни тесе пĕр-пĕринчен ютшăнмаççĕ.

Л. Агакован «Салтак ачисем» повеçне пирĕн çамрăксем уйрăмах юратса вулаççĕ. Кунта писатель вăрçă пуçлансан эвакуацине килнĕ белоруссемпе эстонецсен ачисемпе пĕр ялта пурăнакан чăваш ачисен патриотизмла ĕçĕсене сăнлать. Çул хыççăн çул иртет. Ваттисене те, хĕрарăмсене те нумай йывăрлăх тӳсме тивет. Аякран килнĕ çынсемшĕн чăваш колхозĕ вĕсен иккĕмĕш килĕ пулса тăрать. Йывăр вăрçă çулĕсенче ачасем малтанхинчен те тăрăшарах вĕренеççĕ, колхозра пысăккисемпе тан ĕçлеççĕ. Вулакансене уйрăмах Иллепе Аркаш чăваш ачисен, Янпа Юули эстонецсен, Рина Петровна учительницăн, Назар Егорович председателĕн, вăтă эстонец Пауль Оскаровичăн сăнарĕсем кăмăла каяççĕ. Пурте вĕсем — куç умне чĕррĕн тухса тăракан çынсем.

Ялти мĕнпур ачана ертсе пыраканĕсем повеçре — Иллепе Аркаш. Çак икĕ хастар ача пуçарса янипе вĕсен юлташĕсем Совет Çарĕ валли ăшă тумтир, тимĕр-тăмăр пухаççĕ, «фронт пахчи» йĕркелеççĕ, хирти ĕçсене хĕрӳллĕн хутшăнаççĕ. Вăрçă çулĕсенче вĕсем фронта пулăшма мĕн май пуррине пĕтĕмпех тăваççĕ, йывăр ĕçре пиçĕхсе çирĕпленеççĕ.

Вăрçăра çапăçнă чăваш поэчĕсем, тылра юлнă вăтă Н. Шелепи пекех, мĕнпур совет салтакĕсене Тăван çĕршывăн тĕп хулине Мускава, Белоруссипе Украинăна, Сталинградпа Одессăна — хамăрăн нумай нациллĕ çĕршывăмăра хӳтĕлеме чĕнсе, çав çулсенче сахал мар çулăмлă сăвă çырнă. Уйăп Мишши поэт, сăмахран, нумай-нумай ишĕлнĕ хулапа ял урлă иртнĕскер, çавнашкал

чĕнӳллĕ сăвăсем темиçе те çырнă. («Малалла, хĕвеланăç-
нелле», «Çĕр çунать», «Ан ман эс, чунăм».) Вĕсенче поэт
салтаксене малта Советлă Украина, Советлă Белорусси,
хăватлă Днепр, кăвак Дунай кĕтни çинчен калать, тата
хăватлăраххăн çапăçма чĕнет.

«Мускав» ятлă сăвăра Я. Ухсай хамăрăн тĕп хуламă-
ра чун-чĕререн тав тăвать. Вăл (Мускав хули), анне
ырăнĕнче пулса, ĕлĕк пусмăрта пуранна вак халăхсен
ачисене вĕрентнĕ, вĕсене Пушкинăн, Некрасовăн, Менде-
леевăн генилле ĕçĕсемпе паллаштарнă. Гитлер пирĕн
тĕп хулана çиçĕмле хăвăрт тытса илесшĕн пулнă, анчах
унăн сăхă ĕмĕчĕ çилпе вĕçсе каять: Совет Союзĕнчи пĕ-
тĕм халăхсем — ырăссем, чăвашсем, тутарсем тата
ыттисем те — Тăван çĕршыва, унăн тĕп хулине Мускава
хӳтĕлеме алла хĕçпăшал тытса пĕр çын пек харăссăн
çĕкленеççĕ.

С. Асланăн çав çулсенче çырнă «Аслати» повеçĕнче
эпир нимĕç фашисчĕсем совет çыннисене юнлă террорпа
пăхăнтарса, хăрушă пусмăра кĕртсе ӳкерме ăнтăлнине
куратпăр. Повеçри геройсем — чăваш салтакĕсем Павел
Призантинпа Сергей Комков, Добровпа Трухин вырăс-
сем, Самхарадзе грузин, украина партизанĕсем Оксанăпа
Станислав çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕ-
шĕн паттăррăн çапăçаççĕ.

— Кала-ха эсĕ, вырăс, ăçта тăратăн çак самантра?

— Эпĕ вырăс мар. Эпĕ — чăваш,— çирĕппĕн каласа
хучĕ Комков.

— Тшуаш? — тĕлĕнсе кайрĕ офицер, хăй вара сасар-
тăк йăвашланнă пек те пулчĕ.

— Тшуаш... Тшуаш... М-м-м... Тшуаш,— мăкăртатса
илчĕ офицер,— апла эсĕ мĕншĕн вырăссемшĕн çапăça-
тăн-ха?

— Эпĕ Тăван çĕршывшăн, тăван халăхшăн çапăça-
тăп! — хуравлать тыткăна лекнĕ Комков чăваш хăйне
тĕпчекен нимĕç офицерне.

Çавăн пекех А. Кăлканăн «Октябрь хумĕ», И. Макси-
мов-Кошкинскин «Савнисем» тата «Сенкер двойка»,
Н. Терентьевăн «Куккук çаплах авăтать», В. Ржановăн
«Энтип» пьесисенче те халăхсен туслăхĕ паллă вырăн
йышăнать.

Чăваш писателĕсем хаяр вăрçă çулĕсенче çырнă сăвă-
сене, калавсемпе очерксене, повеçсене вулатăн та, куç
умне аслă çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсем — совет салта-
кĕн чĕрĕ сăнарĕсем тухса тăраççĕ. Шăпах çав салтаксем

ёнтӗ, ҫӗршыв чысӗпе никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлесе, вӑрҫӑн асаплӑ ҫулӗсем витӗр Берлина ҫити утса тухнӑ. Вӗсемех Европа халӑхӗсене фашизм пусмӑрӗнчен хӑтарнӑ. Халь акӑ вӗсем, паттӑр ҫӗнтерӳҫӗсем, киле таврӑнаҫҫӗ, хӑвӑртрах мирлӗ ӗҫ умне тӑрасси ҫинчен ӗмӗтленеҫҫӗ. Совет салтакӗн шухӑш-туйӑмне А. Алга поэт-салтак «Манӑн туссем» сӑвӑра асра юлмалла палӑртса ҫырнӑ:

Пурнӑҫра тус-йышӑмсем нумай ман,
Нихӑҫан каймаҫҫӗ асӑмран.
Нихӑшне те нимӗнле хурлаймӑн
Кашниех-ҫке паттӑр пулнӑран.

Астӑватӑп: аслӑ вӑрҫӑ хумӗ
Ҫитерсен пире ют ҫӗрсене,
Пӗринче пӗр вӑйлӑ тӑвӑл умӗн
Эп тӗл пултӑм акӑ камсене:

Вӗсенчен пӗриййӗ Уралтанччӗ,
Тепӗри Армени чиккинчен.
Пурччӗ хӗр,— саркайӑк пек юрлатчӗ
Украина хирӗсем ҫинчен.

Ак, вута кӗрейрӗмӗр пӗр харӑс
Ҫулӑм вӗҫрӗ пӗр юлташ патне —
Вилӗмрен ҫӑлса хӑварчӗ вырӑс
Кӑмӑллӑ Армени йӗкӗтне.

Ҫумӑр мар — хӗрӳ тӑхлан ҫӑватчӗ.
Ӳкрӗм эп суранлӑ ҫӗр ҫине,
Самантрах чупса пырса хӑтарчӗ
Днепр хӗрӗ Атӑл каччине...

Ҫапӑҫу урса иртсе кайсассӑн,
Тӑвӑл лӑплансан йӗри-тавра,
Тӑвансем, тин курнӑ пек, хавассӑн
Калаҫма пуҫларӑмӑр вара.

Ӗмӗтсем пулайрӗҫ те ҫунатлӑ
(Тав сире, салтак ӗмӗчӗсем!)
Савнӑ аннесем пире ҫуратнӑ
Ҫӗршыва та ҫитрӗмӗр вӗҫсе.

Ак, часах, теетпӗр, вӑрҫӑ иртӗ,
Лӑпкӑн юхӗ пӗлӗт тӳпере.
Шавлӑ хуласем те, ешӗл хир те
Кӗтсе илӗҫ савӑнӑҫлӑн пире.

Пĕр-пĕрне вара эпир пĕр харăс:
«Хăнана пыратăр-и» тесен,
Урала çитмешкĕн чĕнчĕ вырăс,
Çырлипе тек илĕртрĕ эрмен;

Украина хĕрĕ йăл кулса тек
Илĕртрĕ сар ылтăн хирĕпе.
Эпĕ: — Атăл хумĕсем сăпка пек.
Ярăнтарăп, терĕм, кимĕпе...

В. Долговăн «Тăван çĕршыв юрри», «Радисткăсем» очеркĕсенче те, Л. Агаковăн «Салтак чунĕ», «Старик № 33», «Партизан Мурат», «Вилĕмрен те вăйлăрах» калавĕсемпе повеçĕсенче те, Илпек Микулайĕн «Госпитальте», «Эпир совет салтакĕсем» калавĕсенче те, М. Данилов-Чалдунăн «Фронтра» кĕнекинче те, В. Садайăн «Летчиксем» романĕнче те куç умне мăнаçлăн, паттăррăн, ырă чунлăн тухса тăраççĕ пирĕн çĕнтерӳçĕ-салтаксем.

Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă вăхăтĕнче чăваш поэчĕсем пысăк калăплă произведенисем те сахал мар çырчĕç. Вĕсем П. Хусанкайăн «Таня», А. Эсхелĕн «Ăмăрткайăк», С. Элкерĕн «Вăл вилĕмсĕр» поэмисем. Çак произведенисенчи геройсем пуринчен ытла пурнăç çине интернационалист куçĕпе пăхнипе палăрса тăраççĕ. «Вăл вилĕмсĕр» поэмăри геройсемшĕн, сăмахран, çĕршыв вăл — хăйсем çуралса ӳснĕ Атăл тăрăхĕ е Украина çеç мар, Нева хĕрринчи пĕчĕкçĕ çĕр лаптăкĕ те — Тăван çĕршывах. Кунта вĕсем революци сăпкине, Ленин хулине — хӳтĕлесе паттăр çапăçаççĕ.

П. Хусанкайăн сăвăлласа çырнă «Аптраман тавраш» романĕ — чăваш халăхĕ Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçа чăн-чăн патриотла хутшăннине, совет халăхĕсен никам аркатайми çирĕп пĕрлĕхне кăтартакан анлă произведени. Романти тĕп герой Энтри Аптраман Горький хулинчи Виктор Басов слесарьпе питĕ çывăх туслашнă, иккĕшĕ пĕрле вăрçă çулĕсем тăрăх Берлина çитнĕ. Çĕнтерӳ хыççăн та вĕсем киле пĕрлех таврăнаççĕ. Йывăр вăрçă кунĕсенче туптанса çирĕпленнĕ туслăх чăн-чăн тăванла туслăх пулса тăрать.

Ун юлташĕ Викторах-мĕн,
Кăвак куçлă Басовах.
Пĕр-пĕрне вĕсем пăрахмĕç

Виличчен те, ахăрах.
Шывра путмĕ, тенĕ евĕр,
Вутра çунмĕ, тенĕ пек,
Туслăх çав пурнать пĕртен-пĕр
Пархатарлă ĕмĕтпе:
Хамăр çĕршĕн, çĕнтерӳшĕн,
Чи таса тăванлăхшăн
Пĕрле вăрçăн, пĕрле тӳсĕн,
Вилĕн те кирлех пулсан.

Романра Аптрамансен темиçе несĕлĕн пурнăçне кăтартса панă. Аптраман сăмахăн пĕлтерĕшĕ вулакана паллă: çирĕп кăмăллă, нихçан та пуç усман, чăтăмлă тенине пĕлтерет вăл. Юлашки сыпăкра поэт пĕтĕм чăваш халăхĕ çинчен çак сăмахсене савăнса калать:

Вара ăнлантăм эп — мĕн маншăн,
Кам маншăн вăрçăри чăваш.
Самаев пек калас пулсассăн,
Йăлтах вăл — Аптраман таврăш.

Аптрамансен сăнарĕ урлă эпир чăваш халăхĕн чи лайăх енĕсене — çĕршыва чун-чĕрепе парăннине, çапăçура çирĕп, килте е халăх çинче сăпайлă пулнине куратпăр.

Хаяр вăрçăра фашизма çĕнтерме пире фронтпа тылăн çирĕп пĕрлĕхĕ пулăшрĕ. Çакна К. Турхан хăйĕн «Йăмраллă ял» романĕнче анлăн кăтартса панă. Романри ĕçсем Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăнхи малтанхи мирлĕ строительство çулĕсенче пулса иртеççĕ. Писатель кунта хамăр республикăра пурăнакан чăвашпа тутар колхозникĕсем çав йывăр тапхăрта вăй-хала шеллемесĕр ĕçленине кăтартса парать. Вăрçă хирĕнче те Элекçей чăвашпа Арифулла тутар тăшмана хирĕç пĕрле.çапăçаççĕ. Вĕсен колхозĕсенчен фронта çамрăксем пĕрин хыççăн тепри килсе тăраççĕ. Вăрçăра çапăçакансем вырăнне уй-хирсемпе фермăсенче хĕрарăмсем, стариксем, ачасем ĕçлеме пуçлаççĕ. Вăрçă асапĕ чăвашпа тутар колхозникĕсен ĕçри хастарлăхне чакармасть, пушшех вăйлатса пырать, вĕсен туслăхне çирĕплетсе, патриотизмла туйăмне чи çӳлти пусăма çĕклет. Вăй çитнĕ таран фронта пулăшмалла! — акă мĕнле шухăшпа ĕçлеççĕ кӳршĕллĕ пурăнакан чăвашсемпе тутарсем. Икĕ колхоз, пĕр-пĕринпе калаçса татăлса, пĕрле электростанци тăвать, çырма урлă пысăк кĕпер хывать, каярахпа пĕр пысăк хуçалăха пĕрлешсе ĕçлеме тытăнать.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пĕтнĕренпе ĕнтĕ чылай вăхăт иртрĕ, анчах вăрçăпа мир теми совет литературинче çав-çавах сарăлса пырать. Ку çапла пулмалла та, мĕншĕн тесен иртнĕ вăрçăра совет халăхĕсем хăйсен мораллĕ-политикăлла пахалăхне, нихçан арканми туслăхне вут-çулăм ăшĕнче туптаса çирĕплетрĕç.

Вăрçă хыççăнхи социализмлă мирлĕ строительство çулĕсенче чăваш писателĕсем халăхсен туслăхĕн темине, ленинла наци политики хăватлăн чечекленсе пынине хамăр халăхпа ытти халăхсен, республикăсен пурнăçĕнчи тĕслĕхсем урлă конкретлă та тарăннăн çутатса пачĕç. Ку тĕлĕшпе эпир чи малтанах П. Хусанкайăн «Тăван çĕршыв» поэмине (1948—1956) кăтартма тивĕçлĕ. Поэт çак паха произведенире шкул ачисен пĕр ушкăнне хамăр тăван чăваш çĕрĕ тăрăх çеç мар, мĕнпур тăванла халăх-сен çĕрĕсем тăрăх илсе çӳрет, вĕсен тулăх та пуян, тĕлĕн-мелле тĕрлĕ енлĕ пурнăçĕпе паллаштарать.

Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв,
Аякра-ши, çывăх-ши?
Аякра та, çывăх та,—
Қаласа парам, тăхта,—

акă мĕнле сăмахсемпе пуçлать сăвăç хăйĕн поэмине. Истори тĕслĕхĕсене ăнлантарса, Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне тĕплĕн кăтартса парса, поэт ачасене хамăрăн нумай нациллĕ патшалăхăн чапĕпе илемне сывăххăн ăнлантарма пулăшать.

Чăваш совет прозинче 20-мĕш çулсенчех ĕçлеме тытăннă В. Паймен писатель икĕ пайлă «Кĕпер» роман çырса кăларчĕ. Роман геройĕсем революципе пĕрле ӳсеççĕ, граждан вăрçин вутĕнче пиçĕхсе туптанаççĕ. Автор кунта чăваш çĕрĕнче ĕçлекен ленинец-коммунистсене, революцилле массăсене ертсе пыракансене чĕрĕ çынсем пек ăста кăтартса пама пултарнă.

Çапла, совет халăхĕсен туслăхĕ çинчен сахал мар произведени çырчĕç чăваш писателĕсем. Анчах, калас пулать, çак темăна çутатса кăтартакан произведенисем хушшинче те тепĕр чух ăшăхрах содержаниллĕ, идея тĕлĕшĕнчен тĕрĕс мар шухăшлă сăвăсем е калавсем тĕл пулкалаççĕ-ха. Ансăртран мар чăваш писателĕсен пухăвĕсенче Хветĕр Уяра «Писательпе паллашни» кĕнекере (1972) пичетленнĕ «Ăçта эс, тинĕс?» калавшăн хытă ятларĕç.

Хальхи вăхăтра халăхсене пĕр-пĕринпе тата та çывăх-

рах туслашма тĕрлĕ нацисенчен тăракан производство коллективĕсем чăмăртанса çирĕпленни уйрăмах нумай пулăшать. Чăваш республикинчех, сăмахран, паян кун СССРти вăтăр ытла халăх çыннисем пурăнаççĕ. Пурте вĕсем нумай нациллĕ фабрикăсемпе заводсен, колхозсемпе совхозсен туслă коллективĕнче ĕçлеççĕ. Çавнашкал условисенче СССРти нацисемпе национальноçсен пĕр пĕтĕмле енĕсем — интернационаллă шухăшлав, çынсен пĕр-пĕтĕмлĕ культурăллă сăн-сăпачĕ, мораллĕ традицийĕ малти вырăна çĕкленсе тухать, урăхла каласан, совет халăхĕсен пĕтĕм пурнăçĕ, йăли-йĕрки интернациилленсе пырать.

Çĕршыв коммунизм патнелле çывхарнă май, нациллĕ культурăсем чечекленсе, пĕтĕм Союзпа тĕнче арени çине тухса пынă май пирĕн вăхăтри литературăра интернационализм теми пушшех те вăйлăн çунат сарса аталанать. Чăваш писателĕсем, çĕршыври ытти сăмах ăстисем пекех, хăйсен произведенийĕсенче хамăр вăхăтри çынсен пуян шухăш-кăмăлĕпе чун-чĕрине нумай енлĕн кăтартса параççĕ. Вĕсен геройĕсем — коммунизм тăвакан таса чунлă çынсем. Малта пыракан этемлĕхе пурнăçра мĕн ытларах хумхантарать, пирĕн писательсен произведенийĕсенчи геройсене те паян кун çавă хумхантарать, çавă канăç памасть.

Халăхсем хушшинчи туслăха сарса, çирĕплетсе пырас тĕлĕшпе писательсен произведенийĕсене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарни пысăк вырăн йышăнать. Çак пархатарлă ĕç пĕр халăха тепĕр халăх литературипе, унăн культурипе, пурнăçĕпе, шухăш-кăмăлĕпе çывăхрах паллашма май парать. Куçару ĕçĕ пирĕн республикăра çуллен сарăлса пырать. Сăмахран, юлашки çулсенче вырăс тата ытти халăх писателĕсен — украинецсен, белоруссен, латышсен, эстонсен, тутарсен, пушкăртсен, марисен, аварсен, лаксен, мăкшăсен прозаикĕсемпе поэчĕсен произведенийĕсене сахал мар чăвашла куçартăмăр. Çавăн пекех чăваш писателĕсен кĕнекисене СССРти халăхсемпе социализмлă çĕршывсенчи халăхсен чĕлхисене куçарасси те лайăхлансах пырать.

Чăваш литератури ӳсĕм çулĕпе кунран-кун, çултан-çул сулăмлăн аталанать. Ĕççыннисене интернационалла, патриотла воспитани парас ĕçре вăл чăннипех те хăватлăран хăватлă вăй пулса тăчĕ.

*1974.*

## ЙĂНĂШ МĔНРЕН КИЛНĔ? *

Чăваш совет литератури, пирĕн çĕршыври ытти халăхсен литературисем пекех, çултан-çул вăйă илсе аталанса пырать. Халăхпа тачă пулни, пурнăç чăнлăхне тĕрĕс сăнласа кăтартни, ĕççыннисене коммунизм идеалĕсемшĕн пĕтĕм чуна парса кĕрешме хавхалантарса тăни унăн пĕлтерĕшне калама çук ӳстерет, малалла аталанма чĕрĕ вăй кĕртсе тăрать.

Юлашки çулсенче халăх юратса вулакан кĕнекесем вуншар пичетленсе тухрĕç. Ку вăл пирĕн писательсен идейăлăхĕпе ăсталăхĕ ӳссе пынине, вĕсем пурнăçри пулăмсене парти вĕрентнĕ пек пăхса хаклама пĕлнине лайăх çирĕплетсе парать. Çавăнпа та уйрăм писательсем, хăш чухне тĕрĕс çул-йĕртен пăрăнса, пурнăç чăнлăхне пăсса кăтартма хăтланни питĕ тĕлĕнтерет.

Хветĕр Уяр «Писательпе паллашни» кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Çав кĕнекери «Аçта эс, тинĕс?» калав вара пурнăç чăнлăхне тĕрĕс мар кăтартакан произведенисенчен пĕри пулчĕ. Кун пирки Чăваш область парторганизацийĕн XXXV конференцийĕнче туса панă отчетлă докладра та асăннă: «Хветĕр Уярăн хăшпĕр произведенийĕсем наци хутшăнăвĕсемпе культура аталанăвĕн проблемисене йăнăш ăнлантараççĕ»,— тенĕ унта.

«Аçта эс, тинĕс?» калаври ĕçсем Инçет Хĕвелтухăçĕнче, тайгара, вăтăрмĕш çулсенче пулса иртеççĕ. Унта икĕ тĕп герой: пĕри — чăваш ачи Петĕр, тепри — эвенк ачи, вунтăватă çулти Амикан. Автор пĕлтернĕ тăрăх, Амикан Петĕртен кĕçĕнрех, вĕренме те унран сахал вĕреннĕ, кĕнеке вулама та хальтерех çеç хăнăхса пырать...

«Тайга законĕ хытă»,— тет писатель. Унтан вара калавра вăл акă мĕнле шухăш аталантарать: тайга тĕнчи, тайгари пурнăç йывăр пулсан та, ирĕклĕ тĕнче, ирĕклĕ пурнăç. Тайган «хытă законĕ» çынна обществăри пурнăça, общество йĕркине этемĕн унти шухăш-туйăмне, кăмăлне мантарать, ăна урăхларах, тискер кайăк пек ирĕклĕрех тыткалаттарать.

Автор тайгара çĕтсе çӳрекен ачасем çинчен çырнă, вĕсене пĕр-пĕрине каластарнă, тавлаштарнă, харкаштарнă вăхăтрах калава хăйне те кĕртсе ярать, вара вырăнĕ-вырăнĕпе хăй пирки те çырса каять, хăйĕн шухăшĕсене те тӳрремĕн е ачасен чĕлхи-сăмахĕпе каласа парать.

* Ку статьяна В. Долговпа пĕрле çырнă.

«Ку калаври» ĕçсене,— тет вăл скобкăра,— Амиканпа пĕрле эпĕ хам та хутшăнтăм...»

Автор (унпа пĕрле икĕ пĕчĕк герой та) калав пуçламăшĕнчех, тайгари «ирĕклĕ пурнăçа» мухтас тесе пулас, хулари пурнăçа çакăн пек тиркеме хăтланать:

«Халĕ шухăшлатăн та — мĕн туртнă пире ун чухне тайгана çавăн пекех? Амикана илсен, ăна тăван тавралăх чĕннĕ тейĕпĕр. Мана та, хресчен ачине, ирĕк уйсемпе вăрмансем илĕртнĕ. Ку — пĕрре. Анчах вăл çеç мар-çке унта. Тата мĕн, эппин? Тен, пире хулари акăш-макăш пуянлăх — ăстăн пурнăçĕ (?) сасартăк хăратса (?) пăрахнă? Халиччен шухăшли-шухăшлами çӳренĕ, курăк ӳснĕ пек васкамасăр пурăннă ачасем умĕнче тĕлĕнмелле пуянлăх тĕнчи яр уçăлса кайнă та, мĕнле хăраса (?) ӳкмĕн малтанах. Хулари пурнăç хăвăртлăхĕ те шиклентеретчĕ (?) пире. Пĕрмай васка, сехет тăрăх çӳре, кая юласран сехĕрлен. Паян та лăпăс-лăпăс чуп, ыран та лăпăс-лăпăс. Хăнăхсан пырать пуль те, унччен йăлăхтарать-çке».

Ку вырăна писатель уçăмлă çырман: ăна Петĕр каланă тесе ăнланма та, автор хăй калать тесе ăнланма та пулать, çапах та авторах калать тесе шутлас пулать, мĕншĕн тесен унта Амикан çинчен çеç мар, Петĕрпе иккĕшин çинчен те сăмах пырать («... ачасем умĕнче тĕлĕнмелле пуянлăх тĕнчи яр уçăлса кайнă...» — тет писатель хăйĕнчен каласа, хăй шухăшне палăртса).

Тепĕр çĕрте «хуларан», унăн «ăстăнĕнчен», «цивилизацирен тарма чĕнекен шухăш» акă мĕнле курăнать: «Унăн (Петĕрĕн — Авт.) ирĕке тухса курас килет пĕрре. Никам ан хĕсĕрлетĕр ăна. Ан вĕренттĕр. Пусса ан тăтăр. Выртас тесен, выртттăр вăл, Петĕр, ларас тесен, лартăр. Вара пурте майлашăнĕччĕ. Йĕркене кĕрĕччĕ».

Хуларан тарма, хула ăстăнĕнчен хăтăлма вĕрентнĕ вăхăтрах писатель тепĕр ыйту çине куçать. «Тата: — ыйтма тытăнать вăл,— мĕнле çынсем ытларах çутçанталăка юратаççĕ?» «Пĕр енчен,— ответлет çакна хирĕç автор,— пĕччен юлма тăрăшакансем, пурăнса курнисем... Тепĕр енчен, канакансем».

Хветĕр Уяр кăмăллакан этемсем çутçанталăка, хуларан, ушкăнран тарса, пĕччен юлнине юратаççĕ. Ку, паллах, йăнăш. Тĕрĕссипе, этем çутçанталăка юратасси пуринчен ытла ĕçре пуçланнă, обществăпа çутçанталăк хушшинчи хутшăнусенче аталанса пынă,— вĕсем халĕ те çав йĕрпех пыраççĕ, малашне те çавăн пекех пулĕç.

Çын, общество интересĕпе, халăх интересĕпе пурăнать.

пулсан, нихҫан та «хӑйӗнчен тармасть», хӑйне обществӑра, хӑюлӑхпа пӗрле туять, хӑй камне, мӗн тума пултарнине пӗлет.

Коммунизм тӑвакан совет ҫыннисем хуласенчен, хула культуринчен, ӑстӑнӗнчен ниҫта та тарма шутламаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен ӗҫӗпе тӗнчене улӑштараҫҫӗ, хуласене ҫӗнетеҫҫӗ, хулари, ялти пурнӑҫа пуянлатаҫҫӗ, коммунизмшӑн пыракан ӗҫре, кӗрешӳре, хӑйсем те, вӗсен шухӑш-кӑмӑлӗ те урӑхланса, ҫӗнелсе пырать.

... «Аҫта эс, тинӗс?» калавӑн юлашки сыпӑкӗнче Хветӗр Уяр («хальхи» (!) е тахҫанхи «куҫпа пӑхса») вунтӑватӑ ҫулти Амикана, кӗнеке вулама та хӑнӑхса ҫитеймен ачана, акӑ мӗнле калаҫтарать:

«Ман шухӑшпа, ҫынсем пекех, халӑхсем те тӗрлӗ. Пӗлессе эпӗ, паллах, виҫ-тӑват халӑха ҫеҫ пӗлетӗп, ҫапах ҫапла пулассӑн туйӑнать. Тен, йӑнӑшатӑп эпӗ? Чӑнах йӑнӑшатӑп пулмалла. Пурпӗрех шухӑшлама интереслӗ. Ан тив, гипотеза ҫеҫ пултӑр вӑл, ун пек шухӑшлани... Тӗрӗс пулсан та пырать, тӗрӗс мар пулсан та тем мар...»

«Халӑхсем те тӗрлӗ...» тени — абзац пуҫламӑшӗ. Малалла мӗн-мӗн каланине шута илмесен, паллах, халӑхсем те, ҫынсем пекех, тӗрлӗ пулаҫҫӗ тенинче йӑнӑшши ним те ҫук. Анчах Амикан (автор калаттарнипе) ку шухӑша, вӑл тӗрӗс пулин те, «гипотеза» вырӑнне хурать, унтан вӑл сиенлӗ шухӑшсен картине кӗрсе ӳкет. Вӑл «хӑй тӗллӗн» ҫапла калаҫать-юмахлать: халӑхсенчен — «пӗри, сӑмахран, гени — халӑх, тепри — талант. Тата тепри — айванни, ҫӗр хурчӗ. Халӑх-салтак, халӑх-полководец. Чейисем те, халӑхсем — ӑстаҫӑсем те пур-тӑр. Йӑваш халӑх, пуҫтах халӑх. Хӑй тӗллӗн пурӑнма тӑрӑшаканни. Ыттисен ҫумӗнче хӳтлӗх шыраканни. Халӑх — кил пуҫӗ, халӑх — ун ывӑлӗ...»

Тӗнчери халӑхсенчен хӑшне ҫӗр хурчӗ, йӑваш, хӑшне пуҫтах, куштан халӑх тет-ши писатель? Ун пек халӑх ыттисемпе мӗнле пурӑнать-ши? «Мир», «ирӗклӗх», «туслӑх» тенисене вӑл мӗнле ӑнланать-ши?

Халӑхсене ҫапла пайласа тухни вӑл автор социализмла обществӑри халӑхсен туслӑхӗпе ҫыхӑнӑвӗсене тӗрӗс мар ӑнланни ҫинчен калать. Пӗр халӑха тепринчен мала хума хӑтланни вӑл йӑнӑш шухӑшсем патне илсе пырать.

Л. И. Брежнев юлташ «Социализмлӑ Совет Республикисен Союзӗ 50 ҫул тултарни ҫинчен» тунӑ докладра ҫапла каларӗ: «Совет ҫыннисемшӗн пӗр халӑхсем теприсенчен пахарах пулни ҫинчен калакан каппайчӑк шухӑш-

сем, наци е раса тӗлӗшӗнчен уйрӑмах малта тӑни ҫинчен калакан ӑссӑр идейӑсем пушшех те ют шухӑшсем, ирсӗр шухӑшсем пулса тӑраççӗ. Совет ҫыннисем — интернационалистсем». Ҫакӑ вӑл Коммунистсен партийӗн, совет халӑхӗн, кашни совет ҫыннин позицийӗ, ҫак позицире вӗсем ҫирӗп тӑраççӗ, ӑна паттӑр ӗçпе хӳтӗлеççӗ, ҫирӗплетсе пыраççӗ. Халӑхсен туслӑхӗнче — нихҫан иксӗлми вӑй, никам ҫӗнтерейми хӑват.

... Илемлӗ литература произведенийӗ вулакансем ыйтнине пур тӗлӗшпе те тивӗçтермелле: унӑн содержанийӗ тӗрӗс шухӑшсенчен тӑмалла, форми лайӑх пулмалла. Произведени чӗлхи, кирек хӑш писатель ҫырнӑ пулсан та, чӑн-чӑн литература чӗлхи, халӑх ӑнланакан, юратакан, хисеплекен чӗлхе пултӑр.

«Аҫта эс, тинӗс?» калавра унта та кунта чӗлхе шӑйрӑкӗсем сике-сике тухаççӗ. Чылай ҫӗрте вӗсем шухӑша пӑсаççӗ.

Акӑ темиҫе тӗслӗх. «Амикан» пусмӑрӗнчен» хӑтӑлма хӑтланса, вӑхӑт-вӑхӑт Петӗр «бунтӑ» тӑвать: юриех ҫынсем умӗнче хирӗçлет ӑна. Итлемелле ҫӗртех итлемест. Ун пек «нюанссене» чухламан Амикан кӑн-кан пӑхкаласа илет те ырӑ та, усал та шарламасть. Хӑйӗн пуҫӗнчи шухӑшсенчен те уйрӑлса ӗлкӗреймест пулмалла вӑл».

Кунта мӗнле «ҫынсем» пирки каланӑ? Петӗрпе Амикан тайгара иккӗн кӑна марччӗ-и? Чӑвашсем «вӑхӑт-вӑхӑт» тес вырӑнне «вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе» темеççӗ-и? «Бунтӑ», «нюанссем» пек сӑмахсем кунта чӗлхене ҫӳпӗлемеççӗ-и? Ҫитменнине тата, «бунт» сӑмаха «бунтӑ» тесе ҫырни вырӑс чӗлхинче те, чӑваш чӗлхинче те ҫук. Сӑмахсене ҫавӑн пек кавычкӑсем ӑшне вырӑнлӑ е вырӑнсӑр лартса мӑкӑлтаса ҫырнисем калавра нумай.

«Ку пӗрлехи юлашки каҫне пӗлнӗ пулсан вӗсем! Нихҫан та ырана шанса ан тӑр ҫав, паян каламаллине ӳлӗмрене ан хӑвар, кайран мирлешӗпӗр тесе, ҫынна ан кӳрентер. Паян, ак, халӗ ырӑ ҫын пулма васка. **Ыранхи кун саншӑн килмесен те пултарать...»** — тенӗ тепӗр ҫӗрте.

Ку сӑмахсене питех те хуҫкаласа, авкаласа каланӑ, ҫапах та шухӑшне пытарайман.— «Ыранхи кун саншӑн килмесен те пултарать» (?)

... Тепӗр вырӑнта: **«Этем чунӗ пек пӑтравли те ҫукмӗн тӗнчере.** Унӑн кашни хусканӑвне ҫырса пырсан, такам та хӑраса ӳкӗ», тенӗ.

Ку пуплевсем чӗлхе тӗлӗшпе ҫеç мар, шухӑшӗпе те пӑтранчӑк.

Тата тепĕр-ик «хитре» пуплев: «Сăмах чĕнмесĕр пынă чухне сăмах чĕнменни тарăхтарать. Хăраманнине кăтартни хăратать»; «Вăл çĕре пĕшкĕнчĕ те курăк айĕпе упаленме тытăнчĕ». Курăк айĕпе упаленме» пулать-и — пулмасть-и,— кун пирки калаçса тăма кирлех мар, анчах «хăраманнине кăтартни хăратать» тенĕ пирки сăмах чĕнмесĕр иртсе кайма çук. Вăл — юрăхсăр шухăш. Пирĕн шутпа, пачах урăхла: «хăраманнине кăтартни» çынсен кăмăлне, вăй халне çĕклет, ĕçре йывăрлăхсене çĕнтерме хавасланăха ӳстерет, паттăр кĕрешме хавхалантарать.

Произведенире, паллах, тĕрлĕ геройсем пулма пултараççĕ. Калăпăр, пĕри — ырă герой, тепри — сивлек герой. Ăнланмаллах ĕнтĕ, вĕсен калаçăвĕ те, шухăшĕсем те тĕрлĕ. Сивлек геройăн шухăшĕ тепĕр чухне пачах ют шухăш пулма пултарать. Анчах çакна мĕнле калаттарнă — çаплипех хăварма юрамасть: ăста писатель çав киревсĕр шухăша ытти геройсем каланипе сирсе пăрахать, тăрă шыв çине кăларать. Уяр калавĕнче вара Амикан каланисем мĕнле каланă — çаплипех юлаççĕ.

Произведенире пур çĕрте те, пур сăнарта та, ыйтура та авторăн çирĕп позицийĕ, шухăш-кăмăлĕпе ырă туртăмĕ палăрмалла.

Калаври çитменлĕхсемпе йăнăшсем мĕнрен килнĕ-ха? Вĕсем унăн авторĕ хальхи пурнăç лартакан хăшпĕр ыйтусене, уйрăмах наци ыйтăвне, тĕрĕс ăнланманнинчен, вĕсене пăтраштарнинчен килнĕ.

Аçта эс, тинĕс?« калав вулакана нимĕн чухлĕ те усă памасть, унăн шухăш-кăмăлне çĕклемест, ăстăнне пуянлатмасть. Ăна пĕтĕмĕшпе хаклас пулсан, вăл Хв. Уяр пултарулăхĕнче йăнăш утăм пулса тăрать тес пулать.

*1974.*

## ВУТРА ШĂРАННĂ КĂМĂЛ

Вуншар-çĕршер çулсем, сахал мар ĕмĕрсем шуса иртĕç, анчах миллионшар совет çыннисем Тăван çĕршывăн пынă Аслă вăрçă çулăмĕнче тĕлĕнмелле паттăрлăх кăтартнине пархатарлă совет халăхĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕçчен те ырă кăмăллă этемлĕх нихçан та манас çук. Урса кайнă нимĕç фашисчĕсен тискер кĕтĕвĕсем пирĕн капмар хуласемпе ялсене, вĕçĕ-хĕррисĕр уй-хирсемпе ешĕл вăрмансене ылханлă вăрçă вучĕпе тустарма тытăнсан, пат-

тар совет халăхĕ хăраса ӳкмерĕ. Коммунистсен партийĕ чĕннипе Тăван çĕршыв чысĕпе ирĕклĕхне, никама пăхăнманлăхне хӳтĕлеме пĕр çын пек кар çĕкленчĕ. Сахал мар хура-шур куртăмăр, сахал мар çухату тӳсрĕмĕр эпир пурнăçпа вилĕм хушшинчи хаяр тытăçу кунĕсенче, анчах нимĕнле йывăрлăха та парăнмарăмăр, нимĕнле хĕн-асап умĕнче те чунпа хуçăлса пуçа усмарăмăр. Лайăх хĕçпăшалланнă вăйлă тăшманпа урăм-сурăм харсăррăн çапăçса, совет халăхĕ вăрçă çулăмĕнчен чаплă çĕнтерӳпе тухрĕ. Гитлер вăрă-хурахĕсем хăйсен вилĕмне хăйсен хура йăвинче — Берлинра тупрĕç.

Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех миллионшар совет çыннисемпе пĕрле чăваш писателĕсем те нумайăшĕ фронта тухса кайрĕç. Хаяр тăшманпа паттăррăн çапăçса, М. Данилов-Чалтун, Владимир Бараев, Илья Думилин, Ефрем Еллиев, Кĕçтук Кольцов, Максим Ястран, Андрей Петтоки, Федот Çитта т. ыт. те юнлă çапăçу хирĕнче пуçĕсене хучĕç. Сахал пулнă-и тата вăрçăран таврăнайманнисем хушшинче тăван литературăра çунат сарса ĕлкĕреймен талантлă чăваш çамрăкĕсем?

Калас пулать, аслă тĕрĕслев çулĕсенче пирĕн писательсем нимĕç фашисчĕсене вутпа та, çыравçăн вичкĕн сăмахĕпе те ним хĕрхенмесĕр çунтарчĕç. Вĕсем хушшинче эпир Л. Агаков, А. Алга, В. Алагер, В. Долгов, И. Вашки, Илпек Микулайĕ, М. Кибек, В. Ржанов, М. Сироткин, А. Талвир, И. Тукташ, Уйăп Мишши, Я. Ухсай, Хв. Уяр тата ытти юлташсене те тав туса аса илетпĕр. Вĕсенчен нумайăшĕ, вăрçăн малти линийĕсенче çапăçса, тăшмана кун çути кăтартмасăр тустарнă, çар хаçачĕсенче ĕçленĕ, подразделенисен командирĕсемпе политработникĕсем пулнă, çав хушăрах вăрçă темипе çулăмлă сăвă-поэмăсем, калавсемпе очерксем, фашизма питлекен çивĕч статьясемпе памфлетсем çырма та вăхăт тупнă.

Çав хаяр кунсене аса илсе, Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай каярахпа çапла çырнăччĕ: «Тăван çĕршывăн, халăхăн, пирĕн кашнийĕн пурăнмалла-и, çук-и? — акă мĕнле ыйту тухса тăнăччĕ ун чухне пирĕн ума.— Пурăнмалла! — терĕмĕр эпир. Вара кашниех вăй-халпа пултарулăхăмăр çитнĕ таран пĕтĕм халăх ĕçне кӳлĕнме тăрăшрăмăр. Чăваш поэзийĕн пĕтĕм хĕçпăшалĕ, пĕтĕм жанрсем — поэма, лирикăллă монолог, халăх ячĕпе унăн вăрçăри ывăлĕ-хĕрĕсем патне янă наказ-çырусемпе салтаксен тупа туса çырнă явапĕсем, васкасарах хайланă сăвă-юрăсем — çаксем пурте çĕнтерӳшĕн ĕçлерĕç».

Поэтăн çак кĕске, питĕ тĕрĕс те вырăнлă каланă сăмахĕсем çумне, тен, урăх нимĕнех те хушмалла мар пулĕ. Çапла, пирĕн поэзи, пирĕн пĕтĕм чăваш совет литератури, çĕршывăмăр çине ылханлă фашистсем юнлă аллине çĕклесенех, пĕтĕм халăх ĕçне кӳлĕнчĕç, çĕнтерӳшĕн ĕçлерĕç. Аса илер-ха, эппин, Чăваш халăх поэчĕ Н. И. Полорусов-Шелепи вăрçă пуçламăшĕнчех çырнă «Чĕнетĕп», «Тăршшĕ икĕ метр, урлăшĕ пĕрре — территори кирлĕ Гитлере», «Паттăр летчик юрри» сăвăсене е чăваш акынĕн Кашкăр Микулин «Тĕп пултăр фашист!» сăввине. Вĕсенче хамăр çĕршыва, партипе халăха, аслă Ленин уçнă çаплă саманана чи вĕри юратупа юратни, çав вăхăтрах сĕмсĕр тăшмана вилесле хаяр курайманни кашни сăмахĕнчех витерӳллĕн курăнса тăрать.

Талантлă чăваш поэчĕ Иван Ивник нимĕç захватчикесене хирĕç алла хĕçпăшал тытса тухайманрĕ, вăрçă пуçланнă хыççăнах ӳпке чирĕпе сакăр уйăх вырăн çинчен тăрайми чирлесе выртнă хыççăн, 1942 çулхи майăн 28-мĕшĕнче, вăхăтсăр çĕре кĕчĕ. Анчах вĕри чунлă сăвăçшăн унăн çулăмлă сăввисем хăйсен ĕçне турĕç, ирсĕр тăшмана аça-çиçĕмле çунтарса тавăрчĕç.

Ак каллех килсе капланчĕ
Урнă йытă анăçран;
Шăммисем çеç выртса юлĕç
Урнă йытă фашистран,—

хăюллăн шантарса калать Ивник хăйĕн 1941 çулта çырнă «Халь те, малашне те...» ятлă сăввинче. Мĕн тери вăйлă, çивĕч, хаяр тата поэтăн халăх сăмахлăхĕнчи калама çук витерӳллĕ тĕслĕхсемпе питĕ меллĕ те вырăнлă усă курса çырнă «Ылхан» поэмин сыпăкĕ! Кунта кашни сăмах, кашни йĕрке фашист йăх-яхне вичкĕн хĕç пек ваклать:

Ылхан сана, пин хут ылхан
Аркатнăшăн хуласене,
Çак çут тĕнче нисҫта, нихçан
Сана ан илтĕр ытамне.

Çĕр çĕклейми ылхан сана
Пур ĕмĕр-ĕмĕр тăршшипе!
Аça кикен те тăпруна
Шăтса ан палăрттăр санне! (1942 ç.)

Фашист йăх-яхĕ пирĕн Тăван çĕршыв çине хура пĕлĕт пек капланса килсен, чи малтанхи уйăхсенчех, чăваш писателĕсем тăшмана ним хĕрхенӳсĕр питлекен халăх чун-чĕринчи патриотизмла туйăма çивĕччĕн палăртакан витĕмлĕ произведенисем çырчĕç. Поэзире илсен, çав вăхăтра халăх патне çитнĕ хĕрӳллĕ сăвăсем хушшинче С. Элкерĕн «Юншăн юн», П. Хусанкайăн «Тăван Мускавшăн», Ухсай Яккăвĕн «Винтовка», А. Алган «Чăваш ачине», И. Тукташăн «Асату», А. Эсхелĕн «Халăх хаярлăхĕ», В. Бараевăн «Тупа тунă чух», М. Ястранăн «Вилнĕ тусăма» сăввисем уйрăмах асра юлаççĕ. Вĕсем чăваш халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕсене тăшманпа юмахри Улăп-паттăр пек харсăррăн кĕрешме чĕнчĕç, çапăçу хирĕнче яланах паттăр та хăюллă пулма хавхалантарса тăчĕç.

Петĕр Хусанкайăн фронтра çырнă лирикăллă сăввисенче героикăллă хавхалану хăватлăн тапса тăрать. Хаяр вăрçă вут-çулăмĕнче алла винтовка тытса кĕрешнĕ поэт çапăçусенче темиçе хут аманнă, госпитальсенче сывалса тухнă хыççăн каллех фронта таврăннă. «Хăюллăн малалла!», «Тăван çĕршывшăн, ирĕклĕхшĕн, чысшăн», «Фронтпа тыл пĕр пулсан—çĕнтереймĕ тăшман», «Сӳтĕк Гитлер ухмаххин сӳтĕлен суя çăмхи», «Геббельс е кукша Иван—вуласан пĕлен аван» — çак сăвăсемпе сăвăласа çырнă сатирăллă фельетонсен ячĕсемех поэтăн чун-чĕринче патриотла туйăм мĕн тери вăйлă пулнине, вăл Тăван çĕршыва аслă совет халăхне чи хĕрӳ юратупа юратнине уççăн кăтартса параççĕ. П. Хусанкайăн çав вăхăтри поэзийĕнче Совет çĕршывĕн сăнарĕ тăван республикăпа, унăн ĕлĕкхи тата хальхи кунçулĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Чăваш çĕршывĕ, аслă Атăл, тăван-хурăнташсемпе çывăх çынсем, чăваш чĕлхи — çаксем поэтшăн нихçан асран каймалла мар пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăнă. Çав хушăрах П. Хусанкай совет çĕршывĕнчи халăхсен иксĕлми çирĕп туслăхĕ, кĕрешӳри тăванлăхĕ çинчен те чуна тытса илекен вичкĕн сăвăсем кĕвĕлет.

Нева хаяррăн хумханать...
Ан ур, тăшман, ан антăх:
Памастпăр ирĕк хулана
Нихçан та! Никама та!

Хăватлă броневик çинче,
Çĕнтерĕве пиллепĕн,

Тăрать вăл хăйĕн хулинче —
Алне çĕкленĕ Ленин;

Тăрать çĕршывăн чунĕ пек,
Вăл бронза мар, вăл чĕрĕ;
Тăрать йыхрав пек, ĕмĕрех
Çав вырăнта вăл тăрĕ.

Акă мĕнле хумханса çырать поэт Аслă Ленин хули пысăк хăрушлăха кĕрсе ӳкнĕ вăхăтра хăйĕн «Памастпăр ирĕк хулана!» сăввинче.

Петĕр Хусанкайăн вăрçă вăхăтĕнчи лирикинче эпир совет салтакĕсем Тăван çĕршывшăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешнине витĕр курса тăратпăр. Сăвăсенчи кашни геройăн пĕр ĕмĕт, пĕр шухăш, пĕр çутă тĕллев: вăл — тăшмана хăвăртрах çĕнтерсе, совет халăхĕн телейлĕ пурнăçне каялла тавăрасси.

Вăрçă çулĕсенче Ухсай Яккăвĕ нумай ĕçлерĕ. 1943 çулта пичетленсе тухнă «Çапăçу хирĕнче» ятлă сăвă кĕнекине поэт, тĕпрен илсен, фронтра çырнă сăввисене, балладисемпе лирикăллă çырăвĕсене кĕртнĕ. Фашизма хирĕç пыракан кĕрешӳ гуманизмлă та тĕрĕс кĕрешӳ пулнине çав произведенисенче тарăннăн уçса панă. Ухсай сăнласа кăтартнă фронтовик тăшмана хирĕç алла пăшал тытса çапăçакан ахаль çын кăна мар. Вăл пирĕн ума аслă çĕршывăн хуçи пек, Тăван çĕршывна халăх шăпи çинчен канăçсăррăн шухăшлакан, тăван çĕр илемне пĕтĕм чунĕ-юнĕпе туйса сăнлакан патриот пулса тухса тăрать. Çавăнпа та поэтăн лирикинче çутçанталăк хăй те совет салтакĕпе пĕрле тăшмана хирĕç тăрать. «Çумăр» ятлă сăввинче Ухсай, халăх поэзийĕнчи традиципе усă курса, çурхи шалкам çумăра çапла калать:

Чир кайтăр! Вилнĕ нимĕç
мурĕн
Шăрши çухалтăр çĕр çинчен!
Çĕртĕр тăшман вилли, çĕр
чирĕ!
Çу, çумăр, чашкăр! Вăрçă хирĕ
Тасалтăр, уçăлтăр тĕнче!

Тĕрĕслĕхшĕн çапăçакан Совет салтакĕн сăнарĕ урлă поэт нимĕç вăрă-хурахĕсем нихçан пĕлме пултарайман чăн-чăн вăйлă та илемлĕ туйăмсене уçса парать:

Шинеллĕ тусăрсем, тăнлатпăр
Хурланнă йывăр сассăра.
Пăшалсене патвар тытатпăр
Тĕреклĕ, ҫирĕп алăра.

Хуллен-хуллен эсир иртетĕр,
Ĕшеннĕ-мĕн ҫунатăрсем.
Чуна татса ҫӳлте йĕретĕр
Эсир, мăнтарăн тăрнасем!
(«Тăрнасем», 1942 ҫ.)

Ухсай поэзийĕнче вăрҫăри совет салтакĕ — ҫапăҫу вут-ҫулăмĕнче те ырă чунлă, ăслă, пултаруллă этем. Шăпах ҫавăн пек куратпăр эпир «Шăпчăк» поэмăри Александр Туринге лейтенанта. Йывăр тытăҫу вăхăтĕнче фашистсен «тигрне» ҫĕнтернĕ танкист, вăрҫăччен консерватори студенчĕ пулнăскер, вăл ҫапăҫу лăпланнă самантсенче киленсех шăпчăк юрланине тăнлать, «Хăюллă шанчăк ҫинчен» юрă кĕвĕлет.

Поэтăн 1944 ҫулта ҫырнă «Шăллăм» поэминче пирĕн ума Ельня хули патĕнче пуҫ хунă салтакăн лирикăллă сăнарĕ тухса тăрать. Салтак вăрҫăра вилнĕ шăллĕне тĕлĕкре курать. Поэма А. Твардовскин «Я убит подо Ржевом» сăввипе пĕр майлăрах. Калас пулать, Я. Ухсай пултарулăхĕ нумай енчен А. Твардовский поэзийĕпе пĕр сасăллăн янăрать. Ку вăл поэт ытларах чухне пирĕн пурнăҫăн эпикăллă темисем патнелле туртăннинчен, вулакана чи ҫывăх ҫыннипе калаҫнă пек чĕререн, ирĕклĕн калаҫма пĕлнинчен, халăх пултарулăхĕнчи поэтикăллă мелсемпе нумай енлĕн усă курнинчен килет.

Ухсай Яккăвĕ вăрҫă вăхăтĕнче ҫырнă сăвăсемпе поэмăсен ярăмĕ «Влтава шывĕ хĕрринче» (1945 ҫ.) ятлă лирикăллă хроникăпа вĕҫленет. Поэт кунта хăйĕн лирикăллă геройне чех хĕрĕпе калаҫтарать, совет салтакĕшĕн Тăван ҫĕршыв пурнăҫра нимрен те пахи, нимрен те хакли пулнине кăмăла хумхантармалла ăшшăн ҫырса кăтартать.

Александр Алга поэт 1939 ҫултах Совет Ҫарĕн ретне тăчĕ. Аслă Отечественнăй вăрҫăра чи малтанхи кунран тытăнса вăрҫă ҫĕнтерӳпе вĕҫлениччченех фашистла захватчиксене хирĕҫ ҫапăҫрĕ. Ҫав ҫулсенче вăл хăйĕн чылай сăввисене окопсенче е йывăр ҫапăҫусем хыҫҫăн каннă секетсенче ҫырнă. Вăрҫă вут-ҫулăмĕнче пайтах ҫунса курнă поэтăмăр ҫак тапхăрта совет салтакĕсен паттăр чун-чĕри-

не уҫса паракан сăвăсем нумай ҫырчĕ, вĕсенче вăрҫăри ĕҫсен хаяр та хурлăхлă енĕсене сăнласа кăтартма та шикленсе тăмарĕ. Анчах Алга поэзийĕнчи чи драмăллă картинăсенче те пессимизмла сăрсем ҫук, мĕншĕн тесен ҫав сăвăсенче совет халăхĕ тăшмана пурпĕрех ҫĕнтерессе поэт ҫирĕп ĕненни уҫҫăн палăрса тăрать.

Тен, куҫăм хупăнĕ... Анчах
унччен
Асапшăн, тертшĕн тавăрасчĕ,
Усал тăшманăн хăрнă ӳтĕнчен
Пӳрсем сăрхăннине курасчĕ.
Ан тив, вăл хапсăннă ҫăкăр-тăвар,
Тăхлан пулса пырне-и лартăр!
Ан тив, вăл чĕртнĕ ҫулăмпа
кăвар,
Пуҫне пулса, хăйне ҫунтартăр!
Эппин, пĕр хыпнă ҫулăм,
ялкăш, ҫун!
Хĕрӳллĕ пулччăр тӳсĕмлĕ
кунсемĕр.
Эппин, вилĕме — вилĕм, юна —
юн!
Хĕҫе хĕҫпе хуҫар, атьсемĕр! —

тет чунĕнче вĕри курайманлăх тулса капланнă поэт «Аманнисене курсан» сăввинче. (1941 ҫ.)

А. Алга сăввисенче ҫапăҫу хирĕнчи совет ҫыннин патриотла шухăш-туйăмĕпе кăмăлĕ таранннăн та витĕр курăнса тăрать. Ун лирикăллă геройĕ ҫĕршывăн хĕвеланăҫ чиккинчен пуҫласа Атăл таран, унтан Атăл хĕрринчен тытăнса Берлина ҫити тăсăлнă вăрҫă ҫулĕ ҫинче пиҫĕхсе ҫирĕпленнĕ. Тăшмана пурпĕр аркатса тăкасса шанасси ун патне йывăр тĕрĕслевсем витĕр пырса ҫитет.

Вăрҫăн юлашки уйăхĕсем, ҫывхарса килекен ҫĕнтерӳ А. Алга поэзине ҫĕнĕ сăрсем кĕртеҫҫĕ. Унăн тертлĕ те хĕн-хурлă вăрҫă ҫулĕпе вăрах утса курнă геройсем часчасах ĕнтĕ хăйсем ҫывăх вăхăтра мирлĕ ĕҫе тытăнасси ҫинчен шухăша каяҫҫĕ:

Вăхăт — ӳстермешкĕн сарă тырă
Хир тулли, куҫ виҫеймн;
Кĕрекемĕр пултăрччĕ пит ырă,
Тултăрччĕ ĕҫчен пӳлми;

Вăхăт — Атăл хĕррине ансассăн,
Юратса юрра яма;
Вăхăт, ырнă чунăмçăм, хавассăн
Ёçлеме те выляма...

*«Дунай хумĕсем», 1945 ç.*

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче чăваш поэчĕ Уйăп Мишши этемлĕхе вилĕмпе хуйхă-суйхă кăна кӳрекен фашизма хирĕç кĕрешме чĕнсе, хĕрӳллĕ сăвăсем нумай çырчĕ. Унăн 1943 çулта «Малалла, хĕвеланăçнелле!» ятлă сăвă кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Чăваш халăхĕ поэтăн вичкĕн сатирăллă сăввисене уйрăмах хапăлласа йышăнчĕ. Вĕсенче вăл гитлеровецсен пĕтĕм тĕнчипе пуç пулса тăмалли ăссăр планĕсене хăюллăн питлерĕ, тăрă шыв çине кăларчĕ. Уйăп Мишши çав сăвăсенче халăх творчествинчи сăнарсемпе тата салтаксен кулăшĕпе сарлакан та ăста усă курма пĕлнĕ. Сăмах май каласан, чăвашсен сатирăллă поэзийĕ вăрçă çулĕсенче чăннипех те витĕмлĕ хĕçпăшал пулса тăчĕ. Нумай-нумай сăвăллă фельетонсем, памфлетсем, юптарусем, эпиграммăсемпе такмаксем сĕмсĕр фашистсен тискер сăн-сăпатне тĕрлĕ енчен уçса пама пулăшрĕç, вĕсене чи çивĕч сатира вучĕпе хĕртсе çунтарчĕç (Н. Шелепи «Тăршшĕ ик метр, урлăшĕ пĕрре — территори кирлĕ Гитлере», халăх юмахçи Кашкар Микули çырнă «Фюрер хӳри татăлнă» т. ыт. те).

Пĕтĕм совет халăхĕ юратнă Тăван çĕршывăмăр ячĕпе аслă вăрçа кĕнĕ çулсенче чăваш литературипе искусствинче масăллă тата лирикăллă юрăсен пĕлтерĕшĕ уйрăмах ӳсрĕ. Çав вăхăтри юрăçă-поэтсем хушшинче Илья Тукташ пултарулăхĕ уйрăмах паллă вырăн йышăнать. Поэтăн кашни сăвви-юрриех вĕсенче совет çыннин патриотла туйăмĕ хăватлăн тапса тăнипе кăмăла хускатса илĕртет, чуна уçса ярать. Поэт çав сăвăсенче асран тухми тăван вырăнсене тарăн шухăша кайса аса илет, савнă çĕршывшăн, халăха ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç туса панă совет саманишĕн чăн-чăн паттăрла кĕрешме чĕнет («Асату», «Çĕр-паттăр», «Амăрткайăк» т. ыт. те).

Тукташăн пултарулăхĕпе ăсталахĕ чăваш литературинче вăрçă умĕнхи çулсенчех палăрса çитрĕ. Унăн калама çук илемлĕ те çепĕç лирики пурнăç çине çутă чуппа, мал ĕмĕтлĕн пăхма вĕрентет. Пурнăçăн нихçан иксĕлми хăватне, çĕнтерĕве пĕтĕм чун хавалĕпе ĕненсе тăнине поэт вăрçă темипе çырнă «Лантăш» (1942 ç.), «Сывлăм» (1944 ç.), «Пурнăçпа юрату» (1944 ç.), «Хĕç» (1945 ç.) тата ытти нумай сăввисенче курма пулать.

Шăратнă кĕмĕл пек çут пĕлĕте
Вĕл-вĕл вĕçет кăвак çилхеллĕ
тĕтĕм.
Хумхатрĕ вăл ăшри ыр ĕмĕте,
Салтакăн кăмăлне лăпкарĕ питĕ.

Ытла та ырă эс, тăван кĕтес!
Чуна уçать сан Çĕн Кунун хĕвелĕ.
Тем чухлĕ йывăрлăх тӳссессĕн те,
Тăван çĕршывра çеç эпир телейлĕ,—

пĕтĕм чĕререн калать поэт вăрçă вĕçленес умĕн хăйĕн кĕске кăна çырнă «Тĕтĕм» ятлă сăввинче (1945 ç.).

Фашистла Германие аркатса тăкас умĕн Илья Тукташ «Исĕм çырли пахчи» ятлă сăвă ярăмĕ хатĕрлерĕ. Çав тĕлĕнмелле ăста çырнă сăвăсем çамрăк ăрăва Тăван çĕршыв, паттăр та ĕçчен совет халăхĕ ячĕпе çичĕ ют тăшмансемпе аçа-çисĕм пек хаяррăн кĕрешме, паттăрлăх кăтартма чĕнеççĕ. Асăннă ярăма кĕнĕ сăвăсем содержанийĕпе, чĕлхе илемĕпе çеç мар, ритм енчен те пуян: вĕсене кашнинех хăйне уйрăм виçепе çырнă, халăх юрри сăввисенче илемлĕ сăмах çаврăнăшĕсемпе питĕ пĕлсе те меллĕн усă курнă май, шухăш-кăмăла хускатмалла тăраннăн уçса панă («Тыткăнри юрă», «Вăрман кашлать», «Исĕм çырли пахчинче», «Салтаксем ирteççĕ» т. ыт. те).

Тукташăн вăрçă çулĕсенчи поэзине çĕнĕ жанр — прозăлла сăвăсем («Лантăш», «Шăпчăк», «Савăнăç хĕвелĕ», «Кăнтăр хĕрĕсем», «Аманнă салтак» т. ыт. те) хутшăнаççĕ. Вĕсенче поэт совет салтакĕсен вăрçăри паттăр ĕçĕсене сăнласа кăтартать кăна мар, вăл хăй те, пур çĕрте те «лантăшсем çеçке çурччăр, шăпчăксем юрă шăратчăр», çĕнтерӳ хăвăртрах килтĕр тесе, çапăçу хирне кайнă çутă чунлă салтак пек куç умне тухса тăрать. Тукташăн прозăлла сăввисем çĕкленӳллĕ, вĕсем финалти рефренсемпе, шухăша витĕмлĕн уçса паракан илемлĕ сăмах çаврăнăшĕсемпе пуян.

В. Долговăн прозăллă сăввисене те асăнмасăр иртме çук. Унăн «Тăван çĕршыв» ятлă лирикăллă монологĕ, сăмахран, çапăçури чăваш салтакĕ Тăван çĕршывшăн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕррине, ăна вăл нихçан та манма пултараяс çуккине сăнарласа парать:

«Хĕрелсе, шуралса çутă ир килет-и, колхоз каччи-хĕрĕсем, çĕнĕ юрă юрласа, чечек çырне утаççĕ-и, сарă

ыраш хушшинче кӗлте ҫыхаҫҫӗ-и, ҫурласене ҫӗклесе яла таврӑнаҫҫӗ-и...

Тӑван ҫӗршыв, сана аса илетӗп,— сана асра тытатӑп!» т. ыт. те.

Писателӗн «Ӗмӗт» ятлӑ прозӑлла сӑввине те хумханмасӑр вулама ҫук. Унти лирикӑллӑ герой ҫапӑҫури хӑйӗн тусне каланӑ кашни сӑмах чуна пырса тивет, ҫутӑ ӗмӗт вӑратать:

«Тӑван ҫӗршывшӑн кӗрешӗпӗр, вилес пек ҫапӑҫӑпӑр. Анчах, тусӑм, вилмӗпӗр. Тӑван ҫӗршывӑн чечекӗсем хушшинче вӑтӑр ҫул, хӗрӗх ҫул пурӑнӑпӑр. Ҫакӑн пек ман ӗмӗт!»

Иртнӗ вӑрҫӑ ҫулӗсенче чӑваш поэзийӗнче поэма жанрӗ те ҫӗнӗлле вӑй илсе чечекленчӗ. Вӗсем хушшинче Петӗр Хусанкайӑн «Таня» поэми поэт творчествишӗн ҫеҫ мар, пӗтӗм чӑваш совет литературишӗн те паллӑ утӑм пулчӗ. Ахальтен мар ӗнтӗ ҫак нихҫан кивелми чаплӑ произведение пирӗн халӑх ҫав тери юратса та хумханса вулать.

Паттӑр партизанка Зоя Космодемьянская ҫинчен ҫырнӑ «Таня» поэма (1942 ҫ., апрель) шухӑш тарӑнлӑхӗпе те, ритмикипе те, чӗлхе пуянлӑхӗпе те вулакан чун-чӗрине тытса илет. Халӑх каларӑш, кунта кашни сӑмахӗ хӑй пӗр ылтӑн.

Поэмӑра вырӑс хӑйӗн паттӑрлӑхӗ мӗнле социаллӑпсихологиллӗ факторсенчен килнине тӗп вырӑна хунӑ. Поэт героиньӑн пурнӑҫ ҫулне сӑнласа кӑтартать, ҫемйи ҫинчен, ӑна вӗрентсе ӳстернӗ шкулпа комсомол ҫинчен, Таня ӑс-хакӑлӗпе чун-чӗрине ҫирӗпленсе ҫитме мӗн-мӗн пулӑшни ҫинчен хумханса каласа парать. Вырӑс хӗрӗн биографийӗнчи эпизодсем авторӑн тӗлӗнмелле ӑста ҫырнӑ лирикӑллӑ отступленийӗсемпе, вырӑс ҫутҫанталӑкӗн картинисемпе ылмашӑнса пыраҫҫӗ. Ҫаксем пурте Таньӑна вӑл пӗтӗм чунӗ-юнӗпе вырӑс ҫӗрӗпе нихҫан уйӑрлми тачӑ ҫыхӑннине кӑтартма май параҫҫӗ.

Героиня паттӑрлӑхне сӑнланӑ май, П. Хусанкай типӗ фактсене «чун кӗртнипе» кӑна ҫырлахмасть, халӑх пӗлекен документлӑ материалсем ҫинчен те тепӗр хут каласа кайма тӑрӑшмасть. Вӑл вулакана вӑрҫӑри лару-тӑрӑва, Таньӑн шухӑш-туйӑмӗсене, унӑн кӑмӑлӗпе чун-чӗре хӑвачӗн ҫирӗплӗхне ӗненмелле те тарӑннӑн уҫса парать.

Поэмӑра чӑн пурнӑҫри ӗҫсене чӑваш халӑх легендинчи Хӗвел хӗрӗ — Хӗвелпи паттӑрлӑхӗпе сӑнарлӑн ҫыхӑнтарса танлаштарнӑ. Хӗвелпи тӗтӗм пуҫлӑхӗпе — усал

Вупăрпа вăрçма каять, ăна ухăпа тирсе вĕлерет. Хĕвелпи пекех, Таня та хăйне пăхса ӳстернĕ тăванран та тăван амăшĕшĕн — юратнă çĕршывăмăршăн кĕрешме юнлă вăрçă хирне тухса каять.

Вăрçă пынă çулсенчех Петĕр Хусанкай хăйĕн «Аптраман тавраш» ятлă поэмине çырма пуçларĕ. Унăн уйрăм сыпăкĕсемпе чăваш вулаканĕсем çавăн чухнех «Илемлĕ литература» альманахра паллашма пултарчĕç. Каярахпа поэт ăна нумай çĕнетрĕ, юсарĕ, анлăлатрĕ, вара вăл сăвăллă роман пулса кайрĕ.

Романра Аптрамансен темиçе ăрури йăхне сăнласа кăтартнă. Вĕсем пурте куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ: пурăнаççĕ, нушине те сахал мар тӳсеççĕ, кĕрешеççĕ, савăнаççĕ, çĕнтереççĕ. Нихăçан та ниçта та хурланса-хуйхăрса пурăнмалла мар, яланах хăюллă, харсăр, хаваслă пулмалла — çак тĕп шухăш палăрса тăрать Петĕр Хусанкайăн романĕнче. Аптраман таврашĕсем чăваш халăхĕн чун-чĕрине, вăл нихçан та, темле йывăрлăхра та пуç усманнине палăртса тăраççĕ.

«Эпир вĕт Аптраман-тавраш! Салтак парса, вăрçă вăрçсах хунанă пирĕн хурăнташ»,— тесе çырать романти ватă Аптраман, хăйĕн фронтра çапăçакан ывăлне Энтрие хавхалантарса.

Совет халăхĕн çавăн пек харсăр ывăлĕ-хĕрĕсем пурте пĕр кăмăллăн кар тăрса çĕкленнипе кăна эпир хаяр тăшмана вирлĕн çапса аркатма пултарнине поэт чăнахах та уççăн та ĕнентерӳллĕ кăтартса пама пĕлнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи чăваш поэзийĕнче тăван Совет çĕршывĕ ячĕпе паттăр ĕç тума хăйĕн ывăлĕ-хĕрĕсече вăрçа ăсатнă амăшĕн сăнарĕ те пысăк вырăн йышăнать. Çак сăнар уйрăмах Уйăп Мишши çырнă «Салтак амăшĕ» поэмăра витĕмлĕ, нумай енлĕ, вулакана çав тери хумхантармалла пулса тухнă. Кунта лирика та, героикăлла романтика та вăйлă палăрать. «Салтак амăшĕ» поэмăра поэт фронтри эпизодсене тылри пурнăç картинисемпе питĕ меллĕн çыхăнтарма пĕлнĕ. Ватă амăшĕ хăйĕн пĕртен-пĕр ывăлне, Куçука, вăрçă хирне ăсатать. 1918 çулта нимĕç интервенчĕсем вĕлернĕ ашшĕшĕн, пиншер амăшĕсемпе ачисен куççулĕшĕн тăшмана хаяррăн тавăрма пиллет. Амăшĕн патриотла шухăш-туйăмĕ унăн çыравĕсемпе монологĕсенчен те уççăн курăнать. Акă кĕçех тан мар çапăçура Куçук паттăррăн пуç хуни çинчен сирсе сирĕлми хурлăхлă хыпар килсе çитет. Ватă хĕрарăмăн пысăк хуйхине поэт чăваш халăх сăмахлăхĕнчи хӳхлевсем манер-

лёрех çырса кăтартнă. Çавна май вăл вырăнсем сирсе сирĕлми йывăр хуйхă пек те, хаяр тарăху майлă та янăраççĕ.

Салтак амăшĕ патне вилнĕ ывăлĕн фронтри тусĕсем янă çыру çепĕç те ăшă лирикăпа пуян. Вĕсем, тăван амăшĕсене вăрçă вăхăтĕнче çухатнăскерсем, Куçук амăшне хăйсен иккĕмĕш амăшĕ пулма ыйтаççĕ. Çынсемпе, халăхпа пĕрле пулни хĕрарăмăн асаплă хуйхине тамалтарать. Вăл каллех ĕнтĕ пурнăç çине мал ĕмĕтлĕн пăхма пуçлать, çапăçура пĕтнĕ ывăлĕн тусĕсене хал çитнĕ таран пулăшма тăрăшать. Поэмăри героиньăна нимĕнле хуйхă-суйхă та, йывăр çухатусем те хуçмаççĕ. Вăл чăн-чăн совет хĕрарăмĕн паттăр чун-чĕрине, унăн ырă та таса кăмăлне, патриотла туйăмĕсене тарăннăн уçса паракан сăнар пулса тухнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă паттăрĕсем çинчен А. Эсхель «Ăмăрткайăк», (1943 ç.), Чăваш халăх поэчĕ С. В. Элкер «Вăл вилĕмсĕр» (1945 ç.), С. Шавли «Зоя» (1945 ç.) поэмăсем çырчĕç.

«Ăмăрткайăк» поэмăра чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕн, Совет Союзĕн Геройĕн Федот Орлов летчикăн пурнăçĕпе çапăçури ĕçĕсене ăста сăнласа кăтартнă. «Вăл вилĕмсĕр» поэма Ленинград патĕнче çапăçура пуç хунă чăваш лейтенанчĕн Иван Смирновăн паттăр сăнарне куç умне илсе тухать. А. Эсхельпе С. Элкер асăннă произведенисенче тĕп геройĕсен характерĕсене уçса параççĕ çеç мар, вĕсен чи ырă енĕсем, патриотла шухăш-туйăмĕсем пĕтĕм совет халăхĕшĕн те типлă пулнине ĕнентерсе кăтартаççĕ. С. Шавлин чăваш хĕрĕ-радистка Зоя Семенова паттăрлăхне халалласа çырнă «Зоя» поэми те тăшман тылĕнче хăюллăн çапăçса вилнĕ героиньăн сăнарне кăмăла тытса илмелле ăшшăн уçса пама пĕлнипе асра юлать. Çавăн пекех поэтăн вăрçă темипе çырнă «Киев пионерĕ», «Матур Якур» поэмисемпе «Вырăс салтакĕ» балладине те хумханмасăр вулама çук.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чăваш поэзийĕ çĕнĕ шая çĕкленет. Çак тапхăрта çырнă чи лайăх сăвăсемпе поэмăсем чăваш литературин тĕп фондне яланлăхах кĕрсе юлаççĕ. Кунпа пĕрлех чăваш прозин вăрçă çулĕсенчи диапазонĕ сарлака пулнине те палăртмасăр хăварма çук. Вăл пирĕн халăхпа пуринчен ытла илемлĕ публицистика чĕлхипе хĕрӳллĕн калаçрĕ. Çак енĕпе уйрăмах Л. Агаков, В. Алагер, В. Долгов, Н. Илпек, А. Талвир, И. Тукташ, С. Элкер, А. Эсхель писательсем

тимлĕ еçлерĕç. Вĕсен публицистикăллă статйисем чăваш халăхне совет салтакĕсен çапăçу хирĕнчи паттăрлăхĕ çинчен, вĕсем Тăван çĕршыва пĕтĕм чун хавалĕпе парăнни çинчен каласа пачĕç, кунпа пĕрлех чи ирсĕр те сĕмсĕр Гитлер эшкерне хĕрӳллĕн те хаяррăн питлерĕç.

Çав вăхăтри илемлĕ публицистикăн чи лайăх произведенийĕсен шутне С. Элкер, И. Тукташ, А. Эсхель т. ыт. те пĕрле çырса хатĕрленĕ «Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çырăва» та (1943) кĕртмелле. Ăна чăваш чĕлхинчи илемлетмелли мелсемпе, унăн синтакксисла стройĕпе тата сăмах пуянлăхĕпе çав тери пĕлсе те ăста усă курса çырнă.

Акă мĕнле пуçланать вăл:

## «ПИРĔН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛĂМĂРСЕМ!»

Хĕрлĕ Çарăн хастар воинĕсем, Улăп-паттăрăн тивĕçлĕ йăхĕсем, халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ Атăл пăлхавçисен вĕри юнлă ăрăвĕсем, ылханлă тăшмана хирĕç кĕреш юман пек çирĕп тăрса пире хӳтĕлекен паттăрсем!

Сире пĕтĕм чăваш халăхĕ чĕререн хĕрӳллĕ салам ярать!

Пирĕн таса Тăван çĕршыва ултавлăн килсе тапăннă нимĕç тискер кайăкĕсене пуçĕпех çапса аркатма, совет çĕрĕн аслă талккишĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех тасатса çитерме сире, пирĕн паттăр ывăлăмăрсем, ырă сывлăх сунатпăр: хамăрăн тăван çĕр, сирĕн чĕрĕрсене хăйĕн хăватлă сĕткенне парса, иксĕлми вăй кĕрттĕр! Сире çапăçу хирĕнче паттăр та чаплă ĕçсем тума пехиллетĕр! Пирĕн асаттесен хĕçĕ нихçан та тутăхман, эпир нихçан та тăшмана пăхăнман. Хăюллă та хастар пулăр, пирĕн паттăрсем!

Сире аслă Атăл хăйĕн хумĕсем çинче чăпăл туса çитĕнтернĕ. Тăван Совет çĕршывĕ сире ăмăрткайăк пек вĕçме сарлака та хăватлă çунатсем панă, ирсĕр тăшмана таптама — танксем, фашистла тискер кайăксене вĕлерсе пĕтерме — шанчăклă хĕçпăшал панă. Пуринчен пахараххи — çапăçура нимĕнрен хăрама пĕлми чĕресем панă. Çапăçу хирĕнче арăслан пек пулăр! Чыслă тытăр асаттесемпе аттесен ятне, чĕрере усрăр халăх тивĕçне!»

«Çыру» темиçе ĕмер хушшинче аслă вырăс халăхĕпе пĕрле пĕрре кăна мар Тăван çĕршыва хӳтĕлеме çĕкленнĕ чăваш воинĕсен çапăçу хирĕсенчи паттăрлăхĕ çинчен чаплăн та мăнаçлăн каласа кăтартакан юрă пек янăрать. «Çыру» авторĕсен сăмахĕсемпе чăваш халăхĕ хăйĕн вăрçа кайнă ывăлĕ-хĕрĕсене çапăçура хăватлă чăваш юманĕсем пекех çирĕп пулма пиллет.

1941—1945 çулсенчи чăваш прозинче вăрçăччен те ăнăçлă аталанса пынă очерк жанрĕ пысăк вырăн йышăнчĕ. Пирĕн республикăра çуралса ӳссе Отечественнăй вăрçăра чапа тухнă паттăрсем çинчен çав çулсенче илемлĕ очерксем сахалах пулмарĕç. Вĕсем «Паттăрсем», «Чăваш ывăл-хĕрĕсем» ятлă сборниксенче те, кĕнекесемпе брошюрăсем халлĕн те, хаçатра та нумай пичетленчĕç.

В. Долговăн фронт темипе çырнă «Радисткăсем», «Лăпкă çын», «Тĕлĕнмелле винтовка», «Снайпер» тата ытти очеркĕсем вăрçăри совет çыннисен хăюлăхĕпе харсăрлăхне сăнласа панă хушăрах вĕсен çарти пултарулăхĕ, çапăçура тăшмана пĕтерсе тăкма пулăшакан чеелĕхĕпе ăслайĕсем çинчен ăшă туйăмпа каласа параççĕ. И. Тукташ писатель хăйĕн «Павел Лаптев», «Ылтăн çăлтăр» т. ыт. очеркĕсенче геройсен пурнăçĕпе кĕрешĕвĕнчи фактсене тĕп-тĕрĕс çырса кăтартрĕ, кунпа пĕрлех вăрçăри ентешĕмĕрсен ырă шухăш-кăмăлне те тарăнраххăн сăнлама, вĕсен чун-чĕринчи таса туйăмсене мораллĕ сăнсăпачĕпе психологи енчен уçса пама та пĕлчĕ.

Совет халăхĕн вăрçă вăхăтĕнчи тĕлĕнмелле паттăрлăхĕ чăваш писателĕсен çав çулсенче çырнă калавĕсемпе повеçĕсенче те витĕмлĕн палăрать. М. Данилов-Чалдун. Л. Агаков, В. Долгов, Иван Мучи, Илпек Микулайĕ, Ф. Çитта, Хв. Уяр, А. Эсхель çырнă чылай калавсем уйрăм событисемпе характерсене очерксенчи майлăрах çутатса параççĕ, çав хушăрах вĕсем очерксенчен событисемпе фактсене авторсем хăйсен ăс-хакăлĕпе виççе, хăйсен чунне килĕшнĕ пек туйса, хăйсене кирлĕ пек сарса-тарăнлатса анлăраххăн уçса панипе уйрăлса тăраççĕ.

Совет çĕршывĕнче ылханлă вăрçă çулăмĕ хыпса илсенех чăвашсен паллă прозаикĕ, ватă коммунист М. И. Данилов-Чалтун, çулĕсем иртнине пăхмасăрах, хăйĕн ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çара тухса каять, икĕ çул хушши пĕрмаях фронтра, фашистсен урнă йыттисемпе çапăçать. Акă мĕнле çырать вăл Шупашкара, «Чăваш Коммуни» (хальхи «Коммунизм ялавĕ») хаçат редакцине ярса панă «34-мĕш атака умĕн» ятлă статйинче:

«... Виççĕмĕш хут вăрçăра пуласси çинчен эпĕ мирлĕ вăхăтра шухăшламан та темелле. Аллă çула çитнĕскер, хам ирĕкпе вăрçă çынни пулса тăтăм.

1941-мĕш çулта пирĕн Тăван çĕршыва хаяр тăшман тапăнса кĕчĕ. Çамрăксене вăрçа иле пуçларĕç. Тăван çĕршывăмăра хаяр та усал тăшманран сыхламалла. Эпĕ хамран хам ыйтатăп: аллă çула çитрĕм, эпĕ ватă ĕнтĕ, вăрçă çыннисен ретĕнчен тухнă. Икĕ хутчен вăрçăра пулнă. Анчах халĕ, çĕршывшăн питех те хăрушă кунсем килсе тухнă вăхăтра, мĕнле килте ларас-ха? Çук, эпĕ ун пек çын мар. Маншăн Тăван çĕршыв хаклă. Эпĕ ăна вĕçĕмсĕр юрататăп, уншăн вăрçма граждан вăрçи вăхăтĕнче те хамăн ирĕкĕмпе Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, тăшмана çĕмĕрсе тăкиччченех çапăçрăм... Тăван çĕршывран мăшкăлласа ăна чуралăха кĕртсе ӳкерес шутпа килнĕ ирсĕр тăшмана çивĕч шăлсемпе туртса çурас килет...

... Фашистсем манăн пĕртен-пĕр ывăлăма вĕлерчĕç. Унăн вырăнне эпĕ вĕсене çĕр хут ытларах тавăрăп. Эпĕ ашшĕ. Манăн алă чĕтресе тăмĕ...»

Чăнах та, алли чĕтресе тăман аслă Тăван çĕршыва çав тери вăйлă юратупа юратнă ватă коммунистăн. Йывăр суранланса, 1944 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче ĕмĕрлĕхе куç хупиччченех вăл паттăр совет салтакĕсен малти ретĕнче пулнă. Çапăçусенчи йывăр лару-тăрура та М. Данилов-Чалтун хăйĕн юратнă ĕçне— литература ĕçне пăрахман. Вăл окопсемпе блиндажсенчен çырса янă «Красноармеец Самсонов», «Вăрманта», «Кам айăплă», «Лизавета Егоровна», «Антун çемйи» калавĕсемпе очеркĕсене чăваш халăхĕ килĕштерсе йышăнчĕ. Вĕсенче ырма-канма пĕлмен писатель хăй пекех тӳрĕ те таса чунлă çынсен вăрçăри патриотла ĕçĕсем çинчен ăшă кăмăлпа каласа кăтартать.

Çавăн пекех Л. Агаковăн «Старик № 33», «Салтак чунĕ», «Медаль», Илпек Микулайĕн «Пĕчĕк Клавди», «Вĕри кун», «Госпитальте» калавĕсем те вутлă вăрçă хирĕнче çырнăскерсем. Асăннă произведенисем, калăпăшĕпе илсен, кĕске, анчах шухăшĕпе вĕсем тарăн. Ахальтен мар ĕнтĕ çав калавсенчи совет патриочĕсен сăнарĕсемпе вĕсен фронтри кулленхи ĕçĕ-хĕлĕсем куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ.

Нимĕç фашисчĕсене хирĕç вилĕмле кĕрешӳ пынă вăхăтра тылри пĕтĕм халăх, ватти-вĕтти фронтшăн, çĕнтерӳшĕн, çĕршывпа халăх пуласлăхĕшĕн вăйа шеллемесĕр ĕçлерĕ. Чăваш писателĕсем çак пархатарлă та кирлĕ те-

мăна та хăйсенчен пăрса хăвармарĕç, ăна тĕрлĕ енчен, тишкерӳллĕн, чуна хускатмалла, туллинрех çутатса пама тăрăшрĕç. Ку тĕлĕшре Иван Мучин «Стариксем», «Ыран», А. Эсхельĕн «Шартлама сивĕре», «Çĕр илемĕ», Трубина Мархвин «Килйыш», Хв. Уярăн «Çыру», К. Пайрашăн «Пуçламăшĕ» ятлă калавсене пирĕн вулакансем уйрăмах килĕштерсе йышăнчĕç. Çав калавсем тыла юлнă чăваш ĕçченĕсен шухăш-кăмăлĕпе хастар ĕçне-хĕлне тĕрлĕ енчен тата хумханмалла сăнласа кăтартаççĕ.

Вăрçă çулĕсенче пирĕн писательсем хушшинче пысăк мар повеçсемпе ĕçлекенсем те пулчĕç. Сăмахран акă, Л. Агаков çамрăк вулакансене «Партизан Мурат» (1942 ç.), «Вилĕмрен те вăйлăрах» (1945 ç.) повеçĕсене парнелерĕ, С. Аслан «Аслати» (1942 ç.), И. Саламбек «Иксĕлми шанчăк» (1944 ç.) ятлă повеçсем çырчĕç. Анчах та вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçа повеçсемпе романсенче нумай енлĕн те таранăн çырса кăтартасси, тĕпрен илсен, вăрçă хыççăнхи çулсенче çеç çĕкленсе кайрĕ.

Вăрçă теми чăвашсен нациллĕ драматургийĕнче те хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ. Чăнах та, малтанхи вăхăтра Е. Никитинăн «Тăван çĕршывшăн», Н. Айзманăн «Патриотсем» майлă ăшăхрах çырнă пьесăсем те пулкаларĕç. Анчах çав пьесăсене, вĕсенче совет çыннисен патриотизмла çĕкленĕвне, тăшмана хирĕç çирĕп тăнине çиелтен те схемăллăрах кăтартнă пулин те, тиркесе тăкмах кирлĕ мар. Çапах та, чăваш совет драматургийĕнче вĕсем Аслă Отечественнăй вăрçă темине хускатнă пĕрремĕш «чĕкеçсем» пулнă-çке-ха.

Вăрçă вăхăтĕнчи драмăллă ĕçсем çинчен чăвашсен паллă драматургĕ, чăваш театрĕн ветеранĕ И. С. Максимов-Кошкинский «Савнисем», «Сенкер двойка», «Пирĕн ачасем», «Телейлĕ çуркунне» пьесăсем çырчĕ. Идейăллă содержанипе ăсталăх енчен вĕсем пурте пĕр шайра мар пулин те, çак пьесăсем фронтри хаяр кĕрешӳ картинисемпе совет çыннисен тылри ĕçне-хĕлне куçа курăнмалла, асра юлмалла сăнласа кăтартаççĕ. «Сенкер двойка» пьесăри (1943 ç.) тĕп сăнар — чăвашсен паллă летчикĕ, Совет Союзĕн Геройĕ Федот Орлов. Пьеса сюжечĕ Федот Никитич Орловăн вăрçăра чухне пулса иртнĕ эпизочĕпе çыхăннă. Унта чаплă вĕçевçĕсен ирĕксĕрех хăйĕн самолетне тăшман тылне антарса лартма тивнине, анчах вăл партизансем пулăшнипе машинăна ăнăçлах çăлса хăварма пултарнине сăнланă. Çиелтен пăхма ку эпизод «приключениллĕ» кăна пек туйăнать. Çапах та И. Макси-

мов-Кошкинский унпа пирӗн герой характерӗнчи чи паха та каткăс енӗсене туллин те ӗненмелле кăтартса пама пултарнă.

Чăваш драматургийӗнче вăрçă çулӗсенчи пурнăç çинчен çав вăхăтра çырнă произведенисенчен Н. Айзманăн «Лиза Короткова» (1943 ç.), А. Эсхелӗн «Çӗрпе кăвак тӳпе» (1944 ç.) пьесисене те палăртса хăвармалла.

Айзман пьесинчи Лиза Короткова, вăрçа тухса кайнă мăшăрӗ вырăнне юлса, колхоз председателӗнче ӗçлеме тытăнать. Драматург унăн сăнарӗ урлă чăваш хӗрарăмӗн чун-чӗре тасалăхӗпе çирӗплӗхне çутатса пама тăрăшнă. Лиза Короткова фронтра çапăçакан упăшкине таса та хӗрӳ юратупа юратать. Вăл тăван ялӗнчи çынсемпе яланах пӗр кăмăллă, пӗр чунлă, туслă. Çавна май вӗсем Лизăна пӗр хирӗçмесӗр итлеççӗ, вăл хушни-каланисене вăя хӗрхенсе тăмасăр пурнăçлама тăрăшаççӗ. Пурнăçра йывăр килнӗ самантсенче ăна хуняшшӗ те — Çпритун мучи — ăшă сăмахпа та, ӗçпе те пулăшма тăрăшать. Вата Çпритун сăнарӗпе драматург йывăр вăхăтсенче яланах хăюллă та чăтăмлă чăваш халăхӗн ӗмӗртен килекен ăсхакăлне, ырă чунне, килӗшӳллӗ шухăш-кăмăлне палăртма пӗлнӗ.

А. Кăлкан вăрçă умӗнхи çулсенчех «Иван Кадыков» (1942 ç.) драми валли материал пухма пуçланă. Çав драмăра автор, историри тӗрӗс фактсемпе событисене пӗтӗмлетсе, 1918 çулта Шупашкарта Совет влаçӗшӗн пынă кӗрешӗвӗн картинине кăтартать.

Çав хаяр тытăçу вăхăтӗнче пуçне хунă Иван Кадыков, Шупашкар хула Совечӗн председателӗ, пьесăра асра юлакан ăнăçлă сăнар пулса тухнă. Вăл халăх массисен революциллӗ ăстăнне палăртса тăнине, ӗççыннисен кӗрешӗвне хастарлăн йӗркелесе ертсе пыма пӗлнине пӗр иккӗленмесӗр ӗненетӗн. А. Кăлкан кунта чăваш геройӗн, коммунистăн, чи лайăх енӗсене питӗ ăста сăнласа пама пултарнă. Ахальтен мар драмăра революцилле кӗрешӳн хӗрӳллӗ романтики вăйлă сисӗнсе тăрать. Паллах, çакна текста сăвăласа çырни те нумай пулăшать, драмăна вăйлăрах, çӗкленӳллӗрех, героикăллăрах янăратать.

«Иван Кадыков» — чăваш драматургийӗнче сăвăласа çырнă чи малтанхи историллӗ-героикăллă драма. Çак жанр хăватлă та витерӳллӗ сăмаха, чăн-чăн героикăллă искусствăна ыйтакан вăрçă çулӗсем пулăшмасăр çуралман ӗнтӗ. А. Кăлкан драми вăрçă хыççăн та сцена çинче нумай пурăнчӗ. Унăн çӗнӗ варианчӗ вара «Октябрь хумӗ»

ятпа 1957 çулта каллех Чăваш Государство Академи театрĕн сцени çине тухрĕ.

Паллах ĕнтĕ, пирĕн писательсем Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çырнă пур произведенисем те илемлĕх енчен пиçсе çитнĕ, вĕсен пурин те ĕмĕрĕсем пĕрешкел вăрăм теме çук. Çапах та чăваш совет литератури 1941—1945 çулсенче пысăк утăм турĕ куç умĕнчех. Ун чухнехи сăвă-поэмăсем, очерксем, калавсемпе повеçсем, хăшпĕр драмăллă произведенисем, хамăр халăхăн чи ырă енĕсене çĕнĕлле уçса пачĕç. Çавна май пирĕн литература çĕнĕ жанрсемпе, çĕнĕ формăсемпе, çĕнĕ сăнарсемпе пуянланчĕ.

Хăйĕн хăюллă та ĕçчен халăхĕпе пĕрле тăван чăваш совет литератури фашизма хирĕç кĕрешнĕ вăхăтри хаяр вăрçă çулне мухтавлăн утса тухни пире савăнтарать, малашне ăна татах та илемлĕрех, витĕмлĕрех, тарăнрах тăвас тесе пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хавхалантарать.

Çулла — тусан, хĕлле — юр юнлă, тарăн,
Ялсем те хуласем çинче хĕлхем.
Танкра та нӳрĕ окопра тăнларăм
Тĕреклĕ сассуна, тăван чĕлхем! —

çырнă 1945 çулта Ухсай Яккăвĕ хăйĕн «Чăваш чĕлхи» ятлă сăввинче.

Эппин, Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çĕнĕ вăйпа çĕкленсе кайнă чăваш литератури те пиншер чăваш салтакĕсемпе тылри ĕçченсемшĕн Тăван çĕршывăн çавăн пек хăватлă сассиех пулнă.

*1968.*

## ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Чăваш кĕнеке издательстви Л. Агаковпа Г. Орлов пухса хатĕрленĕ калавсемпе сăвăсен «Вăрçăра» кĕнекине кăларчĕ. Унта 59 авторăн 108 произведенине кĕртнĕ. Авторсенчен нумайăшĕ фронтра пулнă, нимĕç фашисчĕсене хирĕç хĕçпăшал тытса çапăçнă. Хăшĕсем вара Берлина та çитнĕ, киле наградăсемпе таврăннă.

Кĕнеке умсăмахĕнче çапла каланă: «Çак кĕнекене кĕртнĕ калавсемпе сăвăсем — чăваш писателĕсем çарпа патриотизм темипе çырнă произведенисен пĕр пысăк мар

пайӗ кăна. Эпир кашни прозаикпе поэт творчествинчи чи паха произведенисене суйласа илме тăрăшрăмăр... Ун пек произведенисем çамрăк ăрăва çирӗп кăмăллă, хăюллă та хастар пулма, хамăрăн идеалсене, Тăван çӗршыва пӗтӗм чунпа парăнса тăма вӗрентеççӗ.

«Вăрçăра» кӗнекене антологи теме те пулать. Вулакансем унта чăваш писателӗсемпе поэчӗсем граждан вăрçипе Финлянди вăрçи, Аслă Отечественнăй вăрçă паттăрӗсем çинчен çырнă калавсемпе, сăвăсемпе паллашаççӗ. Вӗсем пурте — пирӗн литературăра палăрса тăракан лайăх произведенисем. Кӗнекене кӗртнӗ калавсемпе сăвăсене умсăмахра каланă пек «тӗрлӗ вăхăт çинчен çырнă пулсан та, вӗсене пӗр тӗп тема, пӗр тӗп шăнăр пӗрлештерсе тăрать: совет çыннисен кăвар пек хӗрӳ патриотизмӗ, вӗсем Тăван çӗршыва тӗнчере нимрен те ытла юратни, Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе Аслă Октябрь çӗнтерӗвӗсене, коммунизмла идеалсене пур чухне те паттăррăн хӳтӗлени, халăх телейӗшӗн пурнăçа шеллемесӗр çапăçма хатӗр пулни».

Нумай нациллӗ совет литературин туслă йышӗнче чăваш совет литератури пур чухне те — ӗçре те, кӗрешӳре те — яланах халăхпа пӗрле пулчӗ, тăшмана çапса аркатса çӗнӗ пурнăç тума хавхалантарса пулăшса пычӗ.

Ун çинчен Чăваш халăх поэчӗ П. Хусанкай «Эп — Советлă Союз гражданинӗ» сăвăра питӗ тӗрӗс те витӗмлӗ каланă:

> Çаврака Çӗр тавра сахал мар çӗршывсем,
> Кӗçӗнни те, асли те тӗл пулӗ.
> Ӗлӗкрен-авалтан тӗрлӗ-тӗрлӗ çынсен
> Хăй чӗлхи, хăй йăли, хăй кунçулӗ.
> Анчах эп хапсăнмастăп ютри çӗрсене,
> Эп купта кун курса çынна çитнӗ.
> Ак каллех харсăр сăвăç сасси илтӗнет:
> Эп — Советлă Союз гражданинӗ!

Çак сăвăпа уçăлать те «Вăрçăра» кӗнеке. Тепӗр сăввинче поэт чăваш писателӗсем, яланах халăхпа пӗрле пулса, Тăван çӗршыва тăшмансенчен сыхлама хатӗр тăнине кăтартса, çапла çырать:

> Самана салтакӗ эпӗ:
> Пăшалпа е перопа —
> Пӗтиччен кунçул хисепӗ
> Хуралта эп тăрапах!

Граждан вăрçи... Çăмăл пулман пирĕн халăхан çав çулсенчи пурнăçĕ. Коммунистсен партийĕ Октябрьти революци çĕнтерсе илнĕ кунçула сыхлама, рабочисемпе хресченсен ирĕклĕхне хӳтелеме Совет Çарне туса хурать. Çав вăхăтри тапхăра кăтартнă произведенисене вуласан, пирĕн куç умне хăрушă, юнлă вăрçă кунĕсем, тăшман умĕнче хăраса тăман, ăна хирĕç паттăррăн, пултаруллăн çапăçнă рабочисемпе хресченсен сăн-сăпачĕсем тухса тăраççĕ.

Акă, В. Пайменăн «Комиссар» калавĕ чи малтанах çак чаплă çапăçу кунĕсене аса илтерет. Кунта эпир граждан вăрçи вăхăтĕнчи чаплă та мухтавлă комиссарăн ĕçĕсемпе, вăл ертсе пынă хĕрлĕ салтаксем телейлĕ те тăнăç пурнăçшăн, çĕнĕ ăрусемшĕн тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçнине куратпăр.

Çеçпĕл Мишшин «Пурнăçпа вилĕм» сăвви, И. Ахахăн «Икĕ виле» новелли, Хумма Çеменĕн «Штрум», В. Краснов-Аслин «Сĕве станци патĕнче» калавĕсем, Н. Янгасăн «Мухтавлă вилĕм» сăвăлла калавĕ çав тапхăрах кăтартса параççĕ.

Паллах, «Вăрçăра» кĕнекене граждан вăрçи çинчен çырнă произведенисене пурне те кĕртме май çук. Эпир пурте И. Тăхтин «Колчак» поэмине, С. Элкерĕн «Вунсаккăрмĕш çул» драмăлла поэмине, М. Данилов-Чалтунăн «Партизансем», «Лубков отрячĕ», «Ункăран» калавĕсемпе повеçĕсене пĕлетпĕр, юратса вулатпăр.

1941—1945 çулсем... Нихçан та сӳнмĕ, манăçа юлмĕ Аслă Отечественнăй вăрçă паттăрĕсен пĕтĕм этемлĕхе тĕлĕнтернĕ паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ. Çак вăрçăра Совет Çарĕн вăй-хăвачĕ нумай-нумай халăхсем умне куçкĕретĕн тухса тăчĕ. Пĕтĕм халăхпа пĕрле чăваш писателĕсем те Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем хушшинче хăйсен чыслă вырăнне йышăнчĕç. Писательсем совет салтакĕсемпе пĕрле чи хаяр çапăçусенче пулчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ (М. Данилов-Чалтун, Л. Агаков, А. Атга, В. Алатер, В. Долгов, В. Бараев, Илпек Микулайĕ, М. Кипек, В. Ржанов, М. Сироткин, А. Талвир, И. Тукташ, Уйăп Мишши, Я. Ухсай, П. Хусанкай, т. ыт. те) вăрçăн малти линийĕсенче çапăçнă хушăрах вăрçă темипе çулăмлă сăвăсемпе поэмăсем, калавсемпе очерксем, повеçсем, статьясем çырчĕç. Çав вăхăтра çырнă калавсемпе сăвăсене пирĕн вулакансем лайăх астăваççĕ.

Иртнĕ вăрçă паттăрĕсене, Совет халăхĕн ĕçпе кĕрешĕвне лайăх кăтартса паракан сăвăсемпе калавсенчен

пумайăшне эпир «Вăрçăра» кĕнекере куратпăр. Вĕсенчен пуринчен ытла М. Данилов-Чалтунăн «34-мĕш атака умĕн» тата «Лизавета Егоровна», А. Алган «Çулсем-йĕрсем», В. Долговăн «Тĕлĕнмелле винтовка» тата «Пурнăçпа вилĕм», А. Эсхелĕн «Çĕр илемĕ», Иван Мучин «Тавăрпи», Хв. Уярăн «Çыру», В. Урдашăн «Сенкер чечек» калавĕсене тата Л. Агаковăн «Кăсăя» ятлă пĕчĕк повеçне палăртса хăварас килет.

Акă тата халăх чун-чĕринчи патриотизмла туйăма çивĕччĕн палăртакан витĕмлĕ сăвăсене пăхар. Вĕсем чăваш ывăл-хĕрĕсене тăшманпа юмахри Улăп-паттăр пек харсăррăн кĕрешме чĕнчĕç, çапăçу хирĕнче яланах хăюллă пулма хавхалантарса тăчĕç.

«Вăрçăра» кĕнекене кĕртнĕ калавсемпе сăвăсем хушшинче совет халăхĕ мирщĕн, телейлĕ пурнăçшăн кĕрешнине кăтартаканнисем те пур (А. Артемьев — «Миршĕн», В. Давыдов-Анатри — «Вилнисен ячĕпе», Г. Ефимов — «Чĕре», А. Каттай—«Берлинри палăк»). Анчах Совет Çарĕн мирлĕ вăхăтри пурнăçĕ çинчен, совет воинĕсем аслă çĕршыв чиккисене тимлĕн сыхлани çинчен калакан произведенисем сахал-ха. Ун пек илемлĕ произведенисем çырасси — вăл пирĕн писательсем умĕнче тăракан задачăсенчен пĕри.

Совет халăхĕпе унăн Çарĕ тĕнчене çав тери пысăк хăрушлăхран хăтарчĕç. Пирĕн çĕнтерӳ ытти çĕршывсенчи ĕççыннисене татăклăнах революциллĕ кĕрешĕве çĕклерĕ, наци ирĕклĕхĕшĕн пыракан юхăма нихçанхинчен те ытларах вăйлатрĕ.

Фашизма çĕмĕрсе тăкни пĕтĕм тĕнчипех историллĕ çĕнтерӳ пулчĕ, вăл тĕнчен сăн-сăпатне улăштарчĕ. Хĕвеланăçĕпе Хĕвелтухăçĕнче социализмлă çĕнĕ государствăсем çуралчĕç, тĕнчери социализм системи пулса тăчĕ.

Истори тимĕр хăмисем çине
Хушаматна штыкпа çырса хăвартăн.
Мухтав — Раççейĕн паттăр салтакне!
Европăна эс вилĕмрен хăтартăн,—

тет С. Шавли «Чĕррисемпе юнашар» сăввинче, Совет Çарĕн вăрçăра вилнĕ салтакĕсене асăнса.

Иртнĕ вăрçа асăнсан, çакна манмалла мар: пирĕн планета çинче унта та кунта лару-тăрăва йывăрлатакан вучахсем чĕрĕлеççĕ, хăшпĕр тĕлте вăрçăсем те пуçланаççĕ. Çавăнпа та пирĕн яланах сыхă пулмалла, мир вăйĕсе-

не куллен-кун çирĕплетмелле, çамрăк ăрăва патриотизмла воспитани парассишĕн ырми-канми ĕçлемелле. Çав пархатарлă ĕçре чăваш писателĕсен «Вăрçăра» кĕнекери произведенийĕсем те пысăк вырăн йышăнасса шансах тăратпăр.

*1968.*

## ПИСАТЕЛЬ-САЛТАК МАЛАЛЛА УТАТЬ

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пирĕн çарсен чаплă çĕнтерĕвĕпе вĕçленнĕ хыççăн Чăваш халăх писателĕ Леонид Агаков тискер фашизма хирĕç пынă хаяр кĕрешӳ сулĕсем çинчен, çав тапхăрта чăн-чăн паттăрлăх кăтартнă совет патриочĕсем çинчен сахал мар паха произведени çырчĕ. Тĕрĕсрех каласан, унăн вăрçă хыççăнхи пултарулăхĕнче çарпа патриотизм теми чи пархатарлă вырăн йышăнчĕ. Фронтран таврăнсан, вăл Тăван çĕршыв, тăван халăх ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн пынă çапăçусенче чăн-чăн паттăрлăх кăтартнă хастар çынсем çинчен чылай калавпа очерк çырнă хушăрах чăваш вулаканĕсене вăрçă вăхăтне тĕрлĕ енчен сăнлакан пысăк калăплă произведени те нумай парнелерĕ. Кунта пирĕн уйрăмах унăн «Ылтăн вăчăра» (1947), «Пĕр хулара» (1947), «Салтак ачисем» (1958—1964), «Кăсăя» (1965), «Яланах салтаксем» (1966—1971) повеçĕсене, «Шанчăк» (1969—1970) романне палăртса хăварас килет.

Паллă ĕнтĕ, вăрçă çулĕсенче фашистла вăрă-хурахсене хирĕç кĕрешес ĕçре пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ачасем те пысăк паттăрлăх кăтартнă. Вĕсем ун чухне никам тытайми связнойсем, разведчиксем, питĕ лайăх стрелоксем, харсăр партизансем пулнине пурте пĕлеççĕ. Кунпа пĕрлех çав йывăр вăхăтра ачасем, колхозсенче, фабрикăсемпе заводсенче ырми-канми ĕçлесе, фронта сахал мар пулăшнă. Фронтра е партизансен отрячĕсенче паттăррăн çапăçнă тата пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ чылай ачасем правительство наградисене илме тивĕçлĕ пулнă. Шăпах çавăн пек хастар чун-чĕреллĕ çамрăк патриотсене сăнласа кăтартать те ĕнтĕ Леонид Агаков эпир çӳлерех асăннă произведенисенче. Вĕсенче совет ачисен вăрçă çулĕсенчи паттăр ĕçĕ-хĕлĕ куçа курăнмалла уççăн тухса тăрать, нумайлăха асра юлать.

Акă, «Ылтăн вăчăра» повеçех илĕпĕр. Çак произведе-

ние мӗнле ҫырма пуҫлани ҫинчен автор ҫапла аса илет:

«1943 ҫулхи февраль уйӑхӗнче, Курск облаҫӗнчи Чернихово ялӗнче, эпӗ блокнота ҫапла ҫырса хунӑ: «Ӗненмелле мар хӑрушӑ историсем каласа кӑтартаҫҫӗ. Нимӗҫсем пирӗн ҫынсене ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн персе пӑрахнӑ, вутта пӑрахса ҫунтарнӑ. Паян пӗр хӗрарӑмпа калаҫрӑм. Ку ялсем мар вӑл, темиҫе ҫухрӑмри Веретенино ялӗнчен, халь вӑл ял ҫук, ҫунтарса янӑ. Нимӗҫсем вӗсен ялне тӑрук хупӑрласа илсе, пурне те хӑваласа кӑларса, 197 ҫынна персе пӑрахнӑ. Ку хӗрарӑмӑн 7 ачипе упӑшкине вӗлернӗ, хӑй аманса тӑнсӑр пулса выртса юлнӑ. Унсӑр пуҫне тепӗр арҫын ача— вӑл та аманнӑ — чӗрӗ юлнӑ». Ҫакӑн ҫинчен писатель тепӗр икӗ кунтанах вырӑсла «Убийцы» ятлӑ очерк ҫырса дивизири «Советский патриот» хаҫатра пичетлет. Чӑвашла вӑл «Ленин ҫулӗпе» хаҫатра (1943 ҫулхи июнӗн 26-мӗшӗнче) «Нимӗҫсем — ҫынсем мар, ҫынҫиенсем» ятпа ҫапӑнса тухнӑ. Ҫак материалпа усӑ курса ҫырма пуҫланӑ повеҫе автор малтанах «Персе вӗлернӗ ача» тесе ят панӑ пулнӑ, анчах ӑна вӑл вӑрҫӑ хыҫҫӑн тин ҫырса пӗтерет, вара ҫав повесть «Ялав» журналта «Ылтӑн вӑчӑра» ятпа 1947 ҫулта пичетленсе тухать.

Повеҫри тӗп герой — Ваня Долбин. Вӑл пурӑнакан яла фашистсем пӗтӗмпех ҫунтарса-аркатса пӗтереҫҫӗ, ҫыннисене пурне те — ваттисене те, ачасене те — хире хӑваласа тухса пере-пере пӑрахаҫҫӗ. Ваня Долбин ӑнсӑртран кӑна вилӗмрен ҫӑлӑнса юлать, унтан вӑл, аманса пӗтнӗскер, партизансем патне пырса ҫитет, хӑйӗн вӑхӑтсӑр вилнӗ тӑванӗсемшӗн, ялйышӑшӗн май килнӗ таран тӑшмана ытларах тавӑрма тупа тӑвать. Уйрӑмах вӑл фашистсен тискертен те тискер карательне Генрих Шварца вилесле кураймасть. Ҫамрӑк партизан куҫӗ умне яланах ҫав «тимӗр хӗреслӗ», «ылтӑн вӑчӑраллӑ» Гитлер вӑрӑ-хурахӗ тухса тӑрать. Ун хыҫҫӑн йӗрлесе ҫӳресен-ҫӳресен, Ваня пурпӗр ӑна тавӑрать-тавӑратех.

Ваня Долбин — вырӑс ачи, пионер. Вӑл хамӑрӑн Тӑван ҫӗршыва чи хӗрӳ туйӑмпа юратать, Совет Ҫарӗ фашистсене пурпӗр ҫӗнтерессе ҫирӗп шанса-ӗненсе пурӑнать. Ваньӑн чи ҫывӑх тусӗ пур. Вӑл — тӑлӑха юлнӑ чӑваш ачи Санька, вӑрҫӑччен чикӗ хӗррипче пурӑннӑ совет офицерӗн ывӑлӗ. Санька амӑшӗн ылтӑн вӑчӑраллӑ сехетне те ҫав ирсӗр Генрих Шварцах туртса илнӗ иккен, амӑшне хӑйне персе вӗлернӗ. Ҫапла вара фашист-чунилли икӗ ачана тӑлӑха тӑратса хӑварнӑ.

Икĕ çамрăк патриот пĕр-пĕрипе калама çук туслă пурăнать. Хăйсене питĕ йывăр хуйхă килнĕ пулсан та, вĕсем ăна тӳссе ирттерме чăтăм çитерeççĕ, чунĕсемпе хаярланса, тăшмана тавăрма ĕмĕтленеççĕ. Ваня Долбинпа Санькана кĕрешӳре çирĕп те хастар пулма партизан отрячĕн командирĕпе комиссарĕ, Федор Иванович фельдшер, хастар разведчик Михаç, Тоня учительница тата ыттисем те хăйсем тĕслĕх кăтартса вĕрентеççĕ, куллен пулăшса пыраççĕ. Повеçре Ваня Долбинпа Санька тăшман аллинчи кĕпере сывлăша сиктерсе янине, фашистсен тыткăнĕнчен хăтăлса тухса, отряда пĕр сутăнчăк старостăна тытса таврăннине, Генрих Шварца вĕлернине тата ытти эпизодсене те ăста çырса кăтартнă.

Писатель фашистсен тискерлĕхне повеçре питĕ ĕненмелле кăтартса парать. Тăшман — тултан пăхма çын евĕрлех, анчах чунĕпе — хăрушă. Пăхăр-ха, Генрих Шварцăн ирсĕр сăнарĕ хăй кăна мĕне тăрать. Çак чуниллин нимĕнле намăс-симĕс те çук, этем тивĕçне нихçан та пĕлменскер, кашкăр чĕреллĕскер, вăл ватă çынсене те, алăри ачасене те хĕрхенсе тăмасть, тискеррĕн пере-пере пăрахать, хĕрарăмсене пусмăрлать, хурах пусать, çаратать...

«Ылтăн вăчăра» уйрăм кĕнекепе тухсан, хăй вăхăтĕнче А. Артемьев писатель «Ачасем юратса вулакан кĕнеке» статьяра («Ялав», 1950 çулхи 2-мĕш номер) повеçе шкул ачисем мĕнле хаклани çинчен калакан çырусене илсе кăтартнăччĕ. «Кĕнекере çыроа кăтартнă ĕçсем, унти геройсен паттăрлăхĕпе хăюлăхĕ пире Тăван çĕршыва пĕтĕм чунтан юратма, кирлĕ пулсан — уншăн хамăр пурнăçа та хĕрхенсе тăмасăр çапăçма, тăшмансене пĕтĕм тарăхупа курайми пулма вĕрентеççĕ»,— тесе çырнă, сăмахран, Йĕпреç районĕнчи Тури Кĕлешкасси шкулĕнчи вĕренекенсем.

Кун пек çырусем сахал мар пулнă. Çакă та ĕнтĕ Л. Агаков ачасемшĕн иртнĕ вăрçă çинчен усăллă, кирлĕ, паха произведени çырса кăларнине пĕлтерет.

Повесть çăмăллăн вуланать. Сюжет çивĕччĕн аталанать. Геройсен паттăр ĕçĕсем асра юлаççĕ. Çапах та хăй вăхăтĕнче критиксем те, вулакансем те повеçĕн хăшпĕр çитменлĕхĕсене палăртнăччĕ. Чи малтанах вĕсем геройсен сăнарĕсем, характерĕсем, калаçăвĕ пĕр-пекрех пулни çинчен каланăччĕ тата хăшпĕр персонажсем сюжетпа çыхăнманнине те асăрхаттарнăччĕ.

«Пĕр хулара» повесть калăнăшĕпе пысăк мар. Автор

кунта иртнĕ вăрçă вăхатенчи çамрăк паттăрсем çинчен сырать. Анчах та сăнласа кăтартнă ĕçсен масштабне шута илсен, ăна вăрçă вăхăчĕпе, совет çыннисен фашистсене хирĕç пынă кĕрешĕвĕпе аплăн паллаштаракан произведени теме те май пур.

1941 çулхи кĕр кунĕсем. Пите йывăр вăхăт. Фронтран кунсерен хăрушăран хăрушă хыпарсем килсе тăраççĕ. Фашистсем кĕç-вĕç Мускава тытса илессипе, Хĕрлĕ площадьре парад ирттерессипе каппайса мухтанаççĕ. Анчах та, пирĕн нумай хуласемпе ялсем вăхăтлăха вĕсен аллинче юлнă пулин те, совет халăхĕ урса кайнă тăшмана парăнмасть, ăна хирĕç пĕтĕм вăя хурса кĕрешет. Коммунистсем ертсе пынипе çак кĕрешĕве ачасем те йышлăн хутшăннă. Шăпах çакна кăтартса парать те Л. Агаков писатель 1947 çултах ача-пăча литературин конкурсĕнче преми илме тивĕçлĕ пулнă «Пĕр хулара» повеçĕнче.

Произведенири ĕçсем пĕр пысăках мар хулара пулса иртеççĕ. Вĕсем çинчен вулакансене Репкин, Мускав çывăхĕнче пурăннă вырăс ачи, нумай пулмасть улттăмĕш класран вĕренсе тухнăскер, каласа парать. «Манăн атте,— тет вăл,— граждан вăрçи вăхăтĕнчех взвод командирĕ пулнă. Нумай фронтсенче çапăçнă... Çапăçусенче темиçе хут та аманнă... Пĕр сăмахпа каласан, хамăрăн Тăван çĕршывшăн пĕтĕм пурнăçне, чунне пама хатĕр çын, чăн-чăн вырăс салтакĕ пулнă. Çавăнпа та Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан тепĕр куннех, хăйне повестка пырса парассине кĕтмесĕрех, çурăмĕ хыçне кутамкка çакса, вăл военкомата тухса утрĕ...»

Çакăн пек килйышра ӳснĕ Юрăпа унăн Коля ятлă шăллĕ. Вăрçă пуçлансан, вĕсен пурнăçĕ йăлтах улшăнать. Темĕн те курма, темĕн те тӳсме тивет вĕсен, анчах та çамрăк патриотсем нимĕнле йывăрлăхран та хăрамаççĕ, нимĕнле кăткăс лару-тăрура та аптраса ӳкмеççĕ, хăйсен тусĕсемпе — Сережăпа Ваççа Авдеевсемпе хаяр тăшмана хирĕç пыракан кĕрешĕве хăюллăн хутшăнаççĕ. Юра Репкин Сережăпа Ваççана: «Хальхи вăхăтра вет... фронта кайнисем вырăнне тăмалла! — тет.— Фашистсене хăваласа янă хыççăн кашниченех ыйтаççĕ акă: вăрçă вăхăтĕнче эсĕ мĕн турăн? Çĕнтерӳ валли мĕн панă?»

Типографи директорĕ пулăшнипе çамрăк патриотсем кĕçех типографире ĕçлеме пуçлаççĕ. Хулана нимĕç фашисчĕсем пырса кĕрсен вара вĕсем тăшмана хирĕç кĕрешме чĕнекен листовкăсем пичетлеççĕ, хăйсемех хӳмесем çумне çыпăçтарса çӳреççĕ, халăх хушшине салатас-

çĕ. Паллах, çав вăхăтра вăрçă çинчен, Хĕрлĕ Çар çинчен, фашистсен тискерлĕхĕсем çинчен, вĕсене хирĕç ним хăрамасăр кĕрешмелли çинчен чăн сăмах сарасси питĕ йывăр та кăткăс ĕç пулнă. Ку çеç те мар-ха, çамрăк паттăрсем аслисем вĕрентнипеле фашистсем иртсе çӳрекен çулсем çине минăсем лартса вĕсен машинисене, салтакĕсене сывлăша сирпĕтеççĕ. Пĕррехинче вĕсем вăрманта фашистсем йывăр амантнă совет воинĕсем патне пырса тухаççĕ, вĕсене хулана вăрттăн илсе пырса шанчăклă вырăна пытараççĕ, унтан Авдеевсен аппăшĕ пулăшнипе сиплесе сыватаççĕ. Аманнă воинсен шухăш-кăмăлне те автор вулакана хумхантармалла çырса кăтартать. Подвалта дежурствăра пулнă чух, сăмахран, Юра Репкинпа аманнă лейтенант хушшинче ак çакăн пек калаçу пулса иртет:

— «Эс ăçтисем, пичче? — тесе ыйтатăп эпĕ, ун çумне ларса.

— Атăл таврашĕнчен...— тет лейтенант.— Илтнĕ-и эс Атăл çинчен?

— Питĕ лайăх пĕлетĕп, вăл Калинин облаçĕнчен пуçланса Каспи тинĕсĕ таран юхать.

— Тĕрĕс,— тет лейтенант. Унтан сывлăш çаварса илет те куçне уçмасăрах, ерипен, хăйăлтатакан сасăпа калама тытăнать.

— Çав Аслă Атăл çинче Чăваш çĕршывĕ пур... Калама çук илемлĕ, чечекленекен çĕршыв... Унта паттăр Чапаев çуралнă... Эпĕ те çавăнта çуралса ӳснĕ... Анчах эпĕ паттăр ĕçсемех тăваймарăм-ха ку таранччен. Пĕтĕмпе те темиçе фашиста çеç тĕп тунă. Манăн вĕсене çĕр, икçĕр, пинĕ-пинĕпе пĕтересчĕ. Унтан вĕсен шуйттан йăвине, Берлинне, кайса аркатасчĕ. Сывалаосчĕ часрах!.. Сываласчĕ те каллех çапăçава каясчĕ.

Вăл кăштах чĕнмесĕр выртать те, вĕри тутине çуласа, шăлĕсене шатăрт-таттарса илет.

— Фашистсене Атăл шывне ĕçтерес марччĕ...

— Вĕсем Атăл шывне ĕçесси нихçан та пулмасть, пичче, нихçан та пулмасть,— тесе лăплантаратăп эпĕ ăна».

Икĕ совет çынни: пĕри — лейтенант, тепри — пионер. Иккĕшин те пĕр шухăш, пĕр ĕмĕт. Вĕсем нихçан та тăшман умĕнче пуçа чиксе тăрас çук—хамăр Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр.

Сережăпа Юра подвала Хĕрлĕ Çар çĕнтерсе килни çинчен пĕлтерекен листовкăсем илсе пырсан, лейтенант

вĕсене çав тери хыпăнса вулама пуçлать. «Куçĕсем енчен енне сиккелесе кăна тăраççĕ. Тепĕр минутран унăн сăнĕ çуталса кайрĕ, хăй темшĕн хашкама пуçларĕ, унăн тутисем кулма пуçларĕç... Листовкăна вуласа тухсан вара пачах та чирлĕ мар çын пек сиксе тăрса, юлташĕсене силлеме тытăнчĕ.

— Тăрăр-ха! Тăрăр! Викулов! Кукушкин! Юрамасть çывăрма!..

— Мĕн пулнă? Мĕн пулнă? — хăраса вăранса кайрĕç лешсем.

— Тем те пулнă! Хĕвел урăх майлă çаврăнма тытăннă, хĕл варринче чечексем çуралма пуçланă.

... Ну ĕнтĕ, ниçта кайса кĕме, ним тума пĕлмерĕç вара пирĕн салтаксем! Пĕр-пĕрне ыталаççĕ, пĕрне-пĕри чуптăваççĕ. Савăннипе пирĕн те куççулĕ тухса кайрĕ».

Чăнах та нумай паттăр ĕç тăваççĕ ачасем. Юлашкинчен, Мускав енчен çĕнтерсе килекен Хĕрлĕ Çар вĕсен тăван хулине ирĕке кăларнă чух, тăшманпа алла пăшал тытса çапăçаççĕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсене хĕвеланăçнелле хăваласа ярсан, вĕсем фашистсен пусмăрĕ вăхăтĕнче сывă юлнă рабочисемпе пĕрле каллех ĕçе тытăнаççĕ. «Эпир пĕр-пĕрне алă парса хыттăн чăмăртарамăр. Çакă вăл эпир малашне хамăрăн çĕнтерÿшĕн, хамăрăн телейшĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшса, вăя шеллемесĕр ĕçлеме хатĕррине палăртса çирĕплетрĕ»,— тет таса чун-чĕреллĕ, хастар та ыра кăмăллă Юра Репкин.

Çамрăк паттăрсем çинчен çырнă «Пĕр хулара» повеçе хумханмасăр вулама çук.«Повеçри ачасемпе ватă çынсен сăнарĕсем ĕненмелле пулса тухнă, кĕнекене вуланă хыççăн вĕсене манмастăн, нумайччен асра усратăн»,— тесе хак пачĕ ăна пирĕн паллă критик В. Долгов Л. Агаковăн «Вăрçă кĕрленĕ чух...» кĕнекинчи хыççăмахра.

«Салтак ачисем» повесть Леонид Агаков ача-пăча валли çырнă произведенисем хушшинче уйрăмах палăрса тăрать. Ăна пирĕн критиксем те (В. Долгов, М. Юрьев), вулакансем те хак парса ырларĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ çак повесть вырăсла та икĕ хутчен çапăнса тухрĕ.

Произведенире сăнласа кăтартнă ĕçсем вăрçă вăхăтĕнче чăваш ялĕнче пулса иртеççĕ.

... 1941 çул. Хура тинĕсрен пуçласа Пăрлă океан таран хаяр та хăрушă вăрçă ахăрашать. Кĕркунне. Сивĕ. Ăсар-писер вăрçă пыракан вырăнсенчен тăшман пусмăрĕнче асапланса вилесрен хăтăлас тесе, хĕрарăмсем, ваттисемпе пĕчĕк ачасем хĕвелтухăçнелле, вăрçă çук çĕрел-

ле кӳҫса килеҫҫӗ. Вӗсем Чӑваш республикине те ҫитеҫҫӗ. Темиҫе ҫемье — эстонецсемпе белоруссем — «Ҫӗнӗ самана» колхоза пырса лекеҫҫӗ. Ҫав тери ачашшӑн, чӑн-чӑн тӑванла кӗтсе илеҫҫӗ вӗсене чӑваш ялӗнче. Инҫетрен кӳҫса килнӗ ачасемпе «Ҫӗнӗ самана» колхоз ачисем хушшинче иксӗлми ҫирӗп туслӑх пуҫланать. Вӗсем пӗрле ялхуҫалӑхӗнче, вӑрҫа кайнӑ ашшӗсемпе пиччӗшӗсем вырӑнне тӑрса, ҫитӗннисемпе тан ӗҫлеҫҫӗ, тӑрӑшса вӗренеҫҫӗ, пӗр-пӗрне ҫывӑххӑн пулӑшаҫҫӗ. Ҫапла вара писатель пирӗн ҫӗршыври тӑванла халӑхсем хушшинчи туслӑх хурҫӑ пек ҫирӗп пулнине, вӑл нихҫан та арканас ҫуккине ӗненмелле те питӗ лайӑх кӑтартса панӑ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, тылри мӗнпур халӑх «Пӗтӗмпех фронт валли! Пӗтӗмпех ҫӗнтерӳ валли!» лозунгпа ырмиканми ӗҫленӗ чух, фронта ачасем те ҫав тери нумай пулӑшнӑ. «Ҫӗнӗ самана» колхозра та акӑ утмӑлтан иртнӗ колхоз председателӗ Назар Егорччӑ, Рина Петровна учительница ертсе пынипе ачасем фронт валли апат-ҫимӗҫ, кӗпе-тумтир, алсиш-чӑлха пуҫтараҫҫӗ, госпитальте сывалакан ҫар ҫыннисем патне кайса ҫӳреҫҫӗ, вӗсене хӑйсен вӑйӗпе концертсем кӑтартаҫҫӗ. Ачасем амӑшӗсемпе тата аппӑшӗсемпе пӗрле тырӑ акаҫҫӗ, выраҫҫӗ, кӗлте турттараҫҫӗ, авӑн ҫапаҫҫӗ, выльӑх-чӗрлӗх пӑхаҫҫӗ, «фронт пахчи» тӑваҫҫӗ.

Салтак ачисем — Евгенипе Аркаш — чӑн-чӑн ҫамрӑк патриотсем. Вӗсем килте те, колхозра та канӑҫа пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ, Белоруссипе Эстонирен килнӗ юлташӗсене вырӑсла та чӑвашла калаҫма вӗрентеҫҫӗ, хӑйсемпе пӗрле концертсемпе субботниксем иртternӗ ҫӗре хутшӑнтараҫҫӗ... Л Агаков хӑйӗн ҫамрӑк геройӗсен психологине, шухӑш-кӑмӑлне лайӑх пӗлет. Пурте вӗсен ача-пӑчаллӑ пулса пырать, пурне те хӑйсем ӑнланнӑ пек тума пултараҫҫӗ, ҫав вӑхӑтрах кирек хӑш ӗҫе те аслисенчен вӗренсе пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ача-пӑча ӗҫӗ ача вӑййи кӑна пулса юлмасть.

Повесть пӗтӗм халӑхӑн чаплӑран та чаплӑ уявӗ — Аслӑ Ҫӗнтерӳ кунӗ ҫитнипе вӗҫленет; Совет Ҫарӗ фашистла Германин ҫарне тӗпӗ-йӗрӗпех аркатса тӑкнӑ, тӑшмана ҫӗнтернӗ паттӑр совет салтакӗсем тӑван килӗсене таврӑнаҫҫӗ, Чӑваш ҫӗршывне эвакуаци йӗркипе кӳҫса килнӗ ҫемьесем хӑйсем ҫуралса ӳснӗ вырӑнсене каяҫҫӗ. «Киле пирӗн васкасах каяс пулать. Пурнӑҫ тумалла. Ҫӗнӗ пурнӑҫ...» — тет Пауль Киккас. Чӑваш йӑлипе Назар Егорччӑ, туссене ятарласа тупарнӑ кӑпӑклӑ сӑра ӗҫтерсе, вис-

шер хутчен чуптуса тухать. Унпа пĕрлех вĕсене пĕтĕм ял ăшă кăмăлпа ăсатать.

Аслă Çĕнтерӳ! Тинех тĕп пулчĕ ылханлă фашист эшкерĕ, тинех шалчи тулчĕ унăн. Çак савăнăçлă хыпар ялта мĕнле сарални çинчен Л. Агаков пĕтĕм чуна çĕклентерсе хускатмалла çырса кăтартнă. Акă, хирте ачасем суха тăваççĕ. «Аркаш гилхепе тытса лашасене касă йĕрĕпе уттарать, Евгени плуг хыççăн пырать. Сухаламалли лаптăк пысăк, йĕри-тавра пĕр-ик километр та пулать пулĕ... Таврара çав тери шăп, тӳпере çеç тăрисем каçса кайса юрлаççĕ... Ачасен çывăрасси те килет, уя прех тухнă вĕт-ха вĕсем. Анчах çывăрма юрамасть, ĕçлемелле. Пĕр чарăнмасăр, çине тăрсах ĕçлемелле. Вăхăт кĕтмест. Ака-суха тунă чух пĕр кун та тем пекех тăрать, ялти ачасем ăна пит лайăх пĕлеççĕ».

Çынçисен Гитлера пирĕннисем ярса тытсан мĕн тàвасси çинчен, вăрçă пĕтсен ăçта вĕренме каясси çинчен ачасем тĕплĕ шухăшлаççĕ. Ĕмĕчĕсем пысăк, анчах вăрçă пĕтмен-ха. Çапла калаçнă вăхăтра вĕсем ялтан пĕр юланут ыткăнса килнине кураççĕ. «Малтан Аркаш çыннине паллаймарĕ — те ача, те мăн çын, лашине пĕрмай хулăпа çапса, урисемпе аякĕсенчен тапса пынине çеç лайăх курчĕ. Унтан, юланут самаях çывхарсан, уйăрса илчĕ: председатель иккен. Назар Егорччă... Карттусне те тăхăнман, çара пуçăнах, çав тери васкавлă курăнать.

— Ташлăр, ачасем! — тăрук кăшкăрчĕ старик вĕсене хирĕç, хулă тытнă аллине çӳлелле çĕклесе.— Ташлăр, юрлăр, сикĕр!.. Çĕнтерӳ, ачасем, çĕнтерӳ-ӳ! Пирĕннисем Германие йăлт çĕнтерчĕ... Кончал Гитлер, капут!»

Çăмăл килмерĕ çав Çĕнтерӳ Совет çĕршывĕнчи халăхсемшĕн. Пайтах юн тăкма, йывăртан йывăр çухатусем тӳссе ирттерме, çĕрне-кунне пĕлмесĕр тар юхтарса ĕçлеме тиврĕ ăна çывхартас тесе. Çак пархатарлă та чыслă ĕçшĕн Чăваш республикинчи ачасем те хăйсем мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех турĕç. Вĕсем вăрçă вăхăтĕнче фронтра çапăçакан ашшĕсемпе пиччĕшĕсем вырăнне станоксем умне тăчĕç, уй-хирте тухăçлă тырпул акса çитĕнтерес, фронта май килнĕ таран ытларах пулăшас тесе ырми-канми тăрăшрĕç. Çавăн пекех хастар ачасене санласа кăтартать те Леонид Агаков писатель хăйĕн кĕнекинче.

Повеçри ырă çынсем хушшинче вулаканшăн ырă кăмăллă та çутă ĕмĕтлĕ колхоз председателĕ Назар Егорчча, вату эстонец Пауль Киккас, Рина Петровна

учительница, Антонина Клементьевна медсестра сăнарĕсем уйрăмах çывăх та хаклă. Вĕсем пурте тӳрĕ чунлă, çирĕп те таса шухăш-кăмăллă совет çыннисем. Вĕсене нимĕнле ĕç те, нимĕнле йывăрлăх та хăратмасть, пуçа устармасть, нихăшĕ те: «Эпĕ пултараймастăп», «маншăн вăл йывăр пулать», «манăн вăхăт çук», тесе турткалашса тăмасть, вĕсем ытти колхозниксемпе пĕрле вăй çитнĕ таран чунĕсене парса ĕçлеççĕ.

Паллах, çав вăхăтра халăх ĕçĕнчен пăрăнма, харпăр хăйĕншĕн кăна тăрăшма пăхакан уйрăм ханттарсем те гупăнкаланă. Писатель хăйĕн повеçĕнче çав йышши типсене те сăнламасăр иртсе кайман. Евгенипе Аркаш вĕренекен класрах, сăмахран, Палля ятлă ача пур. Юлташĕсем колхозра е шкулта ĕçленĕ чух вăл яра кунах сулланса çӳрет, йĕркеллĕ вĕренмест, дисциплини те унăн начар. Мĕншĕн-ха вăл ачаранах çапла ӳсет?

Акă мĕншĕн иккен: унăн амăшĕ те, куккăшĕ те хура ăшчиклĕ, общество шучĕпе ырă курма, ăна сăтăр тума хăнăхнă çынсем-мĕн. Амăшĕ пĕрмаях сăмакун юхтарса, çынсене улталаса пурăнать: куккăшĕ вăрçă вăхăтĕнчех вăрă-хурахсемпе пĕрле çапкаланса çӳрет. Палля тата унăн амăшĕпе куккăшĕ çинчен çырса кăтартнă вырансем пурнăçра усал ĕç тăвакан этем чысне çухатнă çынсемпе çирĕппĕн кĕрешме кирлине асăрхаттараççĕ, ача-пăчана килте те, шкулта та, обществăра та мĕнле вĕрентсе ӳстермелли çинчен шухăшлаттараççĕ.

Повеçре сăнласа кăтартнă геройсем чунĕсемпе хытса, пăнтăхса ларнă çынсем мар, вĕсем хĕрӳллĕ ĕçре, коллективра улшăнса, ӳссе пыраççĕ. Çакна эпир Палля та, çавăн пекех тепĕр чарусăр ача Колька та, пурăна-киле юсаннинчен, тĕрĕс çул çине тăрса, колхозра ыттисемпе танах йĕркеллĕ ĕçлесе пурăнма тытăннинчен аван куратпăр.

«Салтак ачисем» повесть вырăсла та икĕ хут пичетленсе тухнă, терĕмĕр. Çавна май вырăс авторĕсем те ăна ырласа темиçе статья çырчĕç, писатель патне вулакансенчен тĕрлĕ çырусем килеççĕ.

«Эпĕ Сирĕн «Салтак ачисем» кĕнекене савăнса вуласа тухрăм, çак интереслĕ повеçшĕн Сире питĕ тав тăватăп,— тесе çырать Мари республикинчи Кокшайск ялĕнче 7-мĕш класра вĕренекен В. Самсонова.— Сирĕн кĕнекĕртен эпĕ чăваш ачисен Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçĕ çинчен нумай пĕлтĕм. Мана икĕ тус — Аркадипе Илюш питĕ килĕшрĕç. Пĕлместĕр-и Эсир: ăçта-

ши халĕ вĕсем? Пауль, Ильмар, Амали, Ян, Эльга Эстоние чиперех çитнĕ-ши? Ăçта пурăнаççĕ халĕ вĕсем?»

Акă, тепĕр çыру. «Ку кĕнекене вуласан, эпир чăваш ачисемпе белорус тата эстони ачисем хушшинчи вăрçă çулĕсенчи çирĕп туслăх çинчен пĕлтĕмĕр... Вăл пирĕн ачасене Чăваш çĕршывĕпе хамăр халăх çинчен, туслăх çинчен нумай интереслине пĕлме пулăшрĕ... Эпир Сирĕн кĕнекĕр тăрăх вулакансен конференцине ирттертĕмĕр, ăна Советлă Социализмлă республикăсен Союзне туса хуни 50 çул çитнипе çыхăнтартăмăр. Ачасем Эспр кĕнекере çырса кăтартнă ĕçсене чăн пурнăçранах илни-илменнине питĕ пĕлесшĕн. Мĕнле-ши Илюшпа Аркашăн малашнехи кунçулĕ? Пирĕн ачасем çав тери килĕштернĕ Киккас килйышĕ çинчен халĕ мĕн пĕлетĕр эсир?.. Питĕ те тĕл пулас килет Сирĕнпе».

Çыру Улатăр районĕнчи ял библиотекинче ĕçлекенсенчен килнĕ. Вăл та Л. Агаков кĕнеки çамрăксене Тăван çĕршывăн усăллă çынни пулма, халăхшăн ырă ĕçсем тума хавхалантаракан паха произведени пулса тáни çинчен калать.

Юлашкинчен вулакансене çакна асăрхаттарас терĕмĕр. «Салтак ачисем» кĕнекери икĕ тусăн ячĕсем — Евгенипе Аркаш, повеçĕн вырăсла вариантĕнче вара Евгени ята Илле (Илюш) тесе улăштарнă.

«Пĕр хулара» тата «Салтак ачисем» повеçсем 1973 çулта Л. Агаковăн «Вăрçă кĕрленĕ чух..» кĕнекинче тепĕр хут çапăнса тухрĕç. Çав кĕнекерех Миша Телегин разведчикпа Наташа Синичкина хĕрачан вăрçăри паттăрлăхне сăнласа кăтартакан «Кăсăя» ятлă тепĕр пысăках мар повесть те пур.

Повеçре Телегин Наташăна йăмăк тесе чĕнет. Салтаксемпе медсанбатра ĕçлекенсем вара ăна «Кăсăя» теççĕ.

Çирĕп чун-чĕреллĕ, харсăр çамрăксем çинчен вулакансене Атнаров лейтенант, дивизи хаçачĕн редакцийĕнче ĕçлекенскер, каласа кăтартать. Йывăр аманнă Наташăна Телегин сержант ыраш хушшинче тупса вилĕмрен çăлнă иккен. Сывалнă хыççăн çак «полк хĕрĕ» медсанбатра санитаркăра ĕçлеме пуçлать, пĕр хĕрарăм-врач ăна хăй патне усрава илет. Аманнă салтаксем хушшинче ĕçленĕ чухне Кăсăя пирĕннисене нимĕç шпионне тытма пулăшать. Çавăн пек сыхăлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăлаççĕ.

«Эпир Германи çĕрĕ тăрăх утрăмăр, шалтан шала кĕрсе пытăмăр. Ку ĕнтĕ 1945 çул пуçламăшĕнче пулчĕ,—

тет Атнаров лейтенант. Анчах Германие çитсе кĕрсен, Телегин разведчик йывăр аманать те тек вара фронта таврăнаймасть. Вал малашне Магнитогорск хулинчи военкоматра ĕçлеме тытăнать. Медсанбатпа пĕрле Кăсăя Хĕвелтухăç Пруссине çитиччен каять. Кунта та вăл паттăр ĕç тăвать: пĕр хулана пырса кĕрсен, фашистсем тупăсемпе те пулеметсемпе перс тăнине пăхмасăр, нимĕç ачине вилĕмрен çăлса тухать — хăй йывăр аманать. Ăна кĕçех сывалма тылри госпитале ăсатаççĕ...

Аслă Çĕнтерӳ кунĕ çирĕм çул тултарнине вăрçă ветеранĕсем чаплăн уявлама хатĕрленеççĕ. Кĕтмен-туман çĕртенех Атнаров çыру илет. Калама çук савнăçлă çыру: Атнарова Телегинпа Кăсăя хăнана чĕнсе янă иккен. Вĕсем халь пĕрле ĕçлеççĕ, пĕрле пурăнаççĕ. Иккĕшĕ те пĕр хушаматлă, телейлĕ.

Куратпăр ĕнтĕ, «Кăсăя» повеçĕн сюжечĕ кăткăс мар. Апла пулин те унта вăрçă кĕрленĕ çулсенчи çамрăксен паттăр ĕçĕсем çинчен пысăк туйăмпа каласа кăтартнă.

Çак повесть пирки В. Долгов критик çырнă йĕркесем аса килеççĕ: «Наташа Синичкина сăнарĕ—питĕ кăмăллă, ырă сăнар,— тет вăл.— Миша Телегин разведчик сăнарĕ те куçран каймасть; вăл тăшмана хирĕç пĕр шиксĕр, хăюллă та паттăр кĕрешекен совет воинĕ, комсомолец, каярахпа — коммунист. Автор медсанбатри врачсен сăнарĕсене те лайăх ӳкерсе панă, вĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлекен, аманнă воинсене хăвăртрах сыватас тесе вăйхалне шеллемесĕр тăрăшакан çынсем». (Л. Агаков «Вăрçă кĕрленĕ чух...», 1973 ç., 455 стр.)

Фронтри пурнăçа, вăрçă çыннисене Л. Агаков лайăх пĕлет, туллин те тĕрĕс сăнласа парать. Çакна совет çыннисен Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи паттăр ĕçĕсене кăтартса паракан хăшпĕр сăнарсемпе кĕскен паллашнинчен те аванах туйма пулать. Çав асран кайми сăнарсем ку чухнехи çамрăк ăрушăн Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратма, тăшмансене хирĕç яланах хăюллăн кĕрешме вĕрентекен, чаплă тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Эпир пăхса тухнă произведенисен чи лайăх енĕсенчен пĕри вăл — Совет Союзĕнчи халăхсен нихçан арканми тăванла туслăхне туллин çутатса пани. Вĕсенче пуринче те интернационализм туйăмĕ хăватлăн та туллин тапса тăрать. Писатель çакна ăста кăтартса пама пултарни çинчен В. Долгов, А. Артемьев, А. Малов, М. Юрьев статйисенче те тĕп-тĕрĕс палăртса хăварнă. Акă, пĕр-икĕ тĕслĕх çеç илĕпĕр. «Амăш сăмахĕ» (1943) калавра Калу-

га вырăсĕ Березкин, Раздобудько украинец, Палишвили грузин, Эрманберта казах, чăваш ачи Бичурин пĕр ротăра пĕр тăван пек, пĕр шухăш-кăмăлпа çапăçаççĕ. Фашистсем ял çыннисене — ачасене, хĕрарăмсене, ваттисене — пĕр пӳрте питĕрсе илсе çунтарса янине çинчен пĕлсен, вĕсем пĕр çын пек пулса ирсĕр тăшмана тавăрма ыткăнаççĕ... «Пĕр витре шыв» калавра Лабазюк украинец, Абикеев казах, Захаров чăваш, Архипкин вырăс хаяр çапăçу умĕн Коммунистсен партине кĕреççĕ те тепĕр куннех пысăк паттăрлăх кăтартаççĕ. «Ылтăн вăчăра» повеçре вырăс ачи Ванюшка Долбинпа Чăваш республикинчи Сĕнтĕр енчи чăваш ачи Санька партизансене хăюллăн пулăшни, мирлĕ халăхран тем тĕрлĕ мăшкăллакан фашистсен офицерне тĕп туни çинчен нумайлăха асра юлмалла каласа панă...

Леонид Агаков вăрçă темипе çырнă произведенисенче çакăн пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать. Ку хăех ĕнтĕ писатель-патриотăн хăватлă тапса тăракан пултарулăхĕ социализмла реализм меслечĕпе уйрăлми тачă çыхăннине уççăн пĕлтерет.

*1974.*

## ВИÇĔ ПОЭМА

Георгий Орлов — фашистла вăрă-хурахсене хирĕç хĕçпăшал тытса çапăçнă поэт. Литература ĕçне вăл Тăван çĕршыв Аслă вăрçи хыççăн тытăнчĕ. Пуринчен ытла поэт паянхи пурнăç çинчен, Совет çĕршывĕн илемĕпе тăван тавралăх, пуянлăхĕ çинчен лирикăллă сăвăсем çырать. Анчах унăн пултарулăхĕнче совет çынни Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хаяр тăшмана хирĕç паттăррăн кĕрешнине кăтартакан сăвăсемпе поэмăсем те сахал мар. Вĕсен шутĕнче юлашки виç-тăватă çул хушшинче çырнă «Экзамен», «Вилĕмрен те вăйлăрах» тата «Совет салтакĕ» поэмăсем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем «Тантăшсем» ятлă кĕнекере çапăннă. «Совет салтакĕпе» «Экзамен» поэмăсемшĕн Г. Орлов Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕ пулчĕ.

«Эх, шухăш, шухăш... Вĕççĕр шухăш. Мĕнле-ха хăтăлăн унран?» çак сăмахсемпе пуçлать поэт хăйĕн «Экзамен» поэмине. Чăнах та, фронтра çапăçнă сăвăç иртнĕ вăрçăн хаяр кунĕсене асра тытать, вĕсем çинчен вулакан-

сене хумханмалла та витĕмлĕ каласа парать, мир вăйĕсене куллен-кун ӳстерме, çирĕплетме чĕнет.

Тăван ялта, тăван килте пурнăç телейлĕ, савăнăçлă. Ача-пăча хĕпĕртесех шкула çӳрет. Кĕçех акă экзаменсем пуçланмалла. Шкул ачисене курсан, вĕсен хаваслă сассисене илтсен, поэт хăйĕн çамрăклăхне аса илет. «Шкул çулĕ — иртнĕ пурнăç пайĕ — паян та, халь те асăмрах»,— тет вăл.

Мĕн чухлĕ çутă ĕмĕт-шухăш пулнă ырра çеç кĕтнĕ поэтпа унăн юлташĕсен! Пĕри агроном пулма шутланă, тепри — машинист, хăшĕ тата «Карап çӳретнĕ Çурçĕрте е тупнă вăл алмаз тăприйĕ»...

Тĕллев те çывăхчĕ, анчах
Сасартăк тухрĕ сасă:
— Вăрçă!
Кисретрĕ вăл киле-çурта,
Ĕçхалăхне хаяррăн вăрчĕ
Унччен тĕнче курман вута,
Арканчĕ ĕмĕт. Çын çул-йĕрĕ
Пăтрашрĕ çулăм-тĕтĕмпе.
Тăван çĕр çунчĕ кунĕн-çĕрĕн,
Кĕрешрĕ пурнăç вилĕмпе.

Фашистла Германи Совет Союзне вăрă-хурахла килсе тапăнчĕ. Çавна пула пирĕн халăхăн мирлĕ ĕçĕ татăлчĕ. Тăван çĕршыв умне калама çук пысăк хăрушлăх тухса тăчĕ. Шкулта экзамен тытма хатĕрленекен çамрăксен те е ашшĕсемпе пиччĕшĕсен ĕç вырăнĕсене йышăнмалла пулчĕ, е фронтра хĕçпăшал тытса ылханлă фашистсене хирĕç çапăçма тиврĕ. Фронтра та, тылра та нимĕнле йывăрлăха та парăнмарĕç çамрăк патриотсем, нимĕнле хĕн-асап умĕнче те чунпа хуçăлса пуç усмарĕç.

Тăван çĕршыва чун-чĕререн юратса паттăррăн хӳтĕлени, уншăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешни, фашизмăн хура вăйĕсене çĕнтерни — совет çыннисемшĕн чăннипех те пысăк экзамен пулчĕ. Вăл социализмлă патшалăхăн никам аркатайми тĕрекĕне вăйне яр-уççăн кăтартса пачĕ.

«Эх, шухăш, шухăш... Вĕççĕр шухăш! Пурнасчĕ унсăрăн пĕр хушă,— анчах май çуккă»,— тет поэт. Мĕншĕн тесен вăрçă хăрушлăхĕ паян та пур-ха, пирĕн планета çинче унта та кунта империалистсем вутпа выляççĕ, ют çĕрсенче атом базисем тăваççĕ. Çакна пирĕн ялан асра тытса тăмалла, пур майсемпе те мире хӳтĕлемелле, Тă-

ван ҫӗршыва тата вӑйлӑрах, ҫирӗпрех пулма пӗтӗм хала парса ӗҫлемелле. Мирлӗ куншӑн ҫирӗппӗн кӗрешме поэт чӗререн тухакан ҫулӑмлӑ сӑмахсемпе чӗнет:

«Мӗн чухлӗ пур вӑй-пултарулӑх —
Ҫӗршывӑма парас ӑна!» —
Тесе, чунпа ҫунса, ӗҫ тутӑр
Эппин, кашниййӗ кулленех.
Эпир шӑратнӑ хурҫӑ пултӑр
Никамӗнчен те ҫирӗпрех.
Ӗҫхалӑхне вӑй кӗртнӗ туслӑх
Вӑйлантӑр вӑхӑт хушнӑ пек.
Тӑван ҫӗре вара ҫав хурлӑх
Ӗнтеймӗ атом вучӗпе.

Иртнӗ вӑрҫӑ ҫулӗсене, совет ҫыннисен шухӑш-кӑмӑлне, ӗҫне-хӗлне Г. Орлов витӗмлӗ, ӗненмелле кӑтартнӑ. Поэмӑра кашни сӑмах, кашни йӗрке, калас тенӗ шухӑш— хӑй вырӑнӗнче. Вӑл, паллах, поэт чӗлхе тӗлӗшӗпе ҫине тӑрса, тимлесе ӗҫленинчен килет.

«Вилӗмрен те вӑйлӑрах» поэмӑра Павел Силин разведчикӑн вӑрҫӑри, пуринчен ытла нимӗҫсен тылӗнчи, хӑюллӑ та паттӑр ӗҫӗсене сӑнласа кӑтартнӑ.

Поэт кунта вулакана геройпа тӗплӗн паллаштарма тӑрӑшнӑ. Ун ҫуралнӑ, ӳснӗ килӗ — анлӑ Атӑл хӗрринче. Хӑй ҫинчен вӑл чылай вӑхӑт ниҫта та ҫырса пӗлтереймен. Нимӗҫ тылӗнче ик эрне разведкӑра пулнӑ, комдивӑн ывӑлне вилӗмрен ҫӑлнӑ... Ак генерал ӑна ҫӗнӗ ӗҫ хушать. Анчах паттӑр разведчик тан мар ҫапӑҫура вӑхӑтсӑр пуҫ хурать: фашистсем хупӑрласа илсен·

Совет ҫыннисем парӑнма ҫуралман,
Ҫӗршывӑн чысне вараламӗҫ нихҫан! —

тесе кӑшкӑрать те хӑй умне вӑл граната пӑрахать... Ҫапла вара таса чунлӑ разведчикӑн паттӑр кунҫулӗ татӑлать.

Г. Орлов поэма геройӗ Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн юратнине, вӑл килес Ҫӗнтерӳшӗн пӗтӗм вӑй-хӑватпа ҫапӑҫнине лайӑх кӑтартса панӑ. Павел Силин — салтак-патриот. Унӑн ашшӗпе пиччӗшӗ те фронтра пуҫ хунӑ, амӑшӗ пӗччēнех юлнӑ. Вӑрҫӑ хирӗнче вӑл тӑван ялне, амӑшне аса илсе ҫапла калать:

Анне!..
Кĕтетĕн мана кунсерен...
Ан йĕр — ман пирки хут илсен.
Ўкетĕп сире сыхласа,
Тăван çĕршыва юратса.
Ан тив, юрату ку çавах
Хаяр вилĕмрен вăйлăрах.

Тăван çĕршыва юратни хаяр вилĕмрен вăйлăрах! Çакă пулать те ĕнтĕ поэмăн тĕп шухăшĕ. Автор ăна пысăк туйăмпа, фашистсемпе хаяррăн кĕрешме хавхалантаракан сăмахсемпе çырнă.

«Совет салтакĕ» поэма та чăн-чăн патриотла туйăмпа çырнă паха произведени. Поэт вăрçă хирĕнчи картинăсене, çапăçу эпизочĕсене, совет салтакĕн тĕлĕнмелле паттăрлăхне куç умне тухса тăмалла сăнласа кăтартать. Акă мĕнле кĕтсе илет пĕччен салтак тăшмана:

Юлман патрон пĕрре те,
Уп çук граната та пачах.

Пĕр хўтлĕх юлашки снарячĕ.
Ана вăл тытрĕ тупăрах.
Кĕпçе ăшне те хăйăр ячĕ,
Çакна сиссе пуль, паçăрах.

Умрах фашистсен ушкăнĕсем çывхарса килеççĕ. Вĕсене совет салтакĕ нумайччен чарса тăрать, юлашкинчен хăйĕн туппине хăйпе пĕрлех аркатать.

Вăл паттăр. Мухтава вăл тивĕç.
Вĕренĕр çапăçма управ —
Раççей салтакĕнчен,—

тет нимĕç генералĕ хăйĕн салтакĕсене. «Ак тĕслĕх,— тет вăл.— Пĕлĕр халĕ мĕн вăл пĕр çын!»

Совет салтакĕ вилет, анчах парăнмасть. Ахальтен мар ĕнтĕ тискер тăшман та унăн паттăрлăхĕнчен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнет.

Виçĕ поэми те поэтăн ăсталăхĕ ўссе-çирĕпленсе пынипе çинчен лайăх калать. Апла пулин те кунта асăрханă хăшпĕр çитменлĕхсéне, чĕлхе кăлтăкĕсене кăтартса хăварас килет.

Поэмăсенче ак çакăн майлă тĕрĕс мар е илемсĕртерех

янăракан вырăнсем тĕл пулаççĕ: «Шывсем çырансенчен **тухаслăн** çĕкленнĕ» (11 стр.), «Уринчен вăл суранланчĕ чакнă чух **шăн вăрмана»** (25 стр.), «Ав, перет малти танк пĕрре çех — **сарă тупă** каять **сирпĕнсех»** (29 стр.), «Шуса çитрĕç аран **сар танксем** ĕретпе» (30 стр), **«Чăлпар арканать** лапчăк танк» (32 стр.), «Урать офицер. **Вил улăм пекех** кăвакскер» (37 стр.), **«Пĕтейрĕç пĕр авăкрах** танк хыççăн танк» (46 стр.) т. ыт. те.

Г. Орлов — ĕçе тĕплĕ, васкамасăр тума юратать. Малашне те вăл çамрăк ăрăва патриотла воспитани пама пулăшакан çĕнĕ сăвăсемпе поэмăсем çырасса эпир шанса тăратпăр.

## ÇĔРТЕ ТЕ ÇĔРМЕСТПĔР *

Хусанкай — Совет саманинче вăй илсе çунат сарнă чăваш халăхĕн ятлă юрăçи. Тăван литературăра Петĕр Хусанкай чи малти ретре тăрать. Лирикăллă пĕчĕк сăввисенче те, гражданла çĕкленÿпе çырнă поэмисенче те, чĕре хĕлхемĕ тивертнĕ статйисенче те эпир, вулакансем, унăн пĕр хăйне кăна тивĕçлĕ сассине палласа илетпĕр — Хусанкайла чăн-чăн пысăк Поэт çырнине асăрхатпăр. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл «кĕнекелле» ÿкерчĕксемпе муталантармасть, калас тенĕ шухăша тăван халăх шухăшĕпе ăста çыхăнтарса калать, кăткăс инверсисем туса пуçа минретмест, мĕншĕн тесен тăван чĕлхемĕр ун пек юптаруллă çаврăнăççене ытлах килĕштерсе каймасть, шухăша тÿррĕнех витĕмлĕ калама хистет. Символсем, метафорăсем, танлаштарусем — поэзире мĕнле кăна хăват кирлĕ—пурте пур унăн ,вĕсене пĕрне те тăван халăх ăс-хакăлĕнчен уйăраймастăн. Поэт, эппин, ларам та пĕр çаврăм сăвă çырам-ха, тесе тĕлленмест, чун хавалĕ хушнипе хăй калас тенĕ ĕмĕтне ыттисене те пĕлтересшĕн пулса чунĕ чăтайманнипе çырать. Çавăнпа Петĕр Хусанкай хăватлă пысăк ăста, чăн-чăн халăх поэчĕ. Вырăсла вулăпăр-и ун сăввисене, тутарла-и, пăлхарла-и — кирек ăçта та ăна хамăрăн чăваш поэчĕ çырнине туятпăр.

Нумай-нумай чĕлхесене куçарнă Петĕр Хусанкайăн произведенийĕсене. Вĕсене миллионшар халăх вулать, миллионшар халăх вуласа чăваш халăхĕпе, унăн шухăш-

* *Ку статьяна Илпек Микулайĕпе пĕрле çырнă.*

кӑмӑлӗпе паллашать. Кулленхи ӗҫӗнче Хусанкая тӑван халӑх пултарулӑхӗ, ӑс-хакӑлӗ хӑват парса тӑнӑ, чун хавалне ҫӗклентернӗ. Ку вара этемлӗх цивилизаци мулне пирӗн халӑх та, мӗн пултарнӑ таран, «кӗреҫе пайӗ» хывнине пӗлтерет.

Сӑмах хальхинче «Ҫӗрте те ҫӗрместпӗр» поэма пирки пырать («Ялав» журнал, 6—7-мӗш номерсем, 1968 ҫ.). Хусанкай ҫак поэмӑна граждан вӑрҫинче вӑхӑтсӑр пуҫ хунӑ паттӑр хӗрлӗ салтак «Иван ывӑлӗ Прахур» ҫинчен ҫырнӑ. Прохор Иванов шухӑшласа кӑларнӑ паттӑр мар, вӑл хальхи Элӗк районне кӗрекен Йӑлкӑш ялӗнчи хресчен ачи пулнӑ. Мӗн пӗчӗкрен килти ӗҫе вӗреннӗ: хир ӗҫне ҫӳренӗ, выльӑх пӑхнӑ, ҫитӗнсе ҫитнӗ чух вӑрҫӑ хускалнӑ та вӑл хӗрлӗ салтак пулса тӑнӑ.

Ку поэма пӗрре-ларса ҫырнӑ произведени мар. Ана ҫырас тесе, Петӗр Хусанкай таҫта та ҫитсе курнӑ: вӑл герой ҫуралнӑ ялта та, ӗлӗкхи «Эрмен Пасарӗ», халь «Армянск» текен Крымри хулара та, Сиваш шывӗ хӗрринче те пулнӑ. Нумай ыранӑ, нумай тупнӑ, шухӑшланӑ. Акӑ мӗн калать вӑл ҫавӑн пирки:

Ун чулне ҫитсе эп куртӑм:
Пӗр сӑмахсӑр пуҫ тайса,
Чечек пуҫ кӑшӑлӗ хутӑм,
Тӑтӑм шухӑша кайса,—

тет поэт.

Тӗрлӗ халӑх ячӗ илтӗнет поэмӑра. Кунта эпир Прохорпа пӗрле пыракан Аристарх Антоновна, Шӑнкӑртам тутарӗ Ахметпа, Миклай мариецпа, Файзутдинов Гилемзят тутарпа, Владимир Юрин вырӑспа тата ыттисемпе те паллашатпӑр. Пусмӑрҫӑсене хирӗҫ пур халӑх та ҫӗкленнӗ. Ирӗклӗхшӗн, Совет ҫӗршывӗшӗн, телейлӗ пурнӑҫшӑн! Ҫакӑн пек тӑшманпа ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра сӑваплӑ йыхрав ертсе пынӑ пирӗн Хӗрлӗ Ҫара.

Кӑшт кӑна аса илер-ха, сӑмах май, ӗлӗкхи саманана. Патша чухне мӗнле кӑна мӑшкӑл тӳссе курман-ши пирӗн халӑх: трахом ҫӗршывӗ, Ваҫли Иванч, пушӑт та мунчала, ҫӑпата патшалӑхӗ... Чӑтса чӑтӑм ҫитмен хушӑра, Разинпа Пугачев вӑхӑтӗнчех-ха, чӑваш та, пусмӑрти ытти халӑхсемпе пӗр рете тӑрса, алла кистен тытса, патша тытӑмне хирӗҫ хӑюллӑн ҫапӑҫма тухнӑ. Вырӑссен пӗрремӗш революци ҫулӗсенче пирӗн ҫынсем, пусмӑр саманине кураймасӑр тавраран мул хуҫисемпе пусмӑрҫӑсене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешнӗ. Ленин партийӗ ертсе пынипе Октябрь

революцине чёре хушнипе хутшăнса ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ чух пирĕн салтаксем те тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Совет влаçĕшĕн кĕрешнĕ çулсенче мĕнле кăна паттăрсем пулман-тăр пирĕн çĕршывра! Чапаевпа Павлов, Космовскипе Крепков, ытти çĕршер те пиншер ят илем те чыс кӳрет ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ пирĕн халăха. Çак поэма геройĕ Прохор Иванов çавăн пек геройсенчен пĕри пулнă.

Патша самани вăрçă хыççăн вăрçă хускатнă. Ун чухне чăвашсене «вак халăх», «ют ăру» тесе тăман. Килйышра пĕр вăйпитти çын юлми вăрçа илсе кайнă та юн тăктарнă. Чи тискер вăрçăсенчен пĕри ĕлĕкхи тĕнче вăрçи пулнă. Чăваш ялĕнче ун чух ватти-вĕтти те хĕрарăмсемпе чăлахсем кăна тăрса юлнă. Ыттисене пĕтĕмпе фронта илсе кайнă. Юхăннă хуçалăх, чухăн пурнăç, выçлăх та вилĕм — акă мĕн кӳнĕ пире çав тискер вăрçă. Аслă Ленин, пĕтĕм халăхăн нушаллă пурнăçне витĕр курса тăнă гений, çав хура та тискер пусмăр саманинчен мĕнле хăтăлмаллине пĕртен-пĕр тĕрĕс çул кăтартса пачĕ, коммунистсен партийĕ пĕтĕм халăха ертсе пырса çав ирĕклĕхе тухма кĕрешсе вăй хучĕ. Патша тĕп пулчĕ. Путланчĕ çĕрĕшнĕ йĕрке. Çĕнĕ самана, çĕнĕ йăла аталанать, çĕнĕ вăй илет халь таврара. Çуралнă çĕршыв та халь амаçури мар, вăл халь чăннипех тăван çĕршыв пулса танине пĕтĕм ĕççынни ăнланса илет. Ăна ĕмĕрсĕн кĕрешĕвĕнче вăй та пурнăç хурса çапăçса илчĕ, халь ĕнтĕ çĕнетсе телейлĕ кунçул тума пĕлмелле. Акă мĕнле пысăк ĕç, пысăк ĕмĕт тытать пирĕн халăх.

Анчах патшаран юлнă йăх-яхсем парăнасшăн мар-ха. Хăйсем вилессе сиснĕ тăшмансем, юлашки хевтине пуçтарса, ирĕке тухнă халăха каллех пăхăнтарасшăн пулса, çĕршывра хаяр вăрçă хускатса яраççĕ. Хăйсем тĕллĕн кăна ĕçхалăхне çĕнтерме çуккине чухлаççĕ вĕсем, çавна пула кӳршĕ патшалăхсенчен пулăшу йăлăнаççĕ. Пулăшу кăна-и? Совет самани пĕр хамăр çĕршывра кăна мар, тĕнче ĕçхалăхне çĕклентерсе, пĕтĕм пусмăрçăсене путарма пултарать. Çакна сисекен империалистсем кун канмасăр та çĕр çывăрмасăр Совет çĕршывне интервенципе килсе кĕреççĕ. Антанта — «таса канаш» вĕсен юлашки шанчăкĕ. Америкăра, Франципе, Англипе хывăнаççĕ пире хупăрласа аркатмалли тӳлемсем. Çавсем усранă кĕрт йыттисенчен пĕри Врангель барон пирĕн çĕршывăн кăнтăр чиккинче Крымра окопсем чавса кăшăлланă. Ăна ют çĕршыв пуянĕсем пулăшаççĕ. Танксемпе самолетсем, тупăсемпе етресем илсе çитернĕ вĕсем Совет Çарне хирĕç çапăçма.

Совет Çарĕнчи салтаксенчен пĕри — Прохор Иванов. Вăл тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн çапăçма тухнă хĕрлĕ салтак. Ана, хăйĕн юлташĕсем пекех, ирĕклĕх кирлĕ, çĕр кирлĕ, чипер пурнăç кирлĕ, çавăншăн çапăçса, вăл Совет влаçĕ çĕнтерессе шанса пуçне хума та хатĕр. Шăпах çав салтак çинчен çырнă Хусанкай хăй поэминче.

«Çĕрте те çĕрместпĕр» тени вăл çунатлă сăмах пек илтĕнет пулсан та, кунта аллегориллĕ шухăш мар. Прохор Иванов граждан вăрçинче «ятсăр çухалнă» салтаксенчен пĕри пулнă, ун ӳтне 1935-мĕш çулта, хăй пуç хунă хыççăн 15 çул иртсен, Сиваш шывĕнче тупнă. Тăварлă шывра вăл хăй кăна мар, унăн документчĕсем те çĕрмесĕр сыхланса юлнă.

... 1920-мĕш çул. Революцин виççĕмĕш çулĕ. Каховка. Перекоп. «Крымри тăвансем асапра. Унта ашкăнать улпутсен шурă çарĕ, çапса ватмалла çав çара! Çапатпăр, вататпăр! Крыма хăтаратпăр!» — хĕрӳллĕн чĕнсе калать сăмахне комиссар!

Çак пысăк çапăçу умĕн пирĕн Прахвур, хуткупăс каласа хăйĕн юлташĕсен кăмăлне çĕклентерекенскер, комсомола çырăнать, юлташĕпе пĕрле шуррисем патне хăюллăн кайса «чĕлхе» тытса килет, çар штабĕ валли пысăк ĕç тăвать. Анланать вăл: «Халлĕхе — пăшал пемесĕр ирĕк те лекмест пире...» Акă, «Шывлă-шурлă, тăварлă Сиваш... Çичĕ çухрăм сарлакăш çав кӳлĕ...» Кунта Ленин хушнипе Фрунзе килнĕ, хĕрлĕ салтаксене вăл Октябрь уявĕ ячĕпе салам калать. Фрунзе ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тăшмана тапăнать, ватать, ăна пĕтĕмпе ишсе çĕмĕрет. Винтовкине умне тытса, Прахвур та малалла ыткăнать. Анчах сасартăк «çак юлашки çапăçу!» тесе çĕкленнĕ чăваш ачи Сиваш урлă каçса çитес чух пуçне хурать. Паттăр çапăçса вилет вăл çакăнта, выртса юлать тăварпа варăнса. Юлташĕсем малалла каяççĕ.

Çак поэмăна çырнă чух Петĕр Хусанкай паянхи пусăмран вăй илет.

> Эпир, «вăрçă-вăрçă!» тесе,
> Мĕнпур ĕмĕрхи тискере
> Тĕнче умĕнче питлесе,
> Çĕнетрĕмĕр хамăр çĕре...
> Çĕр пире астутарасшăн:
> «Усрăр çамрăк ăрăва,
> Ан вăрçсамăрччĕ, тархасшăн,
> Ан пĕтерĕр хăвăра...»—

тет вăл.

Ку философилле таран шухăш. Çак шухăш хальхи саманан чи таса, чи сумлă ĕсĕпе ĕмĕтне пĕлтерет. Эпир вăрçасшăн мар. Пирĕн хуласемпе ялсенче çĕнĕрен çĕнĕ çуртсем лартмалла, промышленность предприятийĕсене ӳстермелле, ача-пăчасене пăхса вĕсем валли тата пысăкрах телейлĕ пурнăç тумалла, хурçă шăратмалла, искусствăпа культурăра ĕмĕр-ĕмĕр манăçми произведенисем кăлармалла. Анчах империалистсем ав хăйсен пусмăрлас йăлине пăрахмаççĕ. Пăрахмаççĕ кăна та мар, вĕсем тĕнчен пĕр кĕтессинче е тепĕр кĕтессинче вăрçă-харçă вутне чĕртсех тăраççĕ.

Çапах та ирĕклĕх вăл — халăха пурăнма кирлĕ чăнлăх, вăл — сывлас сывлăш та кулленхи çăкăр-тăвар. Вăл пур çĕрте те вăй илсе çитерсе çĕнтерессе пĕр иккĕленмесĕр шанса тăтăмăр. Социализм идейи — чиаслă идея. Ĕнер вăл пирĕн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтчĕ, паян — хамăр куçпа куракан чăнлăх.

Çавăнпа та вăрçа хирĕç хамăрăн таса вăрçа кĕресси— пирĕн халăхшăн истори суннă парăм. Çавăн пек эпир фашистла Германие хирĕç çапăçса çĕнтертĕмĕр, çавăн пекех ытти агрессорсене те, енчен вĕсем пирĕн çĕршыва вут-çулăмпа тапăнас пулсан, пурсăмăр та, ретĕн-ретĕн тăрса, таса кĕрешĕве тухăпăр.

«Этем вăрçмасса вăй хурать,
Этемлĕхĕн — хăйĕн йĕрки:
Хăш вăрçă — тăвасшăн чура,
Хăш вăрçă—чăн ирĕк пирки»,—

тет поэт, паçăр эпир асăннă шухăша çирĕплетсе.

Поэт пире Прохорпа лайăх паллаштарать, унăн ялйышне кăтартать. Мĕн тунасси пур: ун чухне пĕр Прахвурсен Йăлкăшĕ кăна мар, Çеçпĕлсен Касаккасси те, Ивановсен Слакпуçĕ те, Хусанкайсен Сиктĕрми те—пурте пĕр евĕрлĕ чăваш ялĕсем пулнă. Хурал пӳртне пуçтарăннă ялйыш «сарă хутлă» «Канаша» вуланă, Совет çĕршывĕн хыпарĕсене пĕлме тăрăшнă, шурă çарсем тапăнса килесрен пăшăрханнă. Халăх хăй ĕçне сыхлама кирлĕ иккенне чиперех ăнкарнă: тăван çĕршывшăн та ирĕклĕхшĕн, пулас телейшĕн кĕрешме чĕннĕ ун чух Ленин партийĕ. Куççуль такса та найкăшса мар, ăстăнпа ăнланса, хулпуççине хуткупăс çакса, таса вăрçа тухса кайнă Йăлкăш ялĕнчи чăваш ачи Прахвур Иванов та. Аçта Совет влаçĕн тăшманĕ пур — çавăнта. Ун чухне çамрăк Совет

çĕршывĕн хăрушă тăшманĕ Врангель çарĕ пулнă. Врангель, хăй тавра илешнĕ Раççейри мул хуçисемпе тĕрлĕ пуян-мещен тĕпренчĕкĕсене пуçтарса, ют çĕршыв капиталисчĕсем пулăшнипе вăйлă хĕçпăшалланнă та Совет çĕршывĕн Крым çурутравĕнче хуçаланса тăнă. Çавăнтан вăл пирĕн ирĕклĕхе хупăрлама хĕрĕннĕ.

Прахвур хастарлă салтак пулать, вăл мĕншĕн кĕрешмеллине пĕлет, çапăçура ырă ятне ямасть. «Чăваш ятне ан çĕрт» тени кирек ăçта та ун асĕнчен каймасть. Юлташĕсемпе тан пырса, вăл кулленхи çапăçура пулать.

Пире çак Прахвур вырăс ачипе — Владимир Юринпа туслашса кайни савăнтарать. Вĕсем иккĕшĕ те самана таппине тĕшмĕртекен пулнă ĕнтĕ, идея енчен пĕрле туптанаççĕ, хăшĕ юлташ та хăшĕ тăшман иккенне тĕрĕс ăнланакансем пулаççĕ. Чăваш облаçĕ пулни Прахвура савăнтарать, уншăн Юрин та хĕпĕртет. Ак мĕн калать вăл:

«Тĕрлĕ халăх пурăнать те
Пирĕн аслă Руç тулли,
Ленина халь курăнать-тĕр
Лайăхрах мĕн тумалли».

Ку ĕнтĕ политикăна салтак, майĕпен пулсан та, тĕрĕс ăнланнине пĕлтерет. Мĕн каласси пур, нумай пулмасть ялтан тухнă хресчен ачине политика ыйтăвĕсем каярахпа кăна, шăпах хăйсене кирлĕ чух тенĕ пулăттăмăр, асне киле пуçланă çав. Çак историллĕ те социаллă тапхăра Хусанкай пит тĕрĕс палăртса хăварать. Кунта «кайрăмăр — çĕнтертĕмĕр!» тесе вĕçкĕнленсе каланă сасă çук, «пурăнăпăр-курăпăр» тенĕ май ăнланмалла, çавăн пек пулнă тĕттĕм ялсенче пурăнса курнă хресченĕн кăмăлĕ, çавăн пек вăй илсе аталаннă вĕсен социаллă йăли. Поэт ăна психологи кăшăлĕне хытарса пит тĕплĕн вырнаçтарать.

«... Буржуйсем памастчĕç ĕмĕр
Автономи никама!» —

тет Владимир Юрин, Ленин пирки сăмах хускатсан.

Çак таса шухăш Прахвурăн кĕрешĕвĕнче чун ĕмĕтленнĕ йыхрав пулнă. Вăл çаплах пулнине шанатпăр эпир, Хусанкай пире унталла-кунталла пăркалантармасть, калас тенĕ шухăшне пат татса тӳррĕн калать те, эпир ăна ĕненмесĕр пултараймастпăр.

Çак шухăш паянхи вăхăтпа та шăпах шайлашса тăрать. «Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и — мĕн пурĕ пĕр çăлтăр айне!»— тенĕччĕ Хусанкай «Автономи маршĕ» сăввинче. Илтĕнмест-и-ха, эппин, чăваш халăх поэчĕн вăтăрмĕш çулсенчи сасси халь çырнă поэма сыпăкĕнче те! Пĕр çăлтăр айĕнче пулса, эпир социализмла самана турăмăр, пĕр Хĕрлĕ çăлтăр çутипех эпир коммунизмла саманана та кĕретпĕр.

Прахвур салтакăн кунçулĕ кĕске пулнă. Унăн паттăр пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă. Реквием пек илтĕнеççĕ поэтăн уйрăм йĕркисем:

«Манăн пуçкăшăлăм шанĕ,—
Пит черченкĕ вăл çеçке.
Ытларах сăну сыхланĕ.
Ун та ĕмĕрĕ кĕске.
Чул çинчи çыру якалĕ
Палăк лармĕ ĕмĕрех, —»

тет поэт.

Анчах ку вилле асăнса юрланă юрă мар! Поэмăн ячĕ те çавнах шантарса калать: «Çĕрте те çĕрместпĕр!» Çапла çав пирĕн халăх. Ахальтен мар чăваш ваттисен сăмахĕ: «Шывра та путмастпăр, вутра та çунмастпăр!» — тет. Халь çав сăмах çумне «Çĕрте те çĕрместпĕр!» тени те хутшăнчĕ. Истори палăкĕн чулĕ çĕрмест. Çав палăкăн хисеплĕ чулĕ вырăнне хывăнчĕ ĕнтĕ пирĕн янташ Прохор Иванов ячĕ те. Хусанкай çав строфарах вулакана ак мĕнле каласа шантарать:

«Пурăнать сăмах вăй-халĕ,
Пин çултан та вăл чĕрех».

Ку вара палăк кăна мар. Ку вăл халăх кунçулĕнче ĕмĕртен ĕмĕре халăхпа хăйпе пĕрле пыракан ялав, халăхăн чун хавалĕ, унăн пурнăçĕпе кăмăлĕ.

«Тертлĕ утăм — пин хăлаçлăх,
Шит те питĕ сарлака.
Тав пăшаллă та хутаçлă,
Кĕреçеллĕ салтака!» —

тетпĕр эпир те поэтпа пĕрлех.

Салтак вăл— хамăр çын, вăл совет салтакĕ, совет çĕршывĕн хуралçи, пулас коммунизм саманин чи шан-

чăклă та таса чысĕ. Çавăн пек пулнă та ĕнтĕ çĕрте те çĕрмесĕр юлнă Прохор Иванов, çавăн пекех пулнă унăн юлташĕсем те.

Хусанкайăн «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэми — хальхи хамăр чăваш поэзийĕнчи паха произведенисенчен пĕри. Вăл пĕр поэт çĕнтерĕвĕ кăна мар, пĕтĕм чăваш поэзийĕн çĕнтерĕвĕ. Вулакансем ăна сума суса йышăнчĕç.

Хамăр илтсе пĕлнĕ юрă пек хывăннă «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэма. Вăл пирĕн кулленхи ĕçпе-шухăшпа çыхăнса тăрать. «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэма — телей çĕршывĕшĕн çапăçса вăхăтсăр пуç хунă салтаксен ячĕпе лартнă хисеплĕ палăк, чĕррисемшĕн тесен, вăл хамăр кĕрешсе çирĕплетнĕ социализмла çĕршыва куç шăрçи пек упрама вĕрентет, уншăн таса кăмăлпа тăрса, кирлĕ чух кĕрешмелле пулсан, хастарлăн кĕрешме чĕнет. Çавăн пек илтĕнет поэмăн хăватлă кĕвви.

*1968.*

## ПОЭТ — ВОИН-КОММУНИСТ

Владимир Васильевич Бараев-Сĕрккене эпĕ малтанхи хут 1937 çулта, çуркунне, наукăпа тĕпчев институчĕн библиотекинче тĕл пултăм. Манăн унта Г. Т. Тимофеев çырнă «Тăхăр ял» ятлă этнографилле очеркпа паллашмаллаччĕ. Бараев ăна маларах вуласа тухнă-мĕн. Эпĕ хам çав «Тăхăр яла» кĕрекен Элшел ялĕнче çуралса ӳснине пĕлсен, вăл тӳрех хĕпĕртесе кайрĕ, тем-тем çинчен те ыйтса пĕлчĕ:

— Хăçан каятăн унта? Ял ячĕсем халĕ те улшăнмани-ха? «Тăхăр ял» авторне пĕлекенсем Элшелĕнче пур-и? Эх, çитсе курасчĕ, пĕр-ик эрне те пулин унта пурăнасчĕ, ваттисем сăмахланине итлесчĕ,— терĕ вăл, хавасланса.

Тепрехинче эпир унпа радиокомитетра тĕл пултăмăр. В. Бараев мана хăй ăçта çуралса ӳсни, вĕренни, ĕçлени çинчен, чăваш писателĕсемпе туслă пурăнни çинчен каласа пачĕ. «Эпĕ Тăхăр ял ачисемпе вĕреннĕ-çке, унта ман юлташсем нумай, вĕсем патĕнче ман пулмаллах,— терĕ вăл, çул çине тухас шухăшне пĕлтерсе.—Ман тепĕр «Алипаттăр» пек поэма çырас кăмăл пур-ха. Çавăнпа та чăваш халăх пултарулăхне пикенсех пухас, тĕпчес пулать. Ку вăл — пархатарлă та кирлĕ ĕç, ăна Шупашкарта пурăнса тума çук. Час-часах чăваш ялĕсенче пулмалла,

ватă çынсемпе те, çамрăккисемпе те куçа-куçан тĕл пулса калаçмалла. Анчах Тăхăр яла çитиччен малтан эпĕ хамăн тăван яла кайса килесшĕн-ха»,— пĕлтерчĕ вăл.

Поэтăн тăван ялĕ — Чăваш АССРĕнчи Шăмăршă районне кĕрекен Виçпӳрт Шăмăршă. Кунта вăл 1910 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче, чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. («Чăваш писателĕсем» кĕнекере В. Бараев ноябрĕн 24-мĕшĕнче çуралнă тесе каланă. Ку тĕрĕс мар, поэт хăй ноябрен 18-мĕшĕнче тесе çырнă. Çар документĕсенче те çаплах кăтартнă). Малтан вăл ялти пуçламăш шкултан, унтан Тутар республикинчи Хурăнвар ялĕнчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă; Ульяновскри ялхуçалăх техникумĕнче, Самар (хальхи Куйбышев) хулинчи планпа экономика институтĕнче вĕреннĕ. 1934 çулта Бараев Шупашкара пурăнма куçнă. Кунта вăл Халăх пултарулăх çуртĕнче, радиокомитетра, кĕнеке палатинче, хаçат редакцийĕсенче ĕçленĕ.

Чăваш литературинче Владимир Бараев 10 çула яхăн çеç ĕçлерĕ. Унăн малтанхи произведенийĕсем Куйбышевра тухса тăнă «Колхозник» хаçатпа «Вăтам Атăл» альманахра пичетленнĕччĕ. Унтан вара, Шупашкара килсен, ун ятне час-часах кунти хаçат-журналсенче курма пулатчĕ, радиопа та хăйĕн сăввисене вулатчĕ вăл.

В. Бараевăн сăвви-юррисенче, калавĕсемпе очеркĕсенче çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешекен халăхăн ĕçĕ-хĕлĕ уççăн курăнса тăрать. Поэт çул çӳреме юратнă. Вăл Вăтам Азире те, Кавказра та пулнă, Атăл çинчи пысăк хуласенче пурăннă, Чăваш республики тăрăх нумай çӳренĕ, часчасах вулакансемпе тĕл пулнă. Çапла çӳрени, ырми-канми ĕçлени поэта очерксем валли материал тупма пулăшнă, рабочисемпе колхозниксен ĕçне-хĕлне тĕрĕс кăтартса пама май панă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл хăйĕн пĕр сăввинче Тăван çĕршыв калама çук пысăк та пуяннине, совет халăхĕ пĕр кăмăлпа, пĕр шухăшпа ĕçлесе пурăннине çапла çырса кăтартнă:

Географ, сана кăшт задани парсассăн,
Миçе хут Союзăмăр — шитле.
Эп Магнитогорскинчен кăшкăрсассăн,
Эс Совет-форд заводĕнче итле.

Акă тата пилĕкçуллăхăн хăватне кăтартакан хĕрӳллĕ сăмахсем:

Ыран ирпе
518 гудок пĕр харăс юрлĕç,
Тата татти-сыпписĕр
Хурçă урхамахсем кĕçенĕç,
Пин те хĕрĕх витерен тухса.

Вăрçăччен çырнă сăвăсенче, калавсемпе очерксенче совет индустрин гиганчĕсене, çĕнĕрен çекленекен хуласемпе ялсене В. Бараев хăйне майлă, куç умĕнчи япаласене курнă пек сăнласа кăтартать. Кунта эпĕ поэтăн «Кавказ хăнисем» ятлă пысăк очеркне уйрăмах палăртса хăварасшăн. Ку очерк — Атăл тăрăхĕнчи, Кавказри халăхсен совет саманичи çитĕнĕвĕсене тĕрĕс çутатса паракан произведени.

В. Бараев пултарулăхĕнче «Таврăнсан» калавпа «Сÿнми хĕвел» повеçĕ, «Али-паттăрпа» «Вилĕме çĕнтерекен» поэма-юмахсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене вăл вăрçă пуçланиччен çырнă. Çавăн пек произведенисем татах та çырас ĕмĕтпе пурăнатчĕ вăл. Çав ĕмĕтпех поэт Тăхăр ял таврашĕнче те пуласшăнччĕ. Анчах ĕмĕтленнĕ ĕмĕтне фашизмăн хура вăййĕсем татрĕç.

Совет Союзне фашистла Германи вăрă-хурахла килсе тапăнсан, ик эрнеренех Владимир Бараев салтак шинелĕ тăхăнать. Малтан вăл Иваново хулинчи çар училищинче виçĕ уйăх вĕренет, унтан вара, нимĕç оккупанчĕсем Мускава тапăнса пынă вăхăтра, Малоярославец патĕнче пĕрремĕш хут çапăçăва кĕрет. Çав çапăçура чăваш курсанчĕсем те йышлă пулнă, вĕсем паттăррăн çапăçса хăйсен пултарулăхне кăтартнă. Вĕсене сума суса поэт-воин «Тупа тунă чухне» ятлă сăвă çырать.

Çапăçăва кĕрес умĕн курсантсем присяга параççĕ. Вĕсем комиссарăн хĕрÿллĕ, чĕре патне çитекен сăмахне итлеççĕ. Бараев вара Гитлер салтакĕсене ылханса çапла çырать:

Куç умне килсе тухаç
Автоматлă нимĕçсем,
Ӳсĕр куçпа çуйăхса
Хĕрсен ятне çĕртнисем,
Чĕчĕ ачи аллинчен
Сахăр туртса илнисем,
Ватă старик уринчен
Çăмат хывса илнисем...
Ашкăнаймăр нумайччен,
Хуçăк шăллă йытăсем!

В. Бараев, мӗнпур совет ҫыннисем пекех, тӑшмана ҫӗнтерессе шанса пурӑннӑ, ҫав шанчӑк ӑна фашистла пусмӑрҫӑсене хирӗҫ пынӑ хаяр кӗрешӳре вӑй-хӑват панӑ. Темле йывӑр пулсан та, «Ҫӗнтерӳ пиртех вӑл пулӗ!..» — тет поэт «Юлташа» ятлӑ сӑввинче.

Виҫпӳртре кӗтет аннеҫӗм,
Ывӑлӑм кӗтет.
Нӳрленет шур пурҫӑн тутӑр —
Мӑшӑрӑм йӗрет.
Анчах ан хурлан, юлташӑм,
Маншӑн ан куллян.
Эпир тухрӑмӑр ҫӗршывшӑн,
Тӗп пулӗ тӑшман.

. . . . .

Кам унта хӑравҫӑ чунлӑ.
Пӑрӑн ҫул ҫинчен!
— Кил, Суворовла ҫапар-ха
Вилӗм ҫамкинчен!

Ку сӑвва В. Бараев 1941 ҫулхи ноябрӗн 24-мӗшӗнче ҫырнӑ. Вӑл пирӗн талантлӑ поэтӑмӑр аслӑ Совет ҫӗршывӗн патриочӗ, тӑван халӑхӑн шанчаклӑ ывӑлӗ, паттӑр салтакӗ пулнине питӗ лайӑх кӑтартса парать.

Акӑ тата поэт ҫапӑҫӑва кӗрес умӗн хӑйӗн ывӑлӗ патне ҫырса янӑ сӑвввах илсе пӑхар. Ӑна та вӑл Тӑван ҫӗршыва ҫав тери йывӑр килнӗ вӑхӑтра ҫырнӑ. Урса кайнӑ тӑшман пирӗн ытарайми хуласемпе ялсене чечекленекен вӗҫӗ-хӗррисӗр уй-хирсемпе ешӗл вӑрмансене вӑрҫӑ вучӗпе ҫунтарать, анчах паттӑр совет воине хӑраса ӳкмест, чунпа хуҫӑлса пуҫне усмасть, вӑл Гитлер вӑрӑ-хурахӗсене аркатсан каллех ирӗклӗ те телейлӗ пурнӑҫ пуҫланасса шанать, уншӑн хӑйӗн вӑй-халӗпе пурнӑҫне шеллемесӗр кӗрешме сӑмах парать.

Савнӑ чунӑм, ҫитӗн эсӗ,
Аҫуна ан ман.
Вӑл путман шыва кӗрсен те,
Вӑл вутра ҫунман.
Вӑхӑт ҫитӗ, мирлӗх ҫитӗ,
Каймӗ ҫын килтен,
Садри кайӑк пек телейлӗ
Пурӑнӗ этем.

1942 çулхи октябрь уйăхĕнче В. Бараев лейтенант хăйĕн миномет взвочĕпе Сталинград фронтĕнче çапăçать. «Аслă. Октябрь уявне пирĕн землянкăра кĕтсе илмелле пулчĕ,— тет вăл «Чăваш коммуни» хаçат редакцине янă çырура.— Ирхине, тул çуталас умĕн, эпир пурте хамăра палăртнă тӳпемре пултăмăр... Çак йĕркесене эпĕ вăрçă кăшт лăпланнă вăхăтра, çӳлтен бомбăсем тăкăнма, çĕр-тен вилĕм çави—пулемет-минометсем—этеме çулма чарăннă вăхăтра, землянкăра, хытхура «вутти» çутипе çыратăп. Çав тискер кашлав-кĕрлев пиртен хăшпĕр çĕрте виçĕ, хăшпĕр çĕрте тăватă çухрăмра паян... Умăнта арман çӳллĕш тăпра çĕкленет, сывлăш таçта сирпĕтет сана, тăнна çухатан, анчах çав самант хушшинче тăпра пуснă пит-куçа шăлса пăхатăн та, хăвăн тăван ывăлу,— тăван ывăлăм Лев-Арăслан,—тухса тăрать. Пĕтĕм Шупашкар килет куç умне. Чăваш хорĕ юрлани илтĕнсе каять, Академи театрĕнче вилекен Чаккан юлашки саманчĕ курăнать... Умра Пичет çурчĕ кĕрлесе ларать, куçа тепре хупса иличчен çак картинăсем каллех юнпа пăтранса каяççĕ».

Эпĕ кунта хăрушă кĕрлев çинчен çыртăм, тет В. Бараев. Тăшман Сталинград патне çитнĕ, каялла чакасшăн мар, пур тĕлте те хăйĕн оборонине çирĕплетнĕ. «Эпир çĕмĕретпĕр вĕсене! Эпир çĕмĕрсе ун çулне татма тухнă, тататпăрахăна! Эпир ăна ним хĕрхенми пĕтерме тухнă— пĕтеретпĕрех!»—тет Сталинград Али-паттăрĕ В. Бараев лейтенант.

Малалла çак çырура Владимир Бараев хăй çар шкулне вĕренсе пĕтерсе лейтенант ятне илни, унтан вара минвзвод командирĕ пулни çинчен пĕлтерет. Пур тĕлте те, пур участокра та вăл хăйĕн паттăрлăхне кăтартнă, кашни ĕçе чун-чĕререн туса пынă. Çавăнпа та ăна командирсем те, боецсем те юратнă, çавăнпах вăл çапăçу хирĕнче Ленин партийĕн ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă. «Эпĕ парти билетне çăмăллăн мар, тивĕççĕр хапаланчăкпа мар, юнпа илесшĕн пулнă,— тет вăл çав çырурах.— Мĕншĕн тесен парти билечĕ, Ленин партийĕн билечĕ— сăмахпа каласа пĕтерме çук, хут çине çырса кăтартма çук хăватлă, пĕтĕм чун-чĕрене вăй-хăват паракан документ, ăна пĕтĕм чун-чĕререн парти ĕçĕн тĕрĕслĕхне парăннă çын çех тивĕçлĕ, çăмăллăн илнĕ билет пит йӳн пулĕ, эпĕ парти билетне юнпа илетĕп!..»

«Эпĕ чăнах та вăрçă умне тухрăм. Сывă пултăр аслă Тăван Çĕршывăм!.. Эпĕ Тăван çĕршывшăн çапăçнă вăхăт-

ра, чи малтанах, ывăлăм телейĕшĕн, ывăлăм пек пĕтĕм çĕршывăмри ачасемшĕн, тăван атте-аннешĕн, тăван атте-анне пек ват çынсен хисеплĕ ватăлăхĕшĕн, пĕтĕм çывăх тусăмсемпе тантăшсемшĕн çапăçатăп, тыткăнри халăхсене ирĕке кăларассишĕн юн тăкатăп»,— тесе вĕçлет вăл хăйĕн вăрçă уйĕнчен янă çырăвне.

Тĕрĕс, чĕререн килекен сăмахсем! Вăрçă вăл çынна пур енчен те тĕрĕслет. Бараев фашизмăн хура вăйĕсене хирĕç çапăçнă чух чăтăмлăхпа хăюлăх, çĕнтерӳ тăвас ĕç-ре çирĕп кăмăл кăтартрĕ. Ывăлĕпе, юлташĕсемпе пĕрле пĕтĕм чăваш халăхĕ те унăн ятне нихçан та асран кăлармĕ.

Поэт-коммунист ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ. Çирĕм пилĕк çул каялла Совет халăхĕпе унăн мухтавлă Çарĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистла Германие тĕппипех çапса аркатрĕç, пĕтĕм тĕнче халăхне тискер те хаяр тăшманран хăтарчĕç. Сахал мар хура-шур курма тиврĕ ун чухне Совет халăхне, пайтах çухату чăтса ирттермелле пулчĕ унăн пуриăçпа вилĕм хушшинчи кĕрешӳре. Анчах, калама çук йывăр пулсан та, вăл хăраса ӳкмерĕ, нимĕнле хĕн-асап умĕнче те чунпа хуçăлса пуç усмарĕ, Гитлер вăрă-хурахĕсене çĕмĕрсе тăкса Аслă Çĕнтерӳ турĕ.

Пирĕн юратнă поэт-воин çак чаплă куна кĕтсе илеймерĕ. Унăн çамрăк ĕмĕрне Сталинградшăн пынă хаяр çапăçу 1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче татрĕ. «Бараев арăслан пек çапăçса вилчĕ... Бараева тăшман пули тиврĕ, анчах вăл вилес умĕн: «Бараев нихçан та вилмĕ!..» тесе ик-виç сăмах каласа хăварчĕ. Эпир, Бараев взводĕнчи боецсем, хамăр командира вĕлерекенсене тарăхса, тăшман çине умлăн-хыçлăн минăсем пăрахрăмăр, тăшмана Жирки текен ялтан хăваласа кăларса ятăмăр»,— тесе çырса пĕлтернĕ Бараев çинчен унпа пĕрле çапăçнă чăваш салтакĕ Н. Семенов.

Хастар чĕреллĕ поэт вилнĕренпе 28 çул, çуралнăранпа 60 çул çитрĕ. Ăна ырă кăмăлпа асăнса, ун çинчен хăйĕн сăмахĕсемпе çапла калас килет:

> Хăй пулмин те, ячĕ пур ун,
> Ячĕ пирĕнпе.
> Ырă ят вăл, чаплă ят вăл,
> Юлĕ ĕмĕре!

Кашни кун тенĕ пекех малти линире, вут-çулăм айĕнче пулсан та, вăл чĕрене пырса тивекен, пĕтĕм кăмăл-ту-

йăма хускатакан произведенисем çырас ĕмĕтпе пуrăннă. Юлташĕсем патне янă çырусенче вăл чăваш писателĕсен ĕçĕсемпе, пичетленсе тухнă çĕнĕ произведенисемпе интересленнĕ. «Эхер те çак вăрçăран сывах юлсан, эпĕ те пĕтĕм пултарулăхăма парса ĕмĕрлĕхе асра юлмалли сăвă кĕвĕлĕттĕм, тĕлĕнмелле калавсемпе повеçсем çырса тăван халăхăма савăнтарăттăм»,—тет Бараев пĕр çырăвĕнче.

Вăл пирĕн хăватлă сăвăçчĕ, прозаикчĕ, сатирикчĕ, тăван халăхăн юмах-халапĕсене, юрри-такмакĕсене пухма, тĕпчеме юратакан çынччĕ. Калас сăмахне, хаяр вăрçа пула, поэт пĕтĕмпех калама ĕлкĕреймерĕ. Анчах унăн сăнарĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, хĕрӳ патриотизмла поэзийĕ ĕмĕр-ĕмĕр чăваш халăх асĕнче пулĕ.

*1970.*

## ЯЛАНАХ АСРА

Ленин хулине паттăррăн хӳтĕлекенсене халалласа, Чăваш халăх поэчĕ С. Элкер 1943 çулта çакăн пек йĕркесем çырнăччĕ:

Ленинград!
Эс пирĕн вĕçĕмсĕр çĕршывăн,
Пур халăхĕ вăй-хал хурса,
Пĕрле ӳстернĕ хула... Ан ывăн,
Ан чак, тăшман тискеррине курса!
Тăшман каллех хирсе килсен те,
Хăруш самант тухсан умна,—
Тăван çĕршывăмăр пур енчен те
Гранит сăрт пек хӳтлет сана.
Чăваш, тутар, мордва, грузине —
Тăванлă пурте вырăспа;
Совет çемйи пур халăх сынĕ
Тăрать халь саншăн кăкăрпа.

Чăннипе пĕтĕмпех çапла пулнă та. Ленин хулине пирĕн аслă Çĕршывра пурăнакан мĕнпур наци çыннисем хӳтĕленĕ.

Ленинград патĕнче чăтăмлăн та паттăррăн кĕрешекенсем хушшинче чăваш халăхĕн ывăлĕ-хĕрĕсем те сахал мар юн такнă. Халăх асĕнче Иван Смирнов коммунист-

пулеметчик ячĕ, Георгий Потапов артиллеристпа Никита Зарубин штурман ячĕсем, чăвашсен çамрăк поэчĕн Кĕçтук Кольцов аслă лейтенантан ячĕ ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕç. Ленинград патĕнчи çапăçурах чăваш писателĕ, çар журналисчĕ Федот Çитта майор (дивизи хаçачĕн редакторĕ) пуç хунă.

«Паттăр салтакчĕ вăл, пултаруллă журналистчĕ, ăшă чунлă çынччĕ,— аса илеççĕ ун пирки М. Дудин поэтпа А. Бусырев журналист.— Хăйĕн хаçатне Çитта питĕ юрататчĕ. Ăна тăрăшса, чунне парса кăларса тăратчĕ. Никам та, нимĕн чухлĕ те манăçа тухман. Çавăн пекех эпир Федот Çиттана та, йăрăс пӳллĕ, илемлĕ, питĕ паттăр çынна, ĕмĕрне те манмăпăр».

Çиттана эпĕ те çывăххăн пĕлеттĕм, вăрçă вăхăтĕнче унпа час-часах çырусем илеттĕм. Нумаях пулмасть вара ун послужной списокĕпе, çарти характеристикисемпе, çырăвĕсемпе тĕплĕ паллашрăм...

Вăрçă умĕн Федот Çитта хăйĕн автобиографийĕнче çапла çырнă: «Эпĕ 1914 çулхи майăн 15(28)-мĕшĕнче, Чăваш АССРĕнче, Патăръел районĕнчи Кĕçĕн Патăръел ялĕнче хресчен килйышĕнче çуралнă. 1921—1925 çулсенче Тăранти пуçламăш шкулта, 1925—1928 çулсенче Патăръелĕнчи çичĕ çуллăх шкулта вĕреннĕ, 1931 çулта Патăръелĕнчи педтехникумран вĕренсе тухнă. Çавăн хыççăн çулталăк хушши пуçламăш шкулта учительте ĕçленĕ. 1932 çулхи ноябрьтен пуçласа 1935 çулхи августчен Шупашкарта тухса тăракан облаçри пионер хаçатĕнче — «Пионер сасси» редакцийĕнче секретарь пултăм. 1938 çулта Ленинградра В. В. Воровский ячĕпе хисепленекен коммунистла журналистика институтĕнчен вĕренсе тухрăм. 1938 çулхи ноябрьтен пуçласа Ленинград çар округĕнчи чаçсенче службăра тăратăп...»

Послужной список тăрăхах эпир Çитта пĕр çулталăк командирсен курсĕнче вĕреннине, çар хаçачĕсенче секретарьте ĕçленине, 1942 çулхи апрельтен пуçласа вара хаçат редакторĕ пулса тăнине пĕлетпĕр.

1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче Ф. Çитта хăйĕн хаçатне юлашки хут алă пусса кăларнă. «Дивизионкăн» çĕнĕ номерĕсене илсе малти линири салтаксем патне пырса çитсен, нимĕçсем кĕтмен çĕртен тупăсемпе асарписер пеме тытăнаççĕ. Çакăнта редактор йывăр аманать те тепĕр виçĕ кунтан госпитальте вилсе каять.

«Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчех Действующи çарта пулса,— çырнă Ф. Çитта çинчен соединени

политпай начальникě 1942 çулхи майăн 12-мěшěнче,— вăл хăй нимěç фашисчěсене хирěç паттăррăн, вăйне-хална шеллемесěр кěрешекен хăюллă салтак пулнине кăтартса пачě. Ханко çурутравне хӳтěленě кунсенче Çитта юлташ дивизи хаçатěнче кулленех салтаксен паттăрлăхне кăтартакан çěнě материалсем пичетлесе пычě, çав материалсене малти линире тăшман вучě айěнче пухрě. Хорсен утравне туртса илнě чухне вăл хăй те тăшманпа паттăррăн çапăçрě».

«Хăюллă, çирěп чунлă, пуçаруллă политработник. Ленинград блокадине татнă чухнехи операцисем вăхăтěнче, Красный Борпа Мга патěнче çапăçнă чухне, хаçата пěлсе те вăхăтра кăларса тăчě, унăн страницисенче салтаксемпе командирсен паттăрлăхě çинчен лайăх материалсем пичетлерě»,— тенě Ф. Çитта çинчен тепěр боевой характеристикăра.

Синявинпа Мга районěнче йывăр çапăçусем пуçланнă. Лару-тăру кашни кун улшăнса тăнă. Çитта ěçлекен хаçат çапăçусем епле пынине куллен, вăхăтра çутатса пынă, большевикла çулăмлă сăмахпа салтаксене паттăр ěçсем тума хавхалантарнă. «Наступленире яланах малтисемпе танлашăр!», «Артиллеристсем, вăйлăрах çунтарăр!», «Тăшман дочěсемпе дзочěсене çěр пичě çинчен шăлса ывăтăр!» — акă еплерех чěнӳсем тăтăш куратпăр эпир çав кунсенче тухнă номерсенче. Хаçат паттăр çапăçакан салтаксемпе командирсене куллен палăртса пынă, вěсен çапăçури опытне пěтěмлетнě, вăрçă хирěнчи партиллěполитикăллă ěçсем çинчен каласа панă.

Малтанхи юр ӳкнě. Хаçат салтаксене çěнě лару-тăрура епле пулмалли çинчен вěрентсе пулăшма васкать. Акă «Хěлле те пěлсе çапăçмалла» ятпа тухнă тематикăллă страница. Маскировка мěнле пулмалли çинчен, хěлле хěçпăшала епле тыткаламалли çинчен, тăм илесрен мěнле хӳтěленмелли çинчен тěплěн çырнă кунта. Тепěр номерте тата «Асту, чакакан тăшман пур çěрте те мина хăварать!» текен статья пур. Кěске те уçăмлă текстпа тунă ӳкерчěксем минăна епле сиенсěрлетесси çинчен практикăллă усăллă канашсем параççě.

«Çапăçура салтак науки пулмасан, вăйлă алăсем те халсăрланаççě. Вăрçăра ăнăçу пултăр тесен, çар ěçне тěплěн пěлмелле». Çакăн пек йěркесемпе пуçланать хаçатăн пěр страници, Ф. Çитта хатěрленěскер. Чапа тухнă опытлă салтаксем каласа панисене пичетленě кунта.

1943 çулхи декабрь уйăхěнче çар хаçачěсенче ěçлекен-

сен фронтри канашлăвĕ пухăннă. Çаканта Ф. Çитта майор тухса калаçнă. «Пирĕн хаçат редакцийĕнче ĕçлекенсем çапăçу вăхăтĕнче вĕçсĕрех малти линири подразделенисенче пулаççĕ. Каçхине редакцин мĕнпур коллективĕ пĕрле пухăнать, хатĕрленĕ материала набора ярать. Çĕр каçиччен эпир хаçата наборлама, верстка тума, пичетлеме ĕлкĕретпĕр, ирхине хатĕр номерсемпе каллех чаçсене тухса каятпăр».

Хаçата лайăх кăларса тăнăшăн тата çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Ф. Çиттана Ленинград фрончĕн Çар Совечĕ пĕрре мар тав тунă, хаклă парнесем панă, правительство ăна иккĕмĕш степеньлĕ Отечественнăй вăрçă орденĕпе, «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

Çапла ырми-канми ĕçленĕ вăрçă вăхăтĕнче Ф. Çитта. Хаçат редакцийĕн секретарĕ пулнă А. Бусырев каланă тăрăх, Ф. Çитта хаçат редакциленипе çеç çырлахман иккен. Вăл активлă агитатор, пропагандист пулнă, салтаксем умĕнче докладсем тунă, лекцисем вуланă. Редакцине тăтăшах Ленинград писателĕсем-фронтовиксем В. Саянов, А. Прокофьев, М. Дудин, И. Авраменко, П. Журба пырса çӳренĕ. Пурте вĕсем Ф. Çиттан пултарулăхĕнчен, хаçат ĕçне вăл мĕн тери ăста пĕлнинчен тĕлĕннĕ.

Вăрçăчченех чăваш вулаканĕсем Федот Çиттан сăввисемпе очеркĕсене сахал мар вуланă. Хăйĕн калавĕсемпе очеркĕсенче вăл шурă финсемпе çапăçса чапа тухнă салтаксем çинчен каласа панă. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче те Çитта калавсемпе очерксем çырма вăхăт тупнă, вĕсене чăвашла та, вырăсла та пичетлесе кăларнă. Чи лайăх калавĕсенчен пĕринче, «Паттăр салтак» ятлăскерĕнче, писатель хăйĕн Горский хушаматлă ентешĕ Ленин хулине епле паттăррăн хӳтĕлени çинчен, вăл вăрçăпа çĕнтерӳ пирки мĕн шухăшлани çинчен каласа парать. Çитта хăй Çĕнтерӳ кунне кĕтсе илеймерĕ, анчах вăл Совет Çарĕ вăрçăра фашизма тĕпĕ-йĕрĕпех аркатса тăкасси пирки малтанхи кунран пуçласах пĕр самантлăха та иккĕленмен.

Çапла, халăх манмасть паттăр салтака, журналиста, писателе. Республикăра ун ячĕпе хисепленекен пионер организацийĕ, библиотека, урам пурри те çакна лайăх кăтартса парать.

*1974.*

## ПУРНĂÇА ЮРАТСА

Валентин Урдаша, чăваш халăхĕн юратнă юрăçине, эпир яланах хамăр хушăра туятпăр, унăн хаваслă юррисене итлесе савăнатпăр.

Валентин Андреевич Урдаш (паспортри хушамачĕпе Яковлев) 1924 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче Тутар республикине кĕрекен Пăва районĕнчи Раккасси ялĕнче, чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Пулас поэт ялти пуçламăш шкулта, ун хыççăн кӳршĕри Элшел вăтам шкулĕнче вĕреннĕ. Фашистла Германи пирĕн Тăван çĕршыва вăрçăпа тапăнсан, 1941 çулхи декабрь уйăхĕнче, салтак çулне те çитеймен çамрăк хăй ирĕкĕпе фронта тухса кайнă.

Çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн Валентин Урдаш Аслă Отечественнăй вăрçăн пĕрремĕш степень орденĕ тата виçĕ медаль илнĕ. 1943 çул пуçламăшĕнче вăл питĕ йывăр аманса, вăрах вăхăт госпитальте выртнă хыççăн пĕрремĕш группа инваличĕ пулса, тăван килне таврăнчĕ. Апла пулин те, чунĕпе поэт хуçăлмарĕ. Госпитальтен таврăннă хыççăнах Валентин Урдаш Хусанта тухса тăнă «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцине ĕçлеме вырнаçать, пĕр вăхăт Чăвашрадио корреспонденчĕ пулать. 1946 çултанпа вăл поэт-профессионал. 1970 çултанпа Валентин Андреевич — СССР Союзĕн членĕ.

Валентин вăтам шкулта вĕреннĕ вăхăтрах сăвăсем çырнă, чăваш хаçачĕсенче ял пурнăçĕ çинчен очерксемпе тĕрленчĕксем пичетленĕ, литература кружокне тимлĕ хутшăннă, халăх сăвви-юррипе юмахĕсене нумай пухнă. Вăрçă хыççăн унăн пултарулăхĕ çултан-çул çĕкленсе пычĕ, халăх шухăш-кăмăлне тĕрлĕ енчен палăртакан чăнчăн илемлĕ произведенисемпе пуянлатрĕ.

Вăрçă асапне, пурнăçри йывăрлăхсене чăтса-тӳссе ирттернĕ поэт — чун-чĕрипе хăйне ялан çирĕп, хăюллă, харсăр туятчĕ. Унăн произведенийĕсенче эпир пурнăç çине ырă кăмăлпа, çутă шанчăкпа пăхнине çеç куратпăр. Асран каймн сăвви-юрринче поэт Тăван çĕршывăмăра, Коммунистсен партийĕпе хамăрăн чаплă саманана юратма чĕнет. Ахальтен мар вăл хăйĕн «Сана юратрăм...» сăввинче те çапла çырнă:

— Тăван çĕршыв, сана юратрăм
Мĕн пĕчĕкрен, мĕн ачаран.
Пĕр саншăн çеç юрра шăратрăм
Чун савнăран, чун туртнăран.

Тăван çĕршыв, сана юратрăм,
Ӳссе çитсен, салтак пулсан.
Пĕр саншăн çеç савса усрарăм
Хам ятăма та хам чыса.

Урдаш çырнă сăвăсемпе поэмăсен, очерксемпе калавсен кĕнекисем ку таранччен вуннă ытла тухрĕç. Чăваш композиторĕсем унăн икçĕре яхăн сăввине юрра хыврĕç. Сатира жанрĕнче те поэт ăнăçлă ĕçлерĕ. Хăйĕн фельетонĕсемпе юптарăвĕсенче вăл çăмăлттайсемпе харам пырсене, ултавçăсемпе тĕн-тĕшмĕшрен хăпса çитеймен çынсене çивĕччĕн питлесе тăрăхларĕ.

Тин кăна-ха В. Урдашăн Чăваш кĕнеке издательствинче «Араскал» ятлă суйласа илнĕ сăвăсемпе поэмăсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Ана поэт вилес умĕн, хăй йывăр чирлесе выртнă вăхăтра хатĕрлесе пачĕ. Кĕнекере аслă В. И. Ленинăн вилĕмсĕр сăнарне çӳле çĕклекен, Коммунистсен партийĕпе Тăван çĕршыва мухтакан тата фашистла Германие хирĕç пынă хаяр вăрçăри паттăрсем çинчен калакан çулăмлă сăвăсем, юрату юррисем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Кĕнеке «Ленин çинчен хунă юрăпа» уçăлать. Унта вăл Совет халăхĕ хăйĕн телейлĕ те савăнăçлă пурнăçĕшĕн аслă Ленина вĕçĕмсĕр тав туни çинчен хумханса калать:

Сан яту, аттемĕр Ленин,
Пстĕм халăх чĕринче.
Тав сана, аттемĕр Ленин,
Тет паян мĕнпур тĕнче.

Халăха пиллерĕ Ленин
Хăй ăспе, хăй хăватне;
Партие пиллерĕ Ленин
Чĕринчи сӳнми вутне.

Ырлăх çунă, çĕр çĕнелнĕ,
Юрă юхнă кунсенче
Сан сăнна куратпăр, Ленин,
Халăх кăкăрĕ çинче.

«Ильич парни», «Аслă Ленин», «Ильич çулĕпе» сăвăсене те чун-чĕрепе киленмесĕр вулама çук. Вĕсенче пирĕн ума паттăр та ĕçчен совет халăхĕ Ленин ячĕпе, парти ертсе пынипе тунă чаплă çитĕнӳсем тухса тăраççĕ.

Поэт çав çитĕнӳсем çинчен илемлĕ сăмах хăвачĕпе кăмăла хускатмалла каласа пама пĕлнĕ.

Коммунистсен партийĕ коммунизм патне çул кăтартса пынипе Чăваш çĕршывĕ совет самани çулĕсенче тĕпрен улшăнса çĕнелчĕ. Çак улшăнусене сăнлас шухăшпа поэт пире колхозлă ял ĕçченĕсем патне — Шуршăла, Раккассине, колхоз садне илсе çӳретет, анлă Атăл хĕрринчи шурă Шупашкарăн илемлĕ урамĕсемпе, унти чăннипех те хастар, ĕçчен те ырă кăмăллă çынсемпе паллаштарать («Хăнасем пухать хуламăр», «Шуршăл йăмрисем», «Пирĕн ял садĕнче», «Мухтар мучи ачисем», «Ма чипер-ши ферма хĕрĕ?», «Шупашкарăн лăпкă каçĕсем» т .ыт. те). Вĕсен пархатарлă ĕçĕсене, ытарайми сăнĕсене курса, поэт чĕринчен вĕçĕ-хĕррисĕр савса юратма чĕнекен, шухăш-кăмăла çĕклентерекен, чăн-чăн гражданла лирика тапса тăракан манăçми сăвă-юрăсем шăранса тухаççĕ:

Çунат хушассăм килет,
Шăпчăк пулассăм килет,
Садран сада çӳре-çӳре,
Юрă юрлассăм килет.

Атăл пулассăм килет,
Тинĕс пулассăм килет,
Хам чĕреме, хам хăвата
Çĕршыва парас килет.

Çунат хушассăм килет,
Вĕçсе каяссăм килет,
Уйăх çине, çăлтăр çине
Çитсе курассăм килет.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вут-çулăмĕ витĕр паттăррăн утса тухнă поэт, çав вăхăта аса илсе, миршĕн кĕрешме чĕнекен хĕрӳллĕ сăвăсем нумай çырчĕ. Акă мĕнле калать вăл хăй çинчен «Юрăпа» сăвăра.

Юрăпа вута-шыва эп кĕтĕм,
Юрăпа çĕнтертĕм вилĕме.
Юрăпа атте килне эп килтĕм,
Юрăпа çĕклерĕм килĕме.

Валентин Урдашăн лирикăллă геройĕ — Совет çĕршывĕн таса та çутă чунлă гражданинĕ, тăван халăхăн

шанчăклă ывăлĕ, харсăр салтакĕ. Ăçта кăна çитмен, мĕн кăна курман алла пăшал тытса çапăçнă çав чăваш çамрăкĕ! Çапăçу хирне тухса кайнă чух вăл пĕтĕм ялйышпа, ашшĕ-амăшĕ умĕнче Тăван çĕршывăмăра паттăррăн хӳтĕлеме тупа тăвать. Вăрăм та тертлĕ вăрçă çулĕ çинче вăл темĕн те тӳсет, темиçе хут аманать, çапах та тăшмана пурпĕр аркатса тăкас шанчăка çухатмасть, кулленкун чун хавалĕпе çирĕпленсе вăй илсе пырать. Акă мĕн калать вăл вăрçа пиллесе ăсатнă хăйĕн ăмăшне:

Асапран эс пăрăнма хушмарăн,
Çăмăллăх хушмарăн шырама.
Çавăнпах пуль çулăмра çунмарăм,
Вилĕмрен пĕлмерĕм хăрама.
(«Анне патне».)

Е тата:

Аслă Ленин ăсне, аслă парти ăсне
Фашистсем таптаса путарасшăн.
Амансан та кĕреп вутпа çулăм ăшне
Вилĕмпе вилĕме пытарасшăн,
Çĕршыва çулăмран хăтарасшăн.
(«Çĕршыва хăтарасшăн».)

«Çулăмлă çулсем» ярăмри сăвăсенче — поэтăн вăрçă вăхăтĕнчи паттăр кунçулĕ, халăхăн фронтпа тылри мухтавлă ĕçĕ-хĕлĕ туллин палăрса тăрать. «Вăрçă мĕнне, туссем-йышсем, ан манăр... Миршĕн мирпе тухмашкăн алă парăр»,— тет вăл «Ан манăр!» сăвăра.

«Пурнăçа юратса эпĕ кайрăм вăрçа...» Çак сăмахсемпе пуçлать поэт хăйĕн «Пурăнас килет» поэмине. Вăрçă çулĕсем вăрăм та тертлĕ пулчĕç. Анчах совет салтакĕ рейхстаг çине çĕнтерӳ ялавĕ çĕкличченех урса кайнă тăшманпа паттăррăн çапăçрĕ, çĕнтерӳ шанчăкĕ ăна нумай-нумай çапăçусенче иксĕлми хăват парса тăчĕ.

Эп çӳрерĕм вутра,
Эп çӳрерĕм ютра,
Тăшмансем умĕнче,
Тăшмансен хыçĕнче...
Эп юрларăм юрра,
Пурнăç патăм юрра
Сĕм вăрман варринче,
Çапăçу хирĕнче,—

тет Валентин Урдаш вăрçă çулĕсенче хăй тӳсни-курнисене аса илсе. Поэмăра, поэтăн чылай сăввисенчи пекех, нихçан сӳнми патриотизм туйăмĕ, пурнăçа ытарайми юратни тĕп вырăн йышăнать.

«Йăхран йăха» поэмăри геройсем — сăпайлă, ырă кăмăллă, ĕçе юратакан ял çынниссем. Вĕсем вăрçă çулĕсенчи йывăрлăхсене чăтăмлăн тӳссе ирттереççĕ, Аслă çĕнтерӳ ячĕпе çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, кĕрешеççĕ. Аçусен паттăрлăхĕ, аннӳсен çирĕплĕхĕ йăхран йăха куçтăр, анчах аçуна вĕлернĕ вăрçă, аннӳне çунтарнă хурлăх тек нихçан та ан килтĕр. Акă мĕнле шухăш витĕмлĕн тапса тăрать пысăк мар поэмăра.

Валентин Урдаш пултарулăхĕнче, уйрăмах «Араскал» кĕнекере, юрату лирики паллă вырăн йышăнать. Кам пĕлмест пулĕ унăн «Калаймарăм», «Ма чипер-ши ферма хĕрĕ?», «Юратмасăр ан уç кантăкна», «Эп ирхи куна каç турăм...», «Шупашкар саламĕ», «Укăлча умĕнче», «Тухăçран хăпарсан шурăмпуç», «Кам-ши, кам-ши?», «Тĕнчере пĕр эсĕ пулнăран» т. ыт. нумай-нумай сăвви-юррине! Вĕсенче паянхи пурнăç илемĕ, ку чухнехи çамрăксен таса та çутă ĕмĕт-шухăшĕ, туслăхĕпе юратăвĕ чуна тытса илмелле ялкăшса тăрать.

Тăван литературăпа искусствăна халăх хушшинче пропагандăлас тĕлĕшпе Валентин Урдаш пайтах вăй хурса ĕçлерĕ. Чăнах та, ăçта кăна çитмерĕ-ши вăл! Часчасах чăваш писателĕсемпе пĕрле е пĕчченех колхозсемпе совхозсене, шефа илнĕ хуçалăхсене тухса çӳретчĕ, вулакансен конференцийĕсемпе литература каçĕсем ирттеретчĕ, хăйĕн сăввисене халăх умĕнче çĕклесе, хавхалансa вуласа паратчĕ. Çавна шута илсе, 1970 çулта ăна СССР культура министерствипе культура работникĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕ «Отличник культурного шефства над селом» значокпа наградăланăччĕ.

Тăван çĕршывпа пирĕн вăхăтри хĕвеллĕ самана çинчен пайтах сăвă-юрă, поэмăсем, калавсемпе очерксем çырчĕ çутă ĕмĕт-шухăшпа хавхаланса пурăннă Валентин Урдаш.

Халăхран эп илтĕм вăйăма,
Халăхран вĕрентĕм пурăнма.
Халăх пек йĕлемлĕ пурăнма
Ĕçĕмре паратăп чунăма,—

тет вăл «Пурнăçран ытла саватăп» сăввинче. Çапла поэт чăнах та чăваш литературинче пĕтĕм чунне, пĕтĕм пулта-

рулăхне парса ĕçлере, таван халăхăмăра кăмăла çĕклентерекен, пурнăçа хĕрӳллĕн юратма чĕнекен илемлĕ произведенисем сахал мар парнелесе хăварчĕ.

*1974.*

## ПУРНĂÇА СĂНАМА-ТĔПЧЕМЕ ПĔЛМЕЛЛЕ

Писательсен йышĕ ӳссех пырать. Тăван литература ĕçне çамрăк рабочисемпе колхозниксем, учительсемпе студентсем, инженерсемпе агрономсем тата ытти специалистсем хутшăнаççĕ. Литература пуласлăхĕ — çамрăксенче. Вĕсене пулăшасси, ĕçлеме вĕрентесси писательсен Союзĕн, хаçат-журнал редакцийĕсен ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнмалла. Чи кирли кунта — çамрăк авторсене марксизм-ленинизм идейисемпе хĕçпăшаллантарасси, çав идейăсемшĕн пĕтĕм ăсталăхпа, пĕтĕм пултарулăхпа, пĕтĕм чун-чĕререн парăнса кĕрешме вĕрентесси.

Пирĕн республикăри ĕççыннисем, пĕтĕм Совет халăхĕ пекех, пилĕкçуллăх заданийĕсене пурнăçа кĕртес тесе çине тăрса ĕçлеççĕ, коммунизм тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тăвас ĕмĕтпе пурăнаççĕ.

Эпир паян халăхăмăрпа Тăван çĕршывăмăр çинчен шухăшлатпăр. Пирĕн ума халăхăн ĕлĕкхи йывăр кунçулĕ те туха-туха тăрать, эпир чăваш халăхĕ, ытти тăванла халăхсем пекех, коммунизм çулĕпе шанчăклăн малалла утса пынине яр-уççăн куратпăр, ăна курса чунтан савăнатпăр.

Ку чухнехи пĕтĕм истори Ленин ячĕпе çыхăннă. Унăн ячĕ вилĕмсĕр, çавăн пекех унăн идейисем те, унăн ĕçĕсем те вилĕмсĕр.

В. И. Ленин тунă ĕçсем, ленинизм çĕнтерĕвĕсем илемлĕ литературăпа искусствăра, халăх сăмахлăхĕнче анлăн, витĕмлĕн палăраççĕ. Чăваш писателĕсем те Ленин çинчен сахал çырман, халĕ те вĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем çырнă произведенисене, пĕтĕмĕшпе илсен, вĕсем парти историйĕпе тачă çыхăнса пынине, ĕççыннисене ĕмĕр-ĕмĕрех аслă çулпуç вĕрентнĕ пек ĕçлеме, унăн халалĕсене пурнăçа кĕртме, çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарнине куратпăр эпир. Çамрăксемшĕн камран тата мĕне вĕренмелли пур пирĕн.

Ленин çинчен çырасси — çăмăл ĕç мар. Анчах вăл йывăр пулсан та унтан пархатарлăрах ĕç çукпа пĕрех.

Çамрăксене патриотизмла воспитани парасси пирĕн писательсемшĕн чи пaxa ĕç пулса тăрать. Тăван çĕршыва сыхласси — кашнин тивĕçĕ. Кăна эпир — аслă пусăмри писательсем — кирлĕ пек кăтартса пама тăрăшрăмăр. Çавах та чăваш литературинче Аслă Отечественнăй вăрçă çинчен çырнă пысăк калăплă, хумханса вуламалли произведенисем халлĕхе сахал-ха. Пирĕн халăхăн ывăлĕ-хĕрĕсем иртнĕ вăрçă вăхăтĕнче фронтра та, тылра та паттăр кĕрешнине, ĕçленине витĕмлĕн, анлăн та туллин кăтартса паракан кĕнекесем çителĕксĕр. Çак çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермелле, вулакана иртнĕ вăрçă çинчен, совет халăхĕн çав вăрçăри пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтернĕ паттăрлăхĕ çинчен, совет халăхĕн паянхи пурнăçĕ çинчен, унăн ывăл-хĕрĕсем çĕршыв хуралĕнче çирĕп те шанчăклă тăни çинчен витĕмлĕн каласа памалла. Ку—кашни писатель тивĕçĕ.

Пирĕн шутпа, хальхи çамрăксен пултарулăхĕнчи пысăк çитменлĕхсенчен пĕри вăл — темăсем чухăнрах пулни. Çамрăксен произведенийĕсенче — çĕршыв кунçулĕпе, халăх пурнăçĕпе тата кĕрешĕвĕпе çыхăннă чи кирлĕ темăсене, тарăннăн, нумай енлĕн тĕпчесе, витĕмлĕ хускатайманни.

Пирĕн литературăра рабочи класс темипе çыракан çамрăк писательсем çукпа пĕрех. Ӳссе пыракан рабочи класăн кулленхи паттăр ĕçĕсене туллин çутатса паракан анлă произведенисем çеç мар, «оперативлă» очерксем те пит сахал тухаççĕ.

Халĕ акă, эпир Шупашкар ГЭСĕ çинчен, Шупашкар тинĕсĕ çураласси çинчен нумай калаçатпăр. Кам кăна кунта ĕçлеме килмен-ши? Саратов ГЭСне, Братск ГЭСне тунă çынсемпе Совет Çарĕнчен таврăннă çамрăк специалистсем. Чăваш республикинчен пынă каччăсемпе хĕрсем тата ытти çĕртен килнĕ строительсемпе калаçатăн та — чун çĕкленет. Çав вăхăтрах чĕре ыратма пуçлать. Мĕншĕн тесен çак паттăр çынсем патне пирĕн писательсем—ятлисем те, çамрăккисем те — çул тупаймарĕç-ха. Хăшĕ-пĕрисем архивсенче авалхи тапхăрсем çинчен калакан документсене тăрăшсах шыраса лараççĕ. Анчах куç умĕнче тăракан, хамăр тантăшсем тăвакан тĕлĕнмелле хăватлă ĕçсемпе паллашмаççĕ. Никамăн та мар, пирĕн, сăмах ăстисен, этем чунĕн инженерĕсен вĕсем çинчен сăвă-юрăсем, очерксемпе калавсем, повеçсем, романсем, пьесăсем çырмалла.

Акă тата ытти тĕслĕхсем.

Шупашкарти электроаппаратура завочĕ. Вăл пĕтĕм чăваш халăхĕн мухтавĕ пулса тăчĕ. Кунта магнит станцийĕсем, релесем туса хатĕрлеççĕ. Вĕсемпе Мускаври, Ленинградри, Тбилисири тата ытти хуласенчи метросенче, тинĕс карапĕсенче, Братск ГЭСĕнче, çĕркăмрăк шахтисенче усă кураççĕ.

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ те çĕршыври пир-авăр предприятийĕсенчен чи пысăккисен шутне кĕрет. Вăл та пирĕн мухтавпа чап. Комбинатăн ĕçчен коллективĕ кашни кун 500 пин метр таран тĕрлĕрен пир-авар тĕртсе кăларать. Комбинатра 10 пин ытла комсомолецсемпе çамрăк рабочисем ĕçлеççĕ.

Шупашкарти агрегат завочĕ мĕне тăрать тата! Республикăри чи пысăк индустри предприятийĕ. Вăл 1956 çулта пĕрремĕш продукци туса кăларчĕ. Унăн цехĕсенче 1964 çулта малтанхи хут хурçă шăратса кăларчĕç. Заводпа пĕрле ăста рабочисем, инженерсемпе техниксем ӳссе çитĕнчĕç. Вĕсем, ĕçре паха тĕслĕх кăтартаканскерсем, пирĕн илемлĕ литературăра хăйсен сăнарне курасшăн. Ун çинчен çырусем çыраççĕ, литература каçĕсенче пĕрмаях сăмах тапратаççĕ.

Пирĕн республикăри ытти хуласенче те промышленность хăвăрт аталанса пырать.

Аслă Октябрь халăх вăйне çĕклерĕ. Халĕ промышленноçпа строительствăра кăна 70 пин рабочи тата инженерпа техник ĕçлеççĕ. Çĕнĕ хуласем ӳссе çитĕнчĕç.

Çак улшăну пирĕншĕн çăмăл пулса пычĕ теме çук. Ĕçпе иртен кунсенче мĕн чухлĕ конфликт сиксе тухать, писательсем валли мĕн чухлĕ интереслĕ материал кунта! Тĕпче, сăна, лайăх çырма кăна ĕлкĕр.

Совет влаçĕн çулĕсенче ялхуçалăх производствинче те пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Халĕ пирĕн республикăри колхозсемпе совхозсене пултаруллă специалистсемпе, хуçалăха тĕрĕс ертсе пыма пултаракан кадрсемпе çирĕплетнĕ. Юлашки çулсенче ялхуçалăхĕ техникăпа уйрăмах вăйлă хĕçпăшалланчĕ.

Ялхуçалăхĕнчи улшăнусем — пирĕн умра. Эпир пурте ялта çуралса ӳснĕ. Пирĕн çамрăк авторсем те ялта çуралнă, вĕреннĕ, нумайăшĕ ялта ĕçлеççĕ. Анчах колхоз ĕçченĕсен сăнарĕсене кирлĕ пек нумай енлĕн ӳкерсе панă произведенисемпе мухтанма пултараймастпăр-ха эпир.

Колхоз пурнăçĕ пĕр вырăнта тăмасть, вăл улшăнсах пырать, унти çынсем те ӳсеççĕ. Ялăн халь хăйĕн интеллигенцийĕ пур, колхозри специалистсем хушшинче инсти-

тутсем, техникумсем пĕтернĕ çынсем нумай. Йăла тĕлĕшĕнчен те паянхи колхоз çыннисене 10—15 çул ĕлĕкрех пулнă колхоз çыннисемпе танлаштарма çук.

Ленинла наци политикине çирĕп тытса пынипе чăваш халăхĕн культура пурнăçĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртеççĕ. Революциччен Чăваш çĕршывĕнче халăхăн тăхăрвунă проценчĕ пачах хутла пĕлмен, аслă шкулсенчен вĕренсе тухнисем вара мĕнпурĕ те вунна яхăн кăна шутланнă. Халĕ ирĕн республикăра пурне те вăтам пĕлÿ парассине пурнăçа кĕртме тытăннă. Кашни 10 пин çын пуçне тивекен студентсен хисепĕ енĕпе Чăваш çĕршывĕ Англирен, Францирен, Японирен, Италирен, Федеративлă Германи республикинчен иртсе кайрĕ.

Хулара çеç мар, ялта та, кашни çемьере тенĕ пекех, вăтам шкултан е институтран вĕренсе тухнă çын пур. Акă, тĕслĕхрен, Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе хисепленекен колхозра 168 çын вăтам пĕлÿ илнĕ, 33-шĕ аслă шкултан вĕренсе тухнă. Вĕсен шутĕнче 45 учитель, 17 медицина работникĕ тата халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче ĕçлекен 19 специалист.

Республикăри предприятисемпе стройкăсенче, колхозсемпе совхозсенче вырăссемпе чăвашсем, украинецсемпе тутарсем, белоруссемпе мариецсем тата Совет Союзĕнчи ытти нумай-нумай халăхсен ывăлĕ-хĕрĕсем, алла-аллăн тытăнса, туслă çемьепе пурăнаççĕ.

Халăхăн сывлăхĕ те çултан-çул çирĕпленсе пырать. Чăвашсем хушшинче трахома, туберкулез тата ытти ерекен чирсем сарăлнă вăхăтсем манăçа юлнă ĕнтĕ. Чирлесси, çынсем вилесси нумай чакнă. Хальхи вăхăтра çынсен вăтам ĕмĕрĕ 70 çултан та иртсе кайнă.

Çапла, чăваш халăхĕ Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, социализмлă культурăна аталантарас ĕçре тĕлĕнмелле пысăк çитĕнÿсем турĕ. Вĕсемпе эпир тивĕçлипе мухтанатпăр, чун-чĕререн савăнатпăр.

Виçĕ çул каялла Шупашкарта çамрăк чăваш писателĕсен 4-мĕш канашлăвĕ-семинарĕ пулса иртнĕччĕ. Ун чухне канашлăва эпир 36 автора чĕннĕччĕ, халĕ ак — 80 çамрăк литератора чĕнтĕмĕр. Çыракансем нумай, анчах пурне те чĕнсе илме май пулмарĕ.

Çамрăк писательсем хушшинче чылай пысăк утăм тунисем те сахал мар. Акă, Георгий Краснова илер-ха. Вăл калавсем те, повеçсем те çырать. Унăн «СНП» хыпар ямасть», «Сарамат пĕкки» повеçĕсене вулакансем кăмăллăн йышăнчĕç. Халĕ ун «Пионер сасси» хаçатра

нумайранпа «Катăк чĕлĕм» повеçĕ пичетленсе пырать.

Çавăн пекех, пирĕн прозăра Л. Степанов-Маяксем, В. Григорьев-Енĕш, Е. Лисина, В. Чебоксаров, Н. Петровская тата ыттисем те чылай шанчăклă утăмсем тăваççĕ.

Нумай пулмасть эпир писательсен Союзĕнче Е. Лисина ача-пăчасем валли çырнă «Çĕнъял ачисем» кĕнекен алçырăвĕпе паллашрăмăр. Тӳрех калас пулать: Е. Лисина хăй мĕн çинчен çырнине лайăх пĕлет, ачасен психологине чунĕпе туять. Кĕнекери геройсем — çичĕ çулхи Маринепе вунвиççĕри Арçук. Вĕсен ашшĕ фронтра пуçне хунă. Пурнăç йывăр та кăткăс, çапах та ачасем парăнмаççĕ, халăхпа пĕрле тăрăшса ĕçлеççĕ, килте амăшне пулăшаççĕ. Е. Лисина çырнă пĕчĕк калавсене уйрăм кĕнекепе кăларма йышăнчĕç.

Çамрăксен йышĕнче сăвă çыракансем нумай. Иртнĕ çул çамрăк поэтсен «Çеçпĕл çеçки» сборникĕ тухрĕ. В. Харитонов «Тав», Г. Юмарт «Тивĕç» ятлă сăвă кĕнекисем кăларчĕç. Журналсенче час-часах А. Аттил, Ф. Коновалов, Мих. Львов, В. Тимаков, Л. Комиссарова, Ю. Семенов, Н. Артемьева, Ю. Григорьев, Б. Романов, Ф. Савельев, Н. Прокопьев, М. Васильев т. ыт. авторсен сăввисем пичетленеççĕ.

Михаил Захаров поэта асăнмасăр иртме çук. Вăл çамрăклах вăрçа тухса кайнă, унта тăватă хут аманнă, сĕмсуккăр пулса таврăннă. Ун сăввисене лăпкăн вулама çук. Акă, иртнĕ çул унăн «Ялав» журналăн 5-мĕш номерĕнче «Ылхан, пин хут ылхан!» ятлă сăвви пичетленчĕ. Сăвви пысăках мар, çапах та вăл поэма пек туйăнса каять.

Кун пек сăвăсем сахал-ха. Çамрăк поэтсен хăшпĕр сăввисенче шухăш уçăмлăхĕ çук, пăтранчăк шухăшлă сăвăсем те тĕл пулаççĕ. Пĕрмай тĕлĕк курни çинчен çырнисем те йăлăхтарса çитерчĕç.

Юрату çинчен çырнă сăвăсем вара питĕ нумай. Анчах вулатăн та тĕлĕнетĕн: мĕнле-ха вĕсем пĕр евĕрлĕ янăраççĕ, мĕнле-ха шухăш-кăмăла чунтан килмелли сăмахсене кăшкăрса калатпăр?!

Тепĕр çитменлĕх çинчен каласа хăварас килет. Пĕрпĕр çамрăк поэт тăван чĕлхене хуçкалама, пăтраштарма тытăнать, поэзин халиччен çирĕпленсе пынă саккунĕсене пăсма пăхать, çавна вара çĕнĕлĕх, тет.

Хăшпĕр сăвăсенче ритм уçă мар, рифмăсем начар, пуплевсене вырăсла çавăрттарса çырнисем те тĕл пулаççĕ.

Ытла вак-тӗвек япаласем ҫинчен ҫырма тӑрӑшнине те кӑтартса хӑвармалла.

Ҫамрӑк авторсен йышӗнче драматургсемпе критиксем ҫукпа пӗрех. Ку пире пӑшӑрхантарать. Ҫырма пуҫланӑ драматургсем те, критиксем те хӑш чухне тытӑннӑ ӗҫе пӑрахаҫҫӗ. Паллах, приказ парса ҫыртарма ҫук. Ҫапах та ку писательсен союзӗнчен те, пирӗн журналсенчен те нумай килет.

Кунта тата ҫакна та кӑтартса хӑвармалла. Хӑшпӗр чух ҫамрӑк авторсем мӑнкӑмӑлланса каяҫҫӗ, юлташӗсем каланисене итлемеҫҫӗ, кӗвӗҫме тытӑнаҫҫӗ. Вӗсем вӗренме те, ӗҫлеме те темиҫе хут тытӑнса пӑхаҫҫӗ, ҫапах та вырӑнтан тапранаймаҫҫӗ. Илемлӗ литература произведени ҫырасси — ҫӑмӑл ӗҫ мар, ӑна вутӑ каснӑ пек тума ҫук. Ҫырма пултарманнисене тӳрех каламалла: ҫитет, ан ҫыр, урӑх ӗҫе вӗрен.

Чӑваш чӗлхи пуян, илемлӗ, янравлӑ, анчах ҫав пуянлӑхпа хӑшпӗр ҫамрӑк авторсем усӑ курма пӗлмеҫҫӗ-ха. Час-часах эпир чӑвашла калама май пур сӑмахсенех вырӑсла ҫыратпӑр.

Г. Ефимов поэт ача-пӑча литератури ҫинчен тунӑ докладра пирӗн сӑвӑҫсем «хӗвел» сӑмахпа тарӑхтарса ҫитерни ҫинчен каланӑччӗ. Чӑнах та, ку сӑмаха пурте — ваттисем те, ҫамрӑккисем те — пӗрмаях аса илеҫҫӗ, ку вара вулакана йӑлӑхтарса ҫитерет. Акӑ: «хӗвел пӑхать», «ҫут хӗвелӗм», «хитре хӗвел», «хӗвел кулать», «ҫиҫет хӗвел», «хӗвел ирӗлет», «хӗвел хӗртет», «хӗвел ташлать» т ыт. те. Кусене эпӗ ҫамрӑк авторсен сӑввисенчен илтӗм.

Чӗлхе ӑсти вӑл — халӑх. Пирӗн халӑх сӑпай та ӗҫчен. Пӗр ӗҫе тытӑнсан, вӑл хавасланса, чунне парса, ҫанна тавӑрса та тар юхтарса ӗҫлет. Ӗҫне яланах тӗплӗ тӑвать. Писательсем те ҫапла ӗҫлемелле, халӑх чӗлхине юратса, унпа тӗрӗс, пӗлсе усӑ курмалла.

Пуриншӗн те паллӑ: марксизм-ленинизм вӗрентӗвӗпе хӗҫпӑшалланнӑ писатель кӑна йӗри-таврари пурнӑҫа, тӗнчере, пурнӑҫра пулса иртекен кӑткӑс пулӑмсене витӗр курса тӗрӗс хаклама, тӗрӗс ҫутатса пама пултарать. «Ҫамрӑксен союзӗн, ҫамрӑксен пурин те, вӗсем коммунизма куҫас теҫҫӗ пулсан, коммунизма вӗренмелле»,— тенӗ В. И. Ленин комсомолӑн III съездӗнче каланӑ сӑмахӗнче.

Малалла вӑл тата ҫапла каланӑ: «Этемлӗх ку таранччен туса ҫитернӗ мӗнпур пуянлӑха пӗлсе хӑвӑн ӑс-пуҫна пуянлатсан тин коммунист пулма пулать». Ленин сӑма-

хӗсем ансат та ӑнланмалла. Вӑл кӑтартнисем хальхи вӑхӑтра уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнаççӗ. Китайри ревизионистсем халӗ ӗлӗкхи культурӑна пӗтӗмпех пӑрахӑçлама чӗнеççӗ, ӑна «феодалла», «буржуалла» культура тесе, нимӗн вырӑнне те хумаççӗ. Вӗсем ку чухнехи культурӑна та «империалистла» тата «ревизионистла» культура тесе пӗтӗмпех пӗтерсе хурасшӑн.

Пирӗн çӗршывра коммунизлӑ пысӑк идейӑллӑ, ӗçчен, мораль тӗлӗшӗнчен таса, вӑй-хал тӗлӗшӗнчен çирӗп çынсене вӗрентсе çитӗнтерме питӗ лайӑх майсем туса панӑ.

Литературӑпа искусство ӗçченӗсем умне Ленин партийӗ лартнӑ пысӑк та пархатарлӑ задачӑсене чыслӑн пурнӑçласа пырассишӗн чӑваш писателӗсем, вӗсемпе пӗрле çамрӑк авторсем — ВЛКСМ обкомӗпе Чӑваш писателӗсен Союзӗ ирттернӗ канашлура пулнӑ юлташсем те вӑя шеллемесӗр хавхаланса ӗçлессе шанатпӑр эпир.

Чаплӑ вӑхӑтра, чаплӑ ӗмӗрте пурӑнатпӑр эпир! Чаплӑ ӗмӗр çинчен чаплӑ произведенисем çырар, пурнӑçпа тан утар, çамрӑк юлташсем—кӑвар чӗреллӗ çеçпӗл çеçкисем!

*1969.*

## МУХТАВЛИСЕМ

Совет влаçӗн çулӗсенче Тӑван çӗршыври ӗççыннисем кӗрешӳпе çӗнтерӳсен паттӑр çулне утса тухрӗç: çӗршывра социаллӑ пысӑк улшӑнусем пулса иртрӗç, эпир хӑватлӑ индустрипе социализмлӑ ялхуçалӑхӗ туса хутӑмӑр, культурӑллӑ революци ирттертӗмӗр.

Тӑванла ытти халӑхсен йышӗнче чӑваш халӑхӗн çитӗнӗвӗсем те калама çук пысӑк, вӗсене вӑл Коммунистсен партийӗ ертсе пынипе турӗ. Эпир халӑх хуçалӑхӗнче, культурӑра, наукӑпа техникӑра мӗнпур енӗпе тунӑ пысӑк çитӗнӳсемпе тивӗçлипех мухтанатпӑр. Юбилей çулӗнче, 1967 çулта, республикӑри ӗççыннисемпе пӗрле литературӑпа искусство деятелӗсем те хӑйсен ӗçӗсене пӑхса тухрӗç. Вӗсем лайӑх произведенисем сахал мар çырнӑ. Çав произведенисене халӗ Совет Союзӗн мӗнпур кӗтесӗсенче тата урӑх çӗршывсенче лайӑх пӗлеççӗ.

Ӗççыннисене коммунизмла воспитани пама активлӑ пулӑшакан, социализмла реализм принципӗсене тивӗçтерекен, халӑх кӑмӑлласа йышӑннӑ литературӑпа искусствӑн чаплӑ произведенийӗсемшӗн тата спектакльсемпе

концертсем кăтартас ăсталăхшăн Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине пани кăçалхи пысăк ĕç пулса тăрать. Чăваш АССР Министрсен Совечĕ 1967 çулшăн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине «Аслă чĕре» поэмăшăн, Куба çинчен çырнă «Инçе вĕçев» сăвă ярăмĕшĕн, очерксемпе литература критики пирки çырнă статьясен «Книга дружбы» ятлă кĕнекишĕн П. П. Хусанкая памалла тунă.

«Аслă чĕре» кĕнеке пысăках мар икĕ поэмăран тăрать. Вĕсен тĕп шухăшĕ — патша Российинчи пусмăрта пурăннă халăхсем ирĕклĕхпе телейĕн чăн-чăн çулне кăтартса панă Аслă Ленинпа паттăр Коммунистсен партине чун-чĕререн юратни. Поэмăсенче Ленин çынсемпе яланах кăмăллă пулнине, çулпуç Октябрьти Социализмлă Аслă революци хыççăн экономикăпа культурăна аталантарма мĕнпур майсем илнĕ халăхсемшĕн чун-чĕререн тăрăшнине тĕрĕс те ĕненмелле кăтартса панă.

«Аслă чĕре» поэмăна автор В. И. Ленин Чĕмпĕре депутатсен Совечĕн председателĕ патне янă телеграмма историне никĕсе хурса çырнă, çак телеграмма чăваш халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе нумай вăй хунă чаплă педагог И. Я. Яковлев ĕçне тĕрĕс ăнланма тата хак пама пулăшнă. Ку поэмăна вуланă чухне В. И. Ленин Яковлев пирки çав телеграммăна çырни куç умне тухса тăрать, чаплă просветительшĕн аслă çулпуç сăмахĕсем çав тери хаклă пулнă, вăл «кун пек ырă, ăшă, хаклă сăмахсем хальччен илтмен».

«Горкăри çурт» поэма поэт «Ленинские Горки» çуртмузейра пулни çинчен, кая юлнă тата вăрçă юхăнтарса çитернĕ Российăна çĕнетсе улăштарма Ленин хатĕрленĕ плансем çинчен каласа парать. Кунта Ильич хăйĕн юлашки статйисене çырнă.

Çак поэмăсен чĕлхи пуян та илемлĕ. Поэт çулпуç сăнарне тĕрĕс те яр-уççăн кăтартма пултарнă. «Аслă та, сăпайлă та вăл, пур енчен те коммунист»,— тесе хавхаланса çырать поэт.

Куба çинчен калакан «Инçе вĕçев» сăвăсен ярăмне поэт Кубăра пулнă хыççăн çырнă. Çак ярăмри мĕнпур сăвăсенче миршĕн кĕрешекен халăхсен нихçан арканми туслăхĕ палăрса тăрать, вĕсем çĕнĕ тĕнче вăрçи пуçлама хăтланакансене хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ. П. Хусанкай хăйĕнпе пĕрле Кубăра пулнă юлташĕсем çинчен, Куба халăхĕ вĕсене тараватлăн йышăнни çинчен тата вăл пы-

сăк хастарлăхпа ĕçлени çинчен, Куба çыннисем хăйсен мирлĕ еçне паттăррăн хӳтĕлени çинчен, вĕсем Совет Союзне, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне Ленина чунчĕререн юратни çинчен хумханса каласа парать.

«Книга дружбы» кĕнекере чăваш литературин, уйрăмах поэзири пысăк ӳсĕмсен çулне, унăн интернационаллă пĕлтерĕшне тĕплĕн, наука енчен тараннăн çутатнă, чăваш культурипе искусствин паллă деятелĕсен — И. Я. Яковлевăн, К. В. Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин, П. Осиповăн тата ыттисен пуларулăхне тĕплĕн тишкерсе тухнă. П. Хусанкай çак кĕнекере çамрăк литераторсен ĕçри ăсталăхне ӳстерес ыйтусем пирки, вырăс литературипе тĕнче литературин произведенийĕсене чăвашла лайăххрах куçарас пирки тĕплĕн çырать.

Чăваш литературипе искусствин историйĕнче ВЛКСМ Чăваш обкоме республикăри комсомол премине — чăваш комсомолне туса хуракансенчен пĕрин, Ленин ĕçĕшĕн хастар кĕрешекенĕн, поэт-коммунистăн, чăваш совет поэзине пуçласа янă Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине памалла туни те чаплă уяв пулса тăрать.

Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премие писательсене, композиторсене тата художниксене çамрăк ăрăвăн коммунизм обществи тăвасишĕн пыракан кĕрешӳри хăюлăхĕпе паттăрĕ ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калакан витĕмлĕ, пысăк идейăллă, илемлĕх енчен сӳллĕ шайра тăракан произведенисем çырма активлă хутшăнтарас тĕллевпе памалла тунă.

Преми памалли йĕрке тăрăх, Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми илме произведенисене комсомолăн район тата хула комитечĕсем, культура органĕсемпе учрежденийĕсем, творчество союзĕсем тата пичет органĕсем тăратаççĕ. Ку премие кашни çул октябрĕн 29-мĕшĕнче — Ленинла комсомол çуралнă кун параççĕ. 1967 çулта премие Аслă Октябрь 50 çул тултарнă тĕле панă.

Республикăри комсомолăн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕн хисеплĕ ятне Украинăри паллă писателе, Совет Союзĕн Геройне, Юрий Збанацкие «Çеçпĕл» романшăн панă. Çак произведенире автор Çеçпĕл Мишшин кăмăл-туйăмпа ăстăн пуянлăхне, унăн таса сăн-сăпатне кăтартса панă. Çак роман украинла та, чăвашла та пичетленсе тухрĕ, ăна пирĕн вулакансем, Украинăри пекех, питĕ хавхаланса кĕтсе илчĕç.

Çеçпĕл Мишши... Совет влаçĕшĕн хастар кĕрешнĕ

çамрăка кам пĕлмест пулĕ! Ана Украина çĕрĕнчи Остĕр хулинче, хăйĕн пурнăçĕн юлашки тапхăрне пурăнса ирттернĕ вырăнта, пытарнă, кунта ăна чысласа гранитран чăплă палăк лартнă, ун çине Çеçпĕл сăввине чăвашла, вырăсла, украинла çырса хунă.

Юрий Збанацкий Çеçпĕл Мишшин Теччĕри, Шупашкарти, Украинăри пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне лайăх тĕпчесе вĕреннĕ, Совет влаçĕ туса хурассишĕн тата ăна çирĕплетессишĕн, çĕнĕ, революциллĕ поэзи никĕсне хывассишĕн çине тăрса кĕрешнĕ Çеçпĕл сăнарне туллин уçса паракан кĕнеке çырнă. Писатель поэт çуралса ӳснĕ вырăнта пулнă, Çеçпĕл Мишшин тусĕсемпе тата юлташĕсемпе тĕл пулса калаçнă, архивсенче поэт-коммунист ĕçĕ çинчен калакан документсене тĕпчесе вĕреннĕ, çак мĕнпур материалпа хăйĕн романĕнче питĕ ăста усă курнă.

Вулакансем чăваш писательне Леонид Агакова лайăх пĕлеççĕ. Вăл литературăра 40 çула яхăн ăнăçлă ĕçлет. Унăн таланчĕ Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче уйрăмах анлă палăрчĕ, çак вăрçа вăл хăй те активлă хутшăнчĕ. Писатель-фронтовик вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче совет воинĕсен, уйрăмах ачасемпе çамрăксен хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен калакан интереслĕ калавсемпе очерксем нумай çырчĕ. Патриотизмла çар теми халĕ те унăн пултарулăхĕнче тĕп вырăн йышăнать.

Республикăри комсомолăн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине Л. Агакова «Салтак ачисем», «Ылтăн вăчăра», «Партизан Мурат», «Кăсăя» повеçсемшĕн панă. Вĕсенче автор совет халăхĕн фашистла нимĕç оккупанчĕсене хирĕç пынă паттăр кĕрешĕвĕ çинчен каласа парать. Çав произведенисен тĕп геройĕсем — фронтри ачасем, çамрăксем, çапăçăва хастар хутшăннă ывăлсем. Писатель пĕтĕм халăх вăрçин çамрăк паттăрĕсене витĕмлĕ сăрăсемпе сăнласа панă, вĕсен пысăк шухăш-кăмăлне, Тăван çĕршыва юратнине ĕненмелле кăтартнă.

Республикăри комсомолăн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи музыкăпа драма театрĕн çамрăк артисткине Нина Григорьевăна Ч. Айтматов повеçĕ тăрăх лартнă «Манăн хĕрлĕ тутăрлă тополĕм» спектакльре Асель сăнарне, И. Куприянов пьеси тăрăх лартнă «В двух шагах от экватора» спектакльре Хиен партизанка сăнарне ăста выляса кăтартнăшăн панă.

Куракансем ăна ытти рольсенче те ăшшăн кĕтсе илчĕç. Вăл Пинерпи рольне («Айтар»), Лариса рольне

(«Парнесĕр хĕр») ăнăçлă вылярĕ. Н. Григорьева «Тĕттĕмлĕх тытăмĕ» спектакльре те Акулина сăнарне лайăх кăтартрĕ.

Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми лауреачĕсем хушшинче Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Григорий Хирбю пур. Халăха паха музыка произведенийĕсем парнеленĕ паллă композитор çамрăксем валли лайăх юрăсем сахал мар çырчĕ, вĕсем çепĕç кĕвĕпе, музыка пуянлăхĕпе палăрса тăраççĕ. Унăн комсомол темипе çырнă юррисем халăх хушшинче анлă сарăлчĕç. «Комсомол маршĕ» (сăвви В. Урдашăн), «Комсомолецсен юрри» (сăвви А. Лукинăн), «Çамрăклăх» (сăвви А. Алган), «Туслăх маршĕ» (сăвви Ю. Петровпа Ю. Скворцовăн), «Çĕршыв илемĕ» (сăвви А. Маловăн), «Савнă Шупашкарăм» (сăвви Г. Ефимовăн),— кам пĕлмест паян çак юрăсене!

Октябрь 50 çул тултарас умĕн Г. Хирбю хăйĕн чи пысăк произведенине — «Нарспи» оперăна çырса пĕтерчĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви литературăпа искусствăна аталантарассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ. Партипе халăх писательсен, артистсен, композиторсен, художниксен пархатарлă ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ. Кăшни çул Константин Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине тата республикăри комсомолăн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине памалла туни пирĕн парти Совет Союзĕнчи халăхсен литературипе искусствине аталантарассишĕн куллен тăрăшнине питĕ лайăх кăтартса парать.

Литературăпа искусство деятелĕсем ĕççыннисене воспитани парас ĕçре Коммунистсен партине пысăк пулăшу параççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕ вĕсене çапла чĕнсе калать: «Совет искусствин партилĕх, халăхлăх, идейăлăх ялавне çӳле çĕклесе, хăвăрăн ăсталăхăра ӳстерсе пырăр, пĕтĕм вăй-халпа пултарулăха коммунизм строителĕсене политикăллă, таса чунлă, эстетикăллă воспитани парас ĕçе парăр!».

Партин çак чĕнĕвне тивĕçтерекен чи лайăх ответ вăл— литературăра, музыкăра, живописре, театр искусствинче чăннипех паха произведенисемпе спектакльсем хатĕрлесси. Творчествăра хастар ĕçлер, коммунизм обществи тунă тапхăра тивĕçлĕ çĕнĕ произведенисем çырар, литературăпа искусство ĕçченĕсем!

*1967.*

# ЧĂВАШ АЧИ, САССУНА ПАР!

Çеçпĕл Мишши — Совет саманин кăвар чĕреллĕ, çулăмлă поэчĕ. Вăл чăваш совет поэзийĕн никĕсне хывнă пысăк Этем. Пирĕн поэзире, поэзире кăна мар, пирĕн прозăра та Аслă Октябре, Коммунистсен партине, патриотизмпа интернационализма мухтаса, чысласа çырнисем тĕп никĕсре тăраççĕ пулсан, вĕсем пурте Çеçпĕл Мишшинчен, унăн творчествинчен тымарланса пыраççĕ. Вăл хăй те мĕн вулама-çырма вĕренсе çитнĕренпех Пушкин, Некрасов, Горький тата ытти паллă вырăс писателĕсен произведенийĕсенчен, халăх пурнăçĕнчен ăс илсе ӳснĕ, вĕсенчен вĕренсе, хăйĕн творчествине çĕнĕ самана — Совет самани ыйтнă виçене çити хăпартнă.

Октябрьти Аслă революци çĕнтерсенех, Çеçпĕл Мишши кивĕ тĕнчене питлекен, çĕнĕ саманашăн хĕрӳллĕн кĕрешме чĕнекен çулăмлă сăвăсем çырма пуçлать. Ку çеç мар. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне, хăйĕн пĕтĕм кунçулне Аслă Октябрьне, Коммунистсен партийĕн кунçулĕпе ĕмĕрлĕхе çыхăнтарать. Хăйĕн дневникне Çеçпĕл Мишши çапла çырса хурать: «...1918 çула Коммунистсен партине кĕнипе вĕçлерĕм. Хама хам çав тери ирĕклĕ, вăйлă туйма пуçларăм, килйышри, тĕнри, халăхри тĕшмĕшсенчен хăтăлса, пролетариатпа пĕрле эпĕ пурнăç хуçи пулса тăнине туйса илтĕм. Çавăнтан вара пĕтĕм ăсăм-тăнăм уçă. Шухăшăм хăватлă. Эпĕ — коммунист!». Каярахпа вăл çапла çырать: «Коммунист ятне нихăçан та вараламасса шанатăп».

Унăн пурнăçĕнче тепĕр самант питĕ паллă вырăн йышăннă. 1919 çул пуçламăшĕнче ăна Мускава пропагандистсемпе агитаторсен курсне вĕренме янă. Унта вăл В. И. Ленина курнă, аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕрĕн сăмахне итленĕ. Кун хыççăн унăн творчестви те, пурнăçĕ те иксĕлми çăлкуç пек тапса тăма пуçланă.

Партипе совет ĕçне ырми-канми туса пынă хушăрах Çеçпĕл чăваш литературине çунат илтерсе аталантарас тесе, çамрăк авторсемпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, вĕсен сăввисене пухать, уйрăм кĕнеке кăларма хатĕрленет. Çав вăхăтра хăй те «Пурнăçпа вилĕм», «Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Чăн чĕрĕлнĕ» сăвăсем çырать, вырăс писателĕсен (Л. Толстойăн, М. Лермонтовăн тата ыттисен) произведенийĕсене чăвашла куçарать.

Çеçпĕл Мишши çĕнĕ пурнăçшăн хăйне хĕрхенмесĕр, революциллĕ хастарлăхпа ĕçленĕ. Аслă Октябрьччен-

асаплӑ пурнӑç унӑн сывлӑхне хытӑ хавшатнӑ. Сывлӑхе начарланса çитсен, кӑштах Чулхулари госпитальре сывалать те, Крыма — Евпаторири курорта каять. Кунта вӑл «Чӑваш, чӑваш!», «Тинӗсе», «Инçе çинçе уйра уяр», «Çӗн Кун аки», «Катаран каç килсен» тата ытти сӑввисене çырать.

Крымра сывалнӑ хыççӑн Çеçпӗл Мишши Киев хулинчи художество шкулне вӗренме кӗрет, унтан ӑна Хӗрлӗ Çара илеççӗ. Анчах сывлӑхӗ пушшех хавшаса çитнине кура, Çеçпӗле çартан киле яраççӗ. Ара, чим, ӑçта каймалла-ха? Чӑваш çӗршывӗнче — хӑрушӑ выçлӑх... Çак пушара халӑха мӗнпе пулӑшас? Ку шухӑш ӑна канӑç паман. 1922 çулхи март пуçламӑшӗнче Çеçпӗл Мишши хӑйӗн тусӗ Ф. Пакрышень пурӑнакан Волчья Гора ялне каять. Унта кӑшт каннӑ хыççӑн, Остӗр хулинче уездри çӗрӗç пайӗнче ӗçлеме тытӑнать. Йывӑр чир каллех амаланса, çамрӑк шӑмшака çӗмӗрсе пынӑ пулсан та, вӑл ялтан яла çӳресе тырӑ пухать. Атӑл тӑрӑхне ӑсатать, унтан çӑкӑр шыраса килнӗ çынсене пулӑшас тесе тӑрӑшса ӗçлет. Кунта вӑл украина чӗлхине юратса вӗреннӗ, Т. Шевченкӑн «Кобзарь» кӗнекинчи чылай сӑвви-юррисене чӑвашла куçарнӑ.

Çеçпӗл Мишши Остерпа юнашар Старогородка ялӗ хӗрринче 1922 çулхи июнӗн 15-мӗшӗнче вӑхӑтсӑр вилнӗ. Поэта пытарсан, Ф. Пакрышень ун вилтӑпри çине юман юпаран палӑк лартнӑ, ун çине çӗçӗпе касса украинла çапла çырнӑ:

Оца єдина могила
Великого поэта сховала;
З ним богато пісень нових
Буденна земля втеряла.

Кӑвар пек çунса-йӑлтӑртатса таракан вӗри те таса чӗреллӗ Çеçпӗл Мишши хӑйӗн вилӗмсӗр сӑввисемпе кивӗ саманана тӗпӗ-йӗрӗпе ишсе тӑкма, çӗнӗ, хӗвеллӗ кунçуллӑн пурнӑçа шеллемесӗр кӗрешме чӗннӗ. Анчах вӑл литературӑра нумай ӗçлеймен. Поэт 4—5 çул хушшинче çырнисене пӗтӗмпе илсен те, алла яхӑн сӑвӑ кӑна. Çапах вӗсем, сахал пулсан та, пире Тӑван çӗршыва юратма, пархатарлӑ ӗçпе кӗрешӳре хастар та хӗрӳллӗ пулма вӗрентеççӗ, хавхалантараççӗ, пӗтӗм чӗре хӑвачӗпе çӗнӗ пурнӑç тума йыхӑраççӗ. Поэтӑн шухӑш-туйӑмӗсем халӑх шухӑш-туйӑмӗсемпе уйрӑлми тачӑ çыхӑнса тӑраççӗ. «Кӑ-

вар чĕрем — пин çын чĕри. Чĕрем юрри — пин çын юрри»,— тесе çырать вăл.

Çеçпĕл поэзийĕнче социализмлă революци пĕтĕм тĕнчене çĕнетекен, пур халăхсене те ырă, телейлĕ пурнăç кӳрекен вăй-хăват пек курăнать. Ăна вăл вутлă тăвăлпа, çĕнĕ хĕвелпе, кăвак хуппипе танлаштарать. «Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ. Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи»,— тет поэт.

Çеçпĕл Мишши сăввисенче эпир — иртнĕ асаплă вăхăта, кунран-кун хăватлă вăй илсе пыракан çĕнĕ совет саманине витĕр курса, туйса тăратпăр. Вăл кĕрешӳре çуралакан çутă пуласлăх çинчен, çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ йăла, çĕнĕ культура çинчен кашни сăввинче тенĕ пекех хумханса калать.

Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх йăранĕ
Ирĕклĕн çĕнелнĕ пурнăçран тарĕ.
Чĕрере ачашшăн çунĕ, çулăмланĕ,
Тантăшлăх, тăванлăх, юрату кăварĕ.
(«Пуласси».)

Поэт-коммунист яланах çĕнни çĕнтересси, ĕççыннисем телейлĕ те çутă пуласлăх — коммунизм тăвасси çинчен хавхаланса, çакна чун-чĕререн ĕненсе çырать. Вăл хăйĕн сăввисенче «Коммунизм хĕрлĕ ялавне чун тухиччен çĕре ӳкермен» паттăр кĕрешӳçĕсене мухтав юрри шăратать. Çĕнелнĕ çĕршыва, тăван халăха хĕрӳллĕн юратса çырнă хĕвел хĕлхемлĕ сăвăсем Çеçпĕл поэзийĕнче тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенче эпир социализмлă революци ĕççыннисене çĕршыв хуçисем туса хунине, çĕнĕ пурнăçшăн хаяр кĕрешĕве çĕкленнине куратпăр. «Юратнă çĕршывăн хăвачĕ часрах вăранасшăн тапать»,— тесе çырать вăл хăйĕн «Хурçă шанчăк» сăввинче.

Пуласлăх çинчен каланă чух Çеçпĕл чăваш чĕлхи, унăн литератури ирĕклĕ совет саманинче хăватлă çунат сарса чечекленесси, вăл «кăвартан таса», «вĕри вутлă çулăм», «кĕсле кĕвви саслă» пуласси çинчен ĕмĕтленет, çакна пĕтĕм чунĕпе шанать.

Савнă çĕршывăмăн пулĕç
Чаплă сăвăçсем.
Чаплă та илемлĕ çырĕç
Ун чухне вĕсем.

Çеçпел — хĕрӳллĕ патриот, поэт-интернационалист. Вăл чăваш халăхĕ Аслă Октябрь саманинче ытти совет халăхĕсем пекех, пур енĕпе те иксĕлми вăй-хăват илсе аталанасса ĕненнĕ.

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе,
Кунçул уйне тухса, хĕвел тумтир тумланĕ,
Çĕн кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн çул çине çĕн чечексем чĕртсе,
Интернационал кĕперĕ анĕ.

Çапла хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе кунçул уйне тухмарĕ-и вара чăваш халăхĕн ывăлĕ Андриян Николаев! Виççĕмĕш космонавт та, пирĕн пекех, шкул сакки çинчех Çеçпĕл сăввисене юратса вуласа ӳснĕ вĕт! «Чăваш ачи, сассуна пар!» тесе чĕннĕ поэт. Пирĕн 3-мĕш космонавт, çав чĕнĕве илтнĕ пекех, хăй сассине тĕнче уçлăхĕнчен пачĕ.

Çеçпĕл Мишши çĕн самана поэчĕ мĕнле çын пулмаллине те витĕмлĕн, яр-уççăн каласа хăварнă. Поэт, чăн малтанах, халăхпа пĕрле ĕçлесе савăнтăр, ĕçре çитĕнекен, ĕç юрри юрлакан çын пултăр, тет вăл.

Çеçпĕл, каларăмăр ĕнтĕ, чăваш халăхĕн çĕнĕ саманари çĕнĕ поэзийĕн никĕсне хывнă. «Революци пурнăçа пур енчен те çĕнĕ сывлăш, чĕрĕ сывлăш кĕртрĕ. Пур ĕçре те чĕрĕлĕх. Чăваш поэзи те чĕрĕле пуçларĕ. Ку ĕç пирĕн Чăваш çĕршывĕшĕн çĕнĕ ĕç. Çул шырас пулать. Тĕрĕс çул тупас пулать», — тесе çырать вăл хăйĕн «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă статйинче. Поэтăн чăваш чĕлхине тĕпчесе çырнă çак теориллĕ ĕçĕ пирĕн поэзире сăвă ăсталăхне, техникине тĕпренех улăштарчĕ, чăнчăн реформа турĕ.

Революциччenхи чăваш поэзийĕнче çичĕ сыпăкран тăракан (силлабика) сăвă виçи тĕп вырăн йышăннă. Çеçпĕл Мишши ун вырăнне силлабо-туникăлла сăвă виçи аталанассине, сăвăсене мĕнле çырмаллине тĕслĕхсемпе тĕплĕн кăтартса панă. Çапла вара вăл чăваш поэзийĕшĕн çĕнĕ çул тупнă, ăна эпир халĕ Çеçпĕл шкулĕ тетпĕр.

Çеçпĕл Мишшин паха та чаплă ĕмĕчĕсем пĕтĕмпех пурнăçа кĕчĕç. Пирĕн çĕршыв сăн-пичĕ тĕпрен улшăнса çĕнелчĕ. Чăваш халăхĕ, вырăс халăхĕпе ытти халăхсем тăванла пулăшнипе, хăйĕн культурине хăватлăн чечеклентерсе пырать. Унăн телейлĕ пуласлăхĕ çинчен туллин

ĕмӗтленсе юрлакан хăюллă та паттăр сăвăçсем сахал мар ӳссе çитĕнчĕç. Чăваш халăхĕ, унăн литературипе искусстви ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчене тухрĕç.

Чăваш халăхĕ чаплă поэт ятне юратса чыслать, ăна хăйĕн чĕринче усрать. Çеçпĕл Мишши хăйĕн пĕтĕм чунĕпе, ĕмĕчĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе — халăх поэчĕ.

* * *

Çеçпĕл Мишши пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен халĕ тĕпчев ĕçĕсемпе асаилӳсем, сăвăсемпе пьесăсем, повеçсемпе романсем çыраççĕ. Украинăри паллă писатель Юрий Збанацкий «Çеçпĕл» ятла пысăк роман пичетлесе кăларчĕ, ăна чăвашла А. Алга поэт куçарчĕ. Çак кĕнекене пирĕн вулакансем, Украинăри пекех, хавасланса кĕтсе илчĕç. Юрий Збанацкиех Çеçпĕлĕн Украинăри пурнăçĕпе хастар ĕçĕ-хĕлĕ çинчен киносценари çырса пĕтерчĕ. Ăна чăваш халăхĕ ырласа йышăнчĕ.

Чăваш АССР кĕнеке издательстви Петр Чичкановăн «Кăвар чĕре» ятлă биографиллĕ-документлă романне пичетлесе кăларчĕ. Çеçпĕл çинченех А. Асламас композитор опера çырчĕ, А. Кăлкан драматург пьеса çырса пĕтерет. Кунпа пĕрлех поэт çырнă сăвăсене юбилей тĕлне Мускавра вырăсла уйрăм кĕнекепе кăлармалла, художниксем тĕрлĕрен илемлĕ ӳкерчĕксем тăваççĕ. Чăваш комсомолĕ литературăпа искусствăри паха произведенисемшĕн кашни çул Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премисем парать. Çапла вара пирĕн хамăрăн çеçпĕлиана пуçланчĕ; чаплă поэтăн хаклă та хисеплĕ ячĕ, унăн асран кайми сăнарĕ, çулăмлă сăвви-юрри чăваш культурин историне ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕ.

Украина çĕрĕнче чăвашсемшĕн асран тухми çывăх та сăваплă вырăн пур: вăл чăваш совет поэзин никĕсне хывнă кăвар чĕреллĕ поэт-коммунистăн, таса та вĕри чунлă Çеçпĕл Мишшин вилтăпри. Украина çыннисем поэта Чернигов облаçĕнчи Остер хулинче пытарнă, ăна чысласа гранитран чаплă палăк лартнă, ун çине Çеçпĕлĕн «Чăваш чĕлхи» сăввинчи тăватă йĕркене чăвашла, вырăсла тата украинла çырса хунă.

Остерта энĕ Çеçпĕл вилнĕ кун — 1969 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче пултăм. Манпа пĕрле унта поэтăн 1918—1920 çулсенче Теччĕре пĕрле ĕçленĕ çывăх тусĕ Павел Бекшанский журналист та пулчĕ. Украина писателĕсем, Остер ĕççыннисем, шкул ачисем пире питĕ кăмăллăн кĕтсе

илчӗҫ. Вӗсемпе пӗрле эпир Ҫеҫпӗл палӑкӗ умне чӗрӗ чечексем хутӑмӑр. Кунта иртнӗ ҫулсенче чӑваш писателӗсенчен нумайӑшӗ — П. Хусанкай, М. Ухсай, А. Алга, Уйӑп Мишши, С. Шавли т. ыт. те. Ҫеҫпӗл Мишши ячӗпе хисепленекен колхозран ӗҫсыннисем, шкул ачисем пулнӑ. 1959 ҫулта Остера паллӑ пӑлхар писателӗ Ангел Тодоров пырса кайнӑ. Ҫеҫпӗл ҫинчен вӑл ҫапла ҫырса хӑварнӑ:

«Чӑваш халӑхӗн аслӑ поэчӗ Ҫеҫпӗл Мишши ӗҫлесе пурӑннӑ вырӑнсене курма тӳр килнӗшӗн эпӗ хама калама ҫук телейлӗ шутлатӑп.

Халӑхӑн ирӗклӗх юрӑҫине, Совет влаҫӗшӗн кӗрешекене мухтав!

Пӑлхар халӑхӗ Ҫеҫпӗлӗн паттӑр ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫулӑмлӑ творчестви умӗнче пуҫ таять!»

Ҫеҫпӗл палӑкӗ умӗнче тӑнӑ чух ирӗксӗрех Ф. Покрышень 42 ҫул каялла Шупашкара, чӑваш писателӗсен Союзне ҫырнӑ ҫыруври сӑмахсем аса килчӗҫ: «Ман чӗремшӗн хаклӑран хаклӑ, манма ҫук тусӑм, тӑван пиччем Ҫеҫпӗл Мишши нихҫан вӑранайми ҫывӑрать. Питӗ шел. Ҫак вӑхӑтра чӗрем епле ыратнине каласа пама сӑмах та ҫитес ҫук. Мишша пиччем урӑх сӑвӑ ҫырма тӑрса ларас ҫуккине аса илсессӗнех шӑпӑртатса куҫҫуль юхса анать... Лайӑх ӗҫленӗшӗн, яланах тӗрӗслӗхшӗн тӑнӑшӑн ӑна пурте юрататчӗҫ. Унӑн сӑввисем питӗ килӗшетчӗҫ»,— тесе ҫырнӑ вӑл.

Украина ӗҫсыннисем чӑваш поэтне манмаҫҫӗ, ӑна яланах хисеплесе асӑнаҫҫӗ, вӑл 70 ҫул тултарнине тивӗҫлипе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ: ун вилтӑприне тирпейлӗн пӑхса усраҫҫӗ. Палӑк умӗнче тӑнӑ чухне Ҫеҫпӗлӗн «Эпӗ вилсен» сӑввинчи йӗркесем те аса килеҫҫӗ:

Симӗс курӑкпа тумлантӑр
Ман тӑлӑх тӑпра;
Хӗрлӗ чечексем ешерччӗр
Ман вырӑн тавра...

«Ҫеҫпӗл Мишши кӗтнӗ вӑхӑт ҫитрӗ, унӑн ӗмӗчӗсем пурнӑҫланчӗҫ. Пӗтӗм ҫӗршыв калама ҫук ҫӗкленчӗ, чечекленчӗ. Ун вилтӑпри ҫинче яланах хӗрлӗ чечексем ешереҫҫӗ. Пирӗн ӳсӗмсене курсан, поэт-революционер мӗн тери савӑнӗччӗ, мӗн тери хитре сӑвӑсем ҫырӗччӗ! Анчах вӑл ҫук, ҫук пулсан та — вӑл пирӗнпе пӗрлех утать. Эпир кӑвар чӗреллӗ поэтӑн, пирӗн хушӑри интернационал, туслӑх кӗперне хывакан ӗҫӗсемпе, ҫӗнӗ пурнӑҫ тума

чĕнекен сăввисемпе савăнса мухтанатпăр»,— терĕ Остер хула Совечĕн ĕçтăвком председателĕ Н. И. Балдук.

Остерта Çеçпĕл ячĕпе çыхăннă сăваплă вырăнсем нумай. Хула клубĕпе кунти пĕр урама ун ятне панă, краеведени музейĕпе хулари библиотекăра Çеçпĕл кĕтесĕсем йĕркеленĕ. Юбилей тĕлне Киевра та Çеçпĕл Мишши урамĕ пулать, унăн кĕнекине иккĕмĕш хут Украинăра кăлараççĕ, вăл пурăннă çурт çине асăну хăми çапма йышăннă, çак кунсенче тата поэт портречĕ те пысăк тиражпа пичетленсе тухмалла. Çеçпĕл Мишши юбилейне ирттерме ятарласа йĕркеленĕ комисси планĕпе Киевра, Остерта, Евпаторире октябрь-ноябрь уйăхĕсенче литературăпа музыка каçĕсем пулмалла. Çав вăхăтра вĕсем пирĕн республикăран писательсен, рабочисен, колхозниксен делегацийĕ пырасса кĕтеççĕ. Хăйсем те пирĕн пата хăнана килме шутлаççĕ.

Икĕ çул каялла ВЛКСМ чăваш обкомĕ Юрий Збанацкине «Çеçпĕл» романĕшĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен преми памалла турĕ. Остер хулинче вара, чаплă поэтăмăр вилтăприйĕ умĕнче иртternĕ митинг вăхăтĕнче, Украинăри паллă писатель кăкри çине лауреат медальне çакма эпĕ телейлĕ пултăм. Çав медале панă чух Остер ĕççыннисем мĕн пек савăннине, хавхаланнине, сăмахпа калама та çук. Вĕсемшĕн ку чăн-чăн уяв пулчĕ. Çапла вара пирĕн юратнă поэт Украинăпа Чăваш çĕршывĕ хушшинчи тăванла туслăха тата ытларах сарма, çирĕплетме пулăшать.

Çеçпĕл Мишши тăван халăха «кив çĕртен çĕн çул çине» кăларас тесе пĕтĕм чунне парса ĕçленĕ, хăйне вăл нихçан та халăхран уйăрман, яланах унпа пĕрле пулнă, хăйĕншĕн кăна çырнă сăвă унăн пĕрре те çук.

Çеçпĕл поэзийĕ — пире малалла утма, коммунизм тума, халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетме чĕнекен поэзи. Çеçпĕл — хĕвеллĕ пурнăç юрăçи.

*1969.*

## ХАЛĂХ ЮРĂÇИ

Чăваш совет литературин никĕсне хунă хастар çынсенчен пĕри — талантлă поэт, прозаик, журналист, критик тата публицист Семен Васильевич Элкер Йĕпреç районĕнчи Мăн Упакасси ялĕнче çуралса ӳснĕ. Кунтанах

вал 1915 çул пуçламăшěнче пěрремěш тěнче вăрçине тухса кайнă, Октябрьти социализмла Аслă революци çěнтерně хыççăн ял Совет секретарěнче, чухăнсен комитечěн председателěнче, вулăс комитетěнче ěçленě май, çак ялта Совет влаçне çирěплетессишěн пайтах вăй хурса тăрăшнă. Пěр çул Хусанти учительсем хатěрлекен курсра вěреннě хыççăн та, 1920 çулта, каллех вăл хăйěн тăван ялне таврăннă, икě çул хушши пуçламăш шкулăн учителě пулнă, унтан вара литературăпа журналистика ěçне куçнă. 1922—1935 çулсенче С. В. Элкер «Канаш» (хальхи «Коммунизм ялавě») хаçатпа «Сунтал» журналăн сотрудникě пулать, каярахпа чылай вăхăт Чăваш кěнеке издательствин редакторěнче ěçлет.

Поэтăн малтанхи сăвви («Шурă хурăн») «Канаш» хаçатăн 1921 çулхи февралěн 21-мěшěнчи номерěнче пичетленнě, çавăнтан вара унăн сăввисем тăтăшах хаçат-журналсенче çапăнса пыма пуçлаççě. 1928 çулта С. Элкер хăй çырнă сăвăсен малтанхи пуххине — «Самана» ятлă кěнекине пичетлесе кăларать. Çак кěнекери чылай сăвăсенче вăл чăваш халăхěн шухăш-кăмăлне тарăннăн палăртать, унăн ěлěкхи асаплă кунçулě, патша влаçне хирěç пынă кěрешěвě çинчен, Совет самани вăхăтěнче унăн çěнě пурнăç пуçланса кайни çинчен хумханса каласа парать. Поэтăн В. И. Ленин вилнě çул çырнă «Хурçă карап» сăвви те çак кěнекенех кěнě. Унта вăл революци çулпуçěн ěçě нихçан та вилес çуккине, унăн идейисем хăватлăн пурнăçа кěрсе пырса, ěлěк пусмăрта пурăннă халăхсене йывăр кěрешӳсем витěр «телейлě çыран патне» — коммунизм патне илсе çитерессине чун-чěререн шаннине яр-уççăн палăртать.

Çирěммěш çулсенче С. Элкер «Хěн-хур айěнче» ятлă пысăк поэма çырать. Çак историлле произведенире чăваш халăхěн ěлěкхи йывăр та тертлě пурнăçě, вăл ылханлă пусмăр тěнчине хирěç хаяр кěрешěве çěкленни, аслă вырăс халăхěпе туслă пурăнни витěмлěн те тарăннăн сăнланнă. Поэмăн чěлхи илемлě те пуян. Поэт халăх сăмахлăхěпе ытě меллě те пěлсе усă курнă: произведени чăп-чăп чăвашла шăранса янăрать.

Писатель пултарулăхěнче историпе революци теми пысăк вырăн йышăнать. «Хěн-хур айěнче» поэма хыççăн вăл «Вăрçă кунěсем» ятлă роман-хроника çырчě. Унта пěрремěш империализм вăрçин фрончěсенче çапăçакан салтаксен политикăлла ăнланулăхě ӳссе пынине, февральти тата Октябрьти Аслă революци кунěсенче рабо-

чисемпе хресченсем капиталистсемпе помещиксене хирӗç кӗрешнине тӗрӗс те ăнланмалла сăнласа кăтартнă.

«Шурăмпуç килсен» романри ӗçсем вырăнсен пӗрремӗш революцийӗ вăхăтӗнче пулса иртеççӗ. Вулакан умне çав тапхăрти пурнăç, чăваш ялӗн тӗрлӗ сийӗсем куç умне сарлакан тухса тăраççӗ. Романри ӗçсем пурте пӗр тӗп ыйтупа — çӗршӗн кӗрешессипе çыхăннă. Çав кӗрешӳре эпир рабочи класпа ӗç хресченӗсем тата интеллигенци хушшинчи çыхăнусем çирӗпленсе пынине уççăн куратпăр.

Граждан вăрçи çулӗсенче чăваш ялӗнче пулса иртнӗ çивӗч класс кӗрешӗвне сăнласа паракан «Вунсаккăрмӗш çул» драмăллă поэма та С. Элкер пултарулăхӗнче паллă вырăн йышăнать.

Пысăк калăплă произведенисемпе пӗрлех С. Элкер сахал мар калав, очерксемпе юмахсем çырчӗ. Вӗсем хушшинче вулакансем унăн «Унтри», «Кивӗ ялта», «Ӗç шыраса» калавӗсемпе «Улăпсем» ятлă юмахне уйрăмах килӗштереççӗ.

С. Элкер тăван чӗлхене питӗ лайăх пӗлнӗ, чăннипех те илемлӗ сăмах ăсти пулнă, çавна май хăйӗнпе пӗр вăхăтра ӗçленӗ çыравçăсемпе çамрăк авторсен пултарулăхне яланах тивӗçлипе пахаласа хакланă. Çакна эпир вăл Çеçпӗл Мишши, Илле Тăхти, Хумма Çеменӗ, Тал-Мăрса, Иван Мучи, М. Данилов-Чалдун пултарулăхӗсем çинчен тата çамрăк писательсен произведенийӗсем пирки çырнă критикăллă статьясемпе рецензисенче лайăх куратпăр. Чăваш литературине малалла аталантарассишӗн ялан тимлӗ тăрăшнăскер, вăл идейăпа ăсталăх енчен юрăхсăр, историлле чăнлăха пăсса кăтартакан произведенисене чăтма пултараймастчӗ, художествăллă творчествăра парти çул-йӗрне çирӗп тытса пырас тӗлӗшпе яланах тимлӗ те принциплă пулма чӗнетчӗ, критиксене кашни талантлă литератор пултарулăхне асăрханса пăхма вӗрентетчӗ. Вăл тăван литературăра çамрăк ăрăва пăхса ӳстерессишӗн куллен-кун тăрăшни çамрăк авторсен произведенийӗсене редакциленӗ чухне те лайăх сисӗнетчӗ.

С. Элкер тăван халăха, чăваш çӗршывне хӗрӳллӗн юрататчӗ, вӗсем çинчен чуна тытса илекен илемлӗ сăвăсемпе хӗрӳллӗ публицистикăлла статьясем çыратчӗ. Вăл чăн-чăн поэт-интернационалистчӗ, совет халăхӗсен туслăхӗне тăванлăхӗн, вӗсем коммунизм çӗнтерӗвӗ ячӗпе тăвакан пархатарлă та хаваслă ӗçӗн хастар юрăçиччӗ. Хăйӗн чи лайăх произведенийӗсенче С. Элкер совет стройӗн

иксӗлми ҫирӗплӗхне, тӗрлӗ халӑх ҫыннисен ӗҫпе кӗрешӳри мораллӗ пӗрлӗхне тарӑннӑн кӑтартса пачӗ.

Поэтӑн йыхравлӑ сасси Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи ҫулӗсенче уйрӑмах вӑйлӑн янӑраса кайрӗ. «Юншӑн юн», «Хаярлӑх сӑмахӗ» тата ытти чылай сӑввисенче вӑл совет ҫыннисене Тӑван ҫӗршывшӑн паттӑррӑн ҫапӑҫма чӗнсе каларӗ. Чӑваш салтакӗ Иван Смирнов пулеметчик фронтра паттӑрлӑх кӑтартни ҫинчен сӑнарласа ҫырнӑ «Вӑл вилӗмсӗр» поэмӑра аслӑ Ленин хулишӗн тӑшмана хирӗҫ пурнӑҫа шеллемесӗр, юлашки юн тумламӗ юлмиччен хӑюллӑн ҫапӑҫакан совет салтакӗсен — вырӑс, украин, тутар, чӑваш, мари, мордва тата ытти халӑхсен хастар ывӑлӗ-хӗрӗсен нихҫан арканми ҫирӗп туслӑхӗпе пӗрлӗхне мухтаса юрларӗ.

Нумай енлӗ те пуянччӗ писатель-коммунистӑн обществӑпа творчествӑри ӗҫӗ-хӗлӗ. 1951—1955-мӗш ҫулсенче ӑна РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутатне, 1958 ҫулта КПСС Чӑваш обкомӗн членне суйланӑ. Кунпа пӗрлех вӑл Чӑваш писателӗсен Союзӗн правленийӗнче те, илемлӗ литература журналӗсен редакцийӗсенче те пайтах вӑй хурса ӗҫлерӗ.

Чӑваш литературине аталантарас тӗлӗшпе сахал мар тава тивӗҫлӗ ӗҫ тунӑшӑн 1940 ҫулта Семен Васильевич Элкере Чӑваш АССР халӑх поэчӗн хисеплӗ ятне панӑ. Ӑна Ленин тата Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗсемпе, «1941—1945 ҫулсенчи Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра хастарлӑ ӗҫленӗшӗн» медальпе наградӑланӑ. Унӑн ятне Чӑваш АССРӗн Ӗҫ мухтавӗпе Паттӑрлӑхӗн Хисеп кӗнекине кӗртнӗ. Пирӗн республика столицинчи пӗр библиотекӑна тата пӗр урама, Мӑн Упакассинчи вӑтам шкула С. В. Элкер ятне панӑ.

Ятлӑ-сумлӑ пурӑнса ирттерчӗ вӑл хӑйӗн пурнӑҫне, Коммунистсен партийӗн ӗҫне чун-чӗререн парӑнса туса пычӗ, коммунизмшӑн пӗтӗм хастарлӑхне хурса тӑрӑшрӗ. Нумай нациллӗ Совет литературинче унӑн произведенийӗсем хисеплӗ вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Вӗсене чӑваш халӑхӗ ялан юратса, кӑмӑлласа вулӗ.

*1974.*

## ТӐВАН ҪӖР СӖТКЕНӖПЕ ӲСНӖ ПОЭЗИ

Чӑваш халӑх поэчӗн Ухсай Яккӑвӗн пурнӑҫӗпе пултарулӑх ҫулӗ чӑннипех те пуян. Вӑл 1911 ҫулхи ноябрӗн

26-мĕшĕнче Пушкăрт республикинчи Слакпуçĕнче, чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов çуралса ӳснĕ ялта чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Пуçламăш шкул хыççăн пулас поэт хресчен çамрăкĕсен шкулĕнче, унтан Ĕпхӳри педагогика институчĕн хатĕрлев уйрăмĕнче, кайран Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе хисепленекен университетра вĕренет. Темиçе çул хушши вăл Мускаврa чăвашла тухса тăракан «Коммунар» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ. Пушкăрт АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕ пулнă, Патăръелпе Ульяновскри педагогика училищисенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ.

Отечественнăй Аслă вăрçă пуçлансан, Ухсай Яккăвĕ халăх ополченийĕн отрядне каять, 1942 çулхи май уйăхĕнче вĕренӳ батальонĕн курсанчĕ пулса тăрать, унтан Коммунистсен партине кĕрет. Малалла вăл çар хаçачĕсенче ĕçлет. Вăрçă хыççăн поэт-салтак каллех мирлĕ ĕçе таврăнать: Чăваш АССР кĕнеке издательствинче редактор, «Тăван Атăл» альманах редакторĕ пулать, 1948 çултан пуçласа творчество ĕçĕпе çеç пурăнма тытăнать.

Халăх поэчĕн пурнăçĕпе творчествăлла биографийĕ пĕтĕмпех революципе, çĕршыври социализмла строительствăпа уйрăлми тачă çыхăннă. Ухсай Яккăвĕ Патша Раççейĕнчи хресченсен асаплă, выçăллă-тутăллă пурнăçне лайăх астăвать.

Пушкăрт хирĕсенче граждан вăрçи вучĕ алхаснă чухне Ухсай Яккăвĕ саккăрти ача пулнă. Мирлĕ халăха Колчак эшкерĕ епле тискеррĕн асаплантарнисем, Чапаевăн хĕрлĕ салтакĕсем шурă гвардеецсене хирĕç паттăррăн çапăçнисем çав çулсенче чылайăшĕ Ухсай куçĕ умĕнче пулса иртнĕ. Кайран, нумай çул иртнĕ хыççăн, çакăн çинчен поэт хăйĕн чи лайăх произведенийĕсенче каласа парать.

Ача чухнехи çулсене аса илсе, Ухсай Яккăвĕ хăйĕн ашшĕпе амăшне чун-чĕререн тав тăвать. Вĕсем ăна çепĕç юрăсем нумай юрласа панă иккен, паттăрсем çинчен тĕрлĕ юмах-халап кала-кала кăтартнă. Чăваш халăхĕпе вырăс халăхĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен произведенийĕсемпе паллашнăçемĕн пулас поэт умĕнче çапла çĕнĕ, халиччен пĕлмен тĕнче уçăлать, пултаруллă çамрăк йĕкĕтĕн кăмăлĕ калавсем, очерксем, сăвăсем çырас туртăмпа çĕкленет.

Хăйĕн чи малтанхи сăввине («Юратрăм эп, хирсем, сире») Ухсай Яккăвĕ çур ĕмĕре яхăн каялла пичетлесе

кăларнă. Тăван çĕре мĕн тери юратнине унта вăл ака епле сăмахсемпе каласа парать:

Юратрăм эп, хирсем, сире,
Сана та, сĕм-хура вăрман!
Нихçан та шухă чĕрере
Ку юрату çухалмĕ ман.
Нихçан та эп хăватăра
Манмастăп, хамăн юррăмра.
Ура тапса, пуçа ухса
Сире мухтатăп эп, Ухсай.

Çакăнтан пуçласа халăх поэчĕ паян кунччене тăван çĕр темипе кăвапаран çыхнă пек тачă çыхăннă. Хăйсен тăван çĕрне, тăван Совет çĕршывне вĕçĕмсĕр юратакан çĕр ĕçченĕсем, вăрçă паттăрĕсем — ака камсем Ухсай Яккăвĕн сăвви-поэмисенчи тĕп геройсем. Унăн поэзийĕнче пурнăç тĕрĕслĕхĕ, калама çук ăшă лирика, халăх ăсхакăлĕ, çутă юмор тулса тăрать. Литературăра ĕçлеме тытăннăранпа Ухсай ĕнтĕ аллă ытла кĕнеке (чăвашла, вырăсла) пичетлесе кăларнă.

Вăрçăчченхи унăн творчествинче пĕр паллă туртăм палăрса тăратчĕ — чăваш халăхĕн хальхи пурнăçне революцичченхи пурнăçпа танлаштарса кăтартасси. Колхоз пурнăçĕ çинчен калакан сăвăсемпе, балладăсемпе, юмахсемпе, лирикăллă пĕчĕк поэмăсемпе пĕрлех вăл историллĕ темăпа лирикăллă-эпикăллă, драмăллă пысăк произведенисем те çырчĕ. Вĕсен шутне эпир «Халăхăн ылтăн кĕнеки» поэмăна тата сăвăласа çырнă «Тутимĕр» трагедие кĕртме пултаратпăр.

«Халăхăн ылтăн кĕнеки» поэмăна поэт СССР Конституцин проектне халăхра анлăн сӳтсе явнă май хавхаланса çырнă. Унăн композицине, сюжетне вăл пĕтĕмпех чăваш халăхĕн хальхипе иртнĕ пурнăçĕн танлаштарăвĕ урлă йĕркеленĕ.

Совет çыннисен пурнăçĕ епле пуянланса, тулăхланса пынине Ухсай Яккăвĕ «Кĕрхи октавăсем», «Ĕпхӳ пасарĕ», «Чăваш çĕрĕ», «Кĕрхи кĕреке» ятлă лирикăллă пысăк мар сăвăсенче, «Туй», «Телей юмахĕ» поэмăсенче илемлĕ çырса кăтартнă. Ку сăвăсене вуласан, эпир тӳрех унăн пултарулăхĕ çав çулсенче епле ӳссе кайнине, халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен творчествинчи тĕслĕхсемпе вăл мĕн тери пĕлсе усă курма пултарнине туйса илетпĕр.

Вăрçă умĕнхи çулсенче Ухсай Яккăвĕ ачасемпе çам-

ракçем валли те сахал мар ăста произведени çырчĕ. «Кăмака çинчи Иван», «Пуканесен бригади» поэмăсем чăвашсен ача-пăча литературин ылтăн фондне яланлăхах кĕрсе вырнаçнă ĕнтĕ. Вĕсене поэт ачасене ăнланма ансат, çав вăхăтрах пуян та илемлĕ чĕлхепе çырнă.

Халăх поэчĕн творчествинче «Ĕмĕт» поэма пысăк вырăн йышăнать. Поэмăра кивĕ чăваш ялĕн пурнăçне, йăли-йĕркине, тĕп геройăн ача чухнехипе çамрăк чухнехи пурнăçне, унăн ĕмĕчĕ-туйăмĕсене тĕплĕн кăтартса панă. Чи хакли вара поэмăра çапах та ку мар, урăххи: чăваш литературинче Ухсай Яккăвĕ пĕрремĕш хут Владимир Ульянов чăваш çыннине Охотникова вĕренӳ аттестачĕ илмешкĕн экзамен тытма епле пулăшнине кăтартса пани.

Вăрçă умĕнхи драматургире Ухсай Яккăвĕ «Тутимĕр» трагедийĕ тивĕçлипех паллă вырăн йышăнчĕ. Кунта поэт Тутимĕр чăваш паттăрĕ, Пугачевпа Салават Юлаев ĕçĕсене малалла тăсса, XVIII ĕмĕрте чăваш халăхне прĕклĕхшĕн пыракан кĕрешӳре епле ертсе пынине кăтартнă. Вырăнти хресченсен çав кĕрешĕвĕ йĕркесĕр те сапаланчăк пулнипе, пăлхава çĕкленнисем хăйсен умĕнчи тĕллеве уçăмсăр курнипе чăнах та трагедилле пулса тухнă. Çакна хăйĕн произведенийĕнче поэт истори тĕлĕшĕнчен тĕрĕс çырса панă. Трагедири çынсене—Тутимĕр паттăра, Эрпикене, пăлхава хутшăннă ытти геройсене поэт чăн-чăн реализмла сăнарсем туса кăтартма пултарнă. Поэмăра Пушкăрт республикинче пурăнакан ĕлĕкхи чăвашсен юррисемпе, легендисемпе пĕлсе усă курни Ухсай Яккăвĕ çак чаплă произведенине историллĕ, нациллĕ паха колорит парса тăрать.

Ухсай пултарулăхĕ Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă вăхăтĕнче вăйлă аталанса кайрĕ. Çар хаçатĕнче ĕçленипе, çапăçусене тăтăш хутшăннипе пăхмасăрах (поэт вăрçăра икĕ хут аманнă), çав çулсенче Ухсай Яккăвĕ сахал мар лирикăллă, çавăн пекех эпикăллă произведени çырма пултарчĕ. Вăрçă çул-йĕрĕнчи хăйне майлă лирикăллă дневник теме пулать Ухсайăн ун чухнехи творчествине. Совет салтакĕ Ухсай сăвви-поэмисенче алла хĕçпăшал тытса çапăçакан çын çеç мар. Ун произведенийĕсенчи совет салтакĕ — чи малтан аслă çĕршыв хуçи, çĕршыв шăпи çинчен шухăшлакан, ун илемлĕхне-пуянлăхне чунĕрепе туйса тăракан çын. Этем телейĕ фашизма çĕнтерсесĕр килес çуккине те поэт тӳрремĕн каламан сăмахсемпех лайăх систерсе пырать.

Çапла, совет салтакĕсем юратнă Тăван çĕршыв чысĕ-

не никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре мĕн тери паттăррăн çапăçни çинчен Ухсай Яккăвĕ сахал мар сăвăюрăсем çырчĕ çав çулсенче. Вĕсен шутне чи малтанах «Пĕр полк çинчен хунă сăмах» (1943), «Шăллăм» (1944), «Шăпчăк» (1944), «Влтава шывĕ хĕрринче» (1945) поэмăсене кĕртмелле.

1942 çулхи декабрь уйăхĕнче 1-мĕш Украина фронтĕнчи пĕр соединенире хаяр çапăçу пулса иртнĕ хыççăн чăваш салтакĕсемпе командирĕсем митинг туса ирттереççĕ, унта Ухсай Яккăвĕ чăваш халăхĕ валли сăвăласа çырнă çырăва вуласа параççĕ. «Пĕр дивизири чăваш салтакĕсемпе офицерĕсем чăваш халăхне янă çыру» пулать ĕнтĕ çак произведени. Вăрçăри вут-çулăмлă ларутăрăва, чăваш салтакĕсен шухăш-кăмăлне, вĕсен çапăçури паттăрлăхне анлăн сăнласа парать сăвăç ку поэмăçырура. Тăшмана çĕнтерессине çирĕп шанаççĕ чăваш салтакĕсем, ăна çапса аркатмашкăн тăван халăх умĕнче тупа тăваççĕ.

Хăйĕн вăрçăри сăввисемпе поэмисен ярăмне Ухсай Яккăвĕ «Влтава шывĕ хĕрринче» ятлă лирикăллă хроникăпа вĕçлет. Кунта вăл Европăна Гитлер пусмăрĕнчен хăтарнă салтак шухăш-туйăмне, кăмăл туртăмĕсене çырса кăтартать. Чех хĕрĕпе калаçнă чухне поэт, хăйĕн шухăшне çеç мар, ыттисен шухăшне те пĕтĕмлетсе палăртать, Тăван çĕршыв уншăн мĕн тери хаклă пулнине акă мĕнле лирикăллă сăмахсемпе çирĕплетет:

Хулара мана чи лайăх
Ылтăн çурт парнелеме
Тытăнсан та, эпĕ кайăп
Хам çуралнă хирĕме.

Чăваш поэзийĕ, нумай нациллĕ мĕнпур совет литератури пекех, нимĕç фашисчĕсене хирĕç пынă çапăçу çулĕсене чыслăн утса тухрĕ. Пирĕн тăван чĕлхе вырăс чĕлхипе юнашар вăрçă хирĕнче епле çĕнтерӳллĕн янăранине Ухсай Яккăвĕ «Чăваш чĕлхи» сăвăра акă мĕнле йĕркесемпе çырса кăтартать:

Çулла — тусан, хĕлле юр юнлă, тарăн.
Ялсем те хуласем çинче хĕлхем.
Танкра та нӳрлĕ окопра тăнларăм
Тĕреклĕ сассуна, тăван чĕлхем!

Орел та Прага, Киев та Варшава,
Белград та, Будапешт та, Порт-Артур,—
Татти-сыпписӗр пычӗ вӑрҫӑ шавӗ,
Унта чӑваш чӗлхин те пайӗ пур.

Сана паян тиркевлӗ хурлаканӗ
Аҫта кам пулӗ, пысӑк ҫӗр ҫинче,—
Мухтатӑп эпӗ, гварди капитанӗ,
Сана хӗвел те уйӑх умӗнче.

Совет ҫарӗ юнлӑ вӑрҫӑра фашизма ҫӗнтернӗ хыҫҫӑн пирӗн нумай нацилллӗ литература малалла ҫӗнӗ условисенче ешерсе чечекленме пуҫларӗ. Халь ӗнтӗ ун умӗнчи тӗп тӗллевсенчен пӗри вӑл—совет ҳалӑхӗн вӑрҫӑри паттӑрлӑхне, ҫав паттӑрлӑхӑн ку вӑхӑтрипе малашнехи пӗлтерӗшне анлӑн та тарӑннӑн кӑтартасси пулса тӑчӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи уйӑхсенче ҫырнӑ произведенийӗсенче чылайӑшӗнче чӑваш писателӗсем ҫӗнтерӳ савӑнӑҫне, халӑх мирлӗ ӗҫе пуҫӑннине сӑнларӗҫ. Анчах ӗнерхи салтак халь ӗнтӗ вӑрҫӑ ҫинчен ҫеҫ мар, пӗтӗм тӗнчере мире упрасси, ҫирӗплетесси ҫинчен те хӑйӗн хӑватлӑ сассипе калаҫать. Ухсай та ун ҫинчен манмасть, ҫӗр ҫинчи халӑхсене мире хӳтӗлеме чӗнсе, чун-чӗрене тыткӑнлакан ҫӗнӗ сӑвӑсем ҫырать.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче Ухсай Яккӑвӗн пултарулӑхӗнчи тӗп темӑсенчен пӗри Чӑваш ҫӗрӗнче колхозлӑ йӗрке епле пуҫланса кайса ҫирӗпленсе ҫитнине кӑтартасси пулчӗ. Хӑйӗн сӑввисемпе поэмисенче вӑл халӑх пурнӑҫӗн тӗлӗнмелле вӑйӗпе илемне, ҫӗр ӗҫченӗн чӗре варринчи чи хаклӑ шухӑш-туйӑмне калама ҫук пысӑк ӑсталӑхпа ҫырса сӑнларӗ. Ҫакӑ вӑл уйрӑмах «Кӗлпук мучи» поэмӑпа «Ту урлӑ ҫул» романра палӑрчӗ.

«Кӗлпук мучи» поэма — чӑваш ҫӗрӗҫченӗн кунҫулӗпе шӑпине кӑтартакан эпикӑллӑ произведени. Поэмӑри тӗп геройсен сӑнарӗсенче чӑваш ҫыннин нациллӗ характерӗн чи лайӑх енӗсем палӑраҫҫӗ.

Пурнӑҫра Кӗлпук мучин нумай курма, нумай чӑтса ирттерме тивнӗ: кулаксемпе улпутсен пусмӑрне те, шурӑ гвардеецсен тискерлӗхне те тӳссе ирттернӗ ҫак этем. Акӑ ӗнтӗ Октябрьти революци ҫӗнтерет. Пачах урӑх «юрӑ» пуҫланать Кӗлпукшӑн та. Чунӗпе пӗтӗмпех ҫамрӑкланса кайнӑскер, ҫӗнӗ пурнӑҫ тунӑ ҫӗре калама ҫук хастаррӑн хутшӑнать вӑл. Фашистла Германие хирӗҫ пынӑ вӑрҫӑ ҫулӗсенче те Кӗлпук пурнӑҫӗ ырми-канми хӗрӳ ӗҫлӗ пул-

нă. Иксĕлми ĕçченлĕх, кирек мĕнле самантра та пусăрăнчăк кăмăла сирсе яма пĕлни, пур япала çине те общеcтвăлла куçпа пăхни, халăх ĕçне яланах хастар хутшăнни — акă мĕнпе палăрса тăрать Кĕлпук мучи. Поэмăна малтан пуçласа вĕçне çити хаваслă юмор ăшăтса тăрать, унтах тĕллĕн-тĕллĕн вичкĕн сатира та куратăн.

Колхозлă пурнăç çулĕ çине тăрасси чăваш ялĕнче те, ытти çĕрти пекех, çăмăл пулса пыман. Уйрăмах вăтам хресчен хытă иккĕленнĕ. Ухсай хăйĕн «Ту урлă çул» поэминче çавнашкал çынна Калля сăнарĕ урлă кăтартнă. Йывăр та асаплă çулпа пырса кĕрет колхоза Калля. Хăй хуçалăхĕшĕн çунакан çын психологине автор чăн пурнăçри тĕслĕхсене çывăххăн аса илтерекен сăрсемпе çырса кăтартать. Канăç паман иккĕленӳсене сирсе ывăтма пурнăçран кая юлнă тĕшмĕшлĕ Калляпа унăн арăмĕ — Чинавье инке чи малта пыракан колхозниксем пулса тăнине курать.

Кăмăла килекен ытарайми чăваш хĕрарăмĕн вăйлă сăнарĕ пулса тухнă Чинавье инке поэмăра. Хут пĕлмен тĕттĕм чăваш хĕрарăмĕ, колхоза кĕрсен, куç умĕнчех улшăнса пырать, пурнăçри çĕнĕлĕхсене хăюллăн йышăнма пуçлать. Хастар ĕçленĕшĕн ăна ялхуçалăхĕнчи ытти паллă çынсемпе пĕрле Ленин орденĕ параççĕ. Чинавье инке Мускавра пулнине, Кремльте М. И. Калинин аллинчен правительствăн чаплă наградине илнине Ухсай Яккăвĕ ăшă сăмахсемпе çырса кăтартать.

Пĕр ӳстермесĕрех эпикăллă произведенисен чăн-чăн ăстаçи тесе калас пулать Ухсай Яккăвне. Унăн «Кĕлпук мучи», «Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Шурă хурăнпа калаçни» поэмисем, «Ту урлă çул», «Акăшкӳл» романĕсем чăваш литературинче çеç мар, нумай нациллĕ пĕтĕм совет литературинче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Чăваш халăхĕ революци тунă çĕрте, Совет влаçне çирĕплетессишĕн пынă кĕрешӳре, социализмла строительствăра мĕнле вăй-хал хунине анлăн çырса кăтартнă çак произведенисенче.

«Ача чухнехи çăлтăрăм» кĕнекене кĕнĕ виçĕ поэмăна («Ача чухнехи çăлтăрăм», «Чапаевпа тĕл пулни», «Силпири асамат кĕперĕ») Мускавра та тивĕçлипе пысăк хак пачĕç. Вĕсемшĕн поэт М. Горький ячĕпе хисепленекен РСФСР Государство премине илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ку кĕнекере Ухсай чăваш халăхĕн революци умĕнхи, Октябрь кунĕсенчи тата граждан вăрçи çулĕсенчи пурнăçне эпикăллă картинăсемпе сăнласа парать.

Чухăнлăхпа, асаппа та хĕн-хурпа—акă мĕнле хăрушă паллăсемпе тухса тăрать поэт куçĕ умне чăваш халăхĕн революцицченхи пурнăçĕ. Анчах поэма геройĕ чăтмалла мар йывăр саманара та тăван çĕрĕн ăшшине туйса тăрать, халăхпа пĕрле пурăнать. Сюжет аталанса пынă май, Ухсай Яккăвĕ хăйĕн çак поэмисенче ытларах та ытларах социаллă проблемăсене хускатать. Çамрăк Якку халь ĕнтĕ пурнăçра пулса иртекен ĕçсене, çав ĕçсенчи хире-хирĕçлĕхсемпе хирĕçӳсене тимлĕн асăрхама тытăнать. Ялти ачасемпе пĕрле вăл юртан патша кĕлетки тăвать, кайран ăна патакпа çапа-çапа ватать. Тата каярахпа чухăн хресченсемпе пĕрле ялти çĕрме пуянăн çаранĕсене туртса илнĕ çĕре хутшăнать.

Уйрăмах поэт халăха Аслă Октябрь çутине уçса пама, ăна пурнăçра тĕрĕс çул шыраса тупма пулăшакан çынсене — большевиксене чуна çывăх ăшă сăмахсемпе сăнарласа парать.

... Вут-çулăмлă çав кунсем иртсе кайнă ĕнтĕ, халăх халь ирĕклĕ çĕр çинче мирлĕ пурнăç тума çанă тавăрнă. Хĕрӳллĕ ĕçре ĕççыннисене Аслă Ленинăн — пусмăртисен çулпуçĕпе чи çывăх тусĕн сăнарĕ куллен хавхалантарса, вăй парса пырать. Ленин халăхшăн — пуласлăх-шанчăкĕ, пуласлăх ялавĕ.

Ильич
Хăй лартнă самана сакки
Пире сехметлĕ
Вилĕмрен хăтарчĕ,
Мана ӳтре
вăй ĕрĕхнĕ пирки
Ыраш вырма
каçалăка кăларчĕ.

Палламалла мар чечекленсе улшăнчĕ, çĕнелчĕ çав çулсенче Чăваш çĕрĕ. Хаваслă, телейлĕ те тулăх пурнăçпа пурăнать ĕнтĕ халь ĕлĕк ĕмĕр-ĕмĕрпе пусмăр айĕнчен тухайман чăваш халăхĕ. Ухсай поэзийĕ та çавна май Силпи шывĕпе çуса тасатнă пек çуттăн та илемлĕн шăнкăртатса юхать. Çав поэзи малтан пуçласа вĕçне çитиех çĕрпе уйрăлми тачă çыхăннă, çĕр сĕткенĕпе тулнă.

«Çăкăртан асли çук» тенĕ чăваш авалтан. Çакна асран ямасăр, халăх поэчĕ хăйĕн кашни произведенийĕнчех çĕре, ун çинче тырă ӳстерекен ĕçчен çын аллине мухтать.

Ухсай Яккăвĕ поэмăра хăй ячĕн (поэзири хушамачĕн)

«вăрттăнлăхне» те уçса парать. Ача чухне вăл пĕр акапуç çине «Аксай» тесе çырса хунине вуланă иккен те тимĕре те ят панинчен питĕ тĕлĕннĕ. Чăваш ялĕнчи çынсен те кашнин тенĕ пекех çавнашкал иккĕмĕш «ятсем» пулаççĕ. Ухсай та вара хăй валли ят шырама пуçлать. Çав ятăн малтанхи сыпăкне вăл «Ух» тесе палăртать (ача чух пĕр-пĕр çӳллĕ вырăна хăпарса кайсан хăравçăсене кĕвĕçтерсе савăннине пĕлтерекен сăмах ĕнтĕ ку). Иккĕмĕш сыпăкне ăна çармăс кĕтӳçĕ парнелет. «Сай» тени çармăсла «аван» тени пулать иккен. Çак икĕ сыпăкран пĕрлештерсе тунă ята Ухсай Яккăвĕ сухаланă çĕр çине чĕрсе çырать те ăна тырă вăрлăхĕпе сапса тухать. Этемпе поэт ячĕ çине кайран вара тулă кашласа шăтса тухать. Çак пĕтĕмлетӳллĕ сăнар хăех Ухсай поэзийĕн вăрттăнлăхне, пĕлтерĕшне лайăх уçса парать.

Ухсай Яккăвĕ поэт çеç мар, ăста публицист та. Кулленхи хаçатсенче эпир час-часах унăн тарăн шухăшлă статйисене вулатпăр. Чăваш литературине пуçарса яраканĕн К. В. Ивановăн пурнăçĕпе творчествине тĕпчесе çырнă кĕнекине те унăнне критикăра пысăк хак панă.

Чăваш литературинче тунă пархатарлă ĕçсемшĕн Ухсай Яккăвĕ 1946 çулта Чăваш АССР искусствисен Тава тивĕçлĕ деятелĕн ятне, 1950 çулта ЧАССР Халăх поэчĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Чăннипех те савăнатпăр, мухтанатпăр эпир хамăр литературăра çавнашкал пултаруллă та чаплă поэт пурришĕн.

*1971.*

## ВУТ-ÇУЛĂМ ВИТĔР

Чăваш халăх поэчĕ Александр Алга çырнă произведенисем чи малтанах нумай еплĕ, тарăн шухăшлă, чăннипех те илемлĕ пулнипе палăрса тăраççĕ. Вăл поэт та, прозаик та, драматург та; вăлах паллă куçаруçă та, публицист та, литература критикĕ те. Тăван литературăра хĕрĕх çул ытла ĕçлесе, А. Алга вулакансене сахал мар сăвă-юрă, поэмăсем, калавсемпе повеçсем, очерксемпе статьясем парнелерĕ. Вĕсенче вăл совет çыннисен çутă ĕмĕт-шухăшне, чун-чĕре пуянлăхĕпе тасалăхне, Тăван çĕршывăн телейĕне чысĕшĕн ĕçпе те хĕçпе кĕрешекенсене пысăк ăсталăхпа çырса кăтартать. Çавăнпа та вулакан унăн произведенийĕсене яланах чĕре патне илет, юратать, халăхăн

кăмăлĕпе шухăш-туйăмне тарăннăн палăртса тăнăшăн пысăка хурать.

Александр Егорович Алга (Бачков) хальхи Тутар республикинчи Теччĕ районне кĕрекен Кăнна Кушки ялĕнче 1913 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Пĕчĕклех ашшĕнчен юлнăскер, вăл выçăллă-тутăллă ӳснĕ, çиме çăкăршăн çын анисене сӳреленĕ, тырă вырма çӳренĕ. Ялти пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн пулас поэта тăлăх ачасен çуртне вырнаçтарнă. Унтан вара вăл, 1927—1930 çулсенче, Хусанти Чăваш педтехникумĕнче вĕренет. «Çав çулсенчех эпĕ чи малтанхи хут Çеçпĕл Мишши сăввисемпе паллашрăм, вĕсенчен тăрăшса вĕрентĕм,— тет поэт.— Манăн малтанхи сăвă Хусанта кăларакан «Утăм» альманахра пичетленсе тухрĕ. Çавăнтан вара эпĕ сăвă çырмасăр пĕр кун та ирттермен темелле...»

Техникумран вĕренсе тухнă хыççăн А. Алга виçĕ çул пуçламăш шкулта ĕçлет, унтан 1935 çулхи январь уйăхĕнче Чăваш педагогика институчĕн чĕлхепе литература факультетне вĕренме кĕрет. Кунта вăл литература ĕçне чăнласа тытăнать. Унăн сăввисем ĕнтĕ республикăри хаçатсемпе журналсенче тăтăшах çапăнса тухма пуçлаççĕ. 1936 çултан вара вĕсене вăл Алга псевдонимпа пичетлеме тытăнать.

1938 çулта пединститут пĕтерсе тухнă хыççăн çамрăк поэт пĕр çул Етĕрнери педагогика училищинче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. 1939 çулта Совет Çарне илсен, вăл çав çулах Хĕвеланăç Украинăна Польша панĕсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă похода хутшăннă. Гитлерла Германи Совет Союзне вăрă-хурахла килсе тапăнсан вара Александр Алга вăрçăн малтанхи кунĕнчен пуçласа фашистла Германие çĕнтериччен фронтра пулнă. Çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн ăна икĕ хутчен Аслă Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степеньлĕ орденĕпе, Хĕрлĕ Ялав, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе, темиçе медальпе наградăланă.

1946 çулта çартан таврăннă хыççăн А. Алга пилĕк çул хушши «Ялав» журнал редакторĕнче ĕçленĕ. Унтан вăл Чăваш писателĕсен Союзĕнче литература консультанчĕ, правлени секретарĕ, 1960—1967 çулсенче Чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ пулать. Хальхи вăхăтра вăл СССРпа РСФСР писателĕсен Союзĕсен правлени членĕ. 1963—1967 çулсенче вăл Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулнă.

Вăл А. С. Пушкинăн «Русланпа Людмила» поэма-юмахĕпе нумай сăввине, Т. Г. Шевченкăн «Гайдамаксем» поэмипе сăввисене, Эдуард Багрицкин «Опанас çинчен хунă юррине», Вильям Шекспирăн «Гамлет» трагедине, Максим Горькин «Итали çинчен хунă юмахĕсене», Юрий Збанацкин «Çеçпĕл» романне, пăлхар венгри тата ытти халăхсен паллă писателĕсем çырнă произведенийĕсене те нумай куçарнă.

Чăваш композиторĕсем унăн чылай сăввине юрра хывнă. Уйрăмах поэтăн «Шывварманĕ» легенди тăрăх Федор Васильев композитор çырнă оперăна пирĕн халăх юратса йышăнчĕ.

Талантлă поэтăн кунçулĕпе пултарулăх çулĕ—чăнпипех те пархатарлă, илемлĕ, тухăçлă çул. Вăл çырнă произведенисем ăсталăх тĕлĕшĕнчен те, шухăш тарăнăшĕпе те чăваш совет литературине пуянлатаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ 1970 çулта Чăваш АССР Верховнăй Совет президиумĕ, А. Е. Алган тăван литературăри тава тивĕçлĕ ĕçĕсене пысăка хурса, ăна Чăваш халăх поэчĕн ятне пачĕ.

* * *

Пирĕн литературăра Александр Алга пултарулăхĕ вăрçă умĕнхи çулсенчех палăрса çитрĕ: ун чухне унăн «Хĕвеллĕ ир», «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнекисемпе «Шывварманĕ» легенди, «Иккĕн», «Илюк», «Çĕнĕ Кармен», «Ултав» поэмисем пичетленсе тухрĕç. Вĕсенче поэт пуринчен ытла «Ирĕклĕ çĕршывăн кунçулĕ», «Чечекленнĕ çĕршыв та маттур çамрăксем», çĕнĕ саманари çĕнĕ çынсен телейлĕ пурнăçĕпе юратăвĕ çинчен чĕре туллин сăвăпăçпа хавхаланса çырать, тăван халăха хăйĕн пархатарлă та паттăр ĕçĕнче çĕнĕрен-çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет. Асăннă кĕнекесенчи сăвăсемпе поэмăсем çамрăк поэтăн ăсталăхĕ вăй илсе çитнине, вăл пурнăçа сарлакан сăнлама вĕренсе пынипе палăртаççĕ. Вĕсенче шухăш яланах уçăмлă, тĕксĕм картинăсем çук. Поэт пурнăçа, килес кунçула, вăл тата чаплăрах, пуянрах, телейлĕрех пуласса оптимистла курса-ĕненсе тăрать.

Паллă ĕнтĕ, çĕршывра социализм тăвас ĕç çăмăлпа килмен. Ун чухне совет халăхне шалтан та, тулашран та ура хума сĕмсĕрленекен тăшман пайтах пулнă-ха. Çавантан та поэт йывăр кĕрешӳре çĕнсе илнĕ телейлĕ пурнăçа куç шăрçи пек сыхлама чĕнекен патриотла сăвăсем чылай çырнă («Юн», «Пурнăç», «Шанчăк» т. ыт. те.)

«Иккĕн» поэма содержанийĕпе те, форма енчен те

поэтăн вăрçăччен çырнă произведенийĕсенчен чи пысăкки те вăйлăраххи темелле. Поэма геройĕсем, Сантăрпа Павал — тантăшсем; вĕсем пĕчĕк чухне вăйăра та, килте те, шкулта та, выртмара та пĕрле пулнă, туслă ӳснĕ. Анчах ашшĕсем вĕсен — пачах икĕ тĕрлĕ çынсем.

Пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен таврăнсан, Сантăр ашшĕ ял халăхне Совет влаçĕ çинчен ăнлантарать, ăна хăйсен ялĕнче йĕркелесе ярасшăн чунне парса тăрăшать. Ун чухне çĕршывра питĕ йывăр вăхăт пулнă, урса кайнă контрреволюци çав-çавах-ха Совет влаçне пĕтерсе хурассишĕн сĕмсĕррĕн çапăçнă. Павăл ашшĕ, хăравçăсkер, шурă офицер аллинчи нагана курсан чăтаймасть, Сантăр ашшĕ ăçта пытаннине кăтартса ярать... Пĕчĕк Сантăрпа амăшĕ тăлăха тăрса юлаççĕ. Çапла вара «Иккĕн» поэмăра пĕр енчен революци салтакне, ĕçхалăхне ирĕке кăларассишĕн хастаррăн кĕрешекен патриота, тепĕр енчен ăна сутакана, нăйкăш чунлă этеме сăнласа кăтартнă.

Выçлăх çулхине амăшĕ вилнĕ хыççăн Сантăр тăлăх ачасен çуртĕнче ӳсет. Унтан ăна Совет Çарне илсе каяççĕ те, вăл лейтенанта вĕренсе тухать, çĕршыва Инçет-Хĕвелтухăç чиккинчи пĕр заставăра хураллать. Кунта вăл ача чухнехи тусĕпе Павăлпа тĕл пулать, шухăша каять. Çавăн пекех Павăл та шухăшлать, иртнине аса илет, хăйĕн хăравçă ашшĕне ӳпкелешсе ылханать. Мĕнех-ха тепĕр тесен ашшĕ? Уншăн Павăл айăплă мар-çке. Вăл колхозра ялти комсомолецсемпе пĕрле ĕçлесе ӳснĕ, халĕ акă пограничник, Тăван çĕршыв чиккине сыхлать, хастар часовой. Анчах ача чухнехи юлташĕпе вăл чунтан калаçса ĕлкĕреймест: тăшман чикĕ урлă каçнă, çапăçма каймалла. Павăл Тăван çĕршыв чиккине хӳтĕлесе чаплă вилĕмпе вилет. Сантăр унăн вилтăприйĕ çинче сăмах калать, паттăр пограничника юлташĕсем ĕмĕрех асра тытса пурăнасси çинчен шантарать.

Çапла вĕçленнĕччĕ «Иккĕн» поэмăн малтанхи варианчĕ. Вулакансем хăй вăхăтĕнче Алга патне: «Павăла вĕлермелле мар, сыватмалла, Сантăрпа вĕсем ача чухнехи пекех пĕрле пулмалла»,— тесе нумай çыратчĕç. Поэт вара вĕсен шухăшĕне килĕшнĕ. Поэмăн çĕнĕ вариантĕнче Сантăрпа Павăл иккĕшĕ те сывă юлаççĕ, каллех туслашаççĕ, тăван ялне пĕрле таврăнаççĕ.

«Шыварманĕ» легенда чĕлхе илемĕпе те, шухăш тарăнлăхĕпе те А. Алга пултарулăхĕнче пallă вырăн йышăнать. Ахальтен мар вăл каярахпа чăвашсен пĕрремĕш оперин никĕсĕ пулса тăчĕ.

Сĕве шывĕ. «Çап-çуттăн ялкăшать пĕве, таппи ун пĭт инçе,— тет поэт.— Шарланкă — вăй çаврать, çаврать арман урапине, вара электроçиçĕмĕ вĕçет хире, яла... Ялсем ят панă халь ăна «Ильич çути» тесе. Каç. Йăлтăр-йăлтăр курăнать кашни урам, кĕтес. Кунта юмахри пек тĕнче. Сĕве тăрăх — садсем. Пĕр чарăнми халь вĕсенче юрлаççĕ кайăксем...»

Çене пурнăç кӳнĕ пысăк савăнăç, çутă телей кунта тапса тăрать. Анчах халăхра тахçан ĕлĕк пулса иртнĕ ирсĕр ĕçе те манмаççĕ-ха. Сĕве хĕрринчи пĕр ялта ĕлĕк-авал Сарпи ятлă хĕр пурăннă-мĕн. Вăл мĕн ачаран Тăмпай пуян патĕнче лăш курмасăр ĕçленĕ, выçăллă-тутăллă пурăннă.

Сарпи «çап-çамрăк сарă хĕр», çӳçĕ ун «кăлкан пек кăтра», «алка пек куçĕсем — ытараймин сенкер», «çамрăк пĕвĕ — шап-шур囗штак хăва». Кунçулĕ тем тери йывăр пулин те, вăл çутă ĕмĕтпе пурăнать. Вăл хăйĕн савнă каччине чунтан юрататъ, савнийĕ те, хăй пекех чухăн-скер, ăна савать. Анчах тискер чĕреллĕ Тăмпай ирсĕр шухăш тытнă иккен. Вăл çамрăк хĕр-тарçа мăшкăллама тăрать.

Сарпи парăнмасть: «сурать те... кӳршĕ яла тухса тарать — хăй аппăшĕ патне». Тăмпай — «ватсупнă, йĕрĕнчĕк этем»,—хĕре хыçран çитсе тытса арман пĕвине пăрахать. Хăйĕн тискер ĕçне тӳрре кăларас тесе, вăл айăпа авалхи киревсĕр йăла çине ярать. Çав йăла тăрăх, пĕве татăласран ун айне хитре хĕре чĕрĕллех пăрахмалла имĕш.

Сарпи савнийĕ Тăмпая тавăрать, ăна хăйне те пĕве хыçне пăрахать.

Легендăна халăх чĕлхин пуянлăхĕпе тирпейлĕ те ăста усă курса çырнă. Сарпи сăнарне поэт халăх юмахĕсенчи пекех кăмăла каймалла, асра юлмалла кăтартнă. Компо-зици енчен те, шухăшпа илемлĕх тĕлĕшĕнчен те «Шывар-манĕ» легенда чуна тытса илекен хитре произведени пул-са тухнă.

Каларăмăр ĕнтĕ, Александр Алга Аслă Отечественнăй вăрçă пуçланнă кунах хаяр çапăçăва кĕнĕ, фашистсене аркатса тăкичченех фронтра çапăçнă. Çав хушăрах вăл нӳрлĕ окопсенче, блиндажсенче е тата госпитальсенче совет салтакĕсем Тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратнине кă-тартакан тăшмана ним шелсĕр аркатма, мĕнпур мăшкăл-инкекшĕн тавăрма чĕнекен çулăмлă сăвăсем çырчĕ.

Акă вăрçă пуçланнă кун çырнă «Июнĕн 22-мĕшĕ» ятлă

сăва. Унта поэт совет салтакĕсен паттăр шухăш-кăмăлне, вĕсем ирсĕр фашистсемпе юлашки юн тумламĕ юлмиччен, вăрçа чаплă Çĕнтерӳпе вĕçличчен кĕрешме хатĕррине чуна хускатмалла уçса панă:

Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.
Сасартăк, пĕр харăс тăрса,
Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă,
хирпе
Васкарăмăр аслă вăрçа.
Эпир— малтисемччĕ: çĕнме
çĕкленсе
Кĕрейрĕмĕр çулăм ăшне,
Ахлатрĕ тавралăх, шартах чĕтренсе,
Тем шăхăрчĕ: хăшĕ — хăшне!
Вăл вут пек снаряд-мĕн шартлатрĕ
çумра,
Сӳ килчĕ, сӳ кайрĕ хĕрӳ...
Пĕрех çирĕп шанчăк çуралчĕ
чунра
Ун ячĕ — асту — Çĕнтерӳ.

«Эпир — малтисемччĕ»,— тет поэт. Пăшала алăран пăрахмасăр çапăçнă кунсенче вăл «чи шанчăклă ĕмĕт— пулас Çĕнтерӳ» салтакăн йăваш кăмăлне хытарни çинчен калать, çав ĕмĕт Çĕнтерӳ кунĕ килсе çитиччен чĕререн тухманнине палăртать.

«Шухăш», «Асил-ха, юлташ!..», «Ырă ят», «Хаяр чунри ачашлăх», «Инçетре, Сĕве таврашĕнче» сăвăсенче те çапăçу хирĕнчи совет салтакĕн вăйлă та пысăк туйăмĕсем тарăннăн сăнланса юлнă. Поэтăн лирикăллă геройĕ вăрçăн вăрăм та тертле çулĕ çинче чунĕпе çирĕпленсе вăй илнĕ. Пурнăçа ĕненесси, тăшмана пурпĕр çĕнтерессине шанасси пайтах йывăрлăхсене тӳссе ирттернипе пĕрле килет. «Тар шурлă çул та, çил сивви те çӳçентермерĕç салтак чунне: вăр-вăркăшуллă тĕтĕм витĕр эп куртăм Çĕнтерӳ кунне»,—тет поэтăн çапăçусенче сахал мар хĕнасап тӳснĕ лирикăллă геройĕ «Çул çинче» сăвăра (1944). Пирĕн çарсем тăшмана хăватлăн çĕмĕрсе-çĕнтерсе пынине поэт «Тăшман çĕршывне кĕрсен» сăввинче (1944) сăнласа кăтартать.

Пуç урлă шăхărать шав тăтăшăн
Анăçалла пиншер снаряд.

«Тăван çĕршывшăн! Халăхшăн!» —
Саспа пĕтĕм вăрман янрать.

Вут хирĕçет. Чарасшăн. Курăпăр!
Танксем тухаççĕ мăн çула.
Тăшман тарать. Хăтласшăн.
Пурĕпĕр
Ая пулса выртса юлать.

Поэт-воин, тăшмана аркатса, вилĕме çĕнтерсе, хăватлă Совет Çарĕпе пĕрле кунран-кун Аслă Çĕнтерӳ патне çывхарса пырать. «Нумай çĕршыва, юлташсем, çитсе куртăмăр, пит вăрăм çулсем пулчĕç юнлă, тар-шурлă, çапах ӳкермерĕмĕр хамăр чыса»,— тет вăл «Бранденбург хапхи умĕнче» ятлă сăввинче (1945).

Вăрçăн юлашки çулĕ, çывхарса килекен Çĕнтерӳ Алга поэзине çĕнĕ сывлăш, çĕнĕ ĕмĕт-шухăш вĕрсе кĕртет. Унăн фронтра пайтах хура-шур тӳснĕ геройĕсем ĕнтĕ хăйсем çывăх вăхăтрах мирлĕ ĕçпе пурăнма тытăнасси çинчен шухăшлаççĕ. Çапăçакан халăх çак сутă та ырă ĕмĕчĕпе шухăш-туйăмĕ «Дунай хумĕсем», «Вена вăрманĕ», «Пурнăçпа ĕмĕт» сăвăсенче уйрăмах вăйлă палăрать.

Вăрçă канонади урăм-сурăм тискеррĕн ӳлесе-кĕрлесе тăнă тертлĕ çулсенче поэт-фронтовик пысăк калăплă произведенисем те сăвăларĕ. Вĕсем: «Атăл каччи», «Вĕсем çирĕм саккăрăн пулнă», «Полк ялавĕ» т. ыт. те.

«Атăл каччи» поэмăра (1941) Тăван çĕршыв Аслă вăрçин пуçламăш кунĕсене сăнланă. Çав трагедиллĕ кунсем çинчен Алга поэми тĕрĕс те чупа пырса тивмелле каласа парать. Совет воинĕсем Гитлер хурахĕсемпе паттăррăн çапăçаççĕ, анчах эпир тăшмана 1941 çултах çĕнтерме пултарайман-ха, пирĕн çарсен ун чухне ирĕксĕр каялла чакма тивнĕ.

«Вĕсем çирĕм саккăрăн пулнă» поэмăра Мускава хӳтĕлекен паттăрсен сăнарĕсем вулакан умне уççăн тухса тăраççĕ. Вĕсем — панфиловецсем, тăшмана вилсен те парăнман гварди салтакĕсем—Диев политрук ертсе пынипе Тăван çĕршывшăн, Мускавшăн тĕлĕнмелле харсăррăн çапăçаççĕ. Çирĕм сакăр героя асăнса, совет литературинче пайтах сăвă-юрă, легендăсемпе поэмăсем çырнă. Çав паха произведенисем хушшинче А. Алга поэми те хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнать.

«Полк ялавĕ» поэма пысăк мар, вăл совет офицерĕн ырă кăмăлĕпе çапăçури паттăрлăхĕ çинчен калакан ле-

генда майлăрах янăрать. Çак произведени вулакана вăрçăн юлашки çулне, фашистсен çарне аркатса тăкнă кунсене аса илтерет. Совет Çарĕ вут-çулăм витĕр тăшман çĕрĕ çине çитсе кĕнĕ, анчах фашистсем çапах-ха парăнасшăн мар, пирĕн полксене урса кайсах хирĕç тăраççĕ.

Тăшман темиçе хутчен асар-писер атака пуçлать, ялавçă ӳкет, вара тăван полк ялавне тепри васкаса çĕклет. Хĕрлĕ ялав алăран алла куçать, юлашкинчен ăна полк командирĕ Волгин хăй çĕклет: «Пĕтмен-ха полк! Полк сывă! Ялав вĕлкĕшет кăна — тăшман çине полк ыткăнать».

Вăрçă хĕн-хурне лайăх пĕлекен поэтăн хăй курни-тӳсни çинчен каламалли пайтах. «Одер çинче» сăвăлла очеркра та, «Аслă тивĕç», «Çулăм витĕр çул выртать» поэмисенче те, вăрçă хыççăн çырнă нумай-нумай сăввинче те Александр Алга Совет Çарĕ иртнĕ вăрçăра Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн çапăçни çинчен пысăк ăсталăхпа çырса кăтартать.

* * *

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Александр Алга проза жанрĕпе те чылай ĕçлерĕ. Чăваш вулаканĕсем унăн малтанхи калавĕсемпе 40-мĕш çулсен вĕçĕпе 50-мĕш çулсен пуçламăшĕнче паллашма пултарчĕç. Каярахпа автор вĕсене хăйĕн прозăпа çырнă «Юлташпа юнашар» ятлă пĕрремĕш кĕнекинче пухса кăларчĕ.

Кĕнекери калавсенче пуринче те совет салтакĕсен вăрçă çулĕсенчи паттăр ĕçĕ-хĕлĕ тĕп вырăнта тăрать. Автор хăйĕн геройĕсене фронтри тĕрлĕ лару-тăрура илсе кăтартать. Çакă ăна чи малтанах геройсен характерĕсене нумай енлĕн уçса пама кирлĕ. Сăмахран, «Малтанхи кун» калавах илĕпĕр.

...Ирхине ирех тревога янăраса каять те, боецсем, питĕ хăвăрт тумланса, палаткăран вирхĕнсе тухаççĕ. Çавăнтах хыр вăрманĕ çинче, пуç тăррипчех, темскер хăрушшăн кĕрлени илтĕнсе каять, сывлăшра хура самолетсен пысăк ушкăнĕ тискеррĕн ӳлесе вĕçет. Вĕсене сиввĕн пăхса ăсатакан боецсем ку мĕне пĕлтернине тӳрех тавçăраймаççĕха, каярах кăна çав виле çăханĕ пек самолетсем кунтан инçех мар хуласем çине темĕн чухлĕ бомба тăкнине, станцăсене аркатнине, чаплă çуртсене ватса-çĕмĕрсе пĕтернине çиллепе те тарăхса пĕлĕç. Тата мĕн чухлĕ çын, канмалли куна курма вăранаймасăр, чул куш айне юлчĕ!..

Кунта, чикĕре, вăрçă тин çеç пуçланнă-ха. Саперсен батальонĕн уйрăм взвочĕ, хăвăрт пуçтарăнса, вăрман хĕррине тухать. Чикĕ енчен татти-сыпписĕр кĕрĕслетнĕ-шатăртатнă, кĕмсĕртетнĕ сасăсем вăйланнăçсем вăйланса çывхараççĕ. Сывлăшра çаплах тăшман самолечĕсем явăнаççĕ, бомба хыççăн бомба тăкăнать.

Писатель малалла вăрçă хирне, совет салтакĕсемпе командирĕсен паттăрлăхне çырса кăтартать. Акă, Набойщиков лейтенант взвочĕ, питĕ асăрханса, чугун çул станцине поездсем иртсе çӳреме юрăхсăра кăларса хăварать. Ун хыççăн саперсем хăйсен ротине шырама пуçлаççĕ. Çула май ыраш хушшинче виçĕ нимĕç разведчикне тытаççĕ. Кĕçех взвод ял вĕçĕнчи пĕчĕк сăрт хыçне çитсе тухса, тăшман çулне пулеметпа пӳлет те, пирĕнннисем нимĕçсене ялтан хăваласа кăлараççĕ. Çапла вара вулакан Никушев генерал-майор ертсе пынă 41-мĕш дивизи вăрçăн малтанхи кунĕсенче те тискер тăшманпа паттăр çапăçнине «Малтанхи кун» калаври пĕр взвод салтакĕсен хăюллă ĕçĕсенчен та аван курать.

Александр Алга калавĕсенче ытлашши сăрсем çук, çавăнпа та вĕсем чăн пурнăçри пекех витĕмлĕ те ĕненмелле пулса тухнă.

Акă пĕр тĕслĕх. Килти ăпăр-тапăра тиенĕ урапасем, çурăм хыçне хутаç çакнă ватăсем, ачисене çавăтнă е йăтнă хĕрарăмсем фашистсенчен тарса ӳкме васкаççĕ. Сасартăках вĕсен тĕлне тăшман самолечĕсем килсе тухаççĕ. Вилнисем, аманнисем. Тата ăçтан-ха хумханмасăр вулама пулĕ çак йĕркесене: «Вĕсем çул хĕрринче пĕр хĕрарăм выртнине курчĕç. Унăн сарă кăтра çӳç пайăрки куçĕ çине ӳкнĕ, таса шурă пичĕ çинче суран йĕрĕ çук. Çамрăк. Вăл, аллисене лĕнчĕр ярса, хускалмасăр выртать, кăкăрĕ çĕкленмест. Ун çуменчех кăлкан пек шурă çӳçлĕ пĕр хĕрача ларать. Вăл йĕмест. Пăвăнса тăракан ӳтлĕ аллисемпе амăш кăкăрне хыпашлать. Унăн çиесси килнĕ...» («Çулсем-йĕрсем».)

1945 çулхи çуркунне, хăй юлашки хут амансан, писатель Германири пĕр госпитальте сывалса пурăннă. Суранĕ тӳрленсе çитерехпе вăл уçă сывлăша тухкаласа çӳренĕ. «Эпĕ хир тăрăх ансăр сукмакпа утрăм,— çырать автор.— Сисмен те, шухăша пула, инçетех кайнă иккен... Хĕвел каçалана сулăннă. Госпитале хăвăртрах таврăнас тесе, тӳрĕ çул шыраса, анкартисем енне пăрăнтăм. Пĕр пахчара вара пĕчĕкрех кăна хуралтă умне çитсе тăтăм. Чӳречисем те пур, ахăртнех, çулла пурăнмалли пӳрт пу-

лас. Алăкĕ уçă. Мĕншĕн кĕрсе пăхас мар юрлех? Шалта пĕр сĕтел, пукан, кравать—урăх нимĕн те çук. Стенасем çине — куратăп — кăранташпа тем çыркаласа пĕтернĕ. Вулатăп: Валя, Надя, Эвелина. Вырăс хĕрĕсен ячĕсем иккен. «Мĕнле майпа, ăçтан?» — шухăш кĕрет пуçа. Шухăш тупсăмне шыраса, сĕтеле пăхрăм. Çав пĕчĕк сĕтелте вара эпĕ пĕр хулăн тетрадь тупрăм... Тетрачĕн хуплашки çине: «Мезенцова Эвелина» тесе çырнă. Акă вăл, çав тетрадь».

Çапла пуçланать «Ютра» повесть. Малалла вара эпир Эвелина Мезенцовăн дневникне вулама тытăнатпăр. Çырса кăтартнă ĕçсем чăннипех те питĕ хăрушă. Германие тытса кайнă хĕрсен синкерлĕ шăпи-инкекĕ, терт-асапĕ, чуна тивсе ыраттаракан йывăр шухăшĕ — кирек-кама та хурлантармалла, тарăхтармалла фашистла чуралăха хирĕç хаяр курайманлăх çулăмне чĕртмелле. Фашизм этемлĕхшĕн мĕн тери хăрушшине, вăл халăхсене инкек-синкекпе асап тата вилĕм кăна кӳнине повесть çивĕччĕн туйтарать, Гитлер хурахĕсене пĕтĕм чĕре хăвачĕпе курайми пулма, халăхсен тăнăç пурнăçне яланах сыхă упрама вĕрентет. Кунпа пĕрлех çак паха произведени вăрçă çулĕсенче совет çыннисен ирсĕртен те ирсĕр тăшманпа кĕрешес шанчăкĕпе ĕмĕт-шухăшĕ фашистсен тамăкĕнче те çав-çавах çирĕп пулнине, вĕсем хамăрăн ытарайми Тăван çĕршывăмăра хĕрӳллĕн юратнине кăтартса парать.

Повесть малтан пуçласа вĕçне çитиччен вулакана хăйĕн тарăн шухăшĕпе, ăста тунă сюжечĕпе, яр-уççăн ӳкерсе кăтартнă сăнарсемпе тытса пырать. Ахальтен мар, вăл пичетленсе тухсан, писатель патне, унта сăнланă вырăс хĕрĕсен малашнехи шăпи çинчен ыйтса, нумай çыру килнĕ.

1968 çулта Александр Алга «Хĕçпе çурла» романăн пĕрремĕш кĕнекине пичетлесе кăларчĕ. Писатель унта иртнĕ вăрçăн малтанхи çулне анлăн сăнласа кăтартать. Куç умне 1941 çулхи ял пурнăçĕ, çынсен ырми-канми ĕçĕ-хĕлĕ тата фронтри хаяр çапăçусем туха-туха тăраççĕ.

Романа вулакан пуриччен ытла Гурьяновсен килйышĕн пурнăçĕпе кĕрешĕвне, шăпине интересленсе сăнаса пырать. Вĕсем — чи асли, Алексей Гурьянов, ватăлмалăх кунĕнче колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçлать, аслă ывăлĕ, Игнатий, вăрçăччен председательте ĕçленĕскер, фронта тухса каять, нимĕç фашисчĕсемпе Мускав патĕнче çапăçать; кĕçĕн ывăлĕ, Николай, Кăнтăр-Хĕвеланăç

фронтĕнче паттăрăн кĕрешет; хĕрĕ, Елена, мединститут студентки, фронта кайма хатĕрленет; аслă кинне, Укçинене, бригадира суйлаççĕ; кĕçĕн кинĕ кăна, Николайăн çамрăк мăшăрĕ, Валентина, тин çеç вăтам шкултан вĕренсе тухнăскер, малтанлăха нимле ĕç патне те çыпăçаймасть, каярахпа тин ялти шкулта ачасене вĕрентет.

Романра сăнласа кăтартнă геройсем вăрçăн малтанхи тапхăрĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе çирĕпленеççĕ, унччен пулман кăткăс ыйтусене тĕрĕс татса пама вĕренеççĕ.

Акă Николай Гурьянов. Вăл — совет воинĕсен паха енĕсене пĕтĕмлетекен сăнар, хăюллă та ăслă командир. Тăшман куçĕ умĕнчех вăл ротăри саперсемпе пĕрле кĕпере сирпĕтсе ярать, вăрçăри юлташĕсен пурнăçне сыхласа хăварать. Çапăçу мĕнле вĕçленесси командиртан нумай килнине романра тĕрĕс кăтартса панă. Çакна эпир Николай Гурьянов, хăйĕн ротипе тăшман тылне татăлса юлсан, тан мар çапăçусем витĕр çĕнтерсе тухнинчен те аван куратпăр.

Çар çыннисенчен Илларионов майор, Фатюшин политрук, Кураков лейтенантпа Бойко старшина, Савандеев ефрейтор сăнарĕсем те асра юлаççĕ. Вĕсен шухăш-кăмăлне автор вăрçăри тĕрлĕ эпизодсенче уçса панă.

Алексей Гурьянович — утмăл çулхи колхозник, ялта ăна пурте хисеплеççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр çулсенче вăл колхоза аванах ертсе пырать. Уншăн пулсан, пĕр утăм çĕр те усăсăр ан выртгăр, хирте пĕр çĕрулми те юр айне ан юлтăр, пур ĕç те вăхăтра пуçтарăнтăр. Мĕнле ырă çын тата вăл хăйĕн килйышĕнче! Хĕрĕх çул ытла пурăннă арăмĕпе шӳтлесе харкашкаласа илет те, пуçне усса, шухăша каять; ĕçчен те юратнă мăшăрне пытарнă чухне, çын куçĕнчен пăрăнса, куççульне шăлать. Нимĕнле йывăр ĕçрен те хăраман, нихçан та суйкăн пулман, тĕрĕс, йĕркеллĕ пурнăçпа пурнакан çын сăнарне кăтартса парать писатель. Гурьянов нумай кăткăс ĕçре пулать (çĕр ĕçĕ, халăх ĕçĕ), темĕнле йывăрлăх та курать, тӳсет (элек, суялăх), анчах ниçта та парăнмасть, хăй çулĕнчен пăрăнмасть. Ахальтен мар унăн вăрçăри ывăлĕсем çинчен ялта: «Йăлтах ашшĕне хывнă», теççĕ. Вăл чăн-чăн таса чунлă çын — пурнăç çынни!

А. Алга вăрçă тапхăрĕнчи пурнăçпа çынсем çинчен çырнă прозăлла произведенисенче эпир чи кирлине, чи хаклине уççăн курса тăратпăр. Çав вăхăтрах автор киревсĕр те нишлĕ çынсене те асăрхамасăр иртмест. Вĕсем — фашистсене сутăнса полицай тумтирне тăхăннă йĕрĕнчĕк

Хмара («Çулсем-йĕрсем»), çăмăл пурнăç шыракан, вĕçкĕн Барановский майор («Хĕçпе çурла»), çапкаланчăк та элекçĕ Мирун Тимахвийĕ (çавăнтах) т. ыт. те. Халăх ĕçĕпе кĕрешĕвĕнчен пăрăнакансене, çăмăл пурнăç шыракансене фронтра та, тылра та вăхăтра тăрă шыв çине кăлармалла, вĕсене тĕпĕ-тымарĕпе кăкламалла,— çакна каласшăн пулнă вулакана писатель.

«Хĕçпе çурла» роман çинчен, вăл пĕтĕмĕшпе вулакансем патне çитсен, анлăн тишкернĕ статьясем пулĕç. Çавăнпа та халлĕхе унăн пĕрремĕш кĕнеки пирки кăна кăштах чарăнса тăрас терĕмĕр.

* * *

Александр Алга хăйĕн произведенийĕсенче çарпа патриотизм темине хускатать-и е паянхи мирлĕ пурнăç çинчен çырать — кирек хăçан та вăл тĕнчере варçă хăрушлăхĕ сирĕлменнине, империалистсен çăткăн вăйĕсем ăна çĕнĕрен амалантарса яма хатĕрленнине асра тытать, яланах сыхă пулма, мир вăйĕсене куллен-кун çирĕплетсе пыма чĕнет.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче поэтăн пултарулăхĕнче коммунизм обществине туса хурас аслă тĕллевпе хавхаланнă совет халăхĕн пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ тĕп вырăн йышăнать. Çак темăпа çырнă пысăк пĕлтерĕшлĕ произведенисен хисепне тивĕçлипех унăн «Хурама та хурăн» (1960) повеçĕ, «Хамăр ялсем» (1953—1955) тата «Тăван тавралăх» (1968—1970) поэмисем кĕреççĕ.

«Хамăр ялсем» поэмăри ĕçсем Мăнъял çыннисен кулленхи пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе çыханнă. Поэма пуçламăшĕнчех А. Алга вулакана хăйĕн тĕп геройĕсемпе (хуларан тин таврăннă МТС директорĕ Иван Юмановпа, колхоз председателĕнче ĕçлекен Якур Степановпа, Ольга Алексеевна агрономпа) паллаштарать. Виççĕшĕ те вĕсем:

Пĕрле ӳссе, пĕрле вылянă,  
Пĕрле вĕреннĕ пĕр шкулта,  
Ĕмĕтсене вĕçтернĕ янă  
Инçе, инçе... Унтан... унтан  
Хăрушă вăрçă витĕр тухнă,  
Аста кăна çитсе курман!

Вĕсемпе пĕрлех пирĕн ума Иван Юмановăн утмăлтан иртнĕ ашшĕ (вăл колхоз утарĕнче ĕçлет), таса чунлă, пурнăçа юратакан хастар чĕреллĕ çамрăксем — Варвари,

Санюк, Сантăр, парторганизаци секретарĕ Веселовский, вĕчĕх чунлă, хăйшĕн çеç антăхса тăрăшакан Цифиркин бухгалтер сăнарĕсем тухса тăраççĕ.

«Хамăр ялсем» поэмăна тишкернĕ май хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай çапла çырнăччĕ: «Мал ĕмĕтлĕ çынсем паянхи кунпа çеç пурăнмаççĕ. Вĕсем, мăн султан пăрăнса, уйрăм çыншăн кăна плĕртÿллĕ улах суклак шырамаççĕ, пĕтĕм халăхăн пуласлăхне курса тăраççĕ, çавна çывхартасшăн хыпса çунаççĕ. Çавăн пек паттăрсем çинчен çырать Алга. Унăн Юмановĕ, Ульккн, Веселовскийĕ тата ытти çав шухăшлă çыннисем чăваш ялĕнче пурăнсах пĕтĕм çĕршыв ĕçне, парти ĕçне, коммунизм тăвас ĕçне тăваççĕ». («Асталăхпа чăнлăх»—статьясен пуххи, 1964 ç., 70 стр.)

Юманов — вăрçă хура-шурне тÿссе-чăтса ирттернĕ коммунист. Вăл Ульккана юратнă, вăрçă вĕсене уйăрнă. Фронтран таврăннă хыççăн малтанах вăл заводра ĕçлет, унтан парти чĕннипе, чĕре хушнипе яла таврăнать. МТС директорĕнче ĕçлет, района çĕклессишĕн пĕтĕм вăй-халпа тăрăшать, рабочисем хушшинче ĕç дисциплинине хăпартать, Цифиркин пек сăтăрçăсене аппаратран тасатать. Райком пленумĕнче Юманов малта пыракан колхоз председательне Степанова хытă критиклет, мĕншĕн тесен вăл хăйне çеç юратать, чапшăн çунать, кая юлнă кÿршĕ колхозсене пулăшмасть.

Унтан кĕçех Юмановпа Степанов хирĕçсе каяççĕ. Пĕрле ÿснĕ, ача чухне туслă пулнă юлташĕ пирки Степанов элеклеме тытăнать, Цифиркинпа пĕрле ăна путарма тăрăшать

Юманов — халăхпа чĕререн калаçма, ăна ăнланма, уншăн тăрăшма пĕлекен руководитель. Çавăнпа та ун авторитечĕ МТСри механизаторсем хушшинче куллен-кун ÿсет. Коллектив ĕçне йĕркелесе ертсе пыма ăна парторганизаци секретарĕ Павел Веселовский те нумай пулăшать. Веселовский — вырăс çынни, МТСа промышленноçран килнĕ. Ун çинчен поэмăра нумаях каламан пулсан та, вăл асра юлакан сăнар.

Улькка — Ольга Алексеевна — тăван колхоз уй-хирĕнче вăйлă тырпул акса çитĕнтересшĕн пĕтĕм хастарлăхне паракан агроном. Эпир яланах ăна ĕçре, халăх хушшинче куратпăр. Çамрăк пулсан та, вăл сахал мар хура-шур курнă, нумай тÿснĕ, чăтнă. Вăрçă вăхăтĕнче ăна ялти хĕрарăмсемпе ватăсем колхоз председательне суйлаççĕ. Вăрçăра унăн юратнă тусĕ çухалать. Вăрçă

хыççăн ăна Степанов качча илесшĕн, анчах вăл ун пек каппайчăк çын мăшăрĕ пулас çук. Улькка—чăваш совет хĕрарăмĕн чăн-чăн илемлĕ сăнарĕ, çĕнĕ самана ӳстернĕ тӳрĕ кăмăллă коммунистка.

«Хамăр ялсем» поэма тăватă пайран тăрать. Кашни пайĕ çулталăкăн пĕр вăхăчĕпе çыхăннă. Поэмăра калаçу чĕлхипе, халăх сăмахлăхĕпе ирĕклĕн те пĕлсе усă курнă. Чăнах та кунта уйрăм çитменлĕхсем те çук мар. Автор геройсен характерĕсене пĕтĕмпех уçса çитерейменнине, уйрăм сăмахсене чăваш чĕлхишĕн килĕшӳсĕр, тĕрĕс мар формăна лартнине вулакансем те асăрхарĕç. Апла пулин те, «Хамăр ялсем» поэмăна 60-мĕш çулсенчи чăваш поэзийĕн чылай пысăк çитĕнĕвĕ теме пулать...

Нумай пулмасть Александр Алган «Ытараймн тăван тавралăх» кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Поэт унта хăйĕн «Тăван тавралăх» ятлă лирикăллă поэмипе юлашки çулсенче çырнă сăвăсен ярăмне кĕртнĕ. Мĕн ачаран юратса ӳснĕ тăван тавралăх, асран тухми тăван кĕтес поэт чĕрине нихçан манăçми тараннăн кĕрсе юлнă. Вĕсене вăл вăрçăччен те, вăрçăра та, вăрçă хыççăн та ялан асра тытса пурăннă, ялан аса илет.

Поэт хăйĕн тăван тавралăхне, хăй çуралнă Кăнна Кушки ялне уйрăммăн илсе мар, пĕтĕм Чăваш çĕршывĕпе пĕрле, унăн паянхи хăвачĕн хĕвеллĕ ытамĕнче курать, çав илемлĕ тĕсе тытса пырса, чăваш халăхĕн ку чухнехи телейлĕ кунçулĕ çинчен хумханса калать, халăхăн çутă ĕмĕт-туйăмĕпе шухăш-кăмăлне уçса парать. Кунпа пĕрлех вăл нациллĕ хăйне евĕрлĕх, чăвашлăх тенине пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕпе çыхăнтарса кăтартать. Çаксем пурте вулакан кăмăлне тыткăна илеççĕ, унăн чунĕнче ăшă та çутă шухăш-туйăм çуратса хавхалантараççĕ.

Кĕнекере, асăннă поэмăсăр пуçне, сăвăсем те чылай. Вĕсенче А. Алга тăван уй-хиртен, ешĕл хурăнсен, шăнкăртатса юхакан тăрă çăлкуççен, хĕлле тураттисем пасарнă чăлт-шурă çӳçлĕ йăмрасен илемлĕ ӳкерчĕкĕсене куç умне кăларса тăратать.

Александр Алга пысăк ăсталăхпа çырнă лайăх кĕнекесем тăван халăха сахал мар парнелерĕ. Унăн пултарулăхĕ юлашки çулсенче тата çӳллĕрех пусăма çĕкленчĕ. Хăйĕн утмăл çулне талантлă поэтăмăр малашне те илемлĕ сăвăсемпе поэмăсем, повеçсемпе романсем çырас ĕмĕтшухăшпа хавхаланса кĕтсе илчĕ. Пархатарлă вулакансем çак ĕçре ăна пысăк ăнăçлăхпа телей сунаççĕ.

*1973*

## СĔТЕЛ ÇИНЧИ ÇĂКĂР

Николай Филиппович Ильбеков (Илпек Микулайĕ) — чăвашсен хальхи вăхăтри чи сумлă прозаикĕсенчен пери. Вăл 1915 çулта хресчен килйышĕнче çуралнă. Учителе вĕренсе тухнă. Литературăна колхозниксен хастар ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырнă сăвăсемпе килсе кĕнĕ. Анчах чăн-чăн пултарулăхĕ унăн каярахпа — прозăра палăрма тытăннă. Унăн вăтăрмĕш çулсен варринче пичетленнĕ калавĕсемпе новеллисенчех эпир çамрăк писатель халăх пурнăçне тимлĕн сăнанине, халăх ăстăнĕнчи характерлă улшăнусене ăнăçлă палăртма пĕлнине сиссе илетпĕр.

Вунă çул ытла (1937—1948) писатель Совет Çарĕнче службăра тăнă. Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссие ирĕке кăларас ĕçе хутшăннă. Вăрçă хирĕсемпе вăл Сталинградран пуçласа Болгари, Югослави таран утса тухнă, пулеметчик, артиллерист, политработник, дивизи хаçачĕн редакторĕ пулнă. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăр та хастар çапăçнăшăн правительство ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, Отечественнăй вăрçăн 2-мĕш степеньлĕ орденĕпе, медальсемпе наградăланă.

Вăрçă çулĕсемпе вăрçă хыççăнхи çулсенче Илпек Микулайĕ паха калавсемпе очерксем нумай çырчĕ. Вулакансем уйрăмах унăн «Эпир — совет салтакĕсем», «Тăватă кун», «Сурпан», «Вăрçăпа çĕнтерӳ» кĕнекисене кăмăллăн йышăнчĕç. Çак кĕнекесенче автор совет салтакĕсен фронтри паттăрлăхне, тылри рабочисемпе колхозниксен хастар ĕçне-хĕлне кăтартать, пирĕн вăхăтри çынсен кăмăл-туйăмне ăстан та тарăннăн уçса парать.

Вулама юратакан çын хăй кăмăлланă кĕнекене яланах сĕтел çинче тытать. Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕ те сĕтел çинчи çăкăр пулса тăчĕ. Çак романа чăвашла çеç мар, вырăсла та, эстонла та, болгари чĕлхипе те пичетлесе кăларнă. «Хура çăкăр» кĕнеке тăрăх лартнă спектакль Чăвашсен К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен чăваш академи драма театрĕнче акă ĕнтĕ темиçе çул ăнăçлă пырать.

Хальхи вăхăтри чăваш литературин эстетикăллă çӳллĕ шайне, унăн гражданла тарăн содержанине «Хура çăкăр» роман лайăх кăтартса парать. Илпек Микулайĕн романĕнче чи вăйли вăл — революцичченхи чăваш хресченĕн йывăр та кăткăс шăпине ăста кăтартса пани. Ĕçхалăх массисем революциллĕ çул çине, ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешӳ çулĕ çине мĕнле тухнине писатель çак роман-

ра чăннипех те пысăк художествăллă ăсталăхпа ҫырса пама пултарнă. Тухтар тарҫăн, пурлăхшăн ҫунакан Шерккейпе унăн хĕрĕн Селимен, ялти пуян Кантюкăн сăнарĕсем вулакан умне чĕрĕ ҫын пек яр-уççăн тухса тăраççĕ. Геройсем хушшинче эпир ырă вырăс ҫыннисене те (Капкай, Миша, Аня) куратпăр, вĕсен пурнăçĕ пурин те чухăн чăваш хресченĕсен пурнăçĕпе тачă ҫыхăннă.

Илпек Микулайĕ — чăн-чăн сăмах ăсти. Тăван чĕлхепе пĕлсе усă курни, халăх сăмахлăхне пĕлни, характерсен нациллĕ уйрăмлăхĕсене ăста кăтартма пултарни, персонажсене сăнарлăн калаҫтарни—ҫаксем пурте романра ҫырса кăтартакан самана паллисене уҫăмлăн куç умне тăрататççĕ, унăн нациллĕ колоритне ҫĕклеме пулăшаççĕ.

Вырăс литературипе тĕнче литературинчи классикăна чăвашла куçарас тĕлĕшпе те Илпек Микулайĕ сахал мар ĕç турĕ. Ку шута Н. Гоголĕн «Вилĕ чунсем», В. Каверинăн «Икĕ капитан», И. Вазовăн «Пусмăрта» романĕсем, И. Франко, А. Чехов, М. Горький тата ытти паллă писательсен повеçĕсемпе калавĕсем кĕреççĕ.

Ҫынсем тĕрлĕрен пулаççĕ: пĕрисем пурнăҫра хăйсем пĕрре вырнаçса ларнă вырăнтан ниепле те хускалма пĕлмеççĕ, теприсем вара ялан канăçсăр пурнăçпа пурăнаççĕ, ялан ҫĕннине шыраççĕ, сăнаççĕ, тĕпчеççĕ. Вĕсем ялан ҫул ҫинче. Илпек Микулайĕ шăпах ĕнтĕ ҫавăн пек ҫын. Халăхпа пĕрле пулас, яланах унăн хуйхи-суйхипе, савнăçтелейпе пурăнас — акă мĕнле пирĕн пултаруллă писателĕн кăмăл-туйăмĕ.

Унăн кĕнекисем халăха куллен ҫăкăр пек, сывлăш пек кирлĕ.

*1975.*

## ХАЛĂХ ХИСЕПĔ

Чăваш литературипе искусство деятелĕсен ҫак кунсенче савăнма сăлтавсем уйрăмах нумай. Тин ҫеç-ха Мускавра К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш академи драма театрĕн гастролĕсем вĕçленчĕç. Литературăпа художество журналĕ «Ялав» аллă ҫул тултарчĕ. Совет литературинчи тава тивĕçлĕ ĕççемшĕн тата ĕççыннисене коммунизмла воспитани пама активлă хутшăннăшăн вăл «Хисеп палли» орден илме тивĕçлĕ пулчĕ. Пирĕн хаçатсенче Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиуме Леонид

Яковлевич Агакова Чăваш АССР халăх писателĕ ятне, Степан Антонович Шавли поэта Чăваш АССР халах поэчĕ ятне парасси çинчен йышăннă Указсем пичетленсе тухрĕç.

Вĕсем иккĕшĕ те — талантлă та паллă писательсем, тăван литературăра хĕрĕх çул ытла ĕçлесе, чăваш халăхĕн ĕçпе кĕрешӳри паттăрлăхĕ, Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕ çинчен вуншар кĕнеке çырнă сăмах ăстисем.

Леонид Агаков литература ĕçне 1928 çулта пуçăннă. Унăн пур произведенийĕсем те çĕнĕ пурнăç тăвакан халăх пурнăçĕпе, кĕрешĕвĕпе çыхăннă. Хăйĕн малтанхи произведенийĕсенче писатель культура революцине çутатас — хутпĕлменлĕхе, йăлари кивĕ пурнăç юлашкисене пĕтерессишĕн, ĕç çине, социализмла харпăрлăх çине çĕнĕлле пăхма вĕрентессишĕн пыракан кĕрешĕве сăнласа парать. («Вăрманти отряд», «Юлашки юмах», «Ултав», «Инкесем» тата ытти кĕнекесем.) Унăн «Волонтер» коммуна пурнăçĕ» очеркĕ чăваш литературинче колхоз строительстви çинчен çырнă пĕрремĕш произведени пулнă. Вăл пирвайхи пилĕкçуллăх стройкисем çинчен нумай очерксем çырнă. Индустриализаци темине çутатакан «Хăват» пьеса пирĕн театр историйĕнче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ.

Писатель чапне «Пĕрре, çуркунне...» повесть нумай çĕклерĕ. Ку произведенире Л. Агаков çамрăк Совет республикин пурнăçĕнчи йывăр тапхăра — граждан вăрçи çулĕсенче юхăннă халăх хуçалăхне аталантарнă вăхăта тĕрĕс те ĕненмелле сăнласа парать.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче фашистла захватчиксене хирĕç пынă кĕрешĕве хутшăнни Л. Агакова фронт пурнăçне лайăх пĕлсе çитме, совет воинĕсен паттăрлăхне тĕрĕс кăтартса пама пулăшрĕ. Вăрçă çулĕсенчи калавсемпе очерксенче («Юлташ пурнăçĕ», «Салтак чунĕ», «Лăпкă çын», «Старик № 33», «Медаль» тата ыттисем), «Партизан Мурат», «Вилĕмрен те вăйлă» повеçсенче тĕрлĕ ăрури совет çыннисен, тĕрлĕ професси, тĕрлĕ халăх çыннисен çапăçури пултарулăхне, ырă кăмăл-туйăмне ăста кăтартса панă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Л. Агаков çар тата патриотизм темипе паха произведенисем нумай çырчĕ. Вĕсенчен «Кăсăя», «Ылтăн вăчăра», «Салтак ачисем», «Пĕр хулара» повеçсемпе «Шанчăк» романа уйрăммăн палăртмалла. Вĕсен геройĕсем — çирĕп шухăш-кăмăллă, Тăван çĕршыва, хăйĕн халăхне вĕçĕмсĕр парăннă совет çыннисем.

Л. Агаков чăваш совет литературинчи сатирăпа юмор жанрне пуçарса яракансенчен пĕри. Вăл çырнă «Качака такисем», «Хаклă кĕрÿ», «Кулас килет» тата ытти кĕнекесене халăх кăмăлласа вулать.

Талантлă писатель куçару ĕçĕнче те хастар. Вал А. Островский, А. Чехов, М. Горький, А. Фадеев, В. Катаев, Б. Полевой, Н. Вирта, Н. Погодин тата ытти вырăс писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарнă.

Паллă писатель чăваш литературипе искусствине малалла аталантарас ыйтусемпе нумай статья çырнă.

Л. Агаков общество ĕçне хастар хутшăнать. 1950—1954 çулсенче вăл Чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕн председателĕнче ĕçленĕ, ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйланă.

Писателĕн ырми-канми ĕçне Совет правительстви пысăка хурса хакланă: ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, нумай медаль парса наградăланă. Чăваш совет литературине тата театр искусствине аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн ăна Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне, «Салтак ачисем», «Ылтăн вăчăра», «Партизан Мурат», «Кăсăя» повеçсемшĕн Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине панă.

Стихван Шавлин «Юлташа» ятлă пĕрремĕш сăвви 1931 çулта пичетленсе тухнă. Хĕрĕх виçĕ çул хушшинче вăл сăвăсемпе поэмăсен, калавсемпе очерксен вăтăр кĕнекине пичетлесе кăларнă. Унăн произведенийĕсем хаçатсемпе журналсенче тăтăшах тухаççĕ. Шавли вырăс поэчĕсемпе прозаиксен, ытти халăх писателĕсен произведенийĕсене чăвашла нумай куçарнă. Унăн сăввисемпе поэмисене пирĕн çĕршыври вунсакăр халăх чĕлхипе вулаççĕ.

Поэт пултарулăхĕ халăх пурнăçĕпе, паянхи кунпа çыхăннă. Вăл гражданла пафоспа, лирикăллă-философиллĕ шухăшсемпе пуян. Унăн сăввисемпе поэмисенче вулакан Советлă Тăван çĕршыв хăватне туять, унăн паттăр ывăлĕсемпе хĕрĕсен чаплă ĕçĕсене, пĕтĕм совет халăхĕн нихăçан арканми туслăхĕпе пĕтĕçÿлĕхне витĕр курать.

Ст. Шавли поэзийĕнче аслă çулпуçăмăра В. И. Ленина халалласа çырнă произведенисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. «Аслă урам», «Ленин пурăннă хула», «Хутарти И. Н. Ульянов уçнă шкул», «Ешĕл палăк» сăвăсенче вăл Ленинăн нумай енлĕ ĕçĕ çинчен, унăн вилĕмсĕр вĕрентĕв-

не халăх чун-чĕрепе юратни тата паранни çинчен мăнаçлă кăмăлпа каласа парать.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче вăл пысăк çĕкленӳпе çĕнĕ сăвăсем, поэмăсем çырнă. Вĕсенче усал тăшмана хирĕç кĕрешекен совет çыннисен чăтăмлăхне, пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтерессе шанса тăнине кăтартса панă. Поэт совет çыннисем фронтра та, тылра та чăн-чăн патриотсем пулни çинчен, пирĕн партин организаторла ĕçĕ çинчен уçăмлă та ĕненмелле çырса кăтартать («Зоя», «Матур Якур», «Киев пионерĕ» поэмăсем тата ыттисем).

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Ст. Шавли сăвăлла çĕнĕ пысăк произведенисем нумай çырчĕ. «Çăпата» поэмине уйрăммăн палăртса хăвармалла. «Пурнăç урапи» тата «Сухаç» поэмăсенче (вĕсем чăвашла та, вырăсла та тухнă) çирĕммĕш, вăтăрмĕш çулсенчи комсомолла çамрăклăха сăнласа панă.

Ст. Шавли пирĕн çĕршывра тата чикĕ леш енче пулса иртекен ĕçсене тимлĕ сăнаса тăрать, вĕсем çинчен поэтăн вĕри кăмăл-туйăмĕпе каласа парать. 1972—1973 çулсенче вăл пирĕн вăхăт çинчен илемлĕ очерксем пичетлесе кăларчĕ. («Çăкăр», «Хурçă», «Аслă Кобзарь çĕршывĕнче», «Виçĕ улăп» тата ыттисем.) Хурçă шăратакан чăваш çинчен çырнă очеркшăн «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ ăна пĕрремĕш преми пачĕ. Вăл тăван вырăнсем çинчен çĕршыври тĕрлĕ хуласенче тухса тăракан нумай хаçат-журналсенче лайăх сăвăсемпе поэмăсем пичетлесе кăларчĕ. Вĕсене вулакансемпе литература критики пысăк хак пачĕç.

Поэт халăха ĕçлеме, пурăнма чăрмантаракансене хирĕç хастар кĕрешет. Хăйĕн сатирăллă сăввисенче, фельетонĕсенче тата калавĕсенче вăл кивĕ тĕнче юлашкине, наянсене, бюрократсене, ĕçке ернĕ çынсене, харам пырсене шеллемесĕр питлет («Пӳрнепе тĕллесе», «Ыра каваш» тата ытти кĕнекесем).

Хăйĕн пĕр сăввине Ст. Шавли «Васкатăп эп» ят панă. Поэт унта та, кунта та çитесшĕн, пурнăçран юласшăн мар — çавăн пек унăн туртăмĕ. Çакна эпир «Çĕр çинчи йĕр» кĕнекере те куратпăр.

Ст. Шавли республикăн обществăллă-политикăллă пурнăçне хастар хутшăнать. Вăл фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче час-часах пулать. Чăваш литературине аталантарас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн ăна Чăваш АССР тава тивĕçлĕ культура работникĕ ятне панă.

Халăх хăйĕн ĕçчен ывăлĕ-херĕсене хисеплет, юратать. Вĕсем хушшинче — Леонид Агаковпа Стихван Шавли. Вĕсене хисеп туни писательсене пурне те савăнтарать, тăван литературăна малалла аталантарас ĕçре хавхалантарать.

Çирĕп сывлăхпа пысăк ӳсĕмсем сунатпăр сире, хисеплĕ тусăмăрсем.

*1974.*

## САРЛАКА УТĂМЛĂ ПОЭТ

Стихван Шавли çинчен эпĕ 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнчех илтнĕччĕ. Астăватăп, унăн малтанхи сăввисем «Пăр тапранчĕ», «Вăтам Атăл» альманахсемпе «Колхозник» хаçатра пичетленнĕччĕ. Ана хăйне вара пуçласа 1939 çулта Шупашкарта, Çеçпĕл Мишши 40 çул тултарнă ятпа ирттернĕ литература каçĕнче куртăм. Унта вăл поэтăн «Тинĕсе» сăввине каларĕ.

...Сцена çине кăвак костюм тăхăннă çӳллĕ те кĕрнеклĕ çамрăк утса тухрĕ. Çӳçне хăй «Çеçпĕлле» вăрăм ӳстернĕ. Сылтăм аллине сулса, хум майăн тайăлнă пек енчен енне сулăнса, сăвă калама тытăнчĕ вăл, итлекенсене вара сцена çинче Шавли мар, шавлă тинĕс умĕнче Çеçпĕл хăй тăнă пек, вăйлă хумсем ытамĕнче хăйĕн вăйне виçнĕ пек туйăнчĕ.

Унтанпа ĕнтĕ 30 çул иртрĕ. 1969 çулхи ноябрь уйăхĕнче те, Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 70 çул тултарнине уявланă кунсенче, Стихван Шавлине вулакансем нумай çĕрте курма пултарчĕç. Кăвар чĕреллĕ поэтăмăрăн юбилейĕнче, Шупашкарти филармони залĕнче, вăл хăй Çеçпĕле асăнса çырнă сăввине вуласа кăтартрĕ. Поэт сасси, вăй-халĕ, шухăш-кăмăлĕ уçă та çирĕп янăрать. Çавăн чухне вара ирĕксĕрех Шавлин пултаруллă çул-йĕрĕ тепĕр хут куç умне килсе тухрĕ.

Калас пулать, ĕлĕкрех Шавли сăввисенче шав ытларах илтĕнетчĕ, халĕ ĕнтĕ вĕсем шухăшпа, кăмăлпа пуянни вăйлăрах сисĕнсе тăрать. Чĕлхе тĕлĕшĕнчен те поэтăн ăсталăхĕ чылай ӳсрĕ. Вăл каланă сăмахсем вырăнлă, витĕмлĕ.

Шавлин малтанхи сăввисенчех унăн хăйĕн сасси, хăйĕн сăнарлăхĕ, хăй енĕ палăрнăччĕ. Халь ĕнтĕ унăн пултарулăхĕ вăй илсе, çирĕпленсе, тарăнланса çитни уйрăмах

савӑнтарать. Поэта тӑван поэзири ытти юлташӗсемпе пиепле те арпаштарма ҫук. Унӑн творчествин хӑйӗн паллӑ вырӑнӗ, хӑйӗн уйрӑм пӗлтерӗшӗ пур.

Шавли пултарулӑхне, унӑн чӑваш поэзийӗнчи пархатарлӑ ӗҫне-хӗлне сӑнаса пӑхсан, унпа пӗрле халӑх хушшинче ҫӳренисене, вӑл ҫамрӑк авторсемпе тӗл пулса калаҫнисене аса илсен, ман ума хӗрӳллӗ, чӑрсӑр, лармасӑма пӗлмен, ялан малалла талпӑнакан, ҫитмен ҫӗре ҫитсе курас, клубсен, театрсен сцени ҫине тухса, ура тапса, хумханса сӑвӑ калас, хӗрӳллӗ ӗҫ вӑхӑтӗнче хирте, йӗтем ҫинче халӑхпа тӗл пулас тесе ҫунакан поэт тухса тӑрать.

Чӑвашсен паллӑ поэчӗ 40 ҫул хушшинче пайтах сӑвӑпоэма, калавсемпе очерксем, статьясем ҫырчӗ, нумай кӗнеке кӑларчӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл вырӑс тата ытти халӑхсен поэчӗсен сӑввисене те чӑвашла нумай куҫарчӗ. Унӑн хӑйӗн сӑвви-поэмине те пирӗн ҫӗршывра халӗ 18 чӗлхепе вулаҫҫӗ, хӑшпӗр произведенийӗсене вара пӑлхарла, нимӗҫле тата ытти чӗлхесене те куҫарнӑ.

Чӑнах та ырми-канми нумай ӗҫлет пирӗн талантлӑ поэтӑмӑр. Вӑл пӗрмай халӑх хушшинче пулать, паянхи куппа, пурнӑҫпа тан утать, чӑваш поэзине ҫӳлтен те ҫӳле ҫӗклессишӗн пысӑк вӑй хурса, тӑрӑшса ӗҫлет.

«Ватӑлас енне кайсассӑн ҫаврӑнса пӑхатпӑр каяллла»,— тесе ҫырнӑччӗ вӑл хӑйӗн пӗр сӑввинче. Ӗнтӗ Стихван Шавли утмӑлтан иртрӗ, тӑван литературӑна аталантарас тӗлӗшпе хӗрӗх ҫул ытла чуннe парса ӗҫлерӗ.

Ҫак статьяра пӑхса тухакан кӗнекене поэтӑн иртнӗ хӗрӗх ҫул хушшинче ҫырнӑ чи лайӑх сӑввисене суйласа илсе кӗртнӗ. Поэмисене вӑл уйрӑм кӗнекен кӑларма хатӗрленӗ. Стихван Шавли сӑввисенче эпир Тӑван ҫӗршывӑн иксӗлми хӑвачӗпе чапне, унӑн паттӑр ывӑлӗсемпе хӗрӗсен мухтавлӑ ӗҫӗсене, Совет халӑхӗн ӗҫпе кӗрешӳри пӗрлӗхӗпе туслӑхне уҫҫӑн курса тӑратпӑр. Аслӑ ҫулпуҫӑмӑр В. И. Ленин ҫинчен, чӑваш халӑхӗн совет самани ҫулӗсенчи телейлӗ те чаплӑ кунҫулӗ ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑюрӑсем те поэтӑн пултарулӑхӗнче паллӑ вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Вӗсенчен уйрӑмах «Ленин», «Аслӑ урам», «Тӑван халӑха», «Тӑван ҫӗршыв», «И. Н. Ульянов уҫнӑ Хутар шкулӗ», «Ҫӗршывӑм, тав, ӗҫне мухтав» сӑввисене палӑртса хӑварас килет.

Суйласа илнӗ сӑвӑсен кӗнекине Шавли сакӑр ярӑма уйӑрнӑ.

«Аслӑ урам» ярӑма илес пулсан, кунта вулаканшӑн

Шавли трибун, Шавли агитатор пулни асра юлмалла курӑнать. Ленин, Тӑван ҫӗршыв, республика кунҫулӗ, ӗҫпе кӗрешӳри паттӑрлӑх — ҫаксем тӗп темӑсем пулаҫҫӗ кунта кӗртнӗ сӑвӑсенче.

«Хаяр кунсем» ярӑмри сӑвӑсем — поэт вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче ҫырнӑ сӑвӑсем. Вӗсенче совет ҫыннисем Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн юратни, фашистла пусмӑрҫӑсене хирӗҫ паттӑр ҫапӑҫни ҫинчен хумханмалла каланӑ. Кунта эпир Шавли Ҫӗнтерӳ килессе, фашизм пурпӗр пӑчланасса пӗтӗм чӗре хӑвачӗпе ӗненнине, пӗтӗм халӑхпа пӗрле сӑвӑҫ та хурҫӑ шанчӑкпа пурӑннине, хӗрсе ӗҫленине туятпӑр.

«Тепре куриччен, Сталинград» ярӑма поэт хӑй ҫак паттӑр хулана 1952 ҫулта ҫуркунне, Атӑлпа Дон пӗрлешнӗ кунсенче ҫитсе курнӑ хыҫҫӑн ҫырнӑ сӑвӑсене кӗртнӗ. Кунта вӑл хӑрушӑ вӑхӑтра тӑшмана ҫӗнтернӗ хулан хӑватне, мӑнаҫлӑхне, унӑн чапне, пуласлӑхне мухтаса юрлать.

«Шевченко ҫӗршывӗнче» — 1959 ҫулта чӑваш поэчӗсен ушкӑнӗпе пӗрле Украинӑна кайса килнӗ хыҫҫӑн ҫуралнӑ ярӑм. Ҫав сӑвӑсенче поэт халӑхсен нихҫан арканми ҫирӗп туслӑхӗ ҫинчен хумханса каласа парать.

«Йыхравҫӑсем» — халӑх юратакан поэтсем ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсем. Кунта эпир вӗсен ӗҫӗ-хӗлӗ, шухӑш-кӑмӑлӗ Тӑван ҫӗршыв кунҫулӗпе уйрӑлми тачӑ ҫыхӑннине ҫывӑххӑн туйса тӑратпӑр.

«Сӗве сӑввисем» — В. И. Ленин, И. Н. Ульянов, И. Я. Яковлев, Н. Охотников, Тайӑр Тимкки ҫуралнӑ ҫӗршыв ҫинчен ҫырнӑ тарӑн шухӑшлӑ, философиллӗ сӑвӑсем.

«Кӳкӗрченлӗх ямбӗсемпе хорейӗсем», «Юрату» ярӑмсене Шавли тӑван тавралӑх, ҫуралнӑ ҫӗршыв, ҫутҫанталӑк илемӗ, ачаш юратупа кӑварлӑ ҫамрӑклӑх ҫинчен кӗвӗленӗ чи лайӑх сӑвӑсене кӗртнӗ.

Кӗнекери сӑвӑсемпе паллашсан, вулакан Стихван Шавли совет ҫыннисен тӗрлӗ тапхӑрти пурнӑҫне тарӑннӑн та уҫҫӑн ӑнланса сӑнланине курать. Поэтӑн сӑввисем нихҫан та ватӑлмӗҫ, мӗншӗн тесен вӗсенче Тӑван ҫӗршыва, тӑван халӑха, унӑн чӗлхине чун-чӗререн юратни таса ҫӑлкуҫӗ пек тапса-вӗресе тӑрать.

Хастар чӗреллӗ поэт-патриот, хӑйӗн пархатарлӑ ӗҫне хакласа, пӗтӗм чунӗ-кӑмӑлӗпе ҫапла калать:

Эп ҫӗнӗ ӗмӗр юрӑҫи,
Калатӑп эп: «Кил, ҫӗнӗ ритм!

Вĕре чĕремçемре, сăмах хурçи,
Çынсен чунне хускат эс хыттăн».

Çĕршывăм умĕнче паян
Чунпа тупа туса калатăп:
«Тăван çĕршывăмçăм, эп сан,
Сан ырлăхушăн эп çунатăп».

Калатăп эпĕ: «Ан хĕрхен,
Поэт, вутла, кăвар пек ялкăш!
Вутчулĕ пек эс сап хĕлхем,
Çил чӳхекен ялав пек варкăш!»

Çулĕсем сахалах мар пулин те, пултаруллă поэтăн тăван литературăра ĕçлес ĕмĕчĕ пысăк-ха. Ан тив, пирĕн «шавлă» поэт çаплах самана сулăмĕпе, сарлака утăмпа уттăр, малашне те çулăмлă та витĕмлĕ, тарăн шухăшлă та пуян чĕлхеллĕ сăвă-юрăсемпе поэмăсем, калавсемпе очерксем çыртăр.

Кĕнеке хыççăн кĕнеке... Акă, ман умра — хастар чĕреллĕ поэтăн хĕрĕх çул хушшинче çырнă тепĕр кĕнеки — «Суйласа илнĕ поэмăсем».

Шавли сăввисене вуласа пынă майăн, куç умне тин кăна сухаласа пăрахнă хир курăнса кайнă пек туйăнать. Касă çумне касă тăсăлса выртать. Тарăн касă. Ырмиканми сухаçă нумай ĕçленĕ, вăл тутă вăрлăх акнă. Çав вăрлăх ашкăрса ӳсме, кĕçех ылтăн тĕспе çуталса енчен енне хумханма тытăнмалла пек...

Çак туйăм Шавлин поэмисене вуланă хыççăн уйрăмах таранланса сарăлать. Пирĕн ума пурнăç хирĕ тухса выртать. Хир тăрăх илемлĕ çу кунĕсем çеç мар, йĕпи-сапи те, сивви-шарталами те ирте-ирте каять. Тăван çĕршыв хирĕ вĕçĕмсĕр. Асамлă вăйĕпе вăл инçете чĕнет, кĕрешме, çĕнтерме йыхăрать. Çак туйăма кура, поэтăн аллă çулне чысласа çырнă статйинче М. Я. Сироткин профессор: «Шавли пултарулăхĕ лиро-эпикăллă туртăмпа палăрса тăрать»,— тесе каланăччĕ.

Хамăр шухăша çирĕплетес тесе, эпир кĕнекери хăшпĕр поэмăна илсе кăтартăпăр.

Акă 1934 çулта çырнă «Хăяхван çамрăклăхĕ» поэма. 1921 çул. Атăл тăрăхĕнче хăрушă выçлăх. Чăвашсем ялĕ-ялĕпе «çăкăрлă енне» туха-туха каяççĕ. Çамрăк Совет влаçĕ хăй питĕ чухăн пулин те, выçă çынсене пулăшать, тăлăха юлнă ача-пăчана ача çуртĕсенче пăхса усрать, хут

вӗрентет, ӗçе явăçтарать... Ку поэма чылай енчен автобиографиллӗ.

«Тăван кӗтес» поэмăра (1950) çамрăк ăрупа аслăрах ăру кунçулне, колхоз самани ура çине тăма тытăннă тапхăра куратпăр.

«Матур Якур» (1942—1945), «Зоя» (1945) поэмăсенче Тăван çӗршывăн Аслă вăрçи кӗрлевӗ илтӗнет. Вӗсенче поэт совет çыннисем хамăрăн Тăван çӗршывăмăра чунчӗререн юратни, фашистла пусмăрçăсене хирӗç паттăр çапăçни çинчен çырать. Совет Союзӗнчи халăхсен туслăхӗ, тăванлăхӗ, пӗр ӗмӗт-шухăшӗ хаяр çапăçусенче е тылра хӗрӳллӗ ӗçре хăватлăн палăрнине куратпăр эпир. Асран каймаççӗ поэтăн сăмахӗсем:

Тăшман усал, тăшман хаяр,
Вăл уйрăм мар выç кашкăртан.
Пӗр çын юлмашкăн тивӗç мар
Тăван çӗре пулăшасран.

Вăрçă хыççăн та Шавли пысăк пелтерӗшлӗ произведенисем чылай çырчӗ.

«Ешӗл палăк» поэма (1957) чăваш халăхӗ аслă Ленин идейисене пӗтӗм чун-чӗререн парăннине, унăн вилӗмсӗр ятне ӗмӗр-ӗмӗр усрас тесе, чăрăш вăрманӗ лартса хăварнине, халӗ çак вăрман йăхран йăха усрамалăх, асăнмалăх тӗлӗнмелле ешӗл палăк пулса тăнине хумханмалла сăнласа кăтартать.

«Çăлтăр çынни» поэмăра (1962) эпир Андриян Николаев космонавтăн тӗлӗнмелле паттăрлăхне куратпăр.

«Октябрь поэми» (1953) пире ытларах ӗлӗкхи пурнăçпа паллаштарать. Анчах та поэт иртнӗ самана çинчен çырать пулсан, вăл иртни урлă паянхи куна витӗртерех курасшăн, тарăнрах ăнланасшăн. Çак енчен пăхсан, унăн «Çăпата» поэми те питӗ кăтартуллă. Поэт кунта тăван халăхăн иртнӗ кунçулӗ çине паянхи кун тӳпи çӳллӗшӗнчен пăхать, философиллӗ пӗтӗçтерӳсем тăвать.

Мирлӗ куна хӳтӗлеме мирлӗ куншăн кӗрешни кирлӗ. «Федерико, Хӗветӗр» поэма вулакана инçетри Испани çӗршывне илсе каять: 1936 çул... Хура тăшмана хирӗç Испани поэчӗпе пӗрле чăваш летчикӗ те кӗрешет. Поэма паянхи кунпа пӗр кӗвӗллӗ:

Халăхпа халăх
Пурăнтăр тăнăç.
Сăвă калатăр
Сăвăçпа сăвăç.

Тертлĕ Сервантес
Çакна ĕмĕтленнĕ.
Пушкин та,
Çеçпĕл те
Хытă ĕненнĕ,—

вулатпăр эпир çак поэмăра.

Шавли поэмисем формăпа ритм енчен пуян, хусканullă, динамикăллă. Халиччен каламан эпитетсем, метафорăсем, рифмăсем питĕ вырăнлă ылмашăнса пыраççĕ. «Тăван кĕтес» поэма, калăпăр, хăй çыранне кĕнĕ пысăк юханшыв пек лăпкăн, сарлакан юхса пырать. «Октябрь поэми» вара пĕвене татса кайнă çурхи шыв пек кĕрлесе ыткăнать.

Поэма геройĕсем хастар, çирĕп кăмăллă, вĕсен тавракурăмĕ анлă. Ăçта çитсен те, ăçта пулсан та вĕсем тăван кĕтесе, çуралнă çĕршыва манмаççĕ, чунĕпе те, ĕçĕпе те хăйсем çинчен ырă ят хăвараççĕ.

Шавли поэмисенче çитменлĕхсем пачах çук, вĕсем пурте пулса çитнĕ тесе каласшăн мар эпир. Хăшпĕр поэмăсене васкаса çырни сисĕнет, поэтăн «пĕр кунлăх» çырнă поэмăсем те çук мар. Автор тĕрĕс тунă, вĕсене çав кĕнекене кĕртмен.

Пит аякран, пит инçетрен курнаççĕ
Çĕрле ялкăшакан вут çутисем,
Чаршав карма хăват çитмест сĕм каçăн,
Юпа пек курăнса тăрать хĕлхем.
Çутатнă палăк пек эс курăнатăн,
Кĕлтепеле çурла сан аллунта,—

вулатпăр эпир «Хăлат Эрхип Иванĕ» поэмăра. Кунта поэт çирĕп кăмăллă, нимĕнле хуйхă-суйхă та, инкек-синкек те хуçăлтарма пултарайман чăтăмлă çын сăнарне кăтартнă. Çапла курать Стихван Шавли хăйĕн геройĕсене ытти поэмисенче те. Мĕнле кăна йывăрлăх килсе тухсан та вĕсем çĕнтереççĕ, коммунизм тăвас аслă çулпа утаççĕ.

*1970—1971.*

## ПАРХАТАР САМАХĔ

Пирĕн юратнă писателĕн, чăваш халăх артисчĕн Иоаким Степанович Максимов-Кошкинскин пурнăçĕпе пул-

тарулăх çулĕ сарлака та вăрăм. Акă вăл çуралнăранпа 80 çул, литературăпа искусствăра ĕçлеме тытăннăранпа 55 çул çитрĕ. Унăн пĕтĕм кунçулĕ пирĕн çĕршывра коммунизм тăвакан халăх кунçулĕпе тачă çыхăннă. Партипе правительство И. С. Максимов-Кошкинскин ĕçне тивĕçлипех пысăка хурса хакларĕç. Тивĕçлипех вăл чи пысăк награда — Ленин орденĕ илчĕ. РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн, Чăваш АССР Президиумĕн Хисеп грамотисем — ăна пархатарлă ĕçшĕн панă паха парнесем. И. С. Максимов-Кошкинский ячĕ Чăваш АССРĕн «Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине» ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕ.

Пирĕн хисеплĕ Иоаким Степанович Кăнна-Кушки ялĕнче 1893 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче çуралнă. Çак яла паян кун чăвашра пĕлмен çын çук та пулĕ. Кунта чăвашсен чи малтанхи писателĕсенчен пĕри — Игнатий Иванов хĕвел çути курнă, ĕçленĕ, кунтанах чăваш халăхне çутта кăларакан Иван Яковлевич Яковлев тухнă. Кăнна-Кушки — хальхи вăхăтри чăваш писателĕсен Александр Алгапа Тихăн Петĕрккин тăван ялĕ те...

Илемлĕ литературăпа, картинăсем ӳкерессипе тата театр искусствипе Иоаким Степанович Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ чухнех (1907—1911 çç.) хытă интересленнĕ. 1911—1918 çулсенче вăл Хусанти художество училищинче вĕреннĕ. Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтерНĕ хыççăн Хусанти чăваш землячествин пĕр пухăвĕнче пулас драматург театр искусствине юратакансен куржокĕ уçăласси çинчен тухса калать. Нумай та вăхăт иртмест, 1918 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче вара чăваш çамрăкĕсем А. Н. Островскин «Пурăнас килнĕ пек ан пурăн» пьеси тăрăх пĕрремĕш спектакль лартаççĕ. Ку пьесăна чăвашла Иоаким Степанович хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле темиçе кун хушшинчех куçарнă. Ăна сцена çинче пĕрремĕш хут лартса панă куна халь чăвашсен нациллĕ театрĕ уçăлнă кун тесе шутлатпăр.

Пултарулăх ĕçне тытăннăранпа И. С. Максимов-Кошкинский пурĕ 30 ытла пьеса, оперăпа оперетта либреттисем, нумай калав, очерк çырнă, пурте тенĕ пекех вĕсем чăваш литературин ылтăн фондне кĕрсе юлнă. Драматургăн «Сатурпа Илем» пьесинче эпир революципе граждан вăрçи çулĕсенчи вут-çулăмлă кунсене куратпăр. Ун чухнехи ĕçсене художествăллă тĕрĕс çутатса панипе çеç мар интереслĕ çак пьеса. Ку пьесăра паянхи куншăн кирлĕ ыйтусем те — тĕслĕхрен, творчествăллă интеллигенци

халăх кĕрешĕвĕнчи вырăнне палăртас ыйту çивĕччĕн тухса тăрать.

«Тăвăл хыççăн тăвăл» пьесăра драматург чăваш литературине пуçарса янă К. В. Ивановпа чăваш халăх просветителĕн И. Я. Яковлевăн пурнăçĕпе творчествине кăтартса панă. «Пугачев парни» пьесăра Октябрьти революци умĕнхи чăваш ялĕнче класс кĕрешĕвĕ епле çивĕччĕн сарăлса пынине куратпăр эпир. Çак произведенисен идейисем çирĕп те уçăмлă, илемлĕх тĕлĕшĕнчен те вĕсем çӳллĕ шайра.

Тăван Çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă çулĕсенче те Иоаким Степанович тухăçлă ĕçлерĕ. Пирĕн театрсемпе колхоз клубĕсен сценисем çинче ун чухне «Савнисем», «Сенкер двойка», «Телейлĕ çуркунне» пьесăсене тăтăшах кăтартрĕç. Идейăпа художество шайĕпе те, тематикăпа та пĕр-пĕринчен самай уйрăлса тăраççĕ ку пьесăсем. Апла пулин те драматург вĕсенче пуринче те совет çыннин пуян чун-чĕрипе шухăш-кăмăлне, унăн патриотла ĕçĕсене ăста кăтартса панă. Куракансăн вара çакă — чи хакли.

Юлашки çулсенче те драматург сахал мар интереслĕ пьеса çырчĕ. «Пурнăç хуçисем», «Çĕмĕрт çеçки çурăлсан», «Эх, Иван» т. ыт. пьесăсене халăх хапăлласа йышăнчĕ.

Ырми-канми, вăй-хала шеллемесĕр ĕçлерĕ И. С. Максимов-Кошкинский чăваш театрне аталантарас тесе. Çавна май хăех актер та, режиссер та, художник та, художествăллă руководитель те пулса курчĕ. Чăваш театрĕсем валли ăста драматург вырăспа урăх çĕршывсенчи авторсен хĕрĕхе яхăн пьесине куçарчĕ. Вĕсен хушшинче А. Островскин, Н. Гоголĕн, Л. Толстойăн, В. Шекспирăн чаплă пьесисем пур. Наци искусствине аталантарас ĕçри пархатарлă ĕçсемшĕн И. С. Максимов-Кошкинский юлташа тăван республикăра 1933 çулта никамран малтан Чăваш халăх артисчĕн хисеплĕ ятне парĕç.

«Чăвашкино» студине пуçарса ярса ăнăçлăн ертсе пыраканĕ те Максимов-Кошкинскиех пулчĕ. 1925—1931 çулсенче (çак кĕске вăхăт хушшинчех!) экрансем çине тулли метражлă çичĕ илемлĕ фильмпа документлă тăватă фильм кăларнă, вĕсене ун чухне Совет Союзĕнчи нумай-нумай çын курнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче те Чăваш халăх артисчĕ Мускавпа Свердловскри киностудисенче илемлĕ фильмсем кăларас тĕлĕшпе хастар ĕçлерĕ.

Хисеплӗ драматург-режиссерӑн литературӑпа искусстварӗ тава тивӗҫлӗ ӗҫӗсем ҫинчен каласа панӑ май, эпир унӑн вӑрҫӑри ӗҫӗсемпе обществӑлла ӗҫӗсем ҫинчен те ырӑ сӑмах калама манмастпӑр. Граждан вӑрҫи ҫулӗсенче вӑл ҫулӑмлӑ агитатор, политкомиссар, Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче ҫар Политотделӗн подотдел начальникӗ пулнӑ. Паян куп та-ха писатель-коммунист, ватлӑхне пӑхмасӑр, хӑйӗн пултарулӑх ӗҫне писательсен Союзӗпе тата республикӑри театрсемпе тачӑ ҫыхӑнса туса пырать.

Иоаким Степанович Максимов-Кошкинскин пурнӑҫӗпе творчествӑлла ӗҫӗ-хӗлӗ пӗтӗмпех Совет халӑхне, Коммунистсен тӑван партине чун-чӗререн парӑнса ӗҫлени чӑн-чӑн паха тӗслӗхӗ пулса тӑрать. Ҫапла ӗҫлемелле те чӑн-чӑн писатель-коммунист. Ҫакӑн пек паян халӑхӑн пархатар сӑмахӗ.

*1973.*

## КОМЕДИ — ҪИВӖЧ ХӖҪПӐШАЛ

Чӑвашсен паллӑ драматургӗ, театр искусствин ӑсти, Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ Николай Спиридонович Айзман Чӑваш республикинчи Шупашкар районне кӗрекен Вомпукасси (Альгеш) ялӗнче 1905 ҫулхи декабрӗн 15-мӗшӗнче вӑтам хресчен ҫемйинче ҫуралнӑ. Пуҫламӑш шкул хыҫҫӑн (1918 ҫул) пулас драматург виҫӗ ҫула яхӑн килти хуҫалӑхра ӗҫлесе пурӑнать. Унтан Альгешри алӑсти промысла эртелне вырнаҫать. Эртелте ӗҫлекен ҫамрӑксем ун чухне ял халӑхне час-часах спектакльсем лартса панӑ, концертсем кӑтартнӑ. Вӗсем хушшинче Вомпукасси йӗкӗчӗ Айзман Микули вара чӑннипех те чи хастаррисенчен пӗри пулнӑ. Вӑл кашни спектакльте выляна, хорта та юрланӑ, нумай вуланӑ, халӑх юрри-сӑввисене те нумай пухнӑ.

1926 ҫулта Н. Айзман Шупашкарти музыка шкулне (халӗ Ф. П. Павлов ячӗпе хисепленекен музыка училищи) вӗренме кӗрет, тепӗр ҫултан Чӑвашсен государство академи театрӗ ҫумӗнче уҫӑлнӑ драма студине куҫать. Ҫакӑнтанпа унӑн пӗтӗм пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ чӑваш театрӗн искусствипе тачӑ ҫыхӑнать. Чӑваш академи театрӗнче чӗрӗк ӗмӗр ытла ӗҫленӗ май, вӑл унта малта-

---

* Ку статьяна А. Н. Андреевпа пӗрле ҫырнӑ.

нах ахаль актер, режиссер ассистенчĕ, унтан режиссер пулать. Çав хушăра çĕр ытла рольте вылять, вăтăр ытла спектакль лартса парать. Çамрăк чăваш театрĕн пултаруллă артисчĕ, ăста режиссерĕ театрта ĕçленĕ хушăрах хăй те пьесăсем çырать.

1929 çулта театр унăн «Йăмраллă ялта» ятлă малтанхи пьесине лартса парать. Çав çулах ăна «Сунтал» журналăн 5-мĕш номерĕнче пичетлесе кăлараççĕ. Унтан кĕçех çамрăк драматургăн «Шав», «Театр» ятлă пьесисем çапăнса тухаççĕ. Вулакансем унăн «Спирукпа Марук», «Çӳпçипе хупăлчи» пьесисене те хапăл туса йышăнаççĕ...

Н. С. Айзманăн пултарулăхĕ çулран-çул сарăлса, аталанса пырать. Халĕ унăн пьесисене Чăваш çĕршывĕнче кăна мар, тăванла республикăсенче те лартаççĕ. Сăмахран илсен, темиçе çул хушши ӗнтĕ «Кай, кай Ивана» комедие мари театрĕн сцени çинче ăнăçлă кăтартаççĕ.

Хăй пурнăçĕнче Н. С. Айзман утмăл ытла пьеса çырнă. Вĕсене нумайăшне халăхра юратса кураççĕ, кăмăлласа вулаççĕ.

Драматург çырнă нумай актлă пьесăсенчен уйрăмах «Шав», «Лиза Короткова», «Алла алă çунă чух», «Иван Новиков», «Кай, кай, Ивана», «Мăшăр çулхи туй», «Савни савнине илет», «Хăрушă чир», «Хĕвеллĕ кунсем» (çĕнетнĕ вариант), «Опера çурални», «Эрешмен картинче», пĕр актлисенчен — «Çӳпçипе хупăлчи», «Спирукпа Марук», «Шикли шикленнĕ — кĕрĕк пĕркеннĕ», «Пуçа килсен пушмак», «Эх, пуçана — çур çуна», «Кама савать, çавна каять» тата ытти произведенийĕсем те унăн пултарулăхĕнче паллă вырăн йышăнаççĕ.

Вĕсен тĕп геройĕсем — хамăр хушăра пурăнакан совет çыннисем, коммунизм тăвакан ĕçчensem.

Николай Спиридонович драмăсемпе комедисем, водевильсемпе скетчсем çырчĕ, чăваш литературинчи паллă рах прозăллă произведенисенчен инсценировкăсем сахал мар турĕ. Сатира жанрне аталантарас тĕлĕшпе те вăл нумай вăй хучĕ. Çавăн пек комедисенче драматург коммунизм тăвас ĕçре чăрмантаракансене, пурнăçра тĕл пулакан йĕркесĕрлĕхсене, хут купи ăшне путнă бюрократсене, харпăрлăхшăн çунакансене, карьерист-пуçлăхсемпе вĕсене юрама тăрăшакан йăпăлтисене, суя чунлă çынсене, мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлса ят янă йăх-яха çивĕччĕн питлет; çынсен ăстăнĕнче тасалса пĕтмен капитализм

юлашки-тӗлешкисенчен — тӗн сӗрӗмӗпе минренисенчен, кивӗ йӑларан, ӗҫе манса ӗҫкӗпе супнисенчен, мещенле элементсенчен, тӗшмӗшлӗхрен тӑрӑхласа кулать. («Эрешмен картинче», «Ахалех ташларӑмӑр», «Хура кушак» т. ыт. те.)

Н. Айзманӑн чылай комедийӗсем пурнӑҫра тӗл пулакан кӑлтӑксемпе ҫитменлӗхсене вӑхӑтра асӑрхаса тӑрӑ шыв ҫине кӑларма пулӑшаҫҫӗ, вӗсене курайми тӑваҫҫӗ. Драматург коммунизм тӑвакансен мораль кодексне пӑсакансене ним хӗрхенмесӗр питленӗ хушӑрах усалли, киревсӗрри, юрӑхсӑрри пӗтсе-путланса пынине, пирӗн пурнӑҫра лайӑххи, кирли, ырлама тивӗҫли кунран-кун ҫӗнтерсе пынине ӗненмелле те витӗмлӗ кӑтартса парать. Геройсен сӑн-сӑпатне, вӗсен шухӑш-кӑмӑлне автор яланах пӗр-пӗр ҫивӗч конфликт урлӑ палӑртать, совет ҫыннисен тӳрӗ кӑмӑлне, вӗсем пурнӑҫ ҫине ҫӗнӗлле пӑхнине ӑшшӑн сӑнарлать.

Паллӑ драматург ҫырнӑ пьесӑсем тематика тӗлӗшӗнчен анлӑ пулнипе палӑрса тӑраҫҫӗ. «Опера ҫурални» пьесӑра, сӑмахран, совет композиторӗсен Любимовпа Волжскин ӑс-кӑмӑлӗпе пархатарлӑ ӗҫне чуна хускатмалла ӑшшӑн кӑтартса панӑ. «Хӑрушӑ чир» комедире икӗ колхоз пурнӑҫне, икӗ председатель ӗҫне-хӗлне, вӗсен сӑн-сӑпатне уҫса панӑ, ҫӗннине туйман, критикӑна чӑтма пултарайман типсен сӑнарӗсене ӳкернӗ. Икӗ колхоз председателӗ, Садаевпа Бараев, малтанах ҫав тери килӗштерсе пурӑнаҫҫӗ. Анчах Бараев, критикӑна чӑтайманскер, хӑйне районти канашлура вӑрҫнӑшӑн кӗҫех хирӗҫме, тулашма тытӑнать те юлашкинчен чирлесех каять. Больницӑра выртнӑ хыҫҫӑн та «сывалаймасть» вӑл, ҫавҫавах тулашса ҫӳрет. Пурӑна киле тин Бараев хӑйӗн йӑнӑшне ӑнланса илет. Вара икӗ колхозӗ те пӗр хуҫалӑха пӗрлешсе пысӑкланать. Садаевпа Бараев та, ачисене мӑшӑрлантарса, хӑталлӑ пулаҫҫӗ.

«Хӗвеллӗ кунсем» комедире республика хӑвӑрт ҫӗнелсе улшӑннине куратпӑр. Пушкӑрт ҫӗршывне куҫса кайнӑ Шатра Кӗркурийӗ Чӑваш ҫӗршывӗнче шӑпах чӗрӗк ӗмӗр пулса курман. Вӑл Шупашкара уява килет те хула ҫав тери ӳссе кайнипе ӗлӗкхи урамсене те, тӑванӗсемпе тусӗсене те шыраса тупаймасть. Драматург сцена ҫине телейлӗ чӑваш колхозникӗсемпе колхозницисене, пирӗн вӑхӑтри хастар та ҫутӑ ӗмӗтлӗ ҫамрӑксене кӑларать, вӗсен шухӑш-кӑмӑлне тӗрлӗ енчен, ҫав вӑхӑтрах ӗненмелле уҫса парать.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан, 1941 çулта, Н. С. Айзман «Патриотсем» ятлă пĕр актлă пьеса çырать. Ку вăл чăваш драматургийĕнче совет çыннин вăрçă вăхăтĕнчи патриотизмне сăнласа кăтартакан пĕрремĕш пьеса пулнă. Унта автор ирсĕр тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас тесе ырми-канми тăрăшакан чăваш колхозникĕн килйышĕпе паллаштарать.

Вăрçă çулĕсенчех драматург тăван халăха «Лиза Короткова» (1943) ятлă нумай актлă пьеса парнелерĕ. Ку произведенире совет халăхĕ Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе пикама пăхăнманлăхĕшĕн фашистла вăрă-хурахсене хирĕç паттăррăн çапăçнине, тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшнине, вăрçа кайнă упăшкисем вырăнне чи йывăр ĕçсене арăмĕсем кӳлĕннине, колхозниксен çав вăхăтри пурнăçне туллин кăтартса панă. Çав вăхăтрах Якур йышши нишлĕ чунлă хăравçăсене те автор ним хĕрхенмесĕр питлет.

Колхоз председателĕ пулнă Платон вăрçăн малтанхи кунĕсенчех фронта тухса кайсан, ун вырăнне çак пысăк хуçалăха ертсе пыма Лиза Коротковăна суйлаççĕ. Çемçе кăмăллă чăваш хĕрарăмĕн характерĕ, кулленхи йывăрлăхсене çĕнтерне май, çирĕпленсе пырать. Председатель ĕçĕ хăйĕншĕн тем тери тертлĕ пулич те, вăл парăнмасть, чунĕпе хуçăлмасть, хăйне çирĕп тытма тăрăшнă хушăрах ыттисене хавхалантарса пыма та майне тупать. Йывăр кăмăла сирме, хăйне алла илме ăна ырă чунлă та ĕçчен хуняшшĕ Спиридон старик те нумай пулăшать.

Николай Спиридоновичăн пултарулăхĕпе çывăхрах паллашсан, вăл яланах пурнăçпа тан утма тăрăшнине сисмесĕр юлма çук. Акă, унăн «Иван Новиков» ятлă пьесинех илĕпĕр. Вăрçă хыççăнах çырнă çак паха произведенире çав вăхăтшăн кирлĕ пулнă пысăк темăна хускатнă. Вăл — хаяр тĕрĕслев çулĕсенче хавшанă ялхуçалăхне ура çине тăратасси, ăна малалла аталантарасси. Произведенире вăрçă хыççăн Иван Новиков председатель, фронтовик пулнăскер, Қошкин парторг пулăшнипе колхоза çĕнĕлле ертсе пыма тытăннине, колхозниксен ĕçри активлăхĕ ӳснине лайăх сăнланă.

Чăваш АССР кĕнеке издательстви Николай Айзман çырнă чылай пьесăсене уйрăм кĕнекесемпе пичетлесе кăларчĕ. Вĕсем — «Виçĕ пьеса», «Пьесăсем», «Комедисем», «Пĕр пайлă пьесăсем», «Лиза Короткова», «Опера çуралнни», «Виçĕ комеди», «Патриотсем», «Юлташсем», «Тăватă çул иртсен», «Çулсем-йĕрсем», «Вăрман кайăкĕсем»,

«Çĕнни çĕнтерет», «Кăмăллă кӳршĕ» тата ытти те. Çавсенчен пĕр сборникĕнче («Савниçĕм» кĕнекинче) драматургăн «Кай, кай Ивана» ятлă комедийĕ çапăнса тухрĕ. Унăн сюжечĕ кăткăс мар. Игнат кулакпа унăн ывăлĕ Иван, ĕлĕкхи киревсĕр йăласемпе усă курса, совет саманиш çулĕсенче те халăх ĕнси çинче çав-çавах иртĕхсе пурăнасшăн. Анчах ĕç йăлтах тепĕр майлă çаврăнса тухать, вĕсем хăйсем чеелĕх танатине çакланаççĕ. Иван хăйне пит килĕшекен Анюк ятлă чипер хĕре вăрлама шут тытать те, ун вырăнне йăнăшпа хусах арăм Кĕтерук лекет.

Çак чăннипех те ăста çырнă комеди çĕнĕ саманари çынсене çĕнĕлле пурăнма, киввинчен, сиенлĕ йăла-йĕркерен хăтăлма чĕнет. Ĕççыннисене, совет çамрăкĕсене чĕререн юратни произведени кашни картининчех сисĕнет.

«Шăпчăксем юрлаççĕ» пьесăра автор этем коллективра çеç хăйĕн чăн-чăн телейне тупма пултарнине питĕ ĕненмелле те асра юлмалла кăтартса панă. Пьесăри тĕп геройĕсенчен пĕри Алеша пурнăçра чи кирли укçа тесе шутлать. Çитменнине тата, ĕçке ерсе каять. Вара хайхискер çемйине çеç мар, хăйĕн ĕçне йăлтах манать. Коллектив пулăшнипе çеç вăл тӳрĕ çул çине тухать.

Николай Айзманăн драмăллă произведенийĕсем хăйне майлă меслетпе çырнипе палăрса тăраççĕ: вĕсенче халăх чĕлхин, халăх калаçăвĕн хăйне евĕр илемĕпе сĕтекĕ чĕрĕ çăлкуç пек тапса тăрать. Çавăнпа та унăн пьесисене вулама та, сцена çинче лартма та çăмăл, вĕсен витерӳлĕхĕ те пысăк. Айзман композиципе сюжет тума, сăнарсене уçăмлă кăтартма уйрăмах вырăссен аслă драматургĕнчен А. Н. Островскирен, французсен комеди ăстинчен Ж. Б. Мольертен нумай вĕренни сисĕнет.

Писатель хăйĕн пултарулăхĕнче ача-пăча темине те манман. Вăл шкулсенчи пултарулăх коллективĕсем валли ятарласах «Юлташсем», «Парăм», «Атăл хĕрринче», «Кăмăллă кӳршĕ» ятлă пьесăсем çырчĕ. Вĕсен тĕп шухăшĕ — ачасене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарасси, ĕçе юратма вĕрентесси. Ĕçчен ачасем вĕренӳре те ялан малта. Вĕсем хăйсене сăпайлă тытаççĕ, юлташĕсене пулăшаççĕ, туслăха тивĕçлипе хаклама пĕлеççĕ.

Каларăмăр ĕнтĕ, Н. С. Айзманăн пĕтĕм творчестви, пĕтĕм пурнăçĕ чăваш театрĕн аталанăвĕпе тачă çыхăннă. Хăйĕн чи лайăх произведенийĕсемпе вăл республикăри театрсемпе ялсенчи пултарулăх коллективĕсен репертуарне чылаях пуянлатрĕ. Унăн пьесисем тăрăх лартнă спектакльсем куракансене коммунизмшăн кĕрешме, со-

циализмлă Тăван çĕршывăн хĕрӳ чĕреллĕ патриочĕсем пулма, илемлĕхе ăнланма вĕрентеççĕ. Автор вĕсенче малта пыраканнине, çĕннине хăюллăн хӳтĕлет, çĕнĕ пурнăç тума чăрмантаракансене татăклăн сивлет. Ăнсăртран мар ĕнтĕ ĕçлесси, халăх пурнăçĕпе пурăнасси паллă драматургăн яланхи пысăк тĕллевĕ пулнă.

Н. С. Айзман пултарулăхĕ чăваш литературипе искусствинче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ. Вăл, нумай вăхăт йывăр чирлесе пурăнчĕ пулин те, творчествăлла хавхаланăва чакармарĕ, чăваш литературипе искусствине малалла чечеклентерессишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлерĕ.

Николай Айзман 1939 çулта СССР писательсен Союзĕн членне кĕнĕ.

Чăваш литературипе искусствине аталантарас тĕлĕшпе пысăк ӳсĕмсем тунăшăн 1940 çулта ăна Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ ятне панă. Каярахпа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ драматурги енĕпе ăнăçлă ĕçленĕшĕн икĕ хутчен Хисеп грамотипе наградăланă. Çавăн пекех вăл «Ĕçри хастарлăхшăн», «1941—1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн» медальсем илме тивĕç пулчĕ.

Юлашки çулсенче те самана таппине çивĕч туйса тăнă драматург ăнăçлă ĕçлерĕ, ӳссе пыракан тăван литературăна çĕнĕ пьесăсемпе пуянлатрĕ.

Николай Спиридонович Айзман 1967 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлчĕ. Анчах вăл çырса хăварнă пьесăсем пурăнаççĕ. Ун аллинчи чи çивĕч хĕçпăшал комеди пулнă.

*1974.*

## ВĂРÇĂЧЧЕН, ВĂРÇĂРА, ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂН

Алексей Талвирăн «Хĕллехи сивĕре» ятлă пĕрремĕш кĕнеки 1929 çулта пичетленсе тухнă. Çапла вара писатель хăй утмăл çул тултарнине (вăл 1909 çулхи мартăн 21-мĕшĕнче çуралнă) чăваш совет литературинче ĕçлеме пуçланăранпа хĕрĕх çул çитнипе пĕр вăхăтра паллă тăвать.

Хĕрĕх çул... Сахал мар асра юлакан илемлĕ произведени çырчĕ çак хушăра Талвир. Вĕсенче сăнласа кăтартнă чи лайăх геройсем пысăк та ырă чунлă çынсем. Тăван

çĕршывăн кăвар чĕреллĕ патриочĕсем, Ленин партийĕ кăтартса панă çулпа çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ патне паттăррăн утакан харсăр оптимистсем пулнипе палăрса тăраççĕ, вулакансен асне нумайлăха кĕрсе юлаççĕ.

Талвир пултарулăхĕнче промышленность теми уйрăмах паллă вырăн йышăнать. Тĕрĕссипе илсен, çак темăна Талвир пек анлăн, нумай енлĕн, пысăк ăсталăхпа çутатса паракан çыравçăсем пирĕн литературăра юлашки çулсенче те курăнсах каймаççĕ-ха. Ку вăл ăнсăртран мар. Ку чухнехи промышленность çултан-çул хăватлăн аталанса, техника çӳлĕрен-çӳле çĕкленсе, кăткăсланса пырать. Заводсемпе фабрикăсенчи çынсен ăс-хакăлĕ те, тавракурăмĕпе культури те ĕнтĕ питĕ хăвăрт ӳссе çĕнелет. Çакна пурне те художник куçĕпе курма, илемлĕ произведенисенче пĕтĕмлетсе кăтартма промышленноçа, унти çынсене, материала лайăх пĕлекен пултаруллă та ăста писательсем çеç пултараççĕ.

А. Талвир произведенийĕсенче вулакансем умне тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ ĕçсенче ĕçлекен рабочисен сăнарĕсем тухса тăраççĕ. «Пăва çулĕ çинче» повеçри вырăс рабочийĕ Андрей Широков-и, чăваш ялĕнчен Питĕре кайса рабочи пулнă Ухик-и, «Эсĕ инженер пулатăн» повеçри Микка Кулдаев-и, «Манăн завод» калаври аппаратчица Зина Урасметова-и, «Никĕс» романри Кирушпа Харьяс-и е Иштуловпа Тодор Христов-и—пурте вĕсем халăхпа тачă çыхăнса, халăх телейĕшĕн ырми-канми кĕрешекен, коммунизм обществи туса хума тăрăшакан паттăр çынсем.

Революцичченхи вырăс рабочи класĕн представителĕ Широков чăвашсем хушшинче хăй ирĕкĕпе мар, патша правительстви Мускав çывăхĕнчи фабрикăра раволюци юхăмне хутшăннăшăн Пăва уездне ссылкăна янипе килсе лекет. Широков часах уездри чăвашсемпе тутарсем хушшинче чи паллă çын пулса тăрать, пуринчен ытла ăна чухăн хресченсем килĕштерсе пăрахаççĕ. Май килнĕ таран вăл хресченсене патша чиновникĕсем хĕсĕрленинчен хӳтĕлет, вĕсене патша самаине хирĕç кĕрешĕве çĕкленме кирлине ăнлантарса парать, кулаксемпе куштансене ытларах та ытларах курайми пулма вĕрентет. Рабочи-революционерăн идейăлла пĕлтерĕшне автор кĕнекере сарлака планпа, тарăннăн уçса кăтартма пĕлнĕ. Ахальтен мар чăвашсем ăна тăван пек çывăха хурса ĕненеççĕ, унăн ĕçĕсене ырлаççĕ, хапăлласа йышăнаççĕ. Повеçри ытти геройсене те писатель çавнашкалах ĕненмелле, кăмăла

каймалла сăнласа панă. Илер-ха, сăмахран, Зоя Савельевнăна. Вăл кулак хĕрĕ, анчах, 1918 çулхи граждан вăрçи вăхăтĕнче хĕрлисем майлă пулса, ашшĕне хирĕç каять. Автор çак эпизода хăйне илсе кăтартнă пулсан, ку, тен, вулакана иккĕлентернĕ те пулĕччĕ. Анчах писатель ăна тĕрлĕ ситуацисенче, витĕмлĕ сăрсемпе сăнласа панă та, унăн çав хăюллă утăмне ним иккĕленмесĕр ĕненетĕн. Чи малтан вулакан ăна, акăш пек чăлт-шурă тум тăхăннă хитре хĕре, тырă вырма тухнă кун хирте курать, вăл ырă чунлă та сăпайлă хĕр иккенне туйса илет. Зоя çынсемпе шăкăл-шăкăл калаçни те, хăйне тирпейлĕ тыткалани те, çичĕ çулхи ача хутне кĕме тăрăшни те—пурте, пурте вулакана килĕшет. Тепĕр темиçе çултан ашшĕ ăна пуян Байтуган ывăлне качча пама тăрать. Ĕлĕкхи саманара ашшĕ-амăшĕн ирĕкĕнчен тухма пултарайман хĕрсем, юратман йĕкĕте качча тухас мар тесе, шыва сикнĕ, наркăмăш ĕçнĕ е çакăнса вилнĕ. Зоя вара хăйне качча илессшĕн сăхланса çӳрекен Байдуган ывăлĕ пырса кĕрсен, çĕр варринче инçетри Чĕмпĕре тухса тарать. Ăна тартма Байдуган-хуçа тарçи Ухик пулăшать.

Паллах, çакнашкал хĕр Аслă Октябрь хыççăн (пуян çын ачи пулсан та) Совет влаçне хĕрӳллĕн хӳтĕлекен активистка пулма пултарнах. Вулакан ăна ĕненет, унпа пĕрле Савик кулак йышши сĕмсĕрсене, шуррисен çарĕнчи сăхă офицерсене, чун-чĕререн кураймасть, вĕсене питлет.

А. Талвир ăсталăхĕнчи çак уйрăмлăха палăртса пăлхар писателĕ Георги Караславов академик акă мĕн калать:

«Талвир çынсен характерĕсене ĕçпе кĕрешӳре, обществăлла пысăк улшăнусемпе тытăçусенче уçса пама пĕлет. Мĕн тери меллĕн те тарăннăн сăнласа кăтартнă вăл Ухикăн, Пожедановпа унăн учительницăра ĕçлекен çамрăк арăмĕн витĕмлĕ сăнарĕсене! Вăл, ачасене тата халăха вĕрентекен çамрăк учительница, халăх ĕнси çинче иртĕхсе пурăнакан ашшĕпе шурă гвардеецсем майлă кайнă пиччĕшне хирĕç, кивĕ самана юлашкисене хирĕç хăюллăн çĕкленнине тĕрĕс, чăн пурнăçри пек ĕненмелле çырса кăтартнă... Анчах çамрăк учительница кивĕ тĕнче çипе çавăн пек пăхма тытăнни ăнсăртран килменнине вулакан повесть пуçламăшĕнчех туйса илет... Çавăнпа та учительницăн илемлĕ те илĕртӳллĕ сăнарĕ яланлăха асра юлать.

Талвир хăйĕн ытти геройĕсене те çавăн пекех тимлĕн

те типтерлĕн сăнлать, çавăнпа та повесть мĕнпур вулакансене чун-чĕререн тытса илсе хумхантарать».

Хăшпĕр критиксем «Пăва çулĕ çинче» повеçри тĕп герой Сантăр тесе шутлаççĕ. Анчах ку тĕрĕс мар. Автор хăйĕн произведенине Сантăр ятĕнчен çырни — ăсталăх меслечĕ кăна. Повеçри геройсен пурнăçĕнчи чи пысăк событисем Сантăрпа мар, Ухик ертсе пынипе сыхăннă, çавăнпа та произведенин тĕп геройĕ те Ухик тесе шутламалла.

Тарçăра ĕçлекен чăваш çамрăкĕ Ухик, пуян Байдуган патĕнчен тухса тарса, Питĕрти рабочисемпе пĕрле ĕçлеме пуçлать. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи вăхăтĕнче ăна флота илеççĕ. Революцин пирвайхи кунĕсенчех рабочи-матрос Ухик тăван ялне килсе çитет, пуянсен çĕрĕсене туртса илсе ялти хресченсене валеçсе парас ĕçе ертсе пырать. Шуррисен çарĕсем Чĕмпĕр, Пăва, Хусан хулисене вăхăтлăха тытса илсен, вăл Пăва уездĕнче партизансен отрячĕ йĕркелет, тăшманăн Пăвара тăракан гарнизонне çĕр варринче урăм-сурăм тапăнса, тĕрмери çынсене ирĕке кăларать.

Ухик повеçри çамрăк ача Сантăршăн çеç мар, пĕтĕм ял халăхĕшĕн çулпуç пулса тăрать. Халăх ăна юрататать, шанать, вăл каланине итлет. Унăн биографийĕнче (ял чухăнĕ — хулари рабочи — флотри матрос) темех тĕлĕнмелли çук, анчах унăн шухăш-кăмăлĕпе характерĕ, унăн пархатарлăхĕ, хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ, революци çĕнтерĕвĕшĕн кирек хăçан та пуçне хума хатĕр пулни вулакансене тĕлĕнтерет те, хавхалантарать те.

Чăваш писателĕсем граждан вăрçи çинчен çырнă ытти произведенисем хушшинче Ухик сăнарĕ чи вăйли, чи паллăраххи, чи витĕмли. Ахальтен мар Алексей Талвирăн «Пăва çулĕ çинче» повеçне вырăсла, пăлхарла, украинла, тутарла, удмуртла, белорусла, молдаванла, грузинла, литвалла тата ытти чĕлхесене те куçарса кăларнă.

Революцичченех рабочи класс ретне тăнă Ухикĕн чаплă кунçулне пысăк ăсталăхпа çырса кăтартнă хыççăн А. Талвир хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне рабочи класс пурнăçĕпе çыхăнтарать тесен те ытлашши пулмĕ. 1950 çулта унăн «Манăн завод» калавĕпе «Кĕмĕл тĕпренчĕк» ятлă повеçĕ уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухрĕç. Кунта эпир вăрçă вăхăтĕнче чăваш ялĕнчен хулана пырса завода ĕçе кĕнĕ çамрăк хĕрсемпе паллашатпăр. Фронтри паттăрсем тăшмана хăвăртрах çĕнтерччĕр тесен, тылра заводри станоксем умне чăваш хĕрĕсен те пĕтĕм вăйне парса тăрăш-

малла. Çĕнĕ ĕçе пикеннĕ хĕрсен пурнăçĕ çăмăл мар, тепĕр чухне ĕçĕ те ăнсах пымасть, çитменнине тата, ялти амăшĕсемпе тăванĕсем те, шкулта пĕрле вĕреннĕ тус-тантăшĕсем те тăтăшах аса килеççĕ. Çавăнпа та вĕсенчен уйрăлса хулана килнĕскерсен кăмăлĕ хавшанă самантсем те пулкалаççĕ. Анчах вĕсен шанчăкне çухатма юрамасть, станок умĕнчи ĕç пĕр тикĕс пымасан та, пуçа усас пулмасть. Совет патриотизмĕн хăватлăхне пула колхоз хĕрĕсем хăйсем халиччен пĕлмен заводри ĕçе вĕренсе алла илеççĕ. Вулакана пуринчен ытла Зина Урасметова кунçулĕ, унăн юратăвĕ, вăл çарти тусне кĕтсе илни, цехра чапа тухни хумхантарать.

Вулакансен асне кĕрсе юлнă тепĕр рабочи сăнарĕ — Мишша Убасников («Кĕмĕл тĕпренчĕк» повесть). Вăл та, Зина пекех, электроаппаратсем тăвакан заводра ĕçлет, ĕçре те, пурнăçра та хастар пулнипе Ирина ятлă хĕр-инженер кăмăлне çавăрать. Тен, юратнă хĕрне пулах вăл институтра вĕренме тытăнать, чăваш халăхĕн техникăлла интеллигенцийĕн представителĕ пулса тăрать. «Эсĕ инженер пулатăн» повеçри Микка Кулдаев вăрçă умĕн чугун çул çинче ĕçленĕ рабочисем хушшинчен тухнă пулсан, Мишша Убасников вăрçă хыççăнхи йывăр çулсенче ӳссе çитĕннĕ, пысăк ĕмĕтлĕ, тӳрĕ кăмăллă, пĕтĕм халăх телейĕшĕн тăрăшса малалла паттăррăн утакан пархатарлă çамрăк çын сăнарĕ.

А. Талвир 1964 çулта уйрăм кĕнекепе кăларнă «Никĕс» роман Чăваш республикинче пирвайхи пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче промышленность мĕнле аталанса пынине анлăн сăнласа кăтартнă. Çак произведенири сăнарсем — Кируш, Тодор Христов, Харьяс, Ятман, Ануш, Сергей Чигитов, Иштулов, Мурзайкин, Анна Мурзайкина — чăваш рабочи класĕн кунçулне революци хыççăнхи тапхăртан пуçласа паянхи куна çитиччен кăтартса паракан сăнарсем. Кунти кашни героях хăйне евĕр философилле тарăн шухăш-кăмăллă пулса тухнă. Вĕсене пурне те пĕр тĕп идея — яланах коммунизм обществи тăвакансен малти ретĕнче пулас ыра шухăш пĕрлештерсе тăрать.

Алексей Талвир пултарулăхĕнче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи темипе çырнă произведенисем те пысăк вырăн йышăнаççĕ. Хаяр тăшманпа çапăçнă çулсенче писатель взвод командирĕ, политрук, «Комсомольская правда» хаçатăн çарти корреспонденчĕ пулнă, совет салтакĕсен фронтри паттăрлăхне сăнласа кăтартакан статьясемпе очерксем нумай çырнă («Пире çĕнтереймĕн», «Сталин-

градра» т. ыт. те). Вăрçă вăхатĕнче пирĕн рабочисем, фронта пулăшас тесе, çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçленине вăл «Манăн завод», «Каçик», «Араскал» калавĕсенче питĕ лайăх çырса кăтартнă.

Кăçал А. Талвирăн «Вăрçăччен, вăрçăра, вăрçă хыççăн» ятлă çĕнĕ повеçĕ уйрăм кĕнекепе тухрĕ. Кунта эпир Микка Кулдаевăн малашнехи кунçулне куратпăр, унăн тусĕсен — Сергей Храмцов, Ася, Даша, Надя Кашкарова, Тарас, Геннадий Воронцов, Шамиль Аглиуллин, Стемасов, Ухтайкин пурнăçĕсемпе паллашатпăр. Кĕнекери геройсем — вăтăрмĕшпе утмăлмĕш çулсенчи рабочисем, инженерсем, ученăйсем.

Совет влаçĕн малтанхи вăтăр çулĕ вăхăтĕнче совет халăхĕ тĕнче историйĕнче нихçан пулман хăрушă вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухрĕ, калама çук хаяр тăшмана çĕнтерчĕ, кайран вара, вăрçă амантса хăварнă хуçалăха ура çине тăратса, экономикăра, техникăра, наукăра улăппа утăмсем турĕ, Тăван çĕршыв ялавне чи çӳле çĕклерĕ. Çакнашкал хăватлă ĕçсене паттăррăн хутшăнса чапа тухнă çынсем пирĕн хушăмăрта, хамăр таврарах, пурăнаççĕ. Çавсен кулленхи пархатарлă ĕçне-хĕлне халаллананă та ĕнтĕ А. Талвир хăйĕн çĕнĕ кĕнекине. Чăваш рабочи класĕн юрăçи, паллах, урăхла тума та пултарайман.

А. Талвир хамăрăн аслă саманапа, тăван халăхăн паттăр ĕçĕсемпе тан утакан писатель-коммунист. Çакă вăл унăн произведенийĕсенче те, халăх хушшинчи ĕçе активлă хутшăннинче те яр-уççăн палăрса тăрать.

Пурнăçра утмăл тултарнă, литературăра хĕрĕх çул ĕçленĕ Алексей Филиппович Талвир юлашки вăхăтра агрегат завочĕпе тачă çыхăну тытать, кунпа пĕрлех Шупашкар ГЭСне тăвакан рабочисемпе инженерсем патĕнче те тăтăшах пулать. Ку, паллах, çĕнĕ кĕнеке çураласса пĕлтерет. Эппин, ăна çĕнĕ хавхаланупа ăнăçлă та тухăçлă ĕçлеме вăрăм кунçул сунар!

*1969.*

## ДРАМАТУРГ, ПОЭТ, ЮПТАРУÇĂ

Александр Дмитриевич Кăлкан — чăвашсен хальхи паллă драматургĕ, поэчĕ, юптаруçи. Юлашки çулсенче вăл прозăллă произведенисем те чылай çырчĕ.

А. Кăлкан 1911 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче Тутар

республикинче, Пăва районĕнчи Çĕнĕ Мертлĕ ялĕнче çуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухсан, вăл Упири икĕ сыпăклă шкулта икĕ çул хушши вĕреннĕ, унтан Хусанти чăваш педтехникумне куçнă. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн пулас паллă писатель сăвă-юрăсем çырма тытăнать, вĕсене литература кружокĕнче хăй пекех тăван чĕлхепе литературăна юратакан студентсене вула-вула парать.

Астăватăп-ха: эпир, кĕçĕн группăсенче вĕренекенсем, клубра е педтехникум садĕнче çамрăк поэтсен сăввисене итлеме пухăнаттăмăр. Унта Александр Кăлкан, Александр Алга тата ытти сăвă çыракан студентсем час-часах хăйсен сăввисене вулатчĕç, тĕрлĕрен халап-юмахсем, легендăсем каласа паратчĕç, пĕр-пĕрне тавлашатчĕç, юлашкинчен чăваш халăх юррисене ушкăнпа юрлатчĕç. Студентсем патне литература кружокĕн занятийĕсене Н. Шелепи, П. Хусанкай, В. Рзай поэтсем пырса çӳренине те лайăх астăватăп. Çамрăк авторсене пирĕн паллă чĕлхеçĕ-профессор В. Г. Егоров, техникум преподавателĕ Д. Д. Данилов критик тăван чĕлхене юратма, унăн пуянлăхĕпе тĕплĕн усă курма вĕрентетчĕç. Çаксем пурте ĕнтĕ пултаруллă А. Кăлкан студента та хавхалантарнă. Вăл çырнă сăвăсенчен пĕри («Н. И. Шелепи поэта») 1928 çулта Хусанти «Утăм» альманахра пичетленнĕ.

Педтехникумран 1930 çулта вĕренсе тухсан, А. Калкан виçĕ çул учительре ĕçлет, унтан, 1933 çулта, Хусанти педагогика институчĕн чĕлхепе литература уйрăмне вĕренме кĕрет. анчах сывлăхĕ начарланнă пирки икĕ çул вĕреннĕ хыççăн каллех яла таврăнать, Аксу районĕнчи тулли мар вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме тытăнать... 1935 çулта А. Кăлкан яланлăхах Шупашкара куçса килет. Кунта вăл малтан Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн ответлă секретарĕ пулнă, «Пионер сасси» хаçатра ĕçленĕ, «Хатĕр пул» журнала редакциленĕ. 1941—1945 çулсенче Александр Дмитриевич Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕн начальникĕ пулнă, кун хыççăн чылай вăхăт хушши «Тăван Атăл» альманаха редакциленĕ, 1956—1958 çулсенче А. М. Горький ячĕпе хисепленекен Литература институчĕ çумĕнчи Литература аслă курсĕнче вĕреннĕ... Хальхи вăхăтра вăл — писатель-профессионал, тăван литературăна пуянхи пурнăç çинчен çырнă лайăх произведенисемпе пуянлатас тĕлĕшпе ырмиканми ĕçлекенсенчен пĕри.

А. Кăлкан ячĕ чăваш литературинче чи малтан 1936

çулта «Анисса» ятлă драмăна палăрчĕ. Унта автор XIX ĕмĕр вĕçленнĕ тапхăрти чăваш ялне, пуянсемпе чухăнсем хушшинчи класс кĕрешĕвне кăтартса парать. Пьесăри тĕп геройсем Аниссапа Кирук патша саманинчи пусмăрлăхпа танмарлăха хирĕç, ирĕклĕ пурнăçшăн, юратушăн кĕрешеççĕ. Вăл кĕрешӳ çăмăл мар. Ялта Садай, Пикментей йышши пуянсем иртĕхсе, чухăнсене пусмăрласа тарăхтарса пурăнаççĕ, вĕсем хĕсĕрленине парăнман Анисса хăйĕн савнине Кирука хӳтĕлесе вăхăтсăр вилет. Кирук, революцилле шахтерсен ĕçне Донбасра хутшăннăскер, яла таврăнсан ялти харам пырсене хирĕç халăхпа пĕрле кĕрешме тытăнать, пурнăçра тĕрĕслĕх шырать. Халăх телейĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн кĕрешме пуçлани, Аниссана чун-чĕререн юратни Кирук шухăш-ĕмĕтне, характерне çирĕплетет. «Вăхăт çитсен тĕрĕсси тупăнĕ-ха,— тет вăл юлташне.— Вăл çул кĕрешӳ çулĕ пулмалла».

«Анисса» пьесăри ĕлĕкхи чăваш ялĕн йăлисене, юмăçсен тискер ĕçĕсене, ĕçхĕрарăмĕн пусмăрти пурнăçне пысăк ăсталăхпа кăтартнă. Драматург халăх сăмахлăхĕпе вырăнлă усă курнине те палăртса хăварас пулать. Вăл кашни сăнарăн тĕрлĕ енĕсене, шухăш-кăмăлне, ĕçнехĕлне тĕрĕс уçса пама пулăшать.

«Анисса» пьеса хыççăн А. Кăлкан драматургире пикенсех ĕçлеме пуçларĕ. Ача-пăча валли вăл «Алим» пьеса çырчĕ (1940). Унтан «Нарспи» (1941), «Иван Кадыков» (1942), «Савăнăç», «Авлантарчĕç», «Маргарита таврать», «Çывăх çăлтăрсем», «Вăрман юрри» тата ыттисем те пĕрин хыççăн тепри пичетленсе тухрĕç, вĕсене вулакансем те, спектакль куракансем те хапăл туса йышăнчĕç.

«Авлантарчĕç» комедире ял пурнăçне, колхозниксен ĕçне-хĕлне кăтартнă, пурнăçра тĕл пулакан тĕрлĕрен йăх-яхсене тăрă шыв çине кăларнă.. «Çывăх çăлтăрсем» пьесăра чăваш ялĕнче çĕнĕ пурнăç, колхоз стройĕ çĕнтерсе тĕрекленсе пынине, «Вăрман юрри» драмăра çĕннипе кивви хушшинчи кĕрешӳре таса чунлă çынсем ертсе пынине, вĕсем тĕрĕслĕхшĕн кĕрешнине куратпăр эпир.

1957 çулта А. Кăлкан, «Иван Кадыков» пьесăна çĕнĕрен тĕплĕн пăхса тухса, «Октябрь хумĕ» тесе ят пачĕ. Унта вăл Октябрьти революципе граждан вăрçи çулĕнче ĕçхалăхĕн телейлĕ пурнăçĕшĕн паттăр кĕрешнĕ çынсем çинчен калать. Эсерсемпе буржуаллă националистсем шур гвардеецсен офицерĕсемпе, Ехрем хуçапа, вырăнти буржуазипе тата пуп таврашĕсемпе хура кавар

туса, Шупашкар Совечĕн революцилле ĕçĕсене путлантарса лартассишĕн кĕрешӳ пуçласа яраççĕ. Вĕсем Шупашкар Совечĕн председателĕ Иван Кадыковпа ытти членĕсем пирки тĕрлĕ элек сараççĕ, Совета тапанаççĕ, ĕçтăвком членĕсене арестлеççĕ.

Иван Кадыков яланах хулари ĕççыннисем хушшинче, вăл хăйĕн тĕрĕс те çулăмлă сăмахĕпе, хăюллă ĕçĕсемпе вĕсене контрреволюцилле буржуазие хирĕç, эсерсемпе буржуалла националистсене хирĕç кĕрешме хавхалантарса пырать. Анчах тăшман хаяр, хĕрхенӳсĕр, 1918 çулхи июнь уйăхĕнче вĕсем Кадыкова тискеррĕн вĕлереççĕ. Пьеса Кадыкован тусĕсем революци ĕçне ун пекех пĕтĕм чĕререн парăнса туса пыма, Совет влаçĕн тăшманĕсемпе виличчен кĕрешме, çĕнĕ пурнăçа юратма, çак пурнăçшăн яланах çирĕп тăма тупа тунипе вĕçленет.

Кадыков сăнарĕ — чăваш литературинче сăнласа кăтартнă революционерсенчен чи вăйли темелле. Ана эпир яланах кĕрешӳре куратпăр. Вăл парти хушнисене, В. И. Ленин кăтартăвĕсене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырать, 'икĕпитлĕ çынсене, спекулянтсене, йăпăлтисене тӳсме пултараймасть. Çав вăхăтрах ĕççыннисемпе вăл ырă та кăмăллă. Автор чăн-чăн халăх трибунĕн, ĕççынни массисен пысăк организаторĕн сăнарне ĕненмелле уçса парать.

Драма хурлăхлăн вĕçленет пулин те, вăл пессимизмла янăрамасть, пурнăç çине çута ĕмĕтпе пăхма, çĕнĕ самана çĕнтерессе çирĕп шанса тăма вĕрентет.

«Октябрь хумĕ» — сăвăласа çырнă историллĕ драма. Жанр енчен илсен, ку вăл чăваш литературишĕн çĕнĕ япала. Произведени чĕлхи пуян та илемлĕ, кашни герой хăй чĕлхипе, хăй сăмахĕсемпе калаçать. Чăваш фольклорĕне выраннă усă курни те драмăна вăйлатать, унăн витĕмлĕхне, çивĕчлĕхне ӳстерет.

Л. Кăлкан сатира жанрĕпе те ăнăçлă ĕçлет. Хăйĕн юптарăвĕсенче вăл çĕнĕ пурнăç тунă çĕрте чăрмантараканcене — наянсемпе харам пырсене, ултавçăсемпе йăпăлтисене, çăмăлттайсемпе тĕрлĕ тĕшмĕшсенчен тасалса çитеймен çынсене çивĕччĕн тăрăхласа питлет.

Нумайранпа ĕнтĕ Л. Кăлкан ача-пăча валли сăвăсемпе калавсем, пьесăсемпе повеçсем çырать. Унан «Эсĕ пысăк ĕнтĕ» (1953), «Сар Иван» (1956), «Печек сунарçă» (1963), «Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать», «Дорогой подарок» (1970) т. ыт. кĕнекисене уйрăмах палăртса хăвармалла. Вĕсенче автор ачасене Тăван çĕршыва юратма,

уншӑн яланах ҫирӗп тӑма, ӗҫре хастар, латтӑр пулма вӗрентет.

А. Кӑлкан вырӑсларан куҫарас тӗлӗшпе те ӑнӑҫлӑ ӗҫлет. Вӑл тӑрӑшнипех Чӑвашсен Государство академи театрӗн сцени ҫинче аслӑ ҫулпуҫӑмӑр Владимир Ильич Ленин чӑвашла калаҫма пуҫларӗ. Писатель-тӑлмачӑ В. И. Ленинӑн ҫивӗч сӑмахӗсене пысӑк ӑсталӑхпа куҫарнӑ. Этемлӗх генийӗн сӑнарӗ Чӑваш театрӗн ҫитӗнӗвӗ пулса тӑчӗ. Ку пьеса — Н. Погодинӑн «Пӑшаллӑ ҫын» пьеси. Кайран вара А. Кӑлкан унӑн «Третья патетическая», «Кремлевские куранты» пьесисене те чӑвашла куҫарчӗ. В. Шекспирӑн «Отелло», «Король Лир» трагедийӗсем, «Вуниккӗмӗш каҫ» комедийӗ чӑвашла кӑмӑллӑн та кӗвӗллӗн янӑраҫҫӗ. А. Кӑлкан А. Островскин «Василиса Мелентьева», «Женитьба Белугина», «На бойком месте», Н. Гоголӗн «Женитьба», К. Симоновӑн «Пӗр юрату историйӗ», Х. Вахитӑн «Малтанхи юрату», «Юлашки ҫыру», «Туй умӗн» драмисемпе комедийӗсене хамӑрӑн вулакансемпе куракансем патне ҫитерчӗ.

Чӑваш литературипе искусствине аталантарас тӗлӗшпе нумай ҫул хушши ӗҫлесе пысӑк ӳсӗмсем тунӑшӑн Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗ ӑна икӗ хутчен Хисеп грамотипе наградӑланӑ, 1945 ҫулта Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ ятне панӑ.

СССР правительстви Александр Кӑлкана икӗ медальпе наградӑланӑ.

Пирӗн паллӑ писатель 60 ҫул тултарчӗ. Нумай ӗҫлерӗ, нумай ҫырчӗ. Вӑл яланах тӑван халӑхпа пӗрле. Унӑн пултарулӑхӗ ҫултан-ҫул ӳссе, аталанса пырать. Пурнӑҫ шкулӗнче ӑс-хакӑлне туптаса ҫирӗплетнӗ писатель малашне те тӑван халӑха тивӗҫтерекен произведенисем ҫырӗ. Унӑн ӑсталӑхӗ те, вӑй-хӑвачӗ те ҫителӗклӗ-ха.

*1971.*

## ХАЛЬ ТЕ, МАЛАШНЕ ТЕ

Малтанхи хут эпӗ ӑна 1933 ҫулта ҫуллахи пӗр ӑшӑ та илемлӗ кун Атӑл хӗрринче тӗл пулнӑччӗ. Иксӗмӗр те ӳп чухне колхоз ҫамрӑкӗсен шкулӗнче ӗҫлекен ҫамрӑк учительсемччӗ, Шупашкара чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентекенсен канашлӑвне килнӗччӗ. Ҫав вӑхӑтсенелле «Трактор» (халӗ «Тӑван Атӑл») альманахӑн улттӑмӗш

кĕнекинче Мĕтри Кипекĕн «Темаль» ятлă калавĕ пичетленсе тухнăччĕ. Пурнăçа çутă куçпа курса çырнăскерне (çынсене, характерсене чăнах та чĕррĕн кăтартнăччĕ унта! )çав калава вулакансем тӳрех юратса пăрахнăччĕ. Эпир Петĕр Хусанкая шыраса тупрăмăр та калав пирки ун шухăшне ыйтса пĕлме шутларăмăр. Хусанкай та çамрăк автора хавхаланмалла ăшă сăмах каларĕ.

Хĕрĕх çул каялла пулса иртнĕччĕ пирĕн çав тĕлпулу. Унтанпа ĕнтĕ Мĕтри Кипек тухăçлă та ăнăçлă пултарулăх çулне утса тухрĕ. Кипек калавĕсемпе очеркĕсем, повеçĕсемпе романĕсем Шупашкарти хаçат-журналсенче нумай пичетленчĕç, уйрăм кĕнекен чăвашла та, вырăсла та тухсах тăчĕç. Вĕсенчен чылайăшне молдаванла, марилле, ирçелле, тутарла тата ытти чĕлхесене куçарса пичетлерĕç. Совет çыннисен тĕрлĕ енлĕ пуян пурнăçне, вĕсен чун-чĕрине, шухăш-кăмăлне кăтартса парас тĕлĕшпе паянхи чăваш прозинче Мĕтри Кипек чăннипех те малти вырăнсенчен пĕрне йышăнать.

Мĕтри Кипек писатель уйрăмах нимĕç фашисчĕсене хирĕç пынă хаяр вăрçăра совет салтакĕсемпе партизанĕсем епле паттăррăн, пурнăçа шеллемесĕр çапăçнине хăйĕн калавĕсенче, повеçĕсемпе романĕсенче питех те пултаруллă кăтартса пама пултарчĕ. Чылай произведенийĕнче вăл тăван çутçанталăк пуянлăхне упраса ӳстерекенсен сăнарĕсене асра юлмалла ӳкерсе кăтартрĕ.

Дмитрий Афанасьевич Кибек (Афанасьев) 1913 çулхи сентябрĕн 15-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнчи Вăрнар районĕнче Тимĕрчкасси ялĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Педтехникумран вĕренсе тухсан, виçĕ çул хушши вăл учительте ĕçленĕ, кайран, 1935 çултан пуçласа 1954 çулччен, Совет Çарĕнче службăра тăнă. Салтакра Мĕтри Кипек Киеври çыхăну çар училищинче вĕренет, каярахпа Çар юрисчĕсен академийĕнчен вĕренсе тухать. Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçă çулĕсенче писатель-салтак Калинински фронтра, Хĕвеланăç фронтĕнче фашистсене хирĕç çапăçать, кăшт пушă вăхăт тупăнсанах, совет салтакĕсемпе офицерĕсен çапăçури паттăрлăхĕ çинчен калавсемпе очерксем çырать. Вăрçă çулĕсенче çырнă чылайăх произведенийĕсем унăн — «Тăван çĕршывшăн», «Разведкăра», «Этем хакĕ» калавсем. Фронтрах, 1943 çулта, Мĕтри Кипек Коммунистсен партине кĕрет. Хальхи вăхăтра вăл Мускавра литература ĕçĕпе пурăнать.

Вăрçăччен Мĕтри Кипек колхоз пурнăçĕ çинчен, студентсемпе салтаксен пурнăçĕ çинчен вулакансен кăмăлне

каякан калавсем сахал мар çырнăччĕ. Вĕсен хушшинче уйрăмах «Ялта» (1937), «Лейтенант ывăлĕ», «Кочетков капитан» калавсене (1938), «Студентсем» повеçе (1941) т. ыт. те палăртас килет.

Вăрçă хыççăн çырнă произведенийĕсенчен унăнне вулакансем «Уйăх витĕр çул курăнать» (1963), «Çамрăк çын» (1964), «Хитре хĕрарăм» (1966) повеçĕсене, «Сунарçăсем» (1962), «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» (1968) романĕсене кăмăллаcа йышăнчĕç. Ку романсене Мускаври «Советский писатель» издательствăра вырăсла та куçарса кăларчĕç, çавна май вĕсем пĕтĕм совет халăхĕ патне çул тупрĕç.

1953 çултан пуçласа, Мĕтри Кипек сунарçă калавĕсен ярăмне пичетлесе пычĕ. Тăван çутçанталăка—хамăр вырăнсене, тискер кайăксемпе вĕçен кайăксене юратма вĕрентекен калавсене автор питĕ ăста та илемлĕ çырать. Çав çулсенчех вăл çутçанталăк тусĕсемпе тăшманĕсем çинчен пысăк повесть е роман çырса пăхма шут тытать, анчах ĕçленĕ майăн вăрман хуçалăхне хăй теплĕнех пĕлейменнине туйса илет. Мĕн тумалла? Писатель вара СССР Оборона министерствин пĕр сунар хуçалăхĕнче ĕçлеме тытăнать. Икĕ çулталăк хушшинче егерьсен коллективĕпе пĕрле вăл юхăннă хуçалăха кăтартуллă хуçалăх шайне çити çĕклет. Вăрман ĕçĕнче икĕ çул çутçанталăка сăнаса тĕпчени, хăйĕн пулас геройĕсемпе пĕрле алла-аллăн тытăнса ĕçлени каярахпа пĕтĕмпех «Сунарçăсем» романăн никĕсне хывăнать. Романра писатель илемлĕ сăнарсем урлă совет çыннисен хавхаланullă ĕçĕпе паттăрлăхне, тăван çутçанталăкăн тусĕсемпе хӳтĕлевçисене чĕррĕн кăтартма пултарнă, вĕсен чун-чĕрин илемне, пархатарлă ĕçĕсене ĕненмелле çырса панă.

Мĕтри Кипекĕн пултарулăхĕнче «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» роман уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Çак произведенишĕн вăл В. И. Ленин 100 çул, Чăваш АССРĕ 50 çул тултарнă май ирттернĕ республика конкурсĕнче иккĕмĕш преми илчĕ. Нумай планлă произведенире писатель Тăван Çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăра совет партизанĕсемпе Польша партизанĕсем тăшман тылĕнче (Польшăра) нимĕç фашисчĕсене хирĕç мĕн тери паттăррăн çапăçнине ĕненмелле те тарăннăн çырса кăтартнă.

Çултан-çул ӳссе пырать Мĕтри Кипекĕн писатель авторитечĕ. Малта — çĕнĕ калавсем, повеçсем, романсем. Вулакан шанать — ӳлĕмрен те пирĕн вăхăтри çынсем

çинчен хальччен хи пекех пысăк идейăллă илемлĕ произведенисем çырĕ вăл. Халь те, малашне те эпир писательрен пирĕн саманана тивĕçлĕ лайăх кĕнекесем кĕтетпĕр.

*1973.*

## ОКТЯБРЬ ТАНТĂШĔ

1967 çулхи сентябрь уйăхĕнче, Канаш районĕнчи пĕр колхозра чăваш литературин эрни пынă кунсенче, çакăн пек тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ. Чăваш писателĕсемпе пĕрле кунта Ленинградри оперăпа балет театрĕн артисчĕ Николай Шпекторов пынăччĕ. Вăл совет композиторĕсен, вырăс, чăваш халăхĕсен юррисене юрларĕ. Çак артист клуб сцени çине тухрĕ те Герман Лебедев композитор Василий Давыдов-Анатри сăввипе çырнă «Тальянка» юрра пуçларĕ:

Алла тытрăм çĕн тальянка,
Тăсса ятăм пĕрмине.
Янăратăр кĕмĕл планка,
Савăнтартăр хĕрсене...

Клуба пухăннă çамрăксем чăтаймарĕç, вĕсем те артистпа пĕрле çак юрра шăрантарма тытăнчĕç. Сцена çине юрă авторĕ Василий Давыдов-Анатри поэт тухрĕ. Вăл хăйĕн çĕнĕ сăввисене вуларĕ. Çамрăксем унтан та юрă ыйтрĕç. Поэт чăтаймарĕ, юрласа ячĕ...

Чăнах та, В. Давыдов-Анатри поэта пирĕн тăван халăхăмăр лайăх пĕлет. Унăн сăвви-юррисене вулакансем чун-чĕререн кăмăллаççĕ. Мĕншĕн тесен В. Давыдов-Анатри — хальхи пурнăçпа тан пыракан поэт. Вăл Тăван çĕршыв-аннемĕре, Коммунистсен партине, Совет çыннисен ĕçне-хĕлне, халăхсен туслăхне, çамрăксен паттăрлăхĕпе хăюлăхне мухтаса çырать. Поэт пултарулăхĕнче аслă çулпуçăмăр Ленина халалласа çырнă сăвă-юрăсем паллă вырăн йышăнаççĕ.

Эпир тав тăватпăр сана, аслă Ленин,—
Аркатрăн эс, ватрăн асап тĕнчине.
Ĕçхалăхĕн кĕтнĕ пĕртен-пĕр çын-гений,
Пире парнелерĕн телей уççине,—

тет вăл хăйĕн Ленин çинчен çырнă пĕр сăввинче.

Василий Иванович Давыдов-Анатри—Октябрь тантăшĕ. Вăл 1917 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче, Патăръел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче, хальхи Первомайскинче, вăтам хресчен килйышĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ, ĕлĕкхи саманари ытти çынсем пекех, хутла пĕлмен çынсем пулнă. Анчах та вĕсем хăйсен ачисене вĕрентес, пурнăç çулĕ çине кăларас çутă ĕмĕтпе пурăннă. Совет самани вара вĕсен çак ырă ĕмĕтне пурнăçлама пысăк майсем пачĕ. В. Давыдов-Анатри ялти шкултан, хаçат шкулĕнчен, учительсем хатĕрлекен Чăваш государство институтĕнчен вĕренсе тухнă. 1940 çулта Совет Çарне кайнă, унтан таврăнсан Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакторĕ, парти Чăваш обкомĕн инструкторĕ пулнă. Чăваш радиокомитетĕнче, «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнче, Чăваш АССР государство издательствинче ĕçленĕ... Хальхи вăхăтра вал литература ĕçĕпе пурăнать...

В. Давыдов-Анатри ялти шкулта вĕреннĕ çулсенчех сăвăсем çырма пуçлать. Вăл кун çинчен хăйĕн пĕр произведенийĕнче çапла каласа парать: «Пирĕн ялта, Аслă Арапуçĕнче, чăвашсен паллă поэчĕ, чĕлхе ăсти Митта Ваçлейĕ çуралса ӳснĕ. Митта Ваçлейĕн шăллĕсем — пурте ман туссем пулнă...

Поэтăн Якку ятлă шăллĕ манпа пĕрле вĕренетчĕ. Вăл, пиччĕшĕ пекех, сăвăсем хайлатчĕ. Вăл çырнă йĕркесем шăрçа пек пулса пыратчĕç. Шкулта пире асăрхарĕç пулас, стена хаçачĕ кăларма суйларĕç. Якку—сăвăç, эпĕ—художник... Хаçат уйăхра пĕрре тухатчĕ. Илемлĕ, лайăх кăлараттăмăр ăна. Пĕррехинче эпĕ те çуркунне çинчен çĕрĕпе сăвă çырса лартăм.

Çӳлте, тӳпере,
Сар хĕвел хĕртет.
Умра — çуркунне,—
Шур юр ирĕлет.
Ачасем пурте
Тулта, урамра,
Ĕçлеççĕ хĕрсе,
Лартаççĕ йăмра.
Шăнкăрч савăнса
Юрă шăрать,
Çунатне çапса
Пире саламлать...

Ку вăл ман малтанхи чун хĕлхемĕ пулчĕ пулас. Çав хĕлхеме сӳнме памарăм вара.

Эпĕ тăван чĕлхене, тăван литературăна ачаранах питĕ юрататтăм. Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкайпа Митта Ваçлейĕ, Уйăп Мишшипе Илле Тукташ, Яков Ухсайпа Нестер Янкас тата ытти поэтсем çырнисене каçса кайса вулаттăм, вĕсем майлă çырма тăрăшаттăм...»

Поэтăн пысăкрах произведенийĕсенчен «Чеменпе Мерчен», «Шуршăл каччи» поэмăсене, сăвăласа çырнă «Илле-паттăр» юмаха, «Вутăш-хĕр» легендăна палăртмалла.

«Чеменпе Мерчен» поэмăра автор чăваш халăхĕн Октябрь революцичченхи йывăр пурнăçне кăтартса парать. Унта тарçăра тертленсе пурăннă чухăн хресчен ачи Чемен мĕнле ӳссе пыни, революци çынни пулса тăни вулакансен куçĕ умне уçăмлăн тухса тăрать. Автор çак поэмăна çырнă чух халăх сăмахлăхĕпе пĕлсе, анлăн усă курнă Унти юрăсене вăл параллелизм меслечĕпе çырнă. Поэмăн чĕлхи илемлĕ, çăмăл вуланать.

Акă:

Мерчен Чемен çинелле
Пăхрĕ йăшăн, йăл кулса.
Сар уйăх та, савăнса,
Илчĕ йăлтăр çуталса.
— Куртăм сана вăйăра
Хĕрĕх ача хушшинче.
Юлтăн эсĕ асăмра,
Юлтăн чĕрем варринче...

Поэмăра тăршшĕпех пĕр кĕвĕ, халăх вăй-халне мухтани илтĕнсе тăрать:

Пурте пĕрле кар тăрсан —
Вăйли çук-мĕн халăхран.

Чăнах та, халăх çĕнтерет. Чеменпе Мерчен те хăйсем çуралнă яла çĕнтерӳпе таврăнаççĕ. Поэма халăха, çĕршыва мухтакан йĕркесемпе вĕçленет:

Çур шыв вăйлă тееççĕ,
Унтан вăйли мĕскер пур?
Паттăр халăх вăйĕ пур,
Хамăр Тăван çĕршыв пур...

Вырӑссен паллӑ поэчӗ Сергей Наровчатов ку произведение тивӗçлӗ хак парса çапла çырать: «Поэма по-настоящему народна. Построенная на фольклорном материале, она в глазах широкого читателя хорошо представит чувашскую поэзию».

«Чеменпе Мерчен» поэма 1946 çулта лайӑх произведенисем çырас тӗлӗшпе ирттернӗ республикӑри конкурсра 3-мӗш преми илме тивӗçлӗ пулнӑ.

«Шуршӑл каччи» ятлӑ лирикӑлла поэмӑра В. Давыдов-Анатри хамӑр янташӑмӑр Андриян Григорьевич Николаев космонавтӑн пурнӑçне, унӑн паттӑр ӗçне çырса кӑтартнӑ.

В. Давыдов-Анатри юрӑсем валли сӑвӑсем çырас тӗлӗшпе уйрӑмах ӑнӑçлӑ ӗçлет. Вӑл чӑваш композиторӗсемпе пӗрле çырнӑ «Тӑван партие — мухтав», «Чечекленет чӑваш çӗршывӗ», «Тӑвансемӗр, тав сире», «Телейлӗ туслӑх», «Эпир, маттур хӑмлаçӑсем», «Кӗмӗл уйӑх хӑпарать», «Сарпике» тата ытти нумай юрӑсене хуласемпе ялсенче, шкулсемпе уявсенче — пур çӗрте те илтме пулать. Çакӑ вӑл поэта, пире те савӑнтарать. Ахальтен мар пулӗ поэт хӑйӗн пӗр сӑввинче çапла çырать:

Шутларӑм эпӗ пӗр-пӗччен:
Мӗскер юлать эпир вилсен.
Юлаççӗ пирӗн сӑвӑсем,
Савса юрланӑ юрӑсем,
Çӗршыв-аннешӗн çырнисем,
Чунта çунат ӳсертнисем.

В. Давыдов-Анатри пултарулӑхӗнче хамӑр Тӑван çӗршыври халӑхсен туслӑхӗ çинчен çырнӑ сӑвӑ-юрӑсем те паллӑ вырӑн йышӑнаççӗ. Поэт çӗршывӑн хӑватне халӑхсем хушшинчи çирӗп туслӑхра курать, уншӑн хӑй те чунчӗререн савӑнать.

Вырӑспала вырӑсла,
Тутарпала тутарла.
Пултаратӑп калаçма,
Яр уçатӑп чунӑма.
Чӗлхем пӑртак такӑнсан,
Кӑштах картне лармасан,
Мана хатӗр пулӑшма,
Мана хатӗр ал пама
Вырӑс тусӑм вырӑсла,
Тутар тусӑм тутарла,—

тет вăл хăйĕн пĕр сăввинче. Лайăх, тĕрĕс каланă поэт.

Çĕршыври халăхсен туслăхĕ çинчен поэт çул çӳренĕ чух çырса пынисене те ырăпа асăнмасăр иртсе кайма çук. Унăн Казахстанпа Азербайджан, Дагестанпа Армени республикисем, Ярославль çĕрĕпе вĕсен ĕçчен те сăпайлă çыннисем çинчен çырнисене вулакансем кăмăллаççĕ.

Çĕр çинчи пурнăçа сыхласа хăварас тесен,—мир кирлине поэт лайăх ăнланать. Вăл планета çинчи пĕтĕм ырă шухăш-кăмăллă çынсене миршĕн тăма, кĕрешме чĕнет.

... Юнлă вăрçă каймасть
        асăмран ĕмĕрне.
Вăл хăварчĕ суран
        кашни çын чĕрине.
Эп таятăп пуçа
        вилнисен умĕнче:
Пултăр Мир ĕмĕрех
        Çĕр-планета çинче!—

тет поэт хăйĕн пĕр сăввинче.

В. Давыдов-Анатри мирпе туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе пархатарлă ĕçсем тунăшăн 1957 çулта Чăваш республикинчи Çамрăксен Пĕрремĕш фестиваль лауреачĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Мире сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Комитечĕ ăна 1973 çулта Хисеп грамотипе награпăланă.

В. Давыдов-Анатри сатирăллă сăвă-юрăсем те сахал мар çырчĕ. Вĕсенчен уйрăмах «Питлет ялйышăм Çтаппана», «Çитет», «Сăмах пур ман», «Пырать пĕр каччă», «Ан тар, Антун», «Вĕçкĕн Иван мухтанать», «Пĕтрĕç йăпăлтайкинсем» тата ытти сăвăсене те палăртма пулать. Вĕсенче поэт пурнăçри усал-тĕселсене, ĕçрен таракансене, ĕçкĕпе иртĕхекенсене, патшалăха çаратакансене питлет.

Нумай шавлатăн, калаçан,
Пулман ĕçӳшĕн мухтанан.
Кичем пире сан пек çынпа,
Пуш параппан çапаканпа.
Халькхи хитре саманара,
Çын хисепре — ĕçне кура,—

тесе çырать вăл «Пуш параппан» сăввинче.

В. Давыдов-Анатри — шкул ачисен çывăх тусĕ. Вăл

çырнă «Илемпи», «Юмахсем» тата ытти кĕнекесене те ачасем юратса вулаççĕ.

Поэт юлашки çулсенче проза жанрĕпе те ĕçлерĕ. Вăл ачасем валли çырнă пĕчĕк калавсене пĕр çĕре пухса «Эпир — пĕртăвансем» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Кĕнекери калавсен тематики пуян. Вĕсенче эпир совет ачисен вĕренĕвне, ĕçне-хĕлне, вĕсем çĕршыв-аннемĕре чун-чĕререн юратнине лайăх куратпăр.

Поэт хăйĕн ача чухнехи пурнăçĕ çинчен «Сатин кĕпе» повесть çырчĕ. Автор унта, хăй пурнăçĕнчи тĕслĕхсемпе усă курса, совет саманинче чăваш ачи мĕнле ӳссе, вăй-хал илсе пынине, аслă çул çине тухнине çырса кăтартнă.

В. Давыдов-Анатри — хальхи çĕнĕ самана, хĕрӳ пурнăç юрăçи. Вăл хăйĕн пĕтĕм ĕçне-хĕлне Тăван çĕршывпа, тăван республикăпа çыхăнтарнă. Ана яланах рабочисем, ял ĕçченĕсем, шкул ачисем хушшинче курма пулать. Вăл хăйĕн пурнăçа юратма вĕрентекен сăвви-юррисемпе вулакансене хавхалантарать, çĕнĕ çĕнтерӳсем патне паттăррăн утма чĕнет.

Чăваш совет илемлĕ литературине аталантарас тата пропагандăлас тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 1967 çулта В. Давыдов-Анатрие Чăваш АССР культурин тава тивĕçлĕ работникĕ ятне пачĕç. Поэт В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул тултарнă ятпа кăларнă медале те илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Çапла ĕнтĕ, поэт Çĕршывпа пĕрле, халăхпа пĕрле хăюллăн малалла утать. Вăл хăйĕн пархатарлă пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çапла çырать:

Иртрĕç иккен кунсем, çулсем,
Кĕмĕлленеç çӳç пĕрчисем.
Анчах патвар тапать чĕрем,
Чунта çаплах — çурхи илем!

*1967—1974.*

## ХУДОЖНИК, ПИСАТЕЛЬ, ЖУРНАЛИСТ

Пĕррехинче эпĕ Киевран «Украина» ятлă илемлĕ журнал илтĕм. Тĕрлĕ сăрпа тухса тăракан обществăпа политика тата литература журналĕ вăл. Ана хальхинче пĕтĕмпех иккен хăйсен çĕршывне Америка агрессорĕсенчен хӳтĕлесе кĕрешекен Демократиллĕ Вьетнам Республики-

не халаллана — Вьетнам халăхĕн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен калакан материалсенчен пухса тунă. Журналăн çак номерĕ çинчен Украинăри хаçат-журналсем, çавăн пекех «Правда» хаçат та ырă сăмахсем каларĕç. Содержанийĕпе те (очерксем, калавсем, заметкăсем), илемлĕхĕпе те (фотоÿкерчĕксем, сăрлана картинăсем) номер чăннипех те питĕ пуян. Ана йăлтах пирĕн ентеш Петр Чичканов — Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ художникĕ, СССР журналисчĕсен Союзĕн, СССР писателĕсен Союзĕн членĕ, редакци хушнипе ятарласа паттăр Вьетнам çĕрне кайса килнĕ хыççăн хатĕрленĕ. «Хам аллă çул тултарас умĕн Вьетнам халăхĕн пурнăçĕ çинчен ятарласа çавнашкал номер кăларма май килнĕшĕн эпĕ питĕ телейлĕ пултăм»,— тесе çырать П. Чичканов, çак журналăн художествăллă редакторĕнче ĕçлекенскер.

Петр Николаевич Чичканова эпĕ вăтăр çул ытла пĕлетĕп ĕнтĕ. Вăл 1922 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнчи Канаш районĕнче çуралнă. Çичĕ çул вĕренмелли шкул пĕтернĕ хыççăн Чичканов 1937—1941 çулсенчĕ Улатăрти художествăпа гравюра училищинче, унтан Шупашкарти художество училищинче вĕреннĕ. Çав çулсенче вăл студентсен стена хаçачĕсене, алăпа çырса кăларакан журналĕсене илемлетнĕ, унпа пĕрлех «Пионер сасси», «Çамрăк колхозник» хаçатсенче хăйĕн пĕрремĕш сăввисемпе очеркĕсене пичетленĕ.

1942 çулхи февраль уйăхĕнче çамрăк художника Совет Çарĕн ретне илеççĕ, Ленинградри артиллерипе техника училищинче кĕске курсра вĕреннĕ хыççăн фронта ăсатаççĕ. Нимĕç фашисчĕсене хирĕç вăрçăра паттăррăн çапăçнăшăн П. Чичканова правительство Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе икĕ хутчен, «Паттăрлăхшăн» медальпе, «Берлина илнĕшĕн», «Варшавăна ирĕке кăларнăшăн» медальсемпе наградăланă. Фронтрах вăл Коммунистсен партийĕн ретне кĕнĕ.

Вăрçă чарăннă хыççăн П. Чичканов художник-журналиста çар хаçачĕн редакцине ĕçлеме яраççĕ. 1950 çулхи июнь уйăхĕнчен пуçласа паян кунччен вăл «Украина» журналăн редакцийĕнче ĕçлет.

Киевра пурăнма пуçланă малтанхи кунсенчен тытăнсах Петр Николаевич чăваш совет поэзине пуçарса янă поэт-революционерăн Çеçпĕл Мишшин Украинăри пурнăçне, ĕçне-хĕлне, творчествине тĕпчеме пикенет. Çакна тума ăна украина писателĕсем П. Тычина, М. Рыльский, Ю. Яновский, Ю. Збанацкий, Çеçпĕл Мишшине сывăх

пĕлнĕ ытти ҫынсем нумай пулăшаҫҫĕ. Чылай ҫул тăрăшса ĕҫленĕ хыҫҫăн П. Чичканов вара Ҫеҫпĕл Мишши ҫинчен «Кăвар чĕре» ятлă роман-хроника ҫырса кăларать.

П. Чичканов чăваш литературине Украинăра, украина литературине Чăвашра пропагандăлас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕҫлет. Вăл Шевченкăн, Котляровскин, Тычинăн, Панчăн, Кучерăн тата ытти паллă украина писателĕсен произведенийĕсене чăвашла нумай кăларчĕ. Украина чĕлхипе вара Ҫеҫпĕл Мишшипе П. Хусанкай ҫинчен, хальхи вăхăтри чăваш поэзийĕ ҫинчен статьясем пичетлерĕ, Шевченко пурнăҫĕпе ҫыхăннă «Тарас» ятлă легенда-новелла ҫырчĕ. Ҫавăн пекех П. Чичканов Ҫеҫпĕл Мишши сăввисене украинла куҫарса уйрăм кĕнеке кăларас ĕҫе хастаррăн хутшăнчĕ.

Писатель, журналист, художник, терĕмĕр П. Чичканова. Апла ҫеҫ те мар иккен! Нумаях пулмасть вăл кинора артист ролĕсене те самай ăста выляса кăтартрĕ («Ҫеҫпĕл» фильмра — чекиста, «Захар Беркут» фильмра — тăлмача).

Пирĕн ентешĕн обществăлла пурнăҫри ĕҫĕсене, литературăпа художествăри пултарулăхне Чăвашра пысăк хак пачĕҫ. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ ăна икĕ хутчен Хисеп грамотипе наградăларĕ. 1969 ҫулта вăл Чăваш АССР тава тивĕҫлĕ художникĕн ятне илме тивĕҫлĕ пулчĕ.

П. Чичканов юлашки вăхăтра Демократиллĕ Вьетнам Республики ҫинчен пысăк очерк ҫырчĕ. Халĕ вăл «Аистсем каяллах таврăнаҫҫĕ» роман ҫырать. «Ҫулăм ăшĕнчи ҫынсем» кĕнекине те хатĕрлесе ҫитернĕ ĕнтĕ.

Петр Чичкановăн пултарулăх планĕсем пысăк. Пурăнăҫра кулленех ырми-канми ĕҫлеме хăнăхнăскер, СССР халăхĕсен туслăхĕ ҫинчен те вăл хĕрсех ҫĕнĕ произведенисем хайлать. Чунтан-чĕререн ҫирĕп сывлăх, ĕҫре ăнăҫу сунас килет ăна пирĕн.

*1972.*

## ПИРĔН ҪЫВĂХ ТУС

Украинсен паллă писателĕ, Чăваш АССР культурин тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ, Чăваш комсомолĕн Ҫеҫпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премийĕн лауреачĕ Юрий Олиферович Збанацкий 60 ҫул тултарчĕ.

Анлă та пархатарлă пулчĕ пирĕн çывăх тусăмăрăн Юрий Збанацкин пурнăçĕпе творчествин çулĕ. Вăл 1914 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Черниговщинăра чухăн хресчен килйышĕнче çуралнă. Педагогика техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ялти шкулта малтан учительте, унтан директорта ĕçленĕ, кайран, пединститут вĕренсе пĕтерсен, районри çутĕç пайĕн заведующийĕ пулнă.

Вăрçă умĕн Юрий Олиферовича Остерти парти райкомне ĕçлеме илеççĕ, районта тухса тăракан «Колхозлă ял» хаçат редакторне лартаççĕ. 1939 çултанпа вăл—Коммунистсен партийĕн членĕ. Сăмах май каласан, шăпах çав çулсенче ĕнтĕ пулас писатель чăвашсен Çеçпĕл Мишшин вил'тăприне шыраса тупать, ун çинчен материалсем пухма тытăнать. Анчах унăн çак пархатарлă ĕçне вăрçă татса хурать.

1941 çулхи август уйăхĕнче Ю. Збанацкий Остер районĕнчи партизансемпе пĕрле пĕрремĕш хут нимĕç фашисчĕсене хирĕç çапăçăва кĕрет. 1942 çулхи январь уйăхĕнче ăна полицайсем тыткăна илеççĕ те Чернигов тĕрмине хупса хураççĕ, унтан Яцоври концлагере ăсатаççĕ. Çав уйăхсенче мĕн тӳссе ирттернине писатель кайран хăйĕн чуна тыткăнлакан «Пĕртен-пĕр çыннăм» повеçĕнче тĕплĕн каласа парать. Яцоври концлагерьтен тарсан, Ю. Збанацкий партизан отрячĕ йĕркелет. Çур çул хушшинчех 1000 çынна çити ӳссе каять çак отряд. 1943 çулхи март-апрель уйăхĕсенче Збанацкий партизанĕсем Деснапа Днепр хушшинче вырнаçнă нимĕç çарĕсене хăватлăн аркатаççĕ. Фашистла оккупантсене хирĕç паттăр çапăçнăшăн, партизансен соединенине пултаруллă ертсе пынăшăн Ю. Збанацкие Совет Союзĕн Геройĕ ятне параççĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă пирĕн паттăр Совет Çарĕ, совет халăхĕ фашистла Германие çĕнтернипе вĕçленчĕ. Вăрçă хыççăнхи малтанхи çулсенче Ю. Збанацкий Украинăри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ çумĕнче Аслă Отечественнăй вăрçă историне тĕпчемешкĕн уçнă комиссире ĕçлет, унтан ăна Киеври М. Горький ячĕпе хисепленекен педагогика инстиутĕнче декан пулма суйлаççĕ. Хальхи вăхăтра Ю. Збанацкий — Украина писателĕсен Союзĕн Правлени председателĕн заместителе, писательсен Союзĕн Киеври уйрăмĕн председателĕ.

Украинăри литература вăйĕсен ывăнма пĕлми организаторе, илемлĕ сăмахăн пысăк ăсти — акă мĕн енĕпе лайăх пĕлетпĕр эпир Юрий Збанацкие. «Кăйкăр вăрманĕн вăрттăнлăхĕ», «Вăрман шики», «Ырă çынсем хушшинче»,

«Илемлĕ сас», «Тинĕс чарланĕ», «Тыр вырма тухас умĕн», «Çеçпĕл», «Хумсем» — унăн çак повеçĕсемпе романĕсене вуламан çын сайра пулĕ пирĕн хушăра. Вĕсене писатель совет халăхĕн вăрçăри тата мирлĕ ĕçри паттăрлăхне, хастарлăхне, совет халăхĕ хăйĕн Тăван çĕршывне, Коммунистсен партине чунтан юратнине, парăннине кăтартса парать.

Ю. Збанацкий тăванла украинăпа чăваш халăхĕсене çывăхлатса туслаштарас, Украина ССРĕпе Чăваш АССРĕнчи литературăпа искусство деятелĕсем хушшинчи творчествăлла çыхăнусене аталантарас тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕçсем турĕ. Унăн литературăри пултарулăхĕнче чăваш совет поэзине пуçарса яракан Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕпе творчествине, çавăн пекех чăваш литературинчи ытти произведенисене тĕпчес ĕç пысăк вырăн йышăнать. Ю. Збанацкин нумай произведенийĕнчен «Çеçпĕл» романĕпе «Кăйкăр вăрманĕн вăрттăнлăхĕ» повеçне, чылай калавĕсемпе очеркĕсене чăвашла куçарса кăларнă.

Чăваш комсомолĕн Çеçпĕл Мишши ячĕпе хисепленекен премине илме тивĕçлĕ пулнă «Çеçпĕл» роман пирки уйрăммăн ырă сăмах каласа хăварас килет. Кунта пултарулла писатель чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕн Çеçпĕл Мишшин чĕркĕмĕл пек таса чун-чĕрине, коммунистла çирĕплĕхне, принциплăхне, çав вăхăтрах ачаш та çепĕç кăмăл-туйăмне калама çук ăста уçса пама пултарнă. Çавăн пекех эпир Киеври А. Довженко ячĕпе хисепленекен илемлĕ фильмсен студийĕ 1970 çулта «Çеçпĕл» ятлă фильм кăларнăшăн та пирĕн çывăх тусăмăра, Юрий Збанацкие, (сценарийĕ унăн) чун-чĕререн тав тăватпăр. Збанацкий пуçарăвĕпех Украинăра Чернигов облаçĕнчи Остер хулинче Çеçпĕл Мишшин палăкне лартрĕç. Кунта Çеçпĕл ячĕпе хисепленекен урам, клуб, библиотека пур. Остерта тăтăшах украинăпа чăваш писателĕсем, хамăр республикăри пионерсемпе комсомолецсем пырса кураççĕ. Юрий Збанацкий редакцилеипе чăваш писателĕсен произведенийĕсене украинла уйрăм кĕнекен («Çурхи çил») пичетлесе кăларчĕç.

Чăваш республикине Ю. Збанацкий тăтăшах килсе çӳрет. Уйрăмах пирĕн пата вăл 1970 çулта килсе кайни асра тарăн йĕр хăварчĕ. Ун чухне Шупашкарта Киев кинематографисчĕсем «Çеçпĕл» фильм ӳкеретчĕç. Ю. Збанацкий поэтăн амăшĕ патĕнче пулчĕ, Çеçпĕл çуралнă яла, вăл вĕреннĕ шкула кайса килчĕ, рабочисемпе колхозниксем умĕнче тухса каларĕ, И. Я. Яковлев ячĕпе

хисепленекен педагогика институтенчи студентсемпе тĕлпулу ирттерчĕ. Пур çĕрте те ăна чи хаклă та çывăх хăна вырăнне хурса йышăнчĕç.

КПСС Чăваш обкомĕ, ЧАССР Верховнăй Совет Президиумĕпе Министрсен Совечĕ 1971 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх Юрий Олиферовича «Чăваш АССРĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхăн Хисеп Кĕнекине» кĕртсе хăварни те пире чĕререн савăнтарать.

Ю. Збанацкин партипе совет халăхĕ умĕнчи пархатарлă ĕçĕсене Совет правительстви тивĕçлĕ хак панă. Унăн кăкăрне Ленин орденĕ, Совет Союз Геройĕн Ылтăн Çăлтăрĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, Отечественнăй вăрçă партизанĕн 1-мĕш степеньлĕ медалĕ тата ытти нумай медаль илемлетсе тăраççĕ. Литературăри ĕçĕсемшĕн ăна Украина ССРĕн Т. Шевченко ячĕпе хисепленекен премине, Украина комсомолĕн Н. Островский ячĕпе хисепленекен премине панă.

Юрий Збанацкин пултарулăх вăй-халĕ иксĕлми хĕрӳллĕн вĕресе тăрать. Вăл çине тăрсах совет халăхĕн тĕрлĕ енлĕ пуян пурнăçне кăтартакан çĕнĕ произведенисем çырать, хăйĕн мĕнпур пĕлĕвĕпе пултарулăхне совет çыннисене коммунизмла воспитани парас ĕçе парать. Ю. Збанацкин кашни кĕнекинчех совет патриотизмĕн, пролетарилле интернационализмăн, халăхсен туслăхĕн идейи хĕлхемленсе тăрать.

*1974.*

## «ЭП ҪАЙĂКСЕМ ВĔÇТЕРĔП ҪĂКĂРТАН»

Поэзие юратакан хаклă тусăмăр!

Сан умăнта акă — «Эп кайăксем вĕçтерĕп кăкăртан» ятлă пĕчĕк кăна кĕнеке. Авторĕ — пушкăрт халăхĕн паллă поэчĕ Мустай Карим. Ăна нумай-нумай вулакансем лайăх пĕлеççĕ, юратаççĕ: хамăр çĕршывра та, çĕршыв тулашĕнче те. Çак юратăва вăл хăйĕн янкăр тăрă çăлкуç пек хăватлăн тапса таракан илемлĕ, шухăш-кăмăлĕпе пуян та тарăн пултарулăхĕпе хамăрăн асран кайми çĕршыва, унăн пĕр туслă çемьери халăхĕсене хĕрӳллĕн юратма чĕнекен çутă та таса пултарулăхĕпе тивĕçлĕ пулчĕ.

Мустай Карим (Мустафа Сафич Каримов) 1919 çулхи октябрĕн 21-мĕшĕнче хресчен килйышĕнче çуралнă.

Вăл мĕн ачаран халăх юррисене юратнă, нумай пухнă, хăй те çамрăклах сăвăсем çырма тытăннă. Тăван çĕршыв Аслă вăрçи умĕн Ĕпхӳри педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă çамрăк поэт вăрçăн малтанхи кунĕсенчех салтак шинелĕ тăхăннă, фашистла вăрă-хурахсене хирĕç Украинăра, Молдавире, Румынире, Болгарире, Венгрире çапăçнă. «За честь Родины» тата «Советский воин» хаçатсенче ĕçленĕ.

Унăн вăрçă çулĕсенче çырнă сăввисемпе поэмисенче йывăр çапăçусене чăтăмлăн тӳссе irттернĕ çирĕп чунлă, хамăрăн аслă Тăван çĕршыва хĕрӳллĕн юратакан паттар çынсем сăнланса юлнă. Вăрçăн пирвайхи кунĕсенчен пуçласа вĕçне çитичченех фронтра пулнă поэтăн произведенийĕсем Пушкăрт çĕршывĕпе, унăн ывăл-хĕрĕсен патриотла хастарлăхĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Шăпах çавăн пек унăн «Урхамахăм» ятлă кĕнекери сăввисемпе «Декабрь юрри», «Ульмясбай» поэмисем.

Вăрçă хыççăн М. Карим «Таврăнни» ятлă сăвă кĕнеки пичетлесе кăларать. Кунта эпир çĕнтерӳçĕ-салтак ылханлă фашистсене хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешни, вăрçă хыççăн вăл хăйĕн тăван Пушкăрт çĕршывне таврăнса мирлĕ ĕçе хастарлăн тытăнни çинчен хавхаланса та савăнса вулатпăр.

Совет халăхĕпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă вăйсем мирлĕ пурнăçшăн кĕрешни М. Каримăн юлашки çулсенче çырнă произведенийĕсенче паллă вырăн йышăнать. Ахальтен мар унăн яланах сыхă пулма, мир вăйĕсене куллен-кун çирĕплетме чĕнекен «Европа-Ази», «Болгари тетрачĕ», «Вьетнамра» тата ытти сăвă ярăмĕсене темиçе чĕлхене куçарнă. Акă мĕнле çырать поэт хăйĕн «Шухăш» сăввинче:

Паян кун илемĕ, пуласси
Çын телейĕ, тĕрлĕ сас-хура,
Хырлăх шавĕ, кайăксен сасси —
Пурте пурăнаççĕ сăввăмра.

Савăнса юрлатăп хам юрра.
Пурнăçа мухтатăп чĕререн.
Çавăнпа та, пурнăçа кура,
Мĕскĕн пек эп каймăп çĕр çинчен.

*(А. Воробьев куçарнă.)*

М. Каримăн пултарулăхĕнче совет çыннисен, çавăн пекех пирĕн çĕршыври тĕрлĕ халăхсен туслăхĕ уççăн ку-

рăнса тăрать. Çав туслăхра никам çĕнтерейми хăватлă вăй, коммунизм строительствин иксĕлми çирĕп тĕрекĕ. Çакăн çинчен поэт хăйĕн «Эп — Раççей ҫынни» сăввинче питĕ витĕмлĕ калать: «Эп вырăс мар, çапах Раççейĕн, пĕлĕр. Раççей çынни, мухтавăм вĕçĕмрен».

Мустай Карим — чăваш писателĕсен çывăх тусĕ. Вăл пирĕн республикăра темиçе хутчен те пулнă, чăваш поэчĕсен нумай сăввине пушкăртла куçарнă. Вулакансем унăн калавĕсемпе повеçĕсене те, пьесисемпе статйисене те лайăх пĕлеççĕ. «Пĕччен хурăн», «Вĕçленеймен юрă», «Уйăх тĕттĕмленнĕ каç», «Айгуль çĕршывĕ» пьесисем вара совет драматургийĕн чăн-чăн чаплă произведенийĕсем пулса тăчĕç.

Пушкăрт халăх поэчĕ нумай ĕçлет, нумай çырать: Унăн нумай енлĕ пултарулăхĕ хамăр саманапа, халăх пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Ансăртран мар ăна совет литературине аталантарас тĕлĕшпе мухтава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Ленин орденĕпе, икĕ хутчен Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă, 1963 çулта Пушкăрт халăх поэчĕн ятне панă. Пирĕн тусăмăр Мустай Карим — 1955 çултанпа РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, кунсăр пуçне тата Салават Юлаев, К. Станиславский ячĕпе хисепленекен премисен лауреачĕ. Вăл литература ĕçне общестăлла ĕçрен уйăрмасть. Çакă вара талантлă поэт-драматурга, чăн-чăн художника хăйĕн пархатарлă та ӳсĕмлĕ ĕçĕнче яланах хавхалантарса, чĕрĕ вăй парса тăрать. Чăнахах та, тĕрĕс каланă вăл хăй пирки:

Пурне те эп тĕплерĕм, пĕр тытсассăн
Вак-тĕвеке эп сиртĕм хам çумран...
Ирпе ирех, хĕвел кулса пăхсассăн,
Эп кайăксем вĕçтерĕп кăкăртан.

*(А. Воробьев куçарнă.)*

Мĕн калăн — питĕ тĕрĕс!

*1974.*

## СИЛПИРЕ, НАРСПИ ÇĔРШЫВĔНЧЕ

Пушкăрт, Силпи, Слакпуç... Çак сăмахсем пире мĕн ачаранах çывăх пулнă. Пушкăртра, Слакпуçĕнче пирĕн

* Ку статьяна В. Давыдов-Анатрипе пĕрле çырнă.

юратнӑ аслӑ поэтамӑр Константин Васильевич Иванов ҫуралнӑ, пурӑннӑ, ҫӗре кӗнӗ. Ҫавӑнпа ку тавралӑха, ҫак кӗтесе эпир яланах ырӑпа асӑнатпӑр. Ахальтен мар пулӗ ӗнтӗ, пире Пушкӑрта, Константин Иванов ҫуралнӑранпа 80 ҫул тултарнине уявлама каймалла тесен, эпир ҫав тери савӑнтӑмӑр.

1970 ҫулхи июнӗн 7-мӗшӗ. Ҫанталӑк лайӑх. Хӗвеллӗ кун. Шупашкартан — Ӗпхӗве самолет вӗҫет. Пушкӑрта, аслӑ поэтӑмӑра чыслама, пирӗнпе пӗрле Илпек Микулайӗ, Зоя Ананьевӑпа Геннадий Терентьев артистсем пыраҫҫӗ. Вӗсем те савӑннӑ. Чун-чӗремӗрте темле ӑшӑ туйӑм тапса тӑнӑн туйӑнать. Тӗлӗнмелле: Шупашкартан тухни виҫӗ сехет те ҫитмерӗ пулӗ, куҫа Пушкӑртсен тӗп хули — Ӗпхӳ курӑнса кайрӗ. Пысӑк хула. Ӗпхӳ историе хӑйӗн паттӑрлӑхӗпе кӗрсе юлнӑ. 1918 ҫулта Пушкӑртра граждан вӑрҫи пынӑ кунсенче вӑл Колчак ҫарӗн аллине лекет. 1919 ҫулта В. И. Чапаев дивизийӗ хулана тӑшман ҫарӗнчен тасатать, ун ҫинче ӗмӗрлӗхех хӗрлӗ ялав, Ҫӗнтерӳ ялавӗ вӗлкӗшме пуҫлать. Кунта аслӑ ҫулпуҫӑмӑр Владимир Ильич Ленин икӗ хутчен пулнӑ. Хула ҫыннисем Ильич пулнӑ вырӑнсене юратса упраҫҫӗ. Куҫ умне Салават Юлаев палӑкӗ тухса тӑрать. Вӑл ҫӳллӗ ту тӳпинчен тахҫанах курӑнса ларать. Эпир Ӗпхӳ каччин, Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ паттӑрӗн Александр Матросовӑн палӑкӗ умӗнче, Пушкӑрт халӑх поэчӗсем Мажит Гафурипе Рашит Нигмати тӑприсем умӗнче пуҫ тайса тӑратпӑр. Ӗпхӳ хӑйӗн пултаруллӑ, пӗтӗм ҫӗршывӗпе чапа тухнӑ ывӑл-хӗрӗсемне мухтанма пултарать. Пиртен пӗри чӑтаймарӗ, хамӑр тусӑмӑрсем умӗнче хӑйӗн пӗр сӑввине сасӑпах вулама пуҫларӗ:

Эпир салам калатпӑр
Кудаш, Карим, пур туссене,
Савса парне паратпӑр
Кӑвар чӗремӗр хӗлхемне.

Тавах сана, тӑванлӑх,
Хӑват паратӑн эс чуна...
Ҫӗн ӗмӗрти пӗртанлӑх
Илем кӳрет ҫурхи куна.

Эпир Слакпуҫне, Константин Иванов ҫуралнӑ яла, ҫул тытатпӑр. Аслӑ ҫулӑн икӗ айккипе лайӑх шӑтса тухнӑ, ашкӑрса ӳсекен тырӑ калчисем ешӗл тинӗс пек сарӑл-

са выртаççĕ. Куç умне нефть вышкисем туха-туха тăраççĕ. Кунта пурте пур: ешĕл вăрмансем, юханшывсемпе çутă кӳлĕсем. Çак ырă сăна, пуянлăха курса пынă вăхăтра пурте илтмелле, пĕтĕм сасăпа: Пушкăрт çĕршывĕ — пуян Çĕршыв! теес килет. Пирĕн машинăсем вăрмантан тухса пĕр сăрт тăррине çитсе чарăнчĕç.

— Çакă ĕнтĕ Нарспипе Сетнер çĕршывĕ. Эпир Силпире, ав çав айлăмра — Слакпуç, Константин Ивановăн тăван ялĕ,— терĕ пире партин Белебей райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Р. Т. Евбатыров юлташ. Хамăр та сисмерĕмĕр — «Нарспири» илемлĕ йĕркесене пĕрин хыççăн тепри шăрантарма пуçларăмăр:

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса.

. . . . . .

Çăтмах пекех туйăнать
Силпи чăваш ялĕнче,
Вăхăт иртни сисĕнмест
Савăнăçлă кунсенче...

Слакпуç варринче, Константин Иванов çуралнă çурт умĕнче, халăх туллиех. Ял ĕçченĕсем Шупашкарпа Ĕпхӳ хăнисене кĕтсе илме тухнă-мĕн. Ватă колхозник Максим Кириллов аллинче çăкăрпа тăвар.

— Хаклă тус-тăванăмăрсем, эсир Константин Иванова чыслама пирĕн пата, Слакпуçне, килнишĕн эпир çав тери хавас. Чăвашсен авалхи йăлипе сире çăкăр-тăварпа кĕтсе илме шутларăмăр, — тет вăл, хăнасене пĕтĕм чун-чĕререн ырă сунса. Хăнасенчен малтан Слакпуçне тепĕр чуна савăнтаракан хыпар çитнĕ-мĕн. Халăх хушшинче лайăх, ырă ĕçсем тунăшăн кунти К. В. Иванов музейне Пушкăрт АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Хисеп грамоти парса наградăлама Указ кăларнă. Чăнах та ырă хыпар! Ку вăл Пушкăрт халăхĕ аслă поэтăмăра хăйĕн тăван ывăлĕ вырăнне хурса хисеплесе, юратса пурăнни çинчен калать. Музее грамота панă ятпа кунта савăнăçлă митинг пулса иртрĕ.

Константин Иванов пурнăçĕ кĕске пулчĕ. Анчах та вăл ĕмĕрлĕхех хăйĕн çутă йĕрне хăварчĕ. Поэтăн «Нарс-

пи» поэми Совет Союзĕн пур кĕтессисене те çитрĕ, хамăр чикĕ урлă каçса демократиллĕ çĕршывсене пырса кĕчĕ. Çавăнпа та эпир пурте унăн вилĕмсĕр ĕçĕпе мухтанатпăр. Пирĕн паянхи савăнăçлă митинг пынă вăхăтра чăн тӳпере, космосра чăваш халăхĕн тепĕр ывăлĕ Андриян Григорьевич Николаев вĕçет. Ана, космос паттăрне, эпир сывлăх сунса чун-чĕререн салам яратпăр,— терĕ митинга уçса кунти парти райкомĕн секретарĕ Р. Т. Евбатыров юлташ.

Сăмах парти Пушкăрт обкомĕн культура пайĕн заведующийĕ К. Г. Тухватуллина илет. Вăл Пушкăрт Верховнăй Совет Президиумĕн Указне вулать, К. В. Иванов музейне Хисеп грамоти парать.

— Эпир К. В. Иванов музейĕн пархатарлă ĕçне çапла пысăка хурса хакланăшăн чун-чĕререн савăнатпăр. Çак хаклă парне пире татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарать,— терĕ музей заведующийĕ Р. М. Петрова.

Митингра Пушкăрт республикин Культура министрĕ В. С. Каримов хĕрӳ сăмах тухса каларĕ. Вăл «Нарспи» поэмăн сыпăкĕсене пушкăртла çав тери ăста вуласа пачĕ, Ĕпхӳре пичетленсе тухнă «Нарспие» Иванов музейне парнелерĕ. Эпир, чăваш писателĕсем, пĕрин хыççăн тепри халăх умне тухса, Константин Ивановăн ячĕ тӳпере çутă çăлтăр пек ялкăшса тăни çинчен чун-чĕререн ырă сăмахсем каларăмăр, Слакпуç ĕçченĕсене, Иванов музейне хамăр халăх ячĕпе аслă поэтăмăрăн бюстне, космос паттăрĕн А. Г. Николаевăн сăнне парнелерĕмĕр.

— Пирĕн халăхсем хушшинчи ĕмĕртен пыракан туслăх татах та çирĕпленсе, вăй илсе пытăр. Пушкăрт чăваша, чăваш пушкăрта савтăр, юраттăр. Пирĕн Совет çĕршывĕн вăйĕ халăхсем хушшинчи туслăхра! — терĕ пушкăртсен паллă писателĕ, пирĕн çывăх çыннăмăр Хаким Гиляжев.

Савăнăçлă митингра пулнă çынсене, Шупашкартан, Ĕпхӳрен Слакпуçне аслă поэтăмăра чыслама пынă хăнасене тав туса кунти колхоз председателĕ А. Ф. Астафьев ăшă сăмах каларĕ.

— Пирĕн колхозра вырăс, украина, чăваш, белорус халăх çыннисем ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте пĕр çемьери пек килĕштерсе пурăнаççĕ. Эпир аслă поэтăмăрăн Константин Ивановăн ырă ятне хамăрăн пултаруллă ĕçпе çӳлте тытатпăр.

Партипе правительство куллен пулăшса пынине пула Слакпуç çыннисен пурнăçĕ палăрмаллах лайăхланчĕ. Пи-

рĕн халь çынна мĕн кирли пурте пур: çуртсем лайăх, апат-çимĕç çителĕклĕ, хитре тумланса çӳретпĕр,— терĕ вăл.

Концерт пуçланчĕ.

Слакпуç ĕçченĕсем умĕнче — шурă сатин кĕпе, тухъя тăхăнна, умне тевет çакнă чăваш хĕрĕ. Вăл пирĕн Зоя Ананьева артистка. Ун çинчи кĕмĕл тенкĕсем хĕвел çутине йăлтăртатса тăраççĕ. Пирĕн тусăмăр Илпек Микулайĕ писатель чăтаймарĕ, пурте илтмеллех: «Ку пирĕн Нарспи»,— терĕ. Çак сăмахсене каласанах халăх хушшинчен пĕри:

Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çемçелет,—

тесе хучĕ.

Зоя Ананьева чăваш композиторĕсен произведенийĕсене шăрантарать. Юрă хыççăн юрă янăрать. Концерт хĕрсе пынă вăхăтра, кĕтмен çĕртен, ял çийĕн тĕксĕм пĕлĕтсем çĕкленчĕç. Анчах та вĕсем часах сирĕле-сирĕле кайрĕç.

— Ак сана Иванов хăвачĕ, ак сана юрă хăвачĕ: хура пĕлĕтсем те чатаймарĕç, аяккалла тара пачĕç,— тет пăртак шӳт туса пушкăртăн тепĕр паллă писателе,— пирĕн тусăмăр Вазих Исхаков. Чăн-чăн сăвă-юрă уявĕ. Концерт итлекенсем пирĕн ăста юрăçăран хăй çинчен каласа пама ыйтаççĕ.

— Манăн атте Ананий Игнатьевич,—терĕ Зоя Ананьева,— ĕлĕк ял кĕтӳне кĕтнĕ. Вăл чăваш халăх юррисене çав тери нумай пĕлет... Çавăнпа та-и, тен, эпĕ çураласса та юрăпах çуралнă пулас. Малтан ялти шкул, унтан Шупашкарти музыка училищи, каярахпа Хусанти консерватори... Халĕ эпĕ — чăваш государство филармонии солистки,— тесе каласа парать Зоя Ананьева.

Слакпуçсем ăна куçран вĕçертесшĕн мар.

— Тата пĕр-икĕ юрă та пулин юрла,— теççĕ.

Çак кун Слакпуçĕнче ăшă кăмăлтан тухакан сăвă-юрăсем вырăсла, украинла, чăвашла, пушкăртла мăнаçлăн янăраса тăчĕç.

Пирĕн асра кунти ял Совет председателĕн Валентина Федоровна Горенкăн юрри ĕмĕрлĕхех юлчĕ. Çак ĕçчен те сăпай хĕрарăмăн чун-чĕринчен тухакан юрă сăмахĕсене эпир çырсах илтĕмĕр:

Епле килтĕр, тăвансем, епле килтĕр? —
Епле путмарăр-ши тинĕсе.
Эсĕрех те путнă ан пултăрччĕ,—
Тахçантанпа кĕтнĕ эп сире!

Кăвак кăвакарчăн эп вĕçтертĕм,
Крыльца умне аран ӳкертĕм,
Тахçантанпах кĕтнĕ тăвансене
Аран-аран куç умне ӳкертĕм.

Кĕрепенке çурă, ай, панулми,
Уйăх çурă выртрĕ арчара.
Сире, тăванăмсем, кĕте-кĕте
Виçĕ сехет тăтăм урамра.

Крыльца умне тулă эпĕ сапрăм,
Кайăксене хушап суйлама.
Ентĕ эпĕ чунтан, ай, юрларăм,
Тăвансене хушап юрлама.

* * *

Слакпуç çыннисем авалтан пыракан лайăх, ырă йăласене упраса усраççĕ. Ку пире питех те савăнтарчĕ. Эпир кунти чылай яш-кĕрĕмсемпе калаçрăмăр.

— Акăшсем пек карталанса каççерен вăййа тухатпăр. Сăвă-юрă, ташă-кулă янăраса çеç тăрать вара,— теççĕ Силпи каччисемпе хĕрĕсем. Вĕсем çавăнтах пирĕн ума ретĕн-ретĕн тăчĕç те хăйсен вăйă-юррисене шăрантарма пуçларĕç. Тĕлĕнмелле! Аçтан-ха манса кайăн çак йĕркесене:

Атьăр анар анаталла
Алла-аллăн тытăнса.
Курайман тăшман пăхса юлтăр
Хӳми çумне тайăнса.

Шур чĕрçитти кĕсйине
Мăйăр ярассăм килет.
Ытла вĕçкĕн каччисене
Тĕртсе ярассăм килет.

Шоссе çулĕ такăр мар-и,—
Такăнтарать иккен вăл.

Чĕлхе-çăвар çавранманни
Вăтантарать иккен вăл.

Икĕ тутăр пĕр вĕçренччĕ,
Хачă касса уйăрчĕ.
Эпир иккĕн пит туслăччĕ,
Курайман çын уйăрчĕ.

* * *

Эпир Слакпуç историйĕпе, кунти колхоз ĕçĕ-хĕлĕпе, ял ĕçченĕсен пурнăçĕпе паллашма тăрăшрăмăр.

Слакпуç ĕлĕкхи саманара начар, чухăн, хутла пĕлмен ял пулнă. Константин Иванов хăйĕн кун кĕнекинче кунти чăвашсем çĕр ĕçлесе, çăпата туса пурăнни çинчен çырса хăварнă. Слакпуç виçĕ ĕмĕр çура каярах, 1618 çулта, пуçланса кайнă-мĕн. Кунта чăн малтан Шупашкар енчи Тупах текен ялтан килнĕ чăвашсем пурăнма пуçланă. Ял çумĕпе Слак шывĕ юхса выртать. Ват çынсем каланă гăрăх, ял ячĕ те çак çырмаран пуçланса кайнă-мĕн. Слакпуç. Унтан инçех мар Силпи шывĕ юхса выртать. Кунтах çӳллĕ ту пуçланса каять. Ун çинче симĕс вăрман сарăлса выртать. Калама çук илемлĕ вырăн.

— Силпи таврашĕнче 36 çăлкуçĕ. Ку вырăн ӳсентăрансемпе, çулла çырлапа, кĕркунне кăмпапа пуян. Çак илемлĕ тавралăх Кĕçтенттине халăх асĕнче ĕмĕрлĕхе юлакан произведени çырма хистенĕ те ĕнтĕ,—тет пире поэт çĕршывĕпе паллаштаракан Гурий Герасимович Макаров учитель. Каллех «Нарспири» йĕркесем аса килеççĕ.

Кайăк юрри, çын сасси
Ян-ян ярать таврана.
Çуркуннехи хавас юрă
Килсе кĕрет хăлхана.

Слакпуççем мĕн авалтанах çутталла туртăннă. Вĕсен шанса, кĕтсе пурăннă çутă ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Ялта ватам шкул пур. Унта 347 ача вĕренет. Поэт çуралнă ялта халĕ 38 учитель, 78 механизатор, 4 врач. Çак цифрăсем, чăннипех те, юрă пек илтĕнсе тăраççĕ. Колхозра 213 хуçалăх. Вĕсенчен 147 хуçалăхра радиоприемник, 57 хуçалăхра телевизор, 27 хуçалăхра мотоцикл, 2 хуçалăхра автомашина пур. Кашни киле хаçат-журнал килсе тăрать. Велосипедсем, кĕпе çумалли машинăсем, электро-

утюгсем çинчен калама та кирлĕ мар — вĕсем кашни килтех.

— Пире çак илемлĕ те телейлĕ пурнăçа Октябрь пиллерĕ, Ленин пачĕ. Уншăн вĕсене пиртен тавтапуçах! — теççĕ Слакпуç çыннисем. Слакпуç çуллен çĕнелсе, илемленсе пырать. Кунти ял ĕçченĕсем тутă, лайăх пурăнаççĕ. Эпир аслă урампа иртсе пынă чухне пĕр çамрăк каччăпа, Анатолий Мироновпа, паллашрăмăр. Вăл хăй кăçал Ĕпхӳрен шоферсен курсĕнчен вĕренсе килнĕ-мĕн, халĕ колхозра ĕçлет.

Анатолий пире хăйсем патне кĕрсе курма ыйтрĕ. Эпир хаваслансах килĕшрĕмĕр. Пысăк, çĕнĕрех иккĕллĕ пӳрт. Хуралтăсем те лайăх. Анатолий ашшĕ Виктор Григорьевич иртнĕ вăрçăра пулнă, йывăр аманнă, инвалид. Апла пулин те колхозри ĕçсенчен юлмасть. Амăшĕ шкулта техничкăра, Лида ятлă йăмăкĕ колхозра дояркăра ĕçлеççĕ.

— Çапла эпир тăваттăн хамăр çемьене тытса пыратпăр. Йăмăксем пур. Вĕсем пурте шкулта лайăх, тăрăшса вĕренеççĕ. Хуçалăхра ĕне, сурăхсем, хурсем, чăх-чĕпсем усратпăр. Сысна илесшĕн-ха. Кĕскен каласан, кӳренмелли çук, аван пурăнатпăр,— тет Анатолий.

Эпир сĕтел çинче «Тăван Атăл» альманахпа «Капкăн» журнал выртнине асăрхарăмăр.

— Сирĕн патăртан, Шупашкартан çырăнса илетпĕр, çемйипех вулама юрататпăр. Халĕ Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака» романĕн çĕнĕ кĕнекине çав тери кĕтетпĕр,— тет пире Анатолий.

Слакпуçĕнче ĕçпе чапа тухнă, ыр ят илме тивĕçлĕ пулнă çынсем нумай.

— Вĕсемпе эпир мухтанатпăр. Колхоз производствинче уйрăмах коммунистсемпе комсомолецсем лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ,— тет колхозри парти организацийĕн секретаре Василий Дмитриевич Тарасенко. Вал пире Алексей Кузьмин, Константин Иванов, Поликарп Маркелов, Георгий Тимофеев, Александр Сергеев механизаторсен, Валентина Маркелова, Зоя Кириллова, Галина Чумаченко дояркăсен пархатарлă ĕçĕсем çинчен савăнса кала-кала пачĕ.

— Колхоз пурнăçĕ ĕç паттăрĕсем çинче тытăнса тăрать. Вĕсене чыс та мухтав,— тет колхоз председателĕ Астафьев.

Кунти колхоз юлашки çулсенче тырпул тухăçне чылай ӳстерчĕ, государствăна тырă сутмалли пилĕк çуллăх пла-

на та ирттерсе тултарчĕ. Слакпуçсем кăçал кашни гектартан 17 центнертан кая мар тĕштырă туса илессишĕн кĕрешĕве тухрĕç. «Сăмах патăн пулсан,— пурнăçламалла!» — теççĕ вĕсем.

* * *

Çĕршывшăн йывăр кун, йывăр вăхăт килсе тухсан, слакпуçсем яланах пĕтĕм халăхпа пĕрле тăшмана хирĕç çĕкленнĕ. Иртнĕ Отечественнăй Аслă вăрçа кунтан 288 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 120 çын каялла, тăван киле таврăнайман, вăрçă хирĕнче юлнă. Вăрçăран сывă таврăннисем халĕ пурте тенĕ пекех колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ. Эпир вăрçă паттăрĕпе, Дмитрий Васильевич Григорьев капитанпа паллашрăмăр. Вăл вăрçăран йывăр аманса, куççăр пулса килнĕ. Çак çулăм чĕреллĕ çын, коммунист çухалса кайман, тăван ялне таврăнсанах хăйĕн вырăнне тупнă. Вăл халĕ районти лайăх, пултаруллă агитаторсенчен пĕри.

Тепĕр Слакпуç çынни Николай Спиридонович Павлов вăрçăра Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Халĕ çак паттăр кунти вăтам шкулта ачасене физкультурăпа вĕрентет, çавăнпа пĕрлех ялти, колхозри ĕçсене хутшăнать.

— Эпир миршĕн кĕрешетпĕр. Анчах та тăшман пирĕн çине тапăнсан, эпир хамăр телее, хамăр пурнăçа сыхлама яланах хатĕр,— теççĕ слакпуçсем.

* * *

Эпир Силпире, Нарспи çĕршывĕнче. Куç умĕнчен Константин Ивановăн ырă сăнарĕ каймасть. Пурне те илтмелле, пĕтĕм сасăпа çапла калас килет.

Кĕçтенттин Иванов, эс чăваш чĕлхине,
Сăввине-юррине — тăван халăх мулне,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса, çӳпçене тултарса,
Парнелерĕн пире кăмăлтан ыр сунса.

Çак сăвă йĕркисем уйрăмах поэт музейĕнче пулнă чух аса килеççĕ. Музей юлашки çулсенче çĕнĕ экспонатсемпе пуянланнă. Кунта поэтăн алçыврăвĕсене, ялисене, ун ячĕпе, пурнăçĕпе çыхăннă материалсене лайăх упраса, сыхласа усраççĕ. Куç умне чăвашсен паллă художникĕ Петр Сизов «Нарспи» поэма тăрăх тунă ӳкерчĕксем

тухса тăраççĕ. Вĕсене художник ăста ÿкерни пире пурне те савăнтарать. «Нарспие» хамăр çĕршыври чылай халăхсем хăйсен чĕлхипе вулаççĕ. Çакна музейре питех те лайăх кăтартса панă.

Поэт çуртне курма пыракансен йышĕ кулленех ÿссе пырать. Кунта пулнă çынсем, литературăпа искусство деятелĕсем хăйсен ăшă сăмахĕсене çырса хăвараççĕ. Пирĕн умра Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн парни— «Чĕре юрри» кĕнеки. Ун хуплашки çине Хусанкай 1955 çулта ятарласа «Поэтăмăра юратнă халăха» ятлă сăвă çырса хăварнă. Акă вăл:

Чĕлхемĕре усранă халăх!
Сана, чаплă ывăлу çинчен
Шухăшласассăн, тав тумалăх
Сăмах тупма та хĕн иккен...

Хĕвлтухăçĕнче мухтавлă
Лейли, Менжун, Европăра
Ромеопа Джульетта паллă.
Эс, халăхăм, мĕнрен кайра?

Нарспи-Сетнерĕн шĕл-кăварĕ
Сан илемне, юратуна,
Сан ирĕклĕ чунна кăтартрĕ
Пурне те, пĕтĕм таврана.

Сана сăнаççĕ те тĕпчеççĕ:
«Пăхма сăпайлă çеç этем,
Чунтан епле пуян вăл!» — теççĕ
Савса телей сунакансем.

Сĕм-авалах эсĕ вырнаçнă
Европа-Ази хушшине.
Кил-çуртлă та нÿхреплĕ-лаçлă,
Тĕреклĕ ларнă çĕр çине.

Вăрман кăкланă, пÿрт пуранă,
Ĕрчетнĕ çимĕç те хăмла,
Ятпа яман, çĕртмен, упранă
Мал ĕмĕтне, ыр кăмăлна.

«Чăваш ятне ан çĕрт...» Мĕн евĕр
Тасалăх çак сăмахсенче!

Мĕн чухлĕ тӳсĕм, вăй сисетпĕр
Сан килӳнте, тăван тĕнче!

Миçе чуна çунатлантарĕ
Вутра шăраннă сан чĕрӳ!
Сана ӳксе пуççапас мар-и
Эпир, сан ывăлу-хĕрӳ...

Çултан çулах, тăван малашлăх
Хаваслăрах, илемлĕрех.
Иванова çуратнă халăх,
Мухтавлă эсĕ ĕмĕрех!

Эпир те музее хамăр кĕнекемĕрсене парнелерĕмĕр, вăл пирĕн хушăри çыхăнăва, туслăха çирĕплетме пулăштăр, терĕмĕр.

* * *

Эпир Белебее, Константин Иванов вĕреннĕ шкула, çитсе курма шутларăмăр. Çанталăк аван, хĕвеллĕ кун. Умра — Белебей. Çак хулана 1745 çулта чăвашсем никĕсленĕ. Эпир хулари Красноармейски текен урамри авалхи икĕ хутлă çурт умне пырса чарăнтăмăр. Халĕ кунта — профтехшкола. Хăй вăхăтĕнче, ача чухне, çак çуртра пулас поэтăмăр Константин Иванов вĕреннĕ. Поэт пурнăçĕ çинчен ăшă калаçу пуçланчĕ. Хулари партипе Совет организацийĕсем аслă поэтăмăра яланах ырăпа асăнса пурăнаççĕ, вăл вĕреннĕ шкул çумне асăну хăми çапма шутлаççĕ. Аван япала. Поэт пулнă, вĕреннĕ вырăнсене пирĕн халăх асĕнче ĕмĕрлĕхех хăвармалла.

Эпир Белебее килнине пĕлсен, пире кунти педучилищĕре вĕренекен студентсем хăйсем патне хăнана чĕнчĕç. Çак училищĕре чăваш шкулĕсем валли ятарласа учительсем хатĕрлекен уйрăм пур иккен. Вĕсенче 120 чăваш ачи вĕренет. Кунта чăваш литератури пысăк хисепре. Студентсем пирĕн писательсем çырнă кĕнекесене юратса вуланине эпир хамăр куçпа куртăмăр. Училище директорĕ Тагир Исмагилович Аминев пĕлтернĕ тăрăх, кунта чăваш студенчĕсен драма кружокĕ пур. Çак кружок «Нарспи» спектакле ăста лартса панă, унпа çывăхри колхозсене кайнă. Белебейри педагогика училищинче вĕреннĕ икĕ чăваш çынни — Павел Ефимович Васильевпа Кирилл Деметьевич Андреев Аслă Отечественнăй вăрçăра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн Совет Союз Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Халĕ училище музейĕнче вĕсен пат-

тӑрлӑхӗ ҫинчен калакан пуян материалсем пур. Училищӗре, студентсем ыйтнипе, эпир тӗлпулу ирттертӗмӗр. Тӗлпулӑва пирӗнпе пӗрле пушкӑрт писателӗсем Вазих Исхаковпа Гали Ибрагимов хутшӑнчӗҫ. Кунта чылайччен вырӑс, чӑваш, пушкӑрт сӑвви-юррисем янӑраса тӑчӗҫ.

«Туслӑ тӗлпулу» терӗмӗр эпир ӑна.

* * *

Пушкӑртран чӑваш ҫӗршывне тухса килес умӗн пире кунти парти обкомӗн секретарӗ Тагир Исмагилович Ахунзянов юлташ йышӑнчӗ. Ӑшӑ, туслӑ калаҫу пулса иртрӗ. Тагир Исмагилович пирӗн писательсене чылайӑшне лайӑх пӗлет-мӗн, Петӗр Хусанкай, Ухсай Яккӑвӗ ҫинчен ыйта-ыйта пӗлчӗ. Вӑл, чӑваш чӗлхине лайӑх пӗлекенскер, пире «Нарспири» йӗркесене вула-вула пачӗ, хӑй асӗнче юлнӑ чӑваш халӑх юррисемпе паллаштарчӗ. Эпир унӑн пӗр кӗске юррине ҫырса илме те ӗлкӗртӗмӗр:

Пирӗн хура, ай, лаши
Тӑпӑртатса тӑрас ҫук.
Кунта пирӗн савни ҫук,
Шӑнса тӑрас хуйхи ҫук.

Хитре каланӑ йӗркесем! Тагир Исмагилович, уйрӑмах, чӑвашпа пушкӑрт литературисен туслӑхне ҫирӗплетме кирли ҫинчен каларӗ.

— Чӑвашра тухнӑ лайӑх кӗнеке пирӗн пата ҫиттӗр, Пушкӑртра тухнӑ лайӑх кӗнеке сирӗн пата ҫиттӗр. Пирӗн писательсен ырӑ ӗҫӗпе вулакансем савӑнччӑр. Йӑла илнӗ туслӑх литературӑпа искусствӑн пур енӗсемпе те вӑйланса пытӑр,—терӗ вӑл. Чӑнах та ҫапла пулмалла! Чӑвашсемпе пушкӑртсем хушшинчи туслӑх ӗмӗр-ӗмӗр ялкӑшса тӑтӑр!

*1970.*

## МАНӐҪМИ ТӖЛПУЛУСЕМ

Чӑваш ҫӗршывӗпе Венгри хушшинчи туслӑ ҫыхӑнусем ҫултан-ҫул ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ. Ҫакна Венгрири туссемпе Венгри Халӑх Республикинче е хамӑр Чӑваш ҫӗрӗнче кашни тӗл пулмассерен лайӑхрах та лайӑхрах туйса иле-

тĕн. Кăçал апрель уйăхĕнче Иван Кузьмичев журналистпа пĕрле мана Венгрие кайса килме тӳр килчĕ. Хевеш облаçĕнче, Будапештра эпир рабочисемпе, ялхуçалăх кооперативĕн членĕсемпе, ученăйсемпе, литераторсемпе тĕл пултăмăр. Пур çĕрте те вĕсем пире тăванла ăшшăн кĕтсе илчĕç, хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе, малашнехи ĕмĕчĕсемпе паллаштарчĕç.

Акă эпир Венгрин социализмла рабочи партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Золтан Комочин юлташ патĕнче. Вăл ыйтнипе хамăр республикăри экономикăпа культура аталанăвĕ çинчен каласа паратпăр. Тăлмачсăр калаçатпăр. Комочин юлташ вырăс чĕлхипе литературине, паллă совет писателĕсене лайăх пĕлет. Кайран вăл хăй пире Венгри Халăх Республикин экономикипе культури çинчен, патшалăхăн тулашри çыхăнăвĕсем çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ. Çавăн пек манăçми тĕлпулусем ВСРП Хевеш обкомĕн секретарĕ Дьердь Олах патĕнче, Эгер хула комитечĕн секретарĕ Шандор Треженикпе хула Совечĕн председателĕ Янош Варг патĕнче те пулса иртрĕç.

Венгрире пирĕнпе пĕрле малтан пуçласа вĕçне çитиччен Хевешри «Непуйшаг» («Халăх пурнăçĕ») ятлă область хаçачĕн редакторĕ Янош Папп çӳрерĕ. Чăваш АССРĕпе Хевеш облаçĕнчи ĕçсыннисем хушшинчи туслăха çирĕплетес ĕçре пысăк ĕçсем тăвать çак хаçат. Унăн страницисем çинче пирĕн республика çинчен çырнă статьясемпе очерксене курмашкăн питĕ те хаваслă пулчĕ пире. Унтах тата Л. Агаковпа Хв. Уяр калавĕсене те пичетленĕ иккен. Вĕсене куçараканĕ — Эгерти Хо Ши Мин ячĕпе хисепленекен пединститутра вырăс чĕлхи вĕрентекен Ласло Захемский. Венгрипе совет халăхĕ хушшинчи туслăх Обществин хĕрӳллĕ активисчĕ, вăл нумаях пулмасть Шупашкара килсе кайнăччĕ, пире чăваш писателĕсен произведенийĕсен çĕнĕ куçарăвĕсем çинчен каласа парса савăнтарнăччĕ. Захемский юлташ область хаçатĕнче чăваш çырулăхĕ 100 çул тултарни, И. Я. Яковлев пурнăçĕпе творчестви çинчен пысăк статья пичетлесе кăларнă.

Эгерти гимназире Анна Захемская — Ласло Захемскин арăмĕ вырăс чĕлхи вĕрентет. Рабочисемпе, пединститут, гимнази студенчĕсемпе ирттернĕ тĕлпулусене пычĕ вăл, хулари истори памятникĕсемпе паллаштарчĕ. Çавăн пекех пирĕнпе пĕрле пединститутра вырăс чĕлхи вĕрентекен Маргарита Збинко та нумай çӳрерĕ. Венгри-

те совет халăхĕ хушшинчи туслăха çирĕплетес тĕлĕшпе иккĕш те вĕсем нумай ĕçлеççĕ, хăйсен халăхне совет халăхĕн коммунизм тăвас еçри çитĕнĕвĕсем çинчен каласа параççĕ.

Уйрăмах пире çак юлташсем хăйсен хулин çурçĕр пайне тĕплĕ кăтартрĕç. Пирĕн республикăн тĕп хули ячĕпе ăна кунта «Шупашкар» ят панă. Пĕрлех эпир Венгри писателĕн Геза Гардоньян вилтăпри çинче пултăмăр. Геза Гардонья (1863—1922) Венгри халăхĕ нациллĕ ирĕклĕхшĕн мĕнле кĕрешни çинчен «Эгер çăлтăрĕ» ятлă историллĕ роман çырнă. Ку романа эпĕ вырăсла унччěнех вуланăччĕ, çав ятлă кинофильм та курнăччĕ. Çавна пула венгрсен чаплă писателĕпе интересленмеллисем пушшех те нумай пулчĕç. Гардонья пурнăçĕпе творчестви çинчен ытти писательсем çинчен тĕплĕн каласа панăшăн эпир Анна Захемскаяпа Маргарита Збишкона чун-чĕререн тав тăватпăр. Венгрири туссем Çеçпĕл Мишшин «Çĕн Кун аки», П. Хусанкайăн «Атăл çинчи юман», «Атăл куçĕ» сăввисене, К. Ивановăн «Нарспи» поэмине лайăх пĕлни пире питĕ савăнтарчĕ. Вĕсем «Чувашские рассказы» ятлă вырăсла кĕнекери чăваш калавĕсене те вуланă иккен, «Земля Улыпа» кĕнекене лайăх пĕлеççĕ. Ытти чăваш кĕнекисем те сахал мар пирĕн туссен библиотекисенче.

Эгерти пединститут студенчĕсемпе тĕл пулни ĕмĕрне те асăмран тухмĕ тата. Вырăс чĕлхипе литератури кафедрин заведующийĕ Иосиф Бигари ыйтнипе эпĕ кунта чăваш литератури çинчен вырăсла лекци вуласа патăм. Тăлмачсем каллех кирлĕ пулмарĕç. Студентсем вырăс чĕлхине тăрăшса вĕренеççĕ, чăваш чĕлхипе, чăваш литературипе интересленеççĕ. Хальхи вăхăтри чăваш литератури çинчен каласа панă май, эпĕ Венгрипе чăваш писателĕсем хушшинчи çыхăнусем çинче те чарăнса тăтăм. Чăвашла венгрсен çирĕм писателĕн утмăла яхăн произведенине куçарни çинчен пĕлтерсен (вĕсен хушшинче — Шандор Петефи, Бела Илеш, Матэ Залка, Анатолий Гидаш, Шандор Гергей) студентсем чарăна пĕлми алă çупрĕç. Институт библиотекине эпĕ Венгри калавĕсен чăвашла тухнă икĕ кĕнекине, чăваш поэчĕсен «Ĕмĕрсен ĕмĕчĕ» кĕнекине, «Чувашские рассказы» сборнике, Çеçпĕл Мишшин аллă чĕлхепе тухнă «Çĕн Кун аки» кĕнекине парнелерĕм. Çывăх вăхăтрах Венгри поэчĕсен сăввисене чăвашла уйрăм кĕнекепе кăларасси çинчен пĕлтерме те хавас пулчĕ мана.

Нумай-нумай ыйтса пӗлчӗҫ ҫак тӗлпулура пиртен. Студентсем Шупашкарти институтсенче вӗренекен ҫамрӑк поэтсен творчествипе, литература каҫӗсене епле ирттернипе, пирӗн журналсенче мӗн-мӗн пичетленнипе интересленеҫҫӗ. Ҫакнашкал аудиторине каласмашкӑн питех те кӑмӑллӑ пулчӗ.

Венгри писателӗсен Союзӗн правлени председателӗпе Йожеф Дарвашпа калаҫнисем те асран тухмаҫҫӗ. Унӑн нумай произведенине вырӑсла куҫарса кӑларнӑ. Вӑл — «Хӑрӑмлӑ тӳне», «Кӑвак ҫутӑлла тухнӑ пушар» пьесӑсен, «Сентябрьте вӑл ҫула тухрӗ», «Ӳсӗр ҫумӑр» тата ытти романсен авторӗ. Вулакансем уйрӑмах «Ӳсӗр ҫумӑр» романа килӗштереҫҫӗ. Кунта контреволюциллӗ пӑлхав вӑхӑтӗнче Венгрири малта пыракан ҫынсем хӑйсен ҫӗршывӗн пуласлӑхӗ ҫинчен мӗнле шухӑшланине, социализм шӑпишӗн хӑйсен умӗнчи ответлӑха епле туйса илнине тарӑннӑн кӑтартса панӑ.

Дарваш юлташ пире писательсен Союзӗпе унӑн секцийӗсен ӗҫӗсем ҫинчен, совет писателӗсемпе Венгри ҫыравҫисем хушшинчи туслӑх ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. СССР писателӗсен пиллӗкмӗш съездӗнче Дарваш тухса калаҫнине лайӑх астӑватӑп-ха. «Тӑшмансен элекне тӑрӑ шыв ҫине кӑларасси — идейӑллӑ тӑшмансене хирӗҫ пыракан идеологиллӗ кӗрешӳре пирӗншӗн тӗп задача шутланать. Хамӑрӑн произведенисенче эпир социализмла тӗнчен пурнӑҫне тӗрӗс кӑтартса патӑмӑр»,— тенӗччӗ вӑл ун чухне. Эпир ыйтнипе Дарваш юлташ Венгри писателӗсем хӑйсен социализм тӑвакан халӑхӗ ҫинчен, социализмла ҫӗршывсенчи халӑхсен туслӑхӗ ҫинчен мӗнле-мӗнле произведенисем ҫырнипе паллаштарчӗ.

Ҫак калаҫу вӑхӑтӗнче эпӗ ӑна Венгри куҫаруҫисене Магда Болгарпа Жужа Раба пирӗн чӑваш саламне калама ыйтрӑм. Болгарпа Раб чӑваш произведенийӗсене нумай куҫараҫҫӗ, чӑваш литературин ҫитӗнӗвӗсене хӑйсен ҫӗршывӗнче пропагандӑлаҫҫӗ. Будапештран самолетпа вӗҫсе каяс умӗн Жужа Раб куҫаруҫӑпа хам та телефонпа калаҫма май тупрӑм, ӑна хамӑр хушӑри литературӑллӑ ҫыхӑнусене епле аталантарса ҫирӗплетни ҫинчен каласа патӑм.

Будапештра мана кӑмӑллӑ хыпар пӗлтерчӗҫ: венгрсен паллӑ тюркологӗ, чӑваш чӗлхеҫисен пысӑк тусӗ Андраш Рона-Таш доктор диссертацие ӑнӑҫлӑ хӳтӗленӗ иккен. Диссертацийӗн теми «Теория родства алтайских языков и чувашско-монгольские языковые отношения». Унсӑр

пуçне вăлах венгр чĕлхипе кăлармашкăн «Нарспи» поэмăна та сăвăламасăр куçарнă.

Паян эпĕ Венгрири туссемпе епле тĕл пулнине савăнсах аса илетĕп, вĕсене творчество ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума чун-чĕререн ырă сунатăп.

*1972.*

## ТУСЛĂХ ÇУЛĔПЕ

Паян Болгарире фашистла диктатурăна аркатса тăкнăранпа 28 çул çитрĕ. Çак кун чăннипех те Болгари халăхĕн савăнăçлă уявĕ пулса тăрать. Вăл уява совет халăхĕ те пĕтĕм чун-чĕререн палăртать. Болгарири социализм çитĕнĕвĕсене курса савăнать.

Чăваш халăхĕ, ытти тăванла халăхсем пекех, пăлхар халăхĕпе туслă пурăнать. Вăл авалтан пыракан туслăх, экономика, политика, культура тата ытти енĕпе те çултан-çул аталанса, çирĕпленсе пырать. Пăлхар ĕççынисемпе культура деятелĕсем пирĕн республикăна час-часах килсе каяççĕ, чăваш çĕршывĕнчен те Болгарире пулакансем нумай. Эпĕ те, акă, унта икĕ хут пултăм, Болгари çĕршывĕ мĕнле хăвăрттăн улшăнса, çĕнелсе пынине куртăм. Пăлхар халăхĕн паллă поэчĕ Георги Джагаров çав улшăнусем çинчен хумханса каланине аса илтĕм вара:

> Чечекленетĕн халĕ,
> 
> сĕрĕм-шывăм!
> 
> Çерем çĕклет ĕçчен пăлхар
> 
> алли,
> 
> Сывлатăн анлă кăкăру
> 
> тулли,
> 
> Телей юрри янăрарĕ уççăн,
> 
> сыввăн.

Нумай пулмасть Болгарире эпир виççĕн вунă кун хушши пурăнтăмăр: вырăс писателĕ М. Алексеев, белорус писателĕ А. Осипенко тата эпĕ. Пирĕн пăлхар писателĕсемпе пĕрле симпозиум (канашлу) ирттермеллеччĕ. Кун йĕркинче: «Хальхи вăхăтри ял ĕçченĕсен совет тата пăлхар литературинчи сăнарĕ». Çавăнпа та пирĕн Болга-

рне ҫитсенех ялхуҫалӑхӗнчи улшӑнусемпе тӗплӗн паллашмалла пулчӗ.

Пӑлхар писателӗсем пире питӗ кӑмӑллӑн кӗтсе илчӗҫ. Пирӗнпе пӗрле чӑваш писателӗсене, культура деятелӗсене нумайранпа пӗлекен, вӗсемпе туслӑ пурӑнакан юлташсем ҫӳрерӗҫ. Вӗсем—Ангел Тодоров, Веселин Йосифов, Стефан Марков, Поликсена Найденова, Димитр Методиев.

Болгари ялӗ юлашки 10 ҫул хушшинче калама ҫук нумай улшӑннӑ. Эпир Толбухин тата Варна округӗсенчи ялсенче пултӑмӑр. Ялти кооперативсем пӗтӗмпех ҫӗнелнӗ, илемленнӗ. Пур тӗлте те ялсене асфальтлӑ ҫулсем илсе пыраҫҫӗ, ҫул хӗррипе — улма, чие, груша сачӗсем. Йӗркеллӗ, таса, вӗсенче нимле хуралҫӑ та ҫук. Кашни ялта — электричество, радио, телевизор, тӗрлӗрен мастерскойсем, ҫӗнӗ шкулсем... Ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫе механизациленӗ. Унта та кунта Совет Союзӗнче е Болгарире тунӑ машинӑсене куратпӑр.

Колхозлӑ ял тӗрекленсе пынипе ҫак тӗслӗх те аван кӑтартса парать. Акӑ, Житница ялӗ. Пӗлтӗр унта гектартан 38-шар центнер тӗштырӑ туса илнӗ, кӑҫал—40 центнер илме палӑртнӑ. Колхозӑн виҫҫӗршер гектар йышӑнакан виноградпа улма пахчи, 73 трактор, 12 комбайн ӗҫлет. Тӗрлӗ выльӑхпа чӑх-чӗп фермисене механизациленӗ.

Паллах, ял пурнӑҫӗ ҫӗнелнӗ май ҫынсем хӑйсем те улшӑнса, пӗлӳ, шухӑш-туйӑм енӗпе пуянланса пыраҫҫӗ. Ҫав улшӑнусем ҫинчен пире канашлура та тӗплӗн каласа пачӗҫ.

Кунти писательсенчен нумайӑшӗ ялта ҫуралса ӳснӗ, ҫавӑнпа та ял пурнӑҫне лайӑх пӗлеҫҫӗ. Ҫапах та хальхи ял пурнӑҫне, ял ӗҫченӗсен тавракурӑмӗ мӗнле улшӑнса пынине аплӑ кӑтартса паракан произведенисем сахал-ха, терӗҫ канашлӑва хутшӑннӑ писательсем. «Хальхи пурнӑҫа хальхи куҫпа, хальхи виҫепе хакласа ҫырнӑ тарӑн шухӑшлӑ, пысӑк калӑплӑ произведенисем ыйтаҫҫӗ пирӗн вулакансем»,— терӗ Стоян Даскалов.

Пӑлхар писателӗсем чӑваш литературин ҫитӗнӗвӗсемпе питех те интересленчӗҫ. Вӗсем К. Ивановӑн «Нарспи» поэмине, Илпек Микулайӗн «Хура ҫӑкӑр», А. Талвирӑн «Пӑва ҫулӗ ҫинче» романӗсене, П. Хусанкайӑн, А. Алган, Я. Ухсайӑн, С. Шавлин нумай сӑввисене пӗлеҫҫӗ. Халӗ. эпир тухса каланӑ хыҫҫӑн вӗсем А. Емельяновӑн «Ҫавал сарӑлсан» романӗпе, В. Садайӑн «Ҫӑлтӑрсем тапӑра анаҫҫӗ», А. Ӗҫхӗлӗн «Хӗвеллӗ ҫумӑр» повеҫӗсемпе, Н. Те-

рентьевăн «Кайри мала, хуркайаксем» пьесипе, ытти писательсен чăваш ялĕн пурнăçне кăтартса паракан произведенийĕсемпе паллашма кăмăл турĕç. А. Тодоров пăлхарла куçарма тăрăшăпăр тесе, чăваш писателĕсен 14 калавне хапăл тусах илсе юлчĕ.

Хуласенчи музейсемпе, театрсемпе, тĕрлĕрен палăксемпе паллашни çинчен çырас темерĕм эпĕ. Вĕсем çинчен темиçе статья çырма пулать. Манăн кунта тымар янă туслăх мĕнле аталанса, çирĕпленсе пыни çинчен, ăна çирĕплетес енĕпе пăлхар культура деятелĕсем ырми-канми ĕçлени çинчен ытларах каласа хăварас килет.

Болгарие çитсенех эпĕ малтан пĕччен, унтан вара манпа пĕрле пынă юлташсемпе Веселин Йосифовпа тĕл пултăмăр. Вăл пире Витош тăвĕ çине илсе кайрĕ. Унпа пĕрле мăшăрĕ тата Светлана ятлă хĕрĕ те пычĕç. Вĕсем пурте Чăваш республикинче пулнă. Веселин хăй икĕ хутчен пулчĕ, пирĕн çĕршывпа, фабрика-заводсемпе, культура учрежденийĕсемпе, аслă шкулсемпе тĕплĕн паллашрĕ. Халĕ вăл Болгари Халăх Республикин тава тивĕçлĕ культура деятелĕ. «Антенна» журналăн главнăй редакторĕ. Чăваш республикипе питĕ интересленет, хăй мĕн курни-пĕлни çинчен кĕнеке çырать. Веселин Йосифов — паллă критик, публицист, тĕрлĕ канашлусенче, тĕлпулусенче час-часах чăваш литературипе искусстви çинчен каласа парать. Халĕ те вăл «Чувашской АССР 50 лет», «Земля Улыпа», «Чувашские сказки» кĕнекесене вуланă хыççăн, мана нумай ыйту пачĕ, вырăсла тухнă кĕнекесене ярса парăр, терĕ. «Ашмарин словарьне пĕрмаях вулатăп, ытти словарьсем те пур, тен, чăвашла та вулама тытăнăп, çапах та чăвашсем çинчен вырăсла çырнă кĕнекесемпе, статьясемпе паллаштарсах тăрăр»,— терĕ вăл пире аэродрома ăсатма пырсан.

Кам илтмен, кам пĕлмест Болгари Халăх Республикин чаплă поэтне, журналистне, общество деятельне Ангел Тодорова? «Бай Ангел» тесе, сума суса, хисеплесе чĕнеççĕ ăна юлташĕсем. «Мĕнле çĕнĕ хыпар илсе килтĕн? Каласа пар-ха, тархасшăн Шупашкар çинчен», — терĕ вăл, ыталаса илсе.

А. Тодоров чăваш совет литературин çитĕнĕвĕсене Болгарире пропагандăлас тĕлĕшпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлекен пирĕн çывăх тус. Вăл Чăваш республикине мăшăрĕпе 1964 çулта килсе кайнăччĕ. Нумайранпа ĕнтĕ «Болгаро-советская дружба» журналăн главнăй редакторĕ пулса ĕçлет. Унпа пĕрле эпĕ «Литературен фронт» хаçатпа

«Плмък» журнал редакцийёсенче пултăм. Тĕнчери ларутăру çинчен, Вьетнам халăхне пулăшасси çинчен, миршĕн кĕрешекен организацисен вăйне ўстересси, çирĕплетесси çинчен калаçу пычĕ. Вăл хăй ку енĕпе питĕ нумай ĕçлет, ун статйисем Болгарире кăна мар, ытти çĕршывсенче те, «Правда» хаçатра та пичетленеççĕ. Литература пирки калаçма тытăнсанах А. Тодоров П. Хусанкая аса илчĕ. Шухăша кайрĕ. Ун çинчен асаилўсем çырма шухăшлатăп, терĕ те П. Хусанкайăн «Вазов чĕри», «Атăл хĕррипчи юман» сăввисене асăнчĕ. Çеçпĕл Мишшин «Çĕнĕ Кун аки» сăввине пăхмасăр калама юрататъ, ăна вăл хăй пăлхарла куçарнă.

«Болгаро-советская дружба» журнал редакцийĕнче калаçса ларнă чух çак журналăн 6-мĕш номерне типографирен илсе пычĕç. Унта Чăваш республики СССР 50 çул тултарнă уява хатĕрленни çинчен кĕскен калакан материал пур. Çав номертех Юхма Мишшин «Элпи чечекĕсем» кĕнекин пĕр сыпăкне пичетленĕ. Ăна Стефан Марков пăлхарла куçарнă.

Симпозиумра тухса калаçнă чух та Тодоров Совет Союзĕ çинчен, Чăваш республики çинчен ырă сăмахсем каларĕ, писательсен произведенийĕсене пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене активлăрах куçарасси пирки сĕнўсем пачĕ. Ун сăввисене, калавĕсене пирĕн вулакансем лайăх пĕлеççĕ. Пĕр сăввинче вăл çапла çырать:

Совет çĕршывĕ—пирĕн аслă
тус,
Çав туслăхра пирĕн
телей паян.
Хĕвеллĕ кун е тĕттĕм каç —
ан ус,
Юлташăм, туслăх ялавне
нихçан.

Туслăх, тăванлăх çулĕ анлă, çирĕп, вăл тата та çирĕпленсех пырать. Шупашкара çитсен писательсене, композиторсене, художниксене, ученăйсене салам калăр, терĕ А. Тодоров. Муркаш районĕнче манăн çывăх тус, «Знамя труда» колхоз председателĕ Е. Андреев пур. Ăна Стефан Марков писатель те лайăх пĕлет. «Пирĕн ятпа ăна салам калăр, ырлăх-сывлăх сунăр»,— терĕ пăлхар писателĕ.

Болгарирен тухса килес кун Поликсена Найденова режиссерпа тĕл пултăмăр. Вал пире шыранă иккен, ça-

вăнпа та ятласа илнĕ пек те турĕ. П. Найденова — питĕ пултаруллă, кăмăллă çын. Пирĕн республикăна килсе, П. Найденова «Встерчи с Чувашией» ятлă документлă фильм ÿкерчĕ. Ун çинчен пирĕн хаçатсенче ырласа çырнă статьясем пичетленнĕччĕ. Халĕ вăл туслă республика çыннисен ĕçне-хĕлне кăтартса паракан тепĕр картина ÿкерме ĕмĕтленет.

Варна хулинче — Хура тинĕс хĕрринче пăлхар писателĕсен творчество çурчĕ пур. Унта эпир виçĕ кун пурăнтăмăр. Çав вăхăтра пăлхар поэчĕсемпе темиçе хут хальхи поэзи пирки калаçрăмăр. Вĕсем чăваш поэчĕсен сăввисене ытти чĕлхене мĕнле куçарни çинчен ыйтса пĕлчĕç. Ку ĕçпе уйрăмах Димитр Пантелеев поэт интересленчĕ. Çеçпĕл Мишшин «Çĕн Кун аки» сăввине 50 чĕлхене куçарни çинчен каласан, П. Хусанкай произведенийĕсене 48 чĕлхене куçарни çинчен пĕлтерсен, вĕсем питĕ савăнчĕç.

Аçта кăна пулмарăмăр-ши, ăçта кăна çитмерĕмĕр-ши — пур çĕрте те А. Г. Николаев космонавт пирки ыйту параççĕ. Ун сывлăхĕ мĕнле, Шупашкарта, тăван ялĕнче пулать-и вăл? — тесе ыйтаççĕ. А. Г. Николаев Болгарире хăйĕн мăшăрĕпе В. Николаева-Терешковăпа пулнине пăлхарсем лайăх астăваççĕ, вĕсене курни çинчен савăнăçлăн каласа параççĕ. Пирĕнпе калаçакансенчен нумайăшĕ П. Найденова ÿкернĕ «Объятия» фильма та курнă. Ку фильмра пирĕн космонавтсем Болгарире пулнине лайăх кăтартнă.

Çапла ĕнтĕ, вунă кун хушшинче эпир нумай çĕрте пултăмăр, хамăрăн çывăх туссемпе тĕрлĕрен ыйтусем пирки калаçрăмăр. Çĕнĕ тус-юлташсем те тупăнчĕç, вĕсен йышĕ малашне татах та ÿссе пырĕ.

Туслăх çулĕ питĕ анлă, çирĕп!

*1973.*

## ТУПМАЛЛИ


Тӳрĕ сăмах (Умстатья) . . . 5
Литературăри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн . . . 16
Идейăлăхпа ăсталăх . . . 26
Аслă çулпа . . . 43
Юмахпа пурнăç . . . 50
«Ялав» журналăн çур ĕмĕрхи ĕçĕ-хĕлĕ . . . 62
Букварьтен — пысăк литературăна çити . . . 72
Пирĕн туслăх — ĕмĕре . . . 75
Йăнăш мĕнрен килнĕ? . . . 89
Вутра шăраннă кăмăл . . . 93
Вăрçă паттăрĕсем . . . 110
Писатель-салтак малалла утать . . . 114
Виçĕ поэма . . . 125
Çĕрте те çĕрместпĕр! . . . 129
Поэт — воин-коммунист . . . 136
Яланах асра . . . 142
Пурнăçа юратса . . . 146
Пурнăçа сăнама-тĕпчеме пĕлмелле . . . 151
Мухтавлисем . . . 157
Чăваш ачи, сассуна пар! . . . 162
Халăх юрăçи . . . 168
Тăван çĕр сĕткенĕпе ӳснĕ поэзи . . . 171
Вут-çулăм витĕр . . . 179
Сĕтел çинчи çăкăр . . . 193
Халăх хисепĕ . . . 194
Сарлака утăмлă поэт . . . 198
Пархатар сăмахĕ . . . 203
Комеди — çивĕч хĕçпăшал . . . 206
Вăрçăччен, вăрçăра, вăрçă хыççăн . . . 211
Драматург, поэт, юптаруçă . . . 216
Халь те, малашне те . . . 220
Октябрь тантăшĕ . . . 223
Художник, писатель, журналист . . . 228
Пирĕн çывăх тус . . . 230
«Эп кайăксем вĕçтерĕп кăкăртан» . . . 233
Силпире, Нарспи çĕршывĕнче . . . 235
Манăçми тĕлпулусем . . . 246
Туслăх çулĕпе . . . 250

*Николай Степанович Дедушкин*

# ЛЕГЕНДА И ЖИЗНЬ

## (В НОГУ С ЖИЗНЬЮ)

Литературно-критические статьи

Редактор А. А. Соколова
Переплет художника В. В. Гурина
Художественный редактор А. А. Макаров
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректоры: О. Ф. Волкова, Л. Ф. Козин

НТ 29271. Сдано в набор 26/III-1975 г. Подписано к печати 13/VIII-1975 г. Формат 84×108/32. Бумага типографская № 3. Физ. печ. л. 8,0. Усл. печ. л. 13,44. Учетно-изд. л. 14,74. Заказ № 1046. Тираж 2000 экз. Цена 60 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина. 4.

Типография № 1 Управления по делам издательств, полиграфии и книжной торговли Совета Министров Чувашской АССР.
Чебоксары. Канашское шоссе, 13.

Цена 60 коп.